ЯЛАВ

5 май 1961

П. Васильев художник ӳкерчĕкĕ.

Ленин—сӳнми хĕвел!

Г. Хирбю кĕвви
Кăсăя Васлейĕ сăвви



Тулăх пурнăç туса патăн,
Аслă Ленин, эс пире.
Çут хĕвелĕн çутататăн
Халĕ пирĕн ĕмĕре. } 2 хут.

Хупăрланăччĕ асаплăх
Таврана сĕм вăрман пек.
Çĕршывра паян пур халăх
Савăнать сан тивлетпе. } 2 хут.

Çĕнтерсе эпир утатпăр
Тăван партипе ялан.
Ĕмĕт çирĕп, халăх паттăр,
Пăрăнмастпăр тӳр çултан. } 2 хут.

Тулăх пурнăç туса патăн,
Аслă Ленин, эс пире.
Çут хĕвелĕн çутататăн
Халĕ пирĕн ĕмĕре. } 2 хут.

ÇУЛПУÇПА ТĔЛ ПУЛНИ

Петр ЯЛГИР

НЕВА çине сенкер каç анчĕ.
Çурла пек уйăх тӳпере.
Шăв-шавлă Смольнăй та лăпланчĕ.
Анчах та, ав, пĕр пӳлĕмре
Çунать-ха çутă... Ĕç вĕрет.
Унта Ильич — кăвар чĕре —
Пăхмасăр çурçĕр иртнине,
Пуплет Маркспа. Вăл ĕмĕре
Юсасшăн халăх пурнăçне.

Пăшаллă çын коридорта
Хуллен асăрханса утать.
Ăшра хăй лăпкăн шухăшлать:
«Çулпуç часах канма выртать».
Ак уçăлса каять та алăк
Чĕриклетсе çемçен кăна.
— Салам, юлташ!— кĕç пачĕ алă
Ильич пострти хуралçăна.—

Салтак, ман патăма кĕрсемĕр.
Ларать ман кофе пăспланса,—
Пуплет тахçан палланă евĕр
Çулпуç чунтан хавхаланса,—

Хăш енчисем пулатăр эсĕр!—
Çулпуç ыйтать,— каласа пар.
— Ман манăçми тăван кĕтесĕм —
Атăл хĕрри, шур Шупашкар.

— Апла чăваш, эс ман янташăм!
Эпир санпа пĕр тăрăхран!—
Лăпкарĕ Ленин ăшшăн-ăшшăн
Часовоя пур кăмăлран.

Кĕç шуçăм çутисем ӳкеççĕ
Пӳлĕмелле тухăç енчен.
Çулпуçпала салтак пуплеççĕ
Çĕршыв пуласлăхĕ çинчен.

Журнал хуплашкин 1—4-мĕш страницисенче: «Хĕвеллĕ май» фотоэтюд.

ЯЛАВ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш писателĕсен Союзĕ уйăхра пĕрре кăларакан илемлĕ литература тата обществăпа политика журналĕ

№ 5 (379) Май 1961

XXXV çул тухать.

ШУПАШКАР, МАЙĂН 1-МĔШĔ

МАЙ! ÇАК СĂМАХА асăнсанах чĕремĕрсенче ăшă туйăм çуралать, питĕмĕрте ăшă кулă чупса иртет. Майăн пĕрремĕшĕ — çурхи уяв кăна мар, вăл ĕçпе мир уявĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем çак кун кĕрешÿри вăйсене пăхса тухаççĕ, ирĕклĕхшĕн, хăйсен интересĕсемшĕн çирĕп тăма хатĕррине кăтартса параççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ майăн пĕрремĕшне пĕтĕм тĕнчери халăхсем уявласа ирттереççĕ.

Уяв! Ватă Шупашкар капăр тум тăхăннă та çамрăкланнăнах туйăнать. Чăнах та хуламăр çамрăклансах пырать. Советсен çĕнĕ площачĕ те, Ленин проспекчĕ те, нумай çĕнĕ стройкăсем те хула ÿссе çĕнелнине кăтартса параççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ хула строителĕсем демонстрацие çĕнĕ çитĕнÿсемпе тухрĕç.

Кăçалхи май уявĕ тĕнчене тĕлĕнтермелле чаплă ĕçсемпе килсе çитрĕ. Совет халăхĕ Коммунистсен партийĕн XXII-мĕш съездне кĕтсе илме хатĕрленет, совет гражданинĕ Юрий Гагарин майор пĕрремĕш хут, пуçласа Тĕнче уçлăхне вĕçсе хăпарчĕ, çĕр чăмăрĕ тавра вĕçсе çаврăнчĕ те ăнăçлăн анса ларчĕ. Çавăнпах ĕнтĕ хулари шкул ачисем демонстрацие Юрий Гагаринăн вуншар портретне йăтса тухнă, ахальтен мар ĕнтĕ çамрăк ăру мухтавлă Юрий Гагарин пек паттăрла ĕçсем тума ĕмĕтленсе ÿсет. Кашни совет çынни халь, кашни коллектив «Тухăç» спутник-караппа танлашасшăн. Çавăнпах ĕнтĕ хулари ĕççыннисем хăйсем тунă ÿсĕмсемпе савăнса паллаштараççĕ, тивĕçлипе мухтанаççĕ.

Хулари промышленность предприятийĕсенчен демонстрантсен колоннисене электроаппаратчиксем ертсе пычĕç, вĕсем май уявне ĕçри ÿсĕмпе, пĕрремĕш квартал планне çĕр вуникĕ процент ытла тултарнипе кĕтсе илчĕç. Кунта эпир коммунизмла ĕç бригадине ертсе пыракан Павел Леженика та, слесарь-механик Анатолий Антипова та, малта пыракан, ĕçпе чапа тухнă вуншар рабочисене куратпăр. Электроаппаратчиксем çеç мар, пирăвăр комбинатĕнчи коммунизмла ĕç бригадирĕсем — Антонина Стребнева, Инна Золотова, Вера Константинова, Агреппина Васильева, коммунизмла «четверкăсем» пуçарса янă Виктор Чиберев, нумай-нумай рабочисем хăйсен ĕçĕсемпе çĕршыва илем кÿреççĕ. Республикăри электротехника промышленноçĕнчи рабочисем,— ЗЭИМ-па ЗЭИП заводĕнче ĕçлекенсем те хăйсем тунă ÿсĕмсемпе тивĕçлипе мухтанма пултараççĕ. Кашни колонна коммунистсен партийĕн XXII-мĕш съездне хатĕрленнине, кашни рабочи е служащи мирлĕ ĕçе хÿтĕленине, ăна ĕçпе çирĕплетнине кăтартса парать. Транспарантсемпе лозунгсем «Марксизм-ленинизм ялавĕпе, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе — малалла, коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!», Тĕнчене — мир!» тесе чĕнеççĕ. Площадьри трибуна çинчен юратнă çулпуçăмăр Владимир Ильич Ленин хăех пирĕн мухтавлă халăха уяв ячĕпе саламланăн, вăл та пирĕнпе пĕрле пынăн туйăнать.

Ӳ к е р ч ĕ к с е н ч е: Шупашкарти предприятисемпе ĕççыннисен колоннисем Советсен площадĕнче.

„ХАЛĂХСЕМ ХУШШИНЧИ МИРЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИШĔН" ТĔНЧЕРИ ЛЕНИНЛА ПРЕМИ ЛАУРЕАЧĔСЕМ

Фидель Кастро Рус, общество тата государство деятелĕ (Куба Республики), Секу Туре, общество тата государство деятелĕ (Гвинея Республики), Рамешвари Неру, общество деятельници (Инди), Михаил Садовяну писатель, общество деятелĕ (Румыни халăх республики), Антуан Жорж Табет, архитектор, общество деятелĕ (Ливан), Остап Длусский, общество деятелĕ (Польша Халăх Республики), Уильям Морроу, общество деятелĕ (Австрали).

Коммунизмла ĕç çĕнтерĕвĕ патне...

ИЛЬИЧ çуралнă кун. Эпир — совет çыннисем, աслă çулпуç партийĕ пăхса ÿстернĕ çынсем — кашни çулах Ленин кунне уявласа ирттеретпĕр. Апрелĕн 22-мĕшĕнче ĕнтĕ, çурхи кун ăшшине пирĕн çĕршыв çине сапаласан, Российăра Ильич çуралнă. Кам пĕлет, тен паян та çурхи хĕвел, юриех Владимир Ильичăн ăшă сăнарне сăнлас евĕр, янкăр уяр тÿпере йăлтăртатса çутатать? Кам пĕлет, тен, çутçанталăк та коммунизм тавакан халăхпа савăнать пулĕ?

Шăп кăна пачн, Ленич çуралнă кун умĕн, Шупашкар хулинче коммунизмла ĕç ударникĕсемпе бригадирĕсем, фабрикăсемпе заводсенчен, колхозсемпе стройкăсенчен пухăннăскерсем, умри çĕнĕ ĕçсене пăхса тухрĕç. Слета килнĕ ударниксене, социализмла ăмăртура мала тухнисене пăхатăн та, вĕсем ахаль çынсемех пулнине куратăн, анчах кашни утăмрах, кашни самантрах, кашни сăмахрах вĕсем çĕнĕлле ĕçлени, çĕнĕлле пурăнни, кашни — пуриншĕн, пурте кашнишĕн тăрăшни, малашлăха çирĕп шанни, ăна витерех курни сисĕнет. Çавăнпах ĕнтĕ Владимир Ильич Ленинăн пророкла сăмахĕсем каллех тепĕр хут аса килеççĕ:

«ЭПИР КОММУНИЗМЛА ĔÇ ÇĔНТЕРĔВĔ ПАТНЕ ПЫРАТПАР».

Çак слетра пулнă хăшпĕр çынсем çинчен каласа парасшăн эпир кунта.

СЛЕТРА ТУНĂ РЕПОРТАЖ

Коммунизмла ĕç ударникĕсем республикăри иккĕмĕш слетра. «Ешĕл строительство» участокĕнчи комсомол организаци секретарĕ Римма Кирилловăпа Галина Леткова прораб ларура (сылтăмри ÿкерчĕк). Канашри выльăх-чĕрлĕх самăртакан совхозри ĕне сăвакан Нина Толстова (сулахайри ÿкерчĕк). Слет делегачĕсем доклад итлеççĕ (çÿлти ÿкерчĕк).

В. ИСАЕВ тунă сăнÿкерчĕксем.

1. СТАНИСЛАВ АНДРЮШЕНКО ÇĔННИНЕ СĔНЕТ

Шупашкар. Политикăлла вĕренÿ çурчĕн пысăк залĕ. Кунта тĕрлĕрен канашлусемпе конференцисем, слетсемпе вĕренÿ занятийĕсем час-часах пулаççĕ. Пысăк сцена варринчи Владимир Ильич Ленин сăнĕ çынсене ăшшăн саламланăн, мухтавлă пысăк ĕçсем тума чĕннĕн туйăнать. Çак портрет умĕнче ĕçпе чапа тухнă çынсем, ваттисем те, çамрăксем те, коммунизм тума, ялан çĕнтерме, коммунизмла ĕç çĕнтерĕвĕ патне пыма тупа тăваççĕ, вĕсем Ильич умĕнче тунă çитĕнÿсене хыпарлаççĕ, пулас ÿсĕмсене сăнласа параççĕ те ÿлĕмхи ĕçсенче çĕннине шыраççĕ.

Станислав Андрюшенко, трибуна умне тухсан, кăштах именнĕ пек пулчĕ. Çакăн чухлĕ халăх умĕнче вăл нихçан та тухса калаçманччĕ. Çук, пухусенче-мĕнсенче, хăйсен заводĕнче ĕнтĕ, вăл шăпчăк чĕппи пек шăппăн ларман, кашнинчех çĕнĕ сĕнÿсем пама васканă. Унта Станиславăн çывăх юлташĕсемпе тусĕсем пулнă, паллакансем хушшинче калаçма, паллах ĕнтĕ, çăмăл, хăюллă. Анчах паян кунта пачах ют çынсем, республикăри фабрикăсемпе заводсенчен, стройкăсемпе чугун çул станцийĕсенчен, колхозсенчен килнĕскерсем пулнă. Çук, ют çынсем тени тĕрĕс мар ĕнтĕ, пурте хамăр совет çыннисемех, коммунизмла ĕç ударникĕсем, ăмăртура мала тухнисем. Станислав та коммунизмла ĕç ударникĕ. Çак хисеплĕ ята илме вăл пĕлтĕр тивĕçлĕ пулнăччĕ. Халĕ акă, Ильич портретне йăпăртлăха пăхса илчĕ те, ун чĕри лăпланчĕ, Ленин хăех ăна ăшшăн йăл кулсах вăй панăн туйăнчĕ. Вăл самантлăха пĕрле ĕçлекен юлташсене аса илчĕ, слета килес умĕн вĕсем ларсах калаçнăччĕ, сÿтсе явнăччĕ. Çаксене те, хăйсем мĕнле ĕçленине те слет делегачĕсене хыпарлас килет.

Станислав усăмлăн, çапах та кăштах хумханса Улатăр çамрăкĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калама тытăнать. Унăн кăн-кăвак тÿпе евĕр куçĕсем ĕçри сатурлăхпа йăлкăшма тытăнаççĕ.

...Станислав, ытти совет çамрăкĕсем пекех, мĕн пĕчĕкрен ĕмĕт сăпки çинче ÿснĕ. Ĕмĕт ăна вĕренме пулăшнă, аттестат илсен вăл реле заводне ĕçе кĕнĕ. Коммунизмла ĕç ударникĕн ятне илессишĕн ăмăртăва хутшăнсан, вăл хăйшĕн пачах çĕнĕ ĕç, çĕнĕлле пурнăç пуçланнине туйнă, ăнланнă.

Механико-инструментальный цехра ĕç кал-кал пынă çĕртех чарăначарăна ларать: е кĕтмен çĕртен пĕр-пĕр токарь-расточик чирлесе ÿкет, е шлифовальщиксем çитмесçĕ, е тата урăххи тупăнать. Завод çурчĕ пысăк мар, çыннисем те сахалтарах, тăватçĕре яхăн кăна. Ун пек чухне вара пĕр-пĕр участокри ĕç «уксахлама» тытăнать, цехри ĕç çемми те пăсăлать, пĕр-пĕр детальсем çитми пулаççĕ.

Станислав çакăн пирки нумай шухăшларĕ.

— Пирĕн малашне капла ĕçлеме юрамасть,— пĕлтерчĕ вăл комсомол секретарьне.— Пирĕн ĕçе епле пулсан та çĕнĕлле йĕркелес пулать.

— Мĕнле?

— Ман шухăшсем пур-ха, сÿтсе явас пулать.

Станислав цехри ĕçсене лайăх вĕренсе тĕпченĕ. Халь вăл шлифовальщик ĕçне питĕ лайăх хăнăхнă. Анчах ку ăна ниепле те çырлахтармасть. Ĕçĕ мар, цехри ĕç йĕрки ăна тивĕçтереймест. Енчен шлифовальщиксем е ытти рабочисем хутăш ĕçсене вĕренсен пур участоксенче те кирлĕ пек ĕçе йĕркелеме пулать. Сăмахран, расточиксем çитмесен шлифовальщиксем вĕсене улăштарма пултараççĕ. Капла тусан вара ĕç çемми ним чухлĕ те пăсăлмасть. Коммунизмла ĕçлеме вĕренесси те çакăнтан пуçланать вĕт-ха.

Комитет ун шухăшне ырласа йышăнать. Часах вĕренÿ те пуçланать. Шлифовальщиксем рассточиксен ĕçне алла илеççĕ, рассточиксем те вĕсенчен юлмаççĕ. Çапла вара цехри пĕр участокра та ĕç чарăнса тăмасть. Коммунизмла ĕç ударникĕн ятне илессишĕн ăмăртăва хутшăннă çамрăксем çĕнĕлле ĕçлеме çакăнтан пуçлаççĕ те ĕнтĕ. Цехра ĕç тухăçлăхĕ те кулленех ÿссе пырать, пăрахăç детальсем те самаях чакса пыраççĕ.

Анчах Станислава çаксем çеç пăшăрхантармаççĕ. Вăл хăйсен заводĕнчи çамрăксем пирки кăна мар, хулари ытти çамрăксем пирки те нумай шухăшлать. Улатăрта аслă шкулсем çук. Çамрăк рабочисем нумай институтсенче заочно вĕренеççĕ. Хĕлле е çу кунĕсенче заочнăй сессисене вĕсем инçĕне кайса çÿреççĕ, çĕршер, пиншер сехет-çын, вăхăт, укçа-тенкĕ çухатаççĕ. Енчен вырăна профессорсемпе преподавательсем чĕнсе илес пулсан çамрăксене вĕренме, экзаменсем пама самаях çăмăлланĕччĕ. Вырăна тухса çÿрекен экзамен комиссийĕ йĕркелесен фабрик-заводсенче ĕçлекен çамрăксем инçене çÿремесĕрех, Улатăртах, экзамен тытма пултараççĕ, çав хушăра вĕсем ĕçре те ĕлкĕреççĕ. Кашнинех отпуск вăхăчĕ пĕр пек килмест вĕт-ха. Капла тусан заводшăн та, рабочисемшĕн те чылай усăллă.

Станислав Андрющенко çак шухӑша слет делегачӗсене пӗлтерчӗ. Зал ӑна ырласа кӗтсе илчӗ. Чӑнах та вырӑна тухса çӳрекен экзамен комиссийӗ тума май пур вӗт-ха, ӗçе тытӑнни çех кирлӗ.

Перерыв вӑхӑтӗнче Станислава Калинин ячӗпе хисепленекен фабрикӑри Тоня Куленковӑпа Валя Гришина, реле заводӗнчи Светлана Агапова, пӑравуссем тӑвакан заводри Цильков сырса илеççӗ. Каллех хавасла та хӗрӳ калаçу пуçланать. Вӗсем халь çеç тухса каланӑ шухӑшсене çӗнӗрен сӳтсе явма пуçлаççӗ, тӳрлетӳсем сӗнеççӗ. Вӗсем ӗмӗтленеççӗ. Ку çеç те мар, Улатӑр çамрӑкӗсем слет хыççӑн, каçхине, театра çитсе курма ӗмӗтленеççӗ. «Иркутск историне» курмасӑр Шупашкарпа епле сывпуллашмалла? Киле таврӑнсан юлташсем те пӗлесшӗн вӗт.

Çапла вӑл совет çамрӑкӗ, коммунизмла ӗç ударникӗ, вӑл яланах пурнӑçра çӗнӗ меслетсем шырать, коммунизмла ӗçлеме кашни утӑмрах вӗренсе пырать. Коммунизм тӑвакансен ушкӑнӗнче кулленех çӗнни çуралать.

* * *

Слетра эпир татах нумай çынсемпе тӗл пулса калаçрӑмӑр. Акӑ пире сӑпай та хавас сӑн-питлӗ хӗр пырса алӑ тытрӗ, сывлӑх сунчӗ. Ку вӑл Шупашкарти чӑлха фабрикинче ӗçлекен Валентина Анфимова. Эпир унпа слет уçӑлӑчӗн пӗр эрне малтан курса калаçнӑччӗ.

Эпӗ ун ӗçне-хӗлне тепӗр хут аса илтӗм.

2. ВАЛЯ КОЛЛЕКТИВРА ӲСНӖ

Клубра концерт пырать. Халӑх йышлӑ пухӑннӑ. Шупашкарти чӑлха фабрикинчен килнӗ шефсене колхоз ӗçченӗсем хапӑл туса кӗтсе илчӗç.

Хор коллективӗнче вӑтам кӗлеткеллӗ, сарӑ çӳçлӗ чипер хӗр тӑрать. Вӑл та, ытти юлташсемпе пӗрле, чӗре тулли хаваслӑхпа, янравлӑ саспа ӗç юрри шӑрантарать. Тӑван çӗршыва, унӑн ытарайми çыннисене, телейлӗ пурнӑçа мухтать. Çак хӗр — чӑлха фабрикинчи ӗçчен те хастарлӑ Валя Анфимова. Ун кӑкӑрӗ çинче комсомол значокӗ. Валя юрлать, вӑл юрӑпа пурнӑç илемне кӳрет. Кам пӗлет, тен, çак самантра вӑл хӑй пурнӑç пуçламӑшне те, шкулта вӗреннӗ чухнех комсомола кӗнине те аса илет пулӗ, тен, аса та илмест çак хавас вӑхӑтра? Çапах та вӑл кӑкӑр умӗнчи комсомол билечӗпе пурнӑç телейне тупнӑ вӗт-ха, вӑл комсомол билечӗпе малтанхи йывӑрлӑхсене çӗнтернӗ, ӑна ленинла комсомол пурӑнма вӗрентнӗ, аслӑ çул çине илсе кӑларнӑ.

...Çичӗ çул каяллахи кунсене аса илер-ха, Валя Анфимовӑпа пӗрле ун пурнӑç çулӗ тӑрӑх утса тухар.

Çамрӑклӑх тытса чарма çук вӑйхӑватпа малалла талпӑнать теççӗ. Чӑнах та ӗнтӗ çамрӑклӑх романтика çуратать, вӑл мухтавлӑ ӗçсемпе пуян, чаплӑ, илӗртӳллӗ, хӑйне май илемлӗ, вӗçӗ-хӗррисӗр хастар.

Кам пӗлет, тен, Валя Анфимова та çамрӑклӑх романтикипе хавхаланнӑ пулӗ, тен, вӑл пурнӑç çулӗ çине иртерех тухасшӑн тӑрӑшнӑ-тӑр, çапах та Валя Шупашкара килнӗ чухне вунçичӗ çул çеç тултарнӑччӗ-ха. Вунçиччӗри хӗрӗн пурнӑç çулӗ те, ӗçӗн тӗлли-палли те пулман. Çапах та Валя кун-çул телейӗ, пысӑк ӗçсем патне васканӑ, ӗмӗтленнӗ, пӗлӳлӗх, юратнӑ ӗçе алла илесшӗн хыпӑнса çуннӑ. «Вӗренетӗп, юратнӑ ӗç тупатӑп», шухӑшланӑ вӑл. Ӑна пулас йывӑрлӑхсем те, пурнӑçри пӑтӑрмахсем те хӑратман.

Çав çулхине, çичӗ çул каялла, август кунӗсем йӗпе-сапаллӑ килчӗç. Кунӗпелех çумӑр пӗрӗхет, çурçӗр çилӗ тумтире лӑскать. Атӑлӗ вара, юриех хӗр чӗрине пусӑрӑнтарасшӑн пулнӑн, ытла та вырханчӑклӑн хумханать, вӑл тӗксӗм, сивӗ, чуна çӳçентерет. Кунӗпе хула тӑрӑх утса ӗшеннӗ хӗр ниçта кайма аптӑраса çитрӗ. Пир-авӑр техникумне вӗренме кӗресси пулмарӗ, кая юлнӑ терӗç. Малтанхи романтика пӗтрӗ, ӗмӗт çурмаранах татӑлчӗ. Халӗ ӑçта каймалла-ха ӗнтӗ, мӗн тумалла, камран пулӑшу ыйтмалла? Нивушлӗ калле киле таврӑнмалла? Юлташсемпе туссем мӗн калӗç? Валя хулана килнӗ чухне мӗн тери ӗмӗтленетчӗ...

Вара Валя Атӑл хӗррине тухрӗ. Каçалапа çумӑр чарӑнчӗ, çил те лӑпланнӑ пек пулчӗ. Çапах та хӗр чӗринче çав-çавах канӑç çук. Ара, комбинатра та ӗçе йышӑнмарӗç вӗт. Кунта та вырӑн çук терӗç.

Апла пулсан та ырӑ çынсем яланах тупӑнаççӗ. Вӗсем санпа юнашарах, совет çыннисем йывӑрлӑха лекнӗ яш-кӗрӗме часах кураççӗ. Вальӑпа та çапла пулса тухрӗ. Çавӑнта, Атӑл хӗрринче, ӑна пӗри кӗтмен çӗртен пырса сӑмах хушрӗ.

— Эсир инçе кайма тухнӑ-и?— илтрӗ вӑл хӑйпе юнашарах. Валя вӑртах çаврӑнса пӑхрӗ те сывӑхрах чипер хӗр тӑнине курчӗ. Хӗр ун çине тимлӗн, хӗрхеннӗ пекрех, çав хушӑрах ӑшшӑн пӑхать. Сасси те çепӗç, кӑмӑллӑ. Çапах та Валя ӑна вӗчӗрхенсе хуравларӗ.

— Сирӗншӗн пурпӗрех мар-им?— хулпуççине хӑпарткаларӗ вӑл.

— Эсир ан кӳренӗр те-ха, çапах та... ытла та салху сӑнлӑ курӑнатӑр,— хӗр хальхинче те ӑшшӑн калаçрӗ.— Эпӗ сире пасӑртанпах сӑнатӑп. Пӑрахут та кайрӗ, эсир вырӑнтан та хускалмастӑр. Тен, сире пулӑшу кирлӗ?— Вальӑн пӗчӗкçеç чӑматанне пӑхкаларӗ вӑл.

— Мӗнпе пулӑшайӑр эсир? Эпӗ пачах ют хуларан килнӗ. Пӗлӗштӑван та çук,— хӑй сисмесӗрех персе ячӗ Валя.

— Тен, пулӑшӑп та,— ун сывӑхнерех пырса тӑчӗ хӗр, каллех куçран тинкерсе пӑхрӗ.— Хурланма кирлӗ мар, вӑхӑтсӑрах ма кӑмӑла хуçас?.. Итлӗр-ха, атя паллашатпӑр. Эпӗ Светлана ятлӑ, хушаматӑм Сидорова. Сире мӗнле чӗнеççӗ?

Те Светлана çав тери ӑшшӑн калаçни кӑмӑла çаврӑнчӗ, те ниçта кайма çукки Вальӑна парӑнтарчӗ, хӑй те пӗлеймерӗ, Анфимова ӑна кӗтмен çӗртенех хӑй хуйхине хыпарларӗ.

— Уншӑнах ма кулянмалла?— çӑмӑллӑн каларӗ Светлана.— Техникума кӗме те кая юлман-ха, çитес çул та ӗлкӗретӗн. Акӑ, пирӗн фабрикӑна вырнаçатӑн та, иксӗмӗр пӗрле ӗçлӗпӗр.

— Эсир ӑçта ӗçлетӗр вара?— хӑюланчӗ Валя, пӗлесшӗн пулчӗ.

— Чӑлха фабрикинче. Атя, кӗçӗр ман пата, ыран фабрикӑна кайӑпӑр, пирӗн патра ӗçе илеççӗ, работницӑсем çитмеççӗ. Тата çӗнӗ машинсем цехсене вырнаçтараççӗ.

— Эпӗ ӗçлеме пӗлместӗп вӗт-ха, ӗçе пӗлмен çынна кам илтӗр?— иккӗленчӗ Валя.

— Никам та инженер пулса çуралмасть, вӗренетӗн. Эс комсомолка иккен-ха, хӑраса тӑратӑн-и тата?— комсомол значокне пӑхкаларӗ Светлана.

Комсомол! Валя хӑй те кӑкӑрӗ çинчи комсомол значокне пӑхса илчӗ те хӑйӗнчен хӑй вӑтанса кайрӗ. Чӑнах та, мӗнле-ха кӑштах йывӑр килсенех хӑраса ӳкрӗ вӑл?

Çапла паллашрӗ Валя Анфимова Шупашкар хӗрӗпе. Светлана сӗннипе вӑл чӑлха фабикине ӗçе вырнаçрӗ. Çак кунран ӗнтӗ унӑн пурнӑçӗ пачах тепӗр май çаврӑнчӗ, пурнӑç юхӑмӗ ӑна çӗнӗ ӳсӗмсен йӗрӗпе илсе кайрӗ.

Валя Анфимовӑна Лиза Емельянова вязальщица çумне çирӗплетрӗç. Лиза та, Светлана пекех, хавас кӑмӑллӑ, уçӑ чунлӑ хӗр пулчӗ. Ӑста вязальщица Вальӑна чӑлха çыхма хавасланса вӗрентме килӗшрӗ, кӑткӑс машинсем мӗнле ӗçленине тӗплӗн ӑнлантарчӗ, чӑлха çыхакансен ӗçне тимлӗн вӗрентрӗ. Темиçе уйӑхран Вальӑна икӗ машин шанса пачӗç те, вӑл хӑй тӗллӗнех чӑлха çыхма пуçларӗ. Хӗр майӗпенех фабрика коллективне хӑнӑхса пычӗ, чӑлха çыхассине ӑна килӗшме тытӑнчӗ. Унӑн шанчӑклӑ юлташсем тупӑнчӗç, комсомол комитечӗ те тӗрлӗ ӗç шанса пачӗ. Кайрантарах ӑна профорга суйларӗç. Валя пурнӑçӗ йӑлтах фабрика пурнӑçӗпе çыхӑнчӗ, кунти йыш уншӑн тӑвансем пекех хаклӑ туйӑнчӗ. Ӑна пухусенче асӑнчӗç, мухтарӗç, хавхалантарчӗç.

Юлашки вӑхӑтра Валя Анфимова вязальщица чӑлха фабрикинчи чи хастар хӗрсенчен пӗри пулса тӑчӗ. Вӑл халӗ коммунизмла ӗç ударникӗ.

Фабрикӑра талӑкӗпех ӗç юрри янраса тӑрать. Кӑнтӑрла та, çӗрле те машинсем кӗрлеме чарӑнмаççӗ. Машинсем умӗнче пултаруллӑ работницӑсем тӑраççӗ, ӗççыннисем валли паха продукци кӑлараççӗ. Акӑ, Вальӑпа юнашар Оля Егорова ӗçлет, акӑ, сылтӑмра, Аля Алексеева. Вӗсем иккӗшӗ те çамрӑк вязальщицӑсем. Анчах Валя вӗсене пулӑшма, вӗрентме яланах вӑхӑт тупать. Юлташсене пулӑшасси ун йӑлине кӗнӗ, ма тесессӗн вӑл комсомолка, ма тесессӗн вӑл коммунизмла ӗç ударникӗ, ма тесессӗн вӑл Ильич пек пурӑнма вӗренет. Вӑл хӑй те коллективра ӳснӗ çын.

Валя юлташӗн ӗçӗ тикӗс пыманнине туйсанах ун машини патне васкать. Хӑй машини чӑхӑмласан та вӑл мастӑра е ун помощникне чӗнсе аппаланмасть, хӑех тӳрлетме тӑрӑшать. Машинсене йӗркеллӗ тытни, ӗçе лайӑх пӗлни, чун-чӗререн тӑрӑшса ӗçлени Вальӑна ӗç тухӑçлӑхне ӳстерме, паха чӑлха çыхма пулӑшать. Вӑл кашни сменӑрах иксӗр вунӑ мӑшӑр çыхас вырӑнне иксӗр аллӑ е ытларах та чӑлха çыхса кӑларать. Ун чӑлхисене пӑрахӑçлани пулман-ха, юлашки вӑхӑтра вӑл контролерсӑр ӗçлеме шут тытрӗ. Фабрикӑрисем ун ӗçне лайӑх пӗлеççӗ, шанаççӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ ӑна нумаях пулмасть «Социализмла ӑмӑрту отличникӗ» значокпа наградӑларӗç. Халӗ вӑл партин çирӗм иккӗмӗш съездӗ тӗлне çулталӑк планне тултарассишӗн тӑрӑшать.

...Каç-каç ун чӳречинче чылайччен çутӑ сӳнмест. Валя сӗтел хушшине ларать те умма учебниксем уçса хурать. Валя кӑçал пир-авӑр техникумне кӗме хатӗрленет. Паллах, Валя хӑй ӗмӗтне пурнӑçлатех.

Иван ГРИГОРЬЕВ.

* * *

Тепӗр страницӑра коммунизмла ӗç ударникӗсен слетне хутшӑннӑ çынсенчен пӗрин — Петр Васильевич Ильин экскаваторщик ӗçӗсем çинчен Александр Терентьев корреспондент каласа парать.

З. ХӲХĔМ ĔÇ

АЛ-УРА ĔÇĔ те, ăна чĕререн юратса тусан, сцена çинчи артист сĕрмекупăспа каланă майлах, черчен иккен. Вăл илĕртӳлĕ, хӳхĕм, мухтавлă, вăл хисеплĕ, пуриншĕн те чыслă, пархатарлă. Хӳхĕм ĕçлеме вара чăн-чăн пысăк талант кирлĕ. Сан ĕçӳ ыттисемшĕн тĕслĕх пултăр, сан ĕçӳпе юлташусем те, палламан çынсем те хĕпĕртеччĕр, вăл çынсене хавхалантартăр—çапла ĕçлеме нумайăшĕ тăрăшать, анчах ăна пурте пултараймасть-ха. Ху тăвакан ĕçе чун-чĕрепе парăнсан çеç умри тĕллев патне çитме пулать. Çакна эпĕ «Чăвашспецстрой» экскваторщикĕпе — Ильинпа паллашсан, ун ĕçне курсан татах тепĕр хут чĕрепе туйса илтĕм.

Петр Васильевича эпĕ ĕçре часчасах куркалаттăм, ун пирки нумай çынсем — рабочисемпе маçтăрсем, прорабсемпе механизаторсем— ялан ăшшăн асăнатчĕç.

— Хӳхĕм ĕçлет...

— Хăй ĕçĕнче чăн-чăн артист,— хăйсен çывăх юлташĕ пирки çапла калани мана та савăнтаратчĕ.

Пĕррехинче эпĕ Ильина Атăл леш енче ĕçленĕ вăхăтра тĕл пултăм. Ильин драглайнпа ĕçлет, вăл унпа самосвалсем çине хăйăр тиет, хăйăрĕ вара çак вăхăтра тимĕрпе бетон заводне, хулари ытти строительствăсене питĕ кирлĕччĕ.

Хăйăр! Строительствăра вăл цемент е кирпĕч пекех хаклă «çимĕç». Ильин çакна питĕ лайăх туять ĕнтĕ. Çавăнпах-и тен, вăл çав тери хастар ĕçлет. Драглайн ун аллинче выляса çеç тăрать, ăста экскаваторщике çăмăллăн парăнать. Вăл пĕр хускану та ытлашши тумасть, ун ĕçĕнче пĕр кăлтăк та сисĕнмест. Петр Васильевич драглайн алтăрĕн сулмакне те, вăл çĕре чавса кĕнине те, вăхăта та, самосвал кузовĕн инçĕшне та малтанах шута илни пĕрре пăхсах курăнать. Хĕрĕх пилĕк секунд хушшинче тăвата алтăр ăсса илет те хĕрĕх пилĕк секунд хушшинче машин кузовне тултарать. Çапла вăл кашни минутрах тенĕ пек машин хыççăн машин строительствăна хăйăр ăсатать.

Хăйăр кăлармалли лаптăк пысăк та тарăн турилкке майлах туйăнать. Хулăн юр айĕнчен чавса кăларнă хăйăр февраль хĕвелĕн çутипе сиввĕн те тĕксĕммĕн курăнать. Атăл анатĕнчен самаях вичкĕн çил вĕрет. Кунта халĕ çынсемпе машинсем пулмасан ытла та кичем сăнлăх тăмалла, иртен-çӳрене вара ним чухлĕ те савăнăç кӳмест пек.

Ильин драглайнĕсĕр пуçне кунта татах икĕ экскаватор ĕçлет. Экскаваторсем кĕреçе шăлĕсемпе шăннă хăйăра кышлаççĕ, çиелтен чакалаççĕ, алтăрĕсемпе ăсса илеççĕ. Вара вĕсем, хăйсен йĕпписене кăнтарса, халь кăна çитсе чарăннă машинсем еннелле çаврăнаççĕ, самантлăха çех кузов çинче чарăнса тăраççĕ; алтăр тĕпĕ шалтлатса уçăлать та самосвал кузовне хăйăр юхса тухать, машинсем чĕтренсе илеççĕ. Хăйăр кузова купаланать, тулать. Унччен те пулмасть, мотор ӳхĕрме пуçлать, самосвал пысăк лакăмран йăраланса тухать. Шофер, кĕрекаç патне çитсен, учетчике алă сулать, хăвăртлăхне ӳстерет. анлă Атăл тӳремлĕхне ярăнса тухать, хулана васкать. Учетчик, машин номерне курса, хут çине паллă тăвать. Хăйăр турттарнă çĕрте çĕр ытла машин калла-малла чупать, учетчиксем вĕсен рейсне аран-аран палăртса ĕлкĕреççĕ.

Хăйăр кăларакансемпе турттаракансене пăхатăн та, самантлăха строительствăри ĕçсене шута илетĕн. Хĕлле те, çулла та стройкăра пĕр вăхăтлăха та ĕç чарăнмасть. Кунта вара кашни механизм хăйне май расна ĕçлет, кашни çын хăй мĕн тăвассине малтапах лайăх пĕлет. Ĕç хăй çеммипе йĕркеленсе пырать, чуна савăнтарать.

Çав вăхăтра пире Петр Васильевич асăрхарĕ иккен. вăл кабинăран тухрĕ, хăй помощникне ĕçлеме хушрĕ. Драглайн, урăх алла сиснĕ майлах, унченхи ĕç çеммине çухатрĕ. Драглайн алтăрĕ малтанхи пек пĕрре сулса янипех тулаймарĕ, вăл. юнтармĕш ача евĕр, турткалашрĕ, сывлăшра усăсăрах калла-малла сулкаланчĕ.

— Ĕçе хăнăхсах çитеймен-ха.— Ильин помощникĕ еннелле пуçне сĕлтсе кулкаларĕ манпа юнашар тăракан Нестерюк.

— Хăнăхать,— шанчăклăн каларĕ Ильин.— Ачи пултарать-ха, хăйĕнне тупатех вăл.— кайран Ильин главнăй инженера тӳрех куçран тинкерчĕ те хăй те куланçи пулчĕ.— Драглайн экскаватортан ăнăçлăрах ĕçленине халь куратăр-и ĕнтĕ? Çапла çав. Анчах ытти экскаваторсене ма халь те драглайна куçармастăр? Мĕн кĕтетĕр?

— Калама çăмăл, анчх ĕçне тума вара...— Нестерюк каллех иккĕленнĕ пекрех хулпуççине хăпарткаласа илчĕ.— Алтăрсем кирлĕ, вăхăт кирлĕ. пирĕн вара машинсене профилактика тума та вăхăт çитмест, çур кун кăна параççĕ, ытла васкатаççĕ.

— Вăхăт хаклă пулсап, экскаватортан драглайн тума та васкас пулать,— çаплах парăнмарĕ Ильин.

Петр Васильевич куçне хĕссе илчĕ те хĕрӳллĕн, хавхалануллăн калаçма тытăнчĕ. Вăл пĕлтĕр кĕркуннех экскаваторсенчен драглайн тума сĕнӳ панăччĕ, ун пирки хаçатра та çырса кăларнăччĕ. Ильин малтанах шутласа кăларнă тăрăх, çĕнĕ меслет ĕç тухăçлăхне вăтăр пилĕк процента яхăн ӳстерме май парать иккен. Ун сĕнĕвне хапăлласах йышăнаççĕ, анчах ĕçре кирлĕ пек усă курма никамах та тăрăшмастчĕ.

Эпир Петр Васильевичпа сисмесĕрех калаçса кайрăмăр. Ильин каллех ун сĕнĕвĕпе кирлĕ пек усă курманнишĕн кăмăлсăрланчĕ, пире айăпларĕ.

— Паллах, çĕнĕ сĕнӳшĕн мана укçа тӳлеççĕ, анчах унпа усă курма никам та васкамасть. Асăнтарсан кӳренеççĕ тата. Пĕлместĕп, нивушлĕ эпĕ укçашăн хыпăнса çӳретĕп тесе шутлаççĕ?— кĕтмен çĕртенех тарăхса кайрĕ Ильип, аллине сулчĕ.

Эпĕ Ильинпа унченех курнăçкаланăччĕ. Вăл вăтам çулсенчи тĕреклĕ арçын. Урине вăл халĕ калушлă çăматă тăхăннă, ăшă шаларĕ çупа вараланнă, пуçĕнче ăшă тиртен çĕленĕ летчик шлемĕ. Петр Васильевич çынпа самай вăхăт куç илмесĕр пăхма пултарать, хăй кăштах шухăшлăн, тута хĕррипе кулать. Ун сăнĕ уçă кăмăллă, чăннипех ĕçлĕ çынăнни майлă, хавас.

— Пирĕн Петр Васильевич хăйне вара пур енĕпе те тӳрĕ чунлă çын тесе шутлать,— йĕкĕлтенĕ пекрех хушса хучĕ Демин.— Анчах вăл та çылăхсăр çын мар вĕт-ха. Акă, сăмахран, эсир çамрăксене питех асăрхамастăр, хăвăр ăсталăхăра пытарма тăрăшатăр.

— Çаплах-ши?— кулкаларĕ Ильин та. —Чăнах пулсан, малашне асра тытăп. Анчах...— вăл самантлăха шăпланчĕ, тем аса илесшĕн пулнăн туйăнчĕ, пĕр ури çинчен теприн çине пускаласа тăчĕ.— Астăватăр-и, Демин юлташ, шăннă çĕре çемçетмелли меслете кам сĕнчĕ? Эпĕ мар-им? Э-505 экскаватортан драглайн тума кам пулăшрĕ? Астăватăр-и? Экскаваторсене тĕпренех юсама тата кам ытларах вăй хучĕ? Çылăхсене шутлама пуçличчен малтан ĕç тĕшшине курас пулать. Çапла çав.

— Пĕлстпĕр, пурне те пĕлетпĕр.— кулса ячĕ Демин.— Анчах çамрăксем те сирĕн меслетĕрсене пĕлесшĕн вĕт-ха. Вĕрентес пулать. Тата сире кăштах йĕкĕлтени те кансĕрлемест.

— Килĕшетĕп...

Деминпа Нестерюк иккĕшĕ те çамрăк инженерсем. Çавна пулах-и тен, ытла та йăрă çынсем. Вĕсем Ильинпа та нумай калаçса тăмарĕç, васкасах хăйăр лапамне анса кайрĕç. Эпир Петр Васильевичпа иксĕмĕрех тăрса юлтăмăр. Сăмахюмах хамăр ĕç пирки пуçланчĕ, кайран ун ĕçне аса илтĕмĕр.

— Атя, ларса канар кăштах,— сĕнчĕ те Петр Васильевич, мана куçса çӳрекен электростанци валли тунă пĕчĕк пӳлĕме ертсе кĕчĕ. Кĕтмен çĕртенех асаилӳсем пуçланчĕç.

...Вăтăр сакăр çул каялла Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Синкасси ялĕнчи хресчен килйышĕнче ывăл ача çуралнă. Вăл — Петĕр — килйышри улттăмĕш ача пулнă. Ыттисем, тĕрлĕ чире пула. икĕ çула та çитеймесĕрех, çĕре кĕнĕ. Петĕр сывлăхĕшĕн вара ашшĕ-амăшĕ шутсăрах тăрăшнă, епле пулсан та ӳстерсе çын тума пĕтĕм вăйне хунă. Чăнах та ĕнтĕ, ашшĕ-амăшне телей парасла, вĕсен шанăçне кăларасса пĕлнĕ пекех, Петĕр сывлăхлă ӳснĕ, ытла та йăрă ача пулнă, кӳршĕ ачисене тытса лăскама та хăраса тăман. Петĕр, кӳршĕ ачисем пекех, шкула çӳренĕ, анчах çамрăклах килтĕрĕшри ĕçсене хăнăхса пынă. Вуникке çитсен вăл суха тума та, утă çулма та вĕреннĕ. Пĕчĕк Петĕр. ларма-тăма пĕлменскер, çав тери пысăк ĕмĕтлĕ ача пулнă. Вăл физикăпа математикăна, астрономие питĕ юратнă. Петĕр вăтам шкултан вĕренсе тухсан, аслă шкула вĕренме каяс куна кĕтсе пурăннă. Анчах вăл аслă шкула заявлени пама та ĕлкĕреймен. тăван çĕршыва нимĕç фашисчĕсем сĕмсĕррĕн вăрçăпа тапăннă. Петĕр институт сакки çине ларас вырăнне çĕршывăмăра сыхлакансен ретне тăнă, алла пăшал тытнă. Ильин Сталинград хулине фашистсенчен хӳтĕленĕ, Паулюс çарне çапса аркатнă çĕре хутшăннă, виçĕ хут аманнă, контузи илнĕ.

— Çар ĕçĕнче ман ăнăçу пулаймарĕ,— кăштах куланçи пулчĕ Ильин.— Эпĕ вăрçă пуçламăшĕнчех Киеври çар техникин училищине кĕнĕччĕ, анчах унта нумай вĕренме май килмерĕ, Краснодар хулине куçарчĕç. Кунта та вĕренӳ татăлчĕ, Сталинград фронтне, герой-хулана тăшмансенчен хӳтĕлеме куçарчĕç. Амантăм. Госпитальтен тухсан Саратоври пехота училищине ячĕç, тепĕр икĕ эрнерен каллех Паулюс çарне тӳнккеме лекрĕ. Иккĕмĕш хут амансан запаслă полкра çамрăк командирсене вĕрентрĕм. Летчик пулма ĕмĕтленни те пурнăçа кĕреймерĕ, контузи кансĕрлерĕ.

Хĕрĕхсаккăрмĕш çулта Петр Васильевич мирлĕ ĕçе таврăнпă. Тула облаçĕнче вăл сакăр çул хушши экскаваторщик пулса ĕçленĕ. Пурнăç та йĕркленсе кайнăччĕ ĕнтĕ, ăна лайăх хваттер те панăччĕ, ĕç укçийĕ те çителĕклĕччĕ унăн. Вăл авланнăччĕ, икĕ ача çуралнăччĕ. Анчах аллă улттăмĕш çулта Ильин Шупашкара куçса килме шут тытнă.

— Тăван вырăнсем туртрĕç-и?

Çук, тăван вырăнсене, çуралнă кĕтессене чун туртнипе мар, тăван республикăри çĕнĕ стройкăсенче ĕç вăйĕ нумай кирлине шута илнĕ вăл. Ун пултарулăхĕ, ăсталăхĕ трактор пайĕсем тăвакан завод строительствинче те, ЗЭИМ-па ЗЭИП тунă çĕрте те, пысăк кирпĕчсем кăларакап Вăрманкасси заводне тунă çĕрте те, ытти стройкăсенче те кирлĕ пулнă.

— Сирĕн ĕçре авари таврашĕ пулман-и?— сăмах май тенĕ пекрех çес асăрханса ыйтрăм эпĕ.

— Пĕрре пулнăччĕ те, вăл та манăçа тухать ĕнтĕ,— кулкаларĕ Ильин. Кайран вăл, шухăша кайнă пек. тем аса илесшĕн пулнăн таçта аяккалла тинкерсе пăхрĕ. Сăнĕ салхуланчĕ. — Унтанпа пайтах вăхăт иртнĕ пулин те çак намăсаниепле те манаймастăп.

Чăнах та ĕç тени нумай пăшăрхану çуратать. Ĕçре кăлтăксемпе пăтăрмахсем те тупăнаççĕ. Пĕррехинче Петр Васильевичăн хăй пултарулăхĕпе мухтанасси килнĕ. Вăл тин çеç экскаваторпа ĕçлеме вĕреннĕччĕ, тин çех ăна машин шанса панăччĕ. Пĕр кунхине вăл çĕр чавнă, ытла та «тăрăшнă». Ытлашши хыпаланнипе-ши е урăх сăлтавпа сасартăк ун машинин хурçă вĕрен татăлнă, экскаваторăн йывăр алтăрĕ машин кузовне шаплаттарса ӳкнĕ. Малтанлăха Петр Васильевич аптăраса тăнă, мĕн тумаллине те пĕлмен. Шăпах çав вăхăтра самосвал çывăхĕпе нефть промышленноçĕн министрĕ Байбаков хăй юлташĕсемпе пĕрле утса пынă. Çамрăк экскаваторщик çухалса кайнине курнă та вăл, ун патне пынă, хулпуççирен лăпкасах ăна лăплантарнă. Салтак гимнастерки тăхăннă çамрăк ăна килĕшнĕ пулмалла, вăл вара хăех трос улăштарма пулăшнă.

— Ĕçе тĕплĕ тăвас пулать, ытлашши вĕтелеиме юрамасть,—

ÇУЛ УÇĂ!

Уйăп МИШШИ

Ку хыпара юмах теме пултарăн,
Кун пеккине илтмен, курман тĕнче.
Çĕр чăмăрĕ тавра вĕçет Гагарин,
Совет çынни тĕнче уçлăхĕнче!
Совет çынни! Никам та мар, пĕр çавă!
Мăнаçлăн халь калатпăр ун ятне.
Вĕçет унпа Çĕршывăмăр мухтавĕ,
Этем уçать çул çăлтăрсем патне!
Тăван çĕршыв ăна инçе вĕçтерĕ
Çунат парса, телейлĕ çул сунса.
Вăл ларнă та хăюллăн кĕрлеттернĕ
Килпе чипер таврăнасса шанса.
«Çын космосра!» янрать Мускав сассийĕ,
Кĕрлет, шавлать çĕр-йыш:
«Çын — космосра!»
Кĕтнийĕ çитрĕ, пулчĕ пуласссийĕ,
Çакна, этемлĕх, асăнта усра!
Çак самантран пачах çĕнни пуçланчĕ,
Халь йывăр тавçăрса илме ăна.
Ман сывлăш пÿлĕнчĕ, чĕлхем çыхланчĕ,
Савăннипе юрлас килет кăна.
Юрлас килет! Çуралчĕ хÿхĕм юрă,
Ниçта шăнăçайми савăнăçран.
Чĕлхе çинче пĕр ят: Гагарин Юрий,
Чăн чаплă вăл, мухтавлă паянран.
Никам курманнине ун курчĕ куçĕ,
Вăл вĕçрĕ çын нихçан вĕçмен çĕрте.
Çул уçă! Çăлтăрсем патне çул уçă!
Мала, космонавтсем! Черет сирте!

Совет çыннине мухтав!

Гурий ЧАРЖОВ

Çитĕ кĕç этемлĕх Уйăх, Марс çине те,
Космоса çул хыврĕ халь совет çынни,
Ун çинчен илтсессĕн — тĕлĕнчĕ
планета:
Уçлăха тĕпчет вăл,
Вăл шырать çĕнни.
Космоса кам вĕçрĕ?
Космонавт Гагарин!
Каялла та килчĕ «Тухăç» карапппа.
Малашне унта пиртен кашни хăпарĕ,
Хĕмленен чĕремĕр тулчĕ хаваспа.
Ман çĕршыв мухтавлă,
Пуласси хăватлă.
Халиччен тĕнче курман-илтменнине
Турăмăр!
Эпир çĕнтерÿпе ыр ятлă!
Янратать пур ĕçлĕ халăх мир чанне.
Ÿсрĕ, ÿсрĕ савнă халăхăн таланчĕ.
Çут прожектор сирнĕ евĕр каç сĕмне
Çăлтăрсем таран чыс-чапăрмăр
саланчĕ,
Юлчĕ вăл кĕрсе тĕнче кĕнекине!

Ÿкерчĕксенче: Юрий Алексеевич Гагарин — 1961 çулхи апрелĕн вуниккĕмĕшĕнче «Восток» карап-спутникпе çĕр тавра вĕçсе çаврăннă пĕрремĕш космонавт.

ОФИЦЕР ТЕЛЕЕ ĔÇРЕ ТУПРĔ...

И. СТЕПАШИН

Ача чух курса сăнанисем ĕмĕрлĕхе асра юлаççĕ тесе ахалех каламан пулĕ çав. Эпĕ Саша Доманинпа мĕн ачаранах туслă. Тантăшсем-çке-ха. Пĕрле вĕреннĕ, пĕрле ÿссе çитĕннĕ. Унăн Микула ятлă аслашшĕ пурччĕ. Питех те ватăччĕ вăл. Пĕррехинче пирĕн килте çĕнĕ пÿрт ĕçки турĕç. Мучи парне вырăнне пĕр пысăк çăмламас кушак илсе пычĕ. Вĕсем çав тери чухăн пурăнатчĕç. Çавăнпа ĕнтĕ вăл урăх нимĕн те илсе пыма пултарайман. Хĕн-хурпа асап тÿссе вăхăтсăр ватăлса курпунланнă мучи пире, çара уран чупса çÿрекен ачасене, хăй тавра пухса, ĕлĕкхи тертлĕ пурнăç çинчен часчасах каласа паратчĕ. Çакăн хыççăн эпир çĕрме пуянсен пусмăр тĕнчине чун-чĕререн тарăхса ылханаттăмăр.

Совет влаçĕ пире телей çулĕ уçса пачĕ. Çав çулпа эпир сулмаклăн та савăнăçлăн утса пытăмăр.

Александр Доманин çамрăклах тăлăха юлнă. Малтан унăн амăшĕ, каярахпа ашшĕ вилчĕ. Ашшĕ унăн виçĕ вăрçăра пулнă, Аслă Октябрь революцине хутшăннă. Акă халĕ çемьере тăваттăн, тăватă тăлăх турат: Саша пичĕшĕпе тата икĕ пĕчĕк йăмăкĕ. Ирĕксĕрех унăн вĕренме пăрахса ĕçе кÿлĕнмелле пулчĕ. Вĕренессе те Саша çичĕ çул анчах вĕреннĕ. Бригадир ăна уй-хир ĕçне тăтăшах хутшăнтарчĕ. Анчах кунта вăл чылай вăхăт хушши ĕçлеймерĕ. Пĕррехинче ăна колхоз председателĕ Сергей Ксенофонтович Коротков курать те çапла калать:

— Пăхатăп та сана, эсĕ тăрăшса ĕçлеме юрататăн. Пур çĕрте те пултармалла. Пыр-ха ыранах правление. Унта ĕçкунĕсене шутлама çын çитмест. Килĕшетĕн-и?

— Килешесси килĕшетĕп, анчах пултарăп-ши. хăнăхман ĕç,— тет Саша, савăнăçлă куçĕсемпе председатель çине тинкерсе пăхса.

— Ĕç хăех вĕрентет, хăрама кирлĕ мар.

Тепĕр кун ирхине Саша правлени çуртне именчĕклĕн кĕрсе тăнă. Сĕтелсем йĕри-тавра бухгалтеринче ĕçлекенсем ларнă.

— Ну, Саша, хăюллăрах пул. Акă, юлташсем, сире çĕнĕ çын,— кулкаласа пĕлтерчĕ Коротков.

— Савăнсах йышăнатпăр,— тет Мишанин учетчик. Эпĕ пĕччен тăнран тухма пуçларăм. Лар, Саша, çак сĕтел хушшине, пĕрле ĕçлĕпĕр.

Çапла Доманин учетчик пулса тăнă.

Вăхăт нумаях та иртмен, Саша Доманина колхоз правленийĕ çулталӑклăха Вăрнарти бухгалтерсен шкулне вĕренме янă. Унăн юлташĕсем шут ĕçне хăнăхнă çынсем пулнă. Вĕсене курса Саша та ывăнма пĕлмесĕр тимлĕн вĕреннĕ. Часах каччă счетовод свидетельстви илсе тăван колхоза таврăннă.

— Эпĕ Саша Доманин пĕлÿ илессишĕн çав тери тăрăшнине халĕ те манмастăп,— тет бухгалтерсен шкулĕн ун чухнехи директорĕ пулнă Туранов юлташ.— Тăнлă каччă, аллисем те унăн ылттăн!

Нумай енлĕ пысăк эртел хуçалăхĕнче, паллах, шут ĕçĕ те кăткăсрах. Çавăнпа та кунта «аптекăри пек» йĕркелĕх пулаймасть. Акă Саша Доманин хĕрсех ĕçе тытăнать. Бухгалтер ĕçĕ куçа курăнмасть. Ун çинчен сăвăсем те çырсах каймаççĕ. Çапах та шутлама пĕлни колхозра лайăх палăрать вăл.

...1941 çул. Нимĕç фашисчĕсем Тăван çĕршыва сĕмсĕррĕн килсе тапăнаççĕ.

— Пурте тăшмана çĕнтерме,— чĕнет Тăван çĕршыв. Аслă Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчех арçынсем, çемйисемпе сывпуллашса, фронта туха-туха каяççĕ. Черет Доманина та çитет.

— Пăшала аллунта çирĕпрех тыт. Кольцовка чысне упра,— тет Коротков, Сашăпа сывпуллашнă май.

Мускав çывăхĕнчи хыр вăрманĕ. Пĕр кăтрарах чăрăш кутĕнче Саша ларать. Юнашар — Тутарстан ачи, йĕри-тавра — курсантсем. Вĕсем пурте подполковник тăшман йышăннă яла наступлени мĕнле тумалли çинчен каланине тимлĕн итлеççĕ. Ку вăл пехота учили-

асăрхаттарнă министр ăшшăн кулкаласа.

Экскаваторщик ĕçне тĕплĕн вĕренме ăна Ковров хулине машин илме кайни те нумай пулăшнă. Кунта вăл конвеер çинче экскаватор пухма та вĕреннĕ, ку вара машинăн кашни кăлтăкне шута илме май панă. Çакăн хыççăн вăл çак кĕмсĕркке те хăватлă машина çав тери юратса пăрахнă, халĕ вара экскаватора тĕпренех юсакă çĕрте те хăй ĕçлет.

Эпĕ, сăмах май, хăшпĕр экскаваторщиксен ĕçĕсене аса илтĕм, вĕсем хăйсен хăвăртлăхне, пултарулăхне кăтартас майпа вăхăтсăрах троссене татса пĕтернипе асăнтăм.

— Çапах та тĕлĕнмелле,— терĕ Ильин, куçхаршисене пĕркелентерчĕ, ун сăнĕ тĕксĕмленчĕ.— Хăшпĕрисем те юрнех пĕр-пĕр çын кăлтăкне теприн çумне тĕртме тăрăшаççĕ, те пурте йĕркесĕр çынсем тесе шутлаççĕ?.. Чăнах та ĕнтĕ, троссем вăхăтсăр татăлни пулкалать, анчах камăн хăвăртрах пăрахăçа тухать, ун пирки шухăшлас пулать. Пуринчен ытларах пирĕн туртакан тросс татăлать, çапах та ун пурнăçне те тăсма пулать вĕт-ха. Ман троссем ма чылай вăхăт технологипе пăхнинчен ытларах чăтаççĕ? Эпĕ троссене вĕрен çăвĕпе вĕрстме сĕннĕччĕ. Тросс варринче амортизаци паракан йĕтĕн сÿсĕ пур. Çав йĕтĕн сÿсне лайăх çулласан, ун çирĕплĕхĕ самаях ÿсет. Ăна тума пысăк валашкапа çу çеç кирлĕ. Анчах кунта та пирĕн начальниксем пуш сăмахран ĕçе куçаймаççĕ-ха.

Петр Васильевич, экскаваторщик пулса вунвиçĕ çул ĕçленĕ хушăра, чăннипех ĕнтĕ, хăй машинине те, ĕçне те питĕ ăста вĕренсе çитнĕ. Вăл çак вăхăт хушшинче пин-пин кубла метр çĕр чавса кăларнă, хăйăр, вак чул тиенĕ е пушатнă. Ун ĕçне халăх та, çĕршыв та пысăка хурса хакланă. Петр Васильевича РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕсен Хисеп грамотисемпе наградăланă, вăл «Социализмла ăмăрту отличникĕ» значок илме тивĕçлĕ пулнă. 1960 çулта вăл КПСС членĕн кандидатне кĕчĕ, кăçал вара ăна Шупашкар хула Совечĕн депутатне суйларĕç.

Ильин экипажĕ халĕ коммунизмла ĕç экипажĕн ятне илессишĕн кĕрешет. Вăл сĕннипе иртнĕ çулта Ленин проспектне çĕнетес тĕлĕшпе комплекслă бригада тунăччĕ, халь вара çак ăнăçлă меслетпе Спутник-хула строительствинче те усă курма тытăнчĕç.

Петр Васильевич Ильин биографийĕнче халиччен тĕнче курман чаплă ĕçсем çук ĕнтĕ. Вăл Тĕнче уçлăхне вĕçме те хатĕрленмест. Анчах вăл ĕçленине куратăн та, ирĕксĕрех ун патне чĕре туртать. Вăл чи малтан совет çынни, паянхи строитель, пирĕн вăхăтри герой. Вăл юлташсен ĕçне хÿтĕлеме, кирек кама та тĕрĕслĕхе ĕнентерме ăста. Вăл хăй ĕçĕнче чап шырамасть, анчах ĕçре çĕннине тупсан ăна пурнăça кĕртиччен пĕр-пĕр начальникрен хăпмасть. Тĕрĕссипе каласан, Петр Васильевича хăшпĕр начальниксем питех кăмăллаçах каймаççĕ, вăл хăйĕн сĕнĕвĕсемпе, ларма-тăма пĕлмен кăмăлĕпе вĕсене пайтах йăлăхтарса çитернĕ. Ильин — çĕннишĕн кĕрешме çуралнă çын.

Петр Васильевич Ильин ĕçĕ строительствăпа, ун çыннисемпе çыхăнса тăрать. Экскаваторпа ĕçлесси, хăйăр е тăпра кăларасси вăл ĕçсен пĕр енĕ кăна-ха. Чи кирли совет çыннисем валли çĕнĕ çуртсем тăвасси, ку анчах та мар, çĕнĕ пурнăç тăвасси пулса тăрать. Совет строителĕ вăл совет çыннисен малтанхи помощникĕ.

Петр Васильевичпа эпĕ ăшшăн сывпуллашатăп, вăл ман алла хытăн чăмăртать. Эпĕ унăн сарлака çурăмпе, кĕрнеклĕ уттине курса савăнатăп. Иртнĕ калаçусене аса илсен ман каллех унпа юнашар пулас килет. Çук, эпĕ унăн нумай енĕсене тĕплĕнех пĕлейместĕп-ха, пирĕн унпа татах курнăçма лекет.

А. ТЕРЕНТЬЕВ.

щинче. Кĕркунне Саша Доманин Волхов фронтĕнче автоматчиксен рота командирĕ пулса тăнă. Çав вăхăтра Ленинград çывăхĕнчи çапăçусем питĕ хăрушă пулнă: фашистсен танксем хÿттипе вĕçĕ-хĕррисĕр атакăна кĕнĕ.

— Ротăна йышăнсан тепĕр сехетренех танксем пулăшнипе нимĕç автоматчикĕсен десанчĕ пирĕн оборонăна пырса тăрăнчĕ,— каласа парать Доманин.— Эпĕ вара çав десанта пĕтерме приказ илтĕм. Миçе фашиста вĕлернĕ тетĕр-и? Шутлама вăхăт пулман. Пĕр тĕллевпе кăна çапăçнă: тăшмана оборона урлă каçармасăр тĕп тумалла! Çав десантран вара çапăçу хирĕнче çуннă танкпа фашистсен виллисем кăна выртса юлчĕç.

— Маттур, лейтенант, тавтапуç, çапăçасса вара пирешкелех, гвардеецсем пекех, çапăçрăн,— тенĕ каçхине дивизи командирĕ, кăвакарнă çÿçлĕ генерал, лейтенанта. Шурлăхлă лачакасем, юлташсем çапăçусенче хăйсен пуçĕсене хуни, кашни утăмрах сыхласа çÿрекен вилĕм, темиçе хут аманни — çаксем пурте Кольцовкăн паттăр ывăлне пĕртте хăратайман. Анчах пĕррехинче Саша ĕсĕклесех йĕрнĕ, паллах, арçынла, шăппăн, Ржев хули патĕнчи çапăçусенчен пĕринче унăн юратнă пиччĕшĕ Микуль тăшманпа паттăррăн çапăçса вилнĕ.

Виçĕ хут йывăр аманнă хыççăн Александр Невский тата ытти орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулнă аслă лейтенанта тухтăрсем çарта пулма юрăхсăр тесе тыла ямалла тунă.

... Ун чух парти Вăрнар райкомĕн секретарĕ пулса С. К. Коротков ĕçленĕ. Александр Доманин, салтак кутамккипе планшетка çакнă офицер, пуйăс çинчен ансанах райкома ун патне кĕнĕ.

— Çапăçу хирĕнче аманнă офицера ĕç стройне ил, Сергей Ксенофонтович,— тенĕ Доманин, аллине картус сăмси патне тытса.

Çав каçхине райкомра крассын лампи çĕрĕпех сÿнмерĕ. Туссем çав-çавах калаçса пĕтереймерĕç.

— Саша, манăн та тăван яла таврăнас килет, çĕр патне. Каллех пĕрле ĕçлесе хуçалăха çĕклĕпĕр. Колхозниксене те пулăшас пулать. Вĕсем фронт валли нимĕн те шеллемерĕç.

— Пĕлетĕп, Кольцовка çыннисем «Чăваш колхозникĕ» ятлă танк колонни тума укса пухни çинчен хаçатра вуланă. Кирек мĕнле ĕçе те, анчах сирĕнпе пĕрле.— килĕшнĕ хăна.

Тепĕр кунне çамрăк коммунист райкомра учета тăнă хыççăн тăван Кольцовкăна таврăнчĕ.

Малтанхи вăхăтра Доманин каллех бухгалтер пулса ĕçлерĕ.

— Фронт хыççăн бухгалтер ĕçĕ темĕнле кичемрех туйăнать. Манăн халăхпа тачăрах пулас килет,— терĕ вăл пĕррехинче председателе.

— Тăваттăмĕш бригадăна каятăн-и?

— Савăнсах.

— Уй-хир ĕçне лайăххах йĕркелеме вăхăт. Эпир тухăçлă тырпул çитĕнтернĕшĕн Ленин орденĕ илме тивĕçлĕ пулнă вĕт,— кăмăллăн пĕлтерчĕ Коротков. юлса пыракан бригада хуçи тупăннă май.

Запасри офицер каллех хĕрÿ ĕçе пикенчĕ. Бригадир иртен пуçласа сĕрлечченех ура çинче.

Часах Александр Федорович бригади хăйĕн ĕçĕсене вăхăтра та йĕркеллĕ туса пыма пуçларĕ. Уй-хир ĕçĕнче вара яланах малта. Дисциплина та лайăхланчĕ. Офицер пултарулăхĕ кунта тÿрех палăрчĕ. Вăл кашни колхозникпе уйрăммăн калаçать, бригадăра пухусем иртерет, колхозра тухса тăракан хаçатпа анлă усă курать.

Çĕре юратни, ĕç вăйне тĕрĕс йĕркелеме пĕлни уй-хир ĕçĕнче çитĕнÿ хыççăн çитĕнÿ тума май пачĕ. Бригада гектартан çĕршер пăт тĕштырă туса илме пуçланă. Уйрăм лаптăксенчен 38—47 центнершар тырă туса илни те пулкаланă. Паллах, çакна тума уй-хире тислĕк, чăх-чĕп каяшĕ, фекали ытларах кăларни пулăшнă. Çĕре çемçетнисĕр пуçне, уй-хир ĕçне механизацилени те пысăк вырăн йышăннă. Колхозниксем ĕçе пĕлсе чун-чĕререн тăрăшса ĕçленĕ.

Александр Федорович пурнăçĕнче савăнăçлă вăхăтсем сахал мар пулнă. Вĕсене ытларах хумхануллă самантсем темелле. СССР Верховнăй Совечĕн Указĕ тăрăх, Сергей Ксенофонтович Коротков юлташа, ăна тата Кольцовкăри ытти 9 колхознике тухăçлă тырпул туса илнĕшĕн Социализмла Ĕç Геройĕн хисеплĕ ятне памалла тунă.

Çав çулхине унăн бригадинчи 47 çын орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулнă.

Тепĕр çултан Александр Федоровича колхозри парти пуçламăш организацин секретарьне суйларĕç. Колхоз правленийĕпе парторганизаци эртел хуçалăхне малалла аталантармалли план туса хатĕрлерĕç. Нумай енлĕ хуçалăха аталантарас ĕçре колхозниксене хавхалантарса пымалла! Ку вăл— пысăк та ответлă ĕç. Çак ĕçре коммунистсем пусаруллă пулмалла, ырă тĕслĕх кăтартмалла.

Колхоз правленийĕн анлă ларăвĕ пысăк ыйту сÿтсе явать: обществăлла выльăх-чĕрлĕхрен продукци мĕнле майпа ытларах илмелле.

Председатель пÿлĕмне бригадирсем, фермăсен заведующийĕсем, колхоз правленийĕн членĕсем, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем пухăннă. Сăмах колхоз председателĕ Сергей Ксенофонтович Коротков илет.

— Пирĕн уй-хир ăстисен паттăр ĕçĕсем çинчен вăрçăччен пĕтĕм çĕршыв пĕлнĕ. Çав ĕçсемшĕн эпир Ленин орденĕ те илме тивĕçлĕ пулнă. Анчах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе эпир кайра пыратпăр-ха. Çакăнпа килĕшме пултаратпăр-и-ха?

— Çук, пултараймастпăр,— тет Доманин.

— Тĕрĕс, Александр Федорович! Пирĕн выльăх-чĕрлĕх шутне пилĕк-ултă хут ÿстермелле, государствăна сĕтпе аш-какай ытларах памалла. Çакна пурнăçлас тесен, чи малтанах пултаруллă та шанчăклă çын тупмалла. Вăл хальхи вăхăтра юлса пыракан выльăх-чĕрлĕх фермине чăннипех мала кăларма пултартăр. Паллах, йывăр та ответлă ĕç. Коммунистсенчен кам килĕшет çак ĕçе ертсе пыма?

Пÿлĕмре шăп. Пĕррисем аяккалла, чÿречерен курăнакан шавлă шурă хурăнсем çинелле, теприсем, темрен именнĕ пек, пĕкĕрĕлкелесе, хăйсен урисем çине пăхкаласа илеççĕ.

Çав вăхăтра Александр Федорович ура çине хăвăрт тăчĕ те картусне лутăркаласа çапла каласа хучĕ:

— Фермăна эпĕ каятăп!

— Чун-чĕререн саламлатăп, икĕ алăпах сасăлатăп,— терĕ председатель.— Эпĕ те çапла шутланă.

Тепĕр кунне ирхине кăвак сутăпах Доманин фермăна вĕçтерсе çитнĕ. Çемен Еремеевич хуралçă ăна ăшшăн кĕтсе илнĕ. Александр Федоровича ферма заведующийĕ пулма уйăрса лартнине пĕлсен, старик савăнсах ÿкнĕ.

— Ырă хыпар. Санăн тахçанах кунта килмелле пулнă. Ним йĕрки те çук: ĕнесем çĕрĕпех ферма картинче çĕмĕрсе çÿреççĕ. Дежурнăйсем те юлса килеççĕ. Кино кураççĕ те киле чупаççĕ. Кĕтсе тăр вара вĕсем хăçан килессине.

— Пурне те йĕркене кĕртетпĕр,— тет заведующи.— Ĕне витисене кайса курар-ха.

Акă Доманин хăйне шанса панă хуçалăхпа паллашма тытăнать. Çĕнĕ заведующи пурне те курать, мĕн улăштармаллине е юсамаллине çавăнтах асăрхать. Акă пĕр витере тислĕк кăларман. «Ыйтса пĕлес, кам айăплă?». Вăйсăрланнă ĕнесем те пур иккен. «Вĕсене пĕр çĕре пухас та уйрăм тăрантарас». Çавăнтах Александр Федорович Нюра Миронова ĕне сăвакана пăру йышăнма пулăшрĕ, пăрăва ăшă витене илсе кайрĕ. «Ăçта Гусев веттехник? Мĕнле йĕркесĕрлĕх? Паянах кирлĕ мерăсем йышăнас!»

Икĕ хĕрача сăлтан тимĕр кăшăллă пысăк витрепе шыв ăсаççĕ.

— Мĕнле, хĕрсем, йывăр мар-и?

— Питĕ йывăр, Александр Федорович. Пĕр кун хушшинче 500 витре шыв кăлармалла.

— Мĕн те пулсан шухăшласа кăларăпăр. Эсир, кăвар чунлă хĕрачасем, кăшт та пулин кĕтме пултаратăр ĕнтĕ,— лăплантарать заведующи çамрăк маттурсене.

Салхуллăн, пуçа ыраттаракан шухăшсемпе пырса кĕчĕ Доманин хăйĕн пÿлĕмне.

Ирхине, ĕнесене сăвас умĕн, фермăра ĕçлекенсен канашлăвĕ пулчĕ. Пурте пухăнчĕç канашлăва: ĕне сăвакансем, пăру пăхакансем, выльăх апачĕ турттаракансем, сепаратор пунктĕнче ĕçлекенсем. Унта нумай çул хушши фермăра ĕçлекен Клава Ситухинăпа Наташа Бурлакова та пулчĕç.

— Пурнăç начар. Йĕркесĕрлĕх темĕн чухлех вара. Пирĕн вĕсене хăвăртрах пĕтермелле. Вăл анчах мар. Чи кирли — ĕнесенчен сĕт ытларах суса илме тытăнмалла. Ăнланатăр-и? Мана парторганизаци кунта заведующи пулма ячĕ. Çавăнпа та паянтан пуçласа çĕнĕлле ĕçлеме тытăнăпăр. Эпĕ каланине пурин те пĕр сăмахсăрах пурнăçламалла. Ĕç дисциплини пирки чарăнса тăма кирлĕ мар пулĕ тетĕп. Выльăх-чĕрлĕхе юратакан çынсем кăна çак ĕçре çитĕнÿ тума пултарĕç.

— Пире ĕçшĕн хушса тÿлеççĕ-и? — ыйтрĕ Наташа Бурлакова, пÿлĕмрен тухнă май.

— Правление ун пирки каласа татăлнă. Пулать.

Хĕрÿ ĕç пуçланчĕ. Малтанах заведующие Сергей Ксенофонтович Коротков, колхозниксем, районти ялхуçалăх специалисчĕсем пулăшса пычĕç. Пултаруллă заведующи ĕне сăвакансемпе пĕр чĕлхе тупрĕ.

Ферма валли сĕтеклĕ апат ытларах та ытларах хатĕрленĕ, выльăх-чĕрлĕх ăратлăхне те лайăхлатнă. Часах колхозниксем кукурус акма пуçланă.

— Кукурус ытларах акас пулать, унсăрăн обществăлла выльăх-чĕрлĕх шутне ÿстерме пултараймастпăр, — терĕ Доманин колхозниксен пухăвĕнче Никита Сергеевич Хрущев юлташ Сергей Ксенофонтович Коротковпа калаçнă хыççăн.— Никита Сергеевичăн канашне пĕр сăмахсăрах йышăнмалла, колхозниксен ячĕпе ăна тав тумалла,— çапла вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне ун чух заведующи.

Ĕне пуçне малтан вуншар, каярахпа çирĕмшер, юлашки çулсенче вăтăршар тонна сĕтеклĕ апат, кукурус силосĕ хатĕрлеме тытăнчĕç. Ĕнесем çулран-çул ытларах та ытларах сĕт пама пуçларĕç. Ферма районта чи малти вырăна тухрĕ.

Часах колхоза Шупашкартан чаплă хыпар килсе çитнĕ: фермăна коммунизмла ĕç коллективĕн хисеплĕ ятне панă.

... Пĕррехинче фермăна хаçат корреспонденчĕ персе çитет.

— Доманина курма пулать-и?— ыйтать вăл.

— Кăштах кĕтмелле пулать. Ĕне пăрулама тытăннă. Халĕ çеç чĕнсе кайрĕç ăна. Унта вĕçтерчĕ.

— Вăл мĕн, ветеринар мар пулĕ те?

— Кирлĕ пулсан, пирĕн заведующи ветеринара та, зоотехника та пултарать.

Часах Доманин хăй килсе кĕрет, хăнана сывлăх сунать. Мĕнле ĕçпе килни çинчен ыйтса пĕлет. Часах хăйне евĕрлĕ «пресс-конференци» пуçланать. Ферма заведующийĕ пур ыйтусем çине те васкамасăр, тĕплĕ ответ парать. Пур цифрăсене те асра тытать.

— Иртнĕ çул сĕт мĕн чухлĕ илнĕ тетĕр?

— Çĕр гектар çĕр пуçне 515 центнершер. Кăçал унтан та ытларах илесшĕн. Çак çулта колхоз государствăна сухалакан кашни 100 гектар çĕр пуçне 350 центнер сĕт сутать. Çав вăхăтрах колхозниксене çулталăкĕпех хăйсене кирлĕ чухлĕ сĕт йÿнĕ хакпа — литрне 5 пуса сутатпăр. Халĕ колхозра кашни 100 гектар çĕр пуçне 29 ĕне тивет. Çитес икĕ çул хушшинче ĕнесен хисепĕ татах ÿсет: вĕсен йышĕ пин пуçа çитет.

Кăçал эпир 50 гектар çинче тĕшĕлĕх кукурус акатпăр. «Уй-хир патшине» 400 гектара ситеретпĕр. Сахăр кăшманĕ тата çĕртме пуссинче тăваткал тĕмĕн пăрса акатпăр. Выльăх-апачĕ пирки калаçу та пулмасть.

Халĕ колхозра партин XXII съездне тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн социализмла ăмăрту çĕнĕ вăйпа сарăлса кайрĕ. Çичçуллăхăн виççĕмĕш çулĕнчи çуракине нихçанхинчен ăнăçлă иртеретпĕр, тухăçлă тырпул çитĕнтеретпĕр, государствăна тырпул, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах хатĕрлесе паратпăр. Государствăна пĕлтĕрхинчен икĕ хут ытларах сутатпăр. Çакă пулать те ĕнтĕ съезд ячĕпе хатĕрленĕ пирĕн парне.

Совет государстви пирĕн эртел председателĕн Сергей Ксенофонтович Коротков юлташăн ĕçĕсене пысăка хурса хакларĕ: ăна иккĕмĕш хут «Çурлапа мăлатук» ылтăн медальпе наградăламалла турĕ.

Пирĕн эртел аслă Ленин ячĕпе хисепленсе тăрать. Çак ята чыслăн тытса пыма тăрăшмалла. В. И. Ленин çуралнăранпа 91 çул тултарнине палăртнă кунсенче колхоз коммунизмла ĕçлекен коллектив ятне илессишĕн кĕрешÿ пуçарчĕ. Эпир çав хисеплĕ ята çĕнсе илетпĕрех...

Чылайччен калаçрĕç вĕсем.

Пăхатăп та Александр Федоровичăн ĕçĕ çине, чун-чĕререн савăнатăн. Чăн та унăн мухтава тивĕçлĕ ĕçĕ — ыттисемшĕн ырă тĕслĕх, хăй вăл — сутă маяк. Ахальтен мар ĕнтĕ Доманин юлташ — Социализмла Ĕç Геройĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ. Колхозниксем унăн ĕçне тивĕçлипе хакланă, хаклаççĕ те.

РАБИНДРАНАТ ТАГОР

Инди халӑхӗн аслӑ писателӗ, поэчӗ, философӗ, общество деятелӗ, просветителӗ, халӑхсен хушшинчи мирпе тусӑлӑхшӑн кӗрешекенӗ Рабиндранат Тагор 1861 ҫулхи майӑн 7-мӗшӗнче Калькуттӑра ҫуралнӑ. Малтанах вӑл килте, кайран Бенгалири тӗрлӗ шкулсенче вӗреннӗ.

Тагорсен килӗ хӑйне евӗр университет шутланнӑ. Вӗсем патне час-часах писательсем, музыкантсем, драматургсем, общество деятелӗсем пухӑннӑ. Вӗсен хӗрӳ калаҫӑвӗсем, дискуссийӗсем Рабиндраната ӳсме чылай пулӑшнӑ. Пулас писатель пуян традициллӗ Инди литературине тимлесе вуланӑ, ҫавӑнпа пӗрлех халӑхӑн сӑмах вӗҫҫӗн ҫӳрекен творчествине юратса тишкернӗ.

Ҫичӗ ҫула ҫитсенех Рабиндранат сӑвӑсем ҫырма тытӑннӑ. Унӑн малтанхи сӑввисемпе статьисем «Гьянанкур» журналта пичетленнӗ. Кӗҫех вӑл пиччӗшӗ кӑларакан «Бхароти» журналта ӗҫлеме пуҫӑннӑ, унта Европа литератури ҫинчен тӗрлӗ статьясем пичетленӗ.

Англине кайса ҫулталӑк ҫурӑ пурӑнса килнӗ хыҫҫӑн вӑл Ганга шывӗ хӗрринче, пиччӗшӗ патӗнче, хӑнара пулать. Унта лирикӑллӑ сӑвӑсен пиххине хатӗрлет — «Вечерние песни», кӗсех «Утренние песни» кӗнекине кӑларать. Ун сӑввисемпе поэмисенчи чӗререн шӑранса тухакан кӑмӑлтуйӑмпа сӑнарсен уҫӑмлӑхӗ, юрӑ ҫеммипе пӗрлешсе кайса, вулакан асӗнче нумайлӑха юлассӗ. Ҫамрӑклах ҫакнашкал пысӑк пултарулӑхпа ҫырнӑ «Пробуждение фонтана» сӑвви паян кунчченех чи мухтавлӑ лирикӑлла произведенисен шутӗнче тӑрать. Унӑн поэзийӗ уйрӑмах этемпеле ситсонталӑк пӗрлӗхне кӑтартса пама пултарнипе чина ҫӗклентерет. Хӑйӗн «Мир» сӑввинче Тагор ҫӗр ҫинчи вӗресе тӑракан пурнӑса мухтать, этем вӑйӗ тӑван сӗрпе ҫыхӑннинче, тет. Этеме этемле юратни, тӗрӗслӗхшӗн тӑрӑшни Тагора социалла, политикӑлла темӑпа сыхӑнтарать.

Ҫак вӑхӑталла унӑн Инди историйӗнчи событисене романтикӑлла ҫырса кӑтартнӑ «Баутхакуранир Хат», «Король-мудрец» романӗсем чӑнчӑн юратӑва хисеплеме вӗрентекен «Месть природы» драмипе «Ражда и Рани», «Отшельник» пьеси пичетленет. «Отшельник» пьесинче автор аскетизма, чӑн-чӑн пурнӑҫран уйрӑлса каякансене питлет, этем тивӗҫне, унӑн сӗр ҫинчи телейлӗ пурнӑҫне хӳтӗлет. Кӗсех инӑн ҫӗнӗ сӑввисем «Картины и песни», «Диезы и бемоли» ятлӑ кӗнекесенче тухассӗ.

Литературӑра ӗсленипе пӗрлех Тагор общество ӗсне те хутшӑнать, халӑх хушшинче калаҫусем урттерет, лекцисем вула-вула парать.

90-мӗш сулсем тӗлнелле Тагор чӑн-чӑн писатель пулса тӑрать. Кӗске калавсем ҫырма тытӑнать. Ялсене кайса сӳрени, халӑхпа сывӑх пулни ӑна хресченсен, ремесленниксен, пӗчӗк чиновниксен йӑли-йӗрки, хуйхисуйхи, пурнӑсӗ синчен нумайлӑха асра юлмалла произведенисем ҫырма пулӑшать. Инди хӗрарӑмӗн ӑраскалӗ ун калавӗсенче уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнать, автор вӗсен асаплӑ пурнӑҫне сӑмӑллатма кирли синчен калать. Тагортан малтан калавра халӑх массине кӑтартакан никам та пулман, вӑл кӑна «пӗчӗк ҫынна» хӑй произведенийӗсен положительнӑй сӑнарӗ тӑвать.

Сапла, «Пайта» калавӗнче Тагор колонилле Индипе укса пуспулса тӑнине, качча тухма укса-тенкӗ ҫителӗксӗр пулнӑ пирки хӗрарӑм шӑпи телейсӗр вӗсленни ҫинчен ҫырса кӑтартать. «Пытарнӑ мул» калаври ватсупнӑ хыткукар, хӑйӗн мулне упраса усратӑр тесе, мӑнукне укса питвӑлне питӗрсе хурать, мулшӑн самрӑк ача пурнӑсне те шеллемест. «Типсӑмне типнӑ юмах» илпит-хусасем чухӑнсене пусмӑрласа пурӑннине кӑтартать. Хӑйӗн чи лайӑх калавӗсенчен пӗринче — «Свет и тени» — вӑл Англи колонизаторӗсен урсӗр ӗсӗсем синчен тарӑхса каласа парать. Колонизаторсем имӗнче писсе пурӑнакан е пуҫ таякансенчен кулать («Коронация»). Чылай калавсенче Тагор феодализм юлашкийӗсене, уйрӑмах каста системине, хытӑ питлет. «Каста йӗркине пӑрахни» калаври тӗп герой ашшӗ ылханнине пӑхмасӑрах хӑйӗнчен кӗсӗн кастӑра тӑракан арӑмӗпе юлать, ӑна уйӑрса яма килӗшмест. Индире тата тепӗр хӑрушӑ йӑла, тӑлӑха юлнӑ арӑмӑн хӑй упӑшкин ӳчӗ умне чӗртнӗ вут ҫинче ҫунса каймалли йӑла пулнӑ. «Мохамайя» калав ҫак ирсӗр йӑлана тӗпрен хирӗҫлет.

Тагорӑн феодализмпа колониализма питлесе ҫырнӑ калавӗсем тӳрремӗнех кӗрешӗве чӗнмеҫҫӗ пулин те ҫав еннелле сулӑнни сисӗнет.

Тагор калавӗсем Инди халӑх литературине малалла аталанма нумай пулӑшнӑ. Ун калавӗсенчи гуманизм, реализм, критикӑлла туртӑм, патриотизм Инди литературинчи критикӑлла реализма ӳсе аталанма пулӑшакан тӗп пайлӑсем пулнӑ.

Калавсемпе пӗрлех Тагор драмӑсем, сӑвӑсем, статьясем ҫырать, чылай кӗнекесем кӑларать. Хӑйӗн публицистикӑллӑ статьисенче вӑл Бенгалин культурӑллӑ тата обществӑллӑ пурнӑҫӗн ыйтӑвӗсене пӑхса тухать. Кӗҫех вӑл «Шадхона» ятлӑ журнал кӑларма тытӑнать, унта хӑйӗн политикӑллӑ статьисене пичетлет. «Англичане и индийцы», «Опасение англичан» статьисенче Тагор индуссемпе мусульмансен пӗр шухӑшлӑ пулмалли, Англи колонизаторӗсем шӑпах ҫав пӗрлешӳрен хӑрани ҫинчен калать.

Наци культурин ӳсӗмӗшӗн чунне пама хатӗр Тагор тӗрлӗ учрежденисемпе вӗренӳ заведенийӗсенче акӑлчан чӗлхи вырӑнне бенгали чӗлхине ҫирӗплетессишӗн кӗрешет. 1901 ҫулта вӑл хӑй укҫипе шкул уҫать, ачасене вӗрентме тытӑнать, учебниксем ҫырса хатӗрлет. Каярахпа вӑл тӑрӑшнипе ҫав шкул вырӑнне университет тӑваҫҫӗ. Унта кӑмӑл тӑвакансем пурте, мӗнле кастӑра тӑнине пӑхмасӑрах, вӗренме пултарнӑ.

Ачасене вӗрентес ӗҫпе пӗрлех Тагор ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ произведенисем ҫырать, «Песчинка в глазу», «Крушение» романӗсене пичетлет. «Крушение» роман чӑн-чӑн пурнӑҫпа, консервативлӑ традици хушшинчи хирӗҫӗве кӑтартса парать, «Песчинка в глазу» вара ҫамрӑкла тӑлӑха юлнӑ хӗрарӑмӑн йывӑр пурнӑҫӗпе паллаштарать.

1905—1907 сулсенчи вырӑссен революцийӗ Хӗвелтухӑҫ халӑхне ыйхӑран вӑратать. Инди халӑхӗ те хӑй ирӗклӗхӗшӗн кӗрешӗве тухать. Тагор ҫак кӗрешӗве ертсе пыракансенчен пӗри пулнӑ. Хӑйӗн «Король и поданные» статьинче вӑл акӑлчансен тӗллевӗ пачах та Индие пулӑшасси мар, ун пуянлӑхне ӗмсе илесси кӑна, тесе ҫырать. Анчах кӗсех вӑл ҫак кӗрешӳ сулӗнчен пӑрӑнать. Социалла улшӑнӑва вӑл утопистла ӑнланать. Ун шучӗпе ҫав улшӑнусем халӑха вӗрентни, ҫапӑҫу-хирӗҫӳсӗр ҫӗр реформи туни, ирӗклӗ организацисем йӗркелени урлӑ пулса пымалла имӗш.

Кун хыҫҫӑн Тагор пӗтӗмӗшпех творчество ӗҫне парӑнать.

1910 ҫулта унӑн лирикӑлла сӑввисен пуххи «Гитанджали» ятпа пичетленет. Акӑлчанла куҫарса кӑларнӑ хыҫҫӑн ӑна ытти чылай чӗлхесене куҫарма тытӑнаҫҫӗ. Вырӑсла пӗрех султа вӑл тӑватӑ изданипе тухать. Унӑн сак вӑхӑталла пичетленнӗ «Джанаганамана» юрри—хальхи Инди республикин гимнӗ. Кӗсех «Гóра» ятлӑ политикӑлла роман пичетленсе тухать. Ку роман — Тагорӑн чи чаплӑ произведенийӗсенчен пӗри — XIX ӗмӗрти 70—80 сулсенчи пурнӑҫа, бенгали интеллигенцийӗн укӗ юхӑмӗ хушшинчи кӗрешӗвне кӑтартса парать. Романта тӗп герой — Гóра — Инди ирӗклӗхӗшӗн, халӑха колони пусмӑрӗнчен хӑтарассишӗн чун-чӗререн парӑнса кӗрешекен патриот. «Гóра» роман пичетленсе тухни пӗтӗм Инди литературишӗн паллӑ событи пулнӑ, вӑл критикӑлла реализм меслечӗпе ҫырнӑ чи малтанхи произведенисенчен пӗри шутланнӑ.

1912 ҫулта Тагор ют ҫӗршывсем тӑрӑх ҫӳреме тытӑнать.

1913 султа ӑна литература енӗпе паллӑ ӗссем тунӑшӑн Нобель премине, Калькутта университечӗ литература докторӗн ятне панӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн унӑн ячӗ пӗтӗм тӗнчипе сарӑлать.

Октябрьти Аслӑ социализмлӑ революци хыҫҫӑн Хӗвелтухӑсӗнчи ҫӗршывсенче, ҫав шутрах Индире те, халӑх ирӗклӗхӗшӗн пыракан юхӑм ҫӗнӗ вӑйпа сарӑлса каять. Ку кӗрешӗве ятарласах хутшӑнмасть пулин те, Тагор, халӑха, Инди нацийӗн интересӗсене хӳтӗлесе, колонизаторсене хирӗс хӑй сассине парать.

Хӑй ваттине пӑхмасӑрах Тагор пысӑкрах ҫӗршывсене пурне те тенӗ пекех ситсе ҫӳрет. 1920—1921 ҫулсенче вӑл США-ра, Францире, Германире, Данире, Швецире, Австрире, Чехословакире пулать. 1924 ҫулта Японипе Китая кайса килет. 1926 ҫулта Италипе Швейцарине, Германие, Скандинавине, Египета ҫитсе ҫаврӑнать. Тепӗр сулӗнче Индонезире, Таиландра пулать. 1930 ҫулхи сентябрьте вара Совет Союзне ҫитет. Социализм ҫӗршывне килсе курни ун тавракурӑмне ӳсе аталанма пулӑшакан вӑйсенчен пӗри шутланать. Вӑл культура работникӗсемпе, хресченсемпе, студентсемпе тӗл пулса каласать, СССР-ти вӗренӳ системипе интересленет, ялхуҫалӑх ыйтӑвӗсемпе паллашать. Сакӑн синчен Тагор «Письма о России» кӗнеке ҫырса кӑларать. Пӗтӗмӗшпе илсен, унта вӑл Совет Союзӗнчи пурнӑса тӗрӗс ҫутатса кӑтартать, ҫавӑнпа пӗрлех Англипе Америка империализмне хытӑ питлет. Совет Союзӗн мирлӗ политикине тӗрӗс ӑнланнине писателӗн ҫак сӑмахӗсенченех курма пулать: «Целью Советов является не расширение сфер влияния, а создание лучшей системы народного образования и базиса для повышения благосостояния народа. В первую очередь им нужен мир».

Тӑван халӑхӗпе тӑван ҫӗршывне юратни, хура халӑхпа сывӑх сыхӑну тытни Тагора творчество ӗҫӗнче иксӗлми вӑй-хал парса, хавхаланӑвне ҫӗклесе пынӑ. Ҫитмӗлелле ҫитнӗ пулин те вӑл хӑй ӗсне пӑрахмасть: халӑх хушшинче тӗрлӗ темӑпа калаҫусем урттерет, лекцисем вуласа парать, ҫавӑнпа пӗрлех сӗнӗрен те сӗнӗ произведенисем ҫырать. Кӗсех унӑн «Две сестры», «Маланчо» повесӗсемпе «Чандалика», «Карточное царство» музыкӑллӑ драмисем, «Четыре части» романпа «Конец», «Возрождение» ятлӑ сӑвӑ сборникӗсем пичетленсе тухаҫҫӗ.

1936 султа Индин прогрессивлӑ писателӗсем туса хунӑ Ассоциацине вӑл чӗререн саламлать, анчах та чире пула хӑй унта хутшӑнаймасть. Ҫак ҫулсенче Тагор, Инди литературинче сӗнӗ жанр пусарса, политикӑлла лирика сӑввисем ҫырать, сӗнӗ вӑрсӑ чӗртме ӗмӗтленекенсене питлет.

1941 ҫулхи августӑн 7-мӗшӗнче Рабиндранат Тагор, Совет халӑхӗ фашизма ҫӗнтерессе чӗререн шанса, ҫӗре кӗнӗ.

Тагор илемлӗ литературӑри пур жанрсемпе те ҫырнӑ. Хӑйӗн произведенийӗсемпе вӑл чи пултаруллисем те сайра хӑпарма пултаракан шая ҫитнӗ. Вӑл мӗн чухлӗ ҫырнине калӑпӑшӗ енчен ҫеҫ илсен те, чылай писательсем унпа танлашаймаҫҫӗ. Унӑн творчестви пуян та нумай енлӗ. Вӑл пин ытла сӑвӑ, икӗ пин ытла юрӑ, 12 романпа повесть, 100 ытла калав, 30 ытла пьеса, 200 яхӑн публицистикӑллӑ статья, шкулсем валли темиҫе учебник, чӗлхепе литература, философипе религи ыйтӑвӗсемпе тӗрлӗ ӗҫсем ҫырнӑ.

Тагор произведенийӗсене тӗнчери пур ҫӗршывсенче те вулаҫҫӗ. Вырӑсла та темиҫе хутченех куҫарса кӑларнӑ вӗсене.

Рабиндранат Тагор традицине хальхи Индин прогрессивлӑ писателӗсем малалла аталантарса пыраҫҫӗ. Совет халӑхӗ Тагор произведенийӗсене пысӑка хурса хаклать, вӑл Совет Союзӗн ҫывӑх тусӗ пулнине лайӑх пӗлет.

Рабиндранат
ТАГОР

ПРИГОВОР

Калав

I

ПИЧЧӖШЕПЕ шӑллӗ, Дукхирампа Чхидам, ҫутӑлнӑ-ҫутӑлманах хусӑксем йӑтса ӗҫе тухса кайсан, вӗсен арӑмӗсем хушшинче яланах харкашу, хаяр хирӗҫӳ тапраннӑ. Анчах пускилсемшӗн ҫак харкашу, ҫутҫанталӑкри ытти пур шӑв-шавпа сас-хура евӗрех, хӑнӑхнӑ япала пулнӑ.

— Ну, каллех пуҫланчӗ ӗнтӗ! — тенӗ вӗсем пӗрне-пӗри, хӗрарӑмсем хӑлхана ҫурасла янкӑшма тытӑнсан.

Ку ӗнтӗ шӑпах хӑйсем мӗн кӗтни пулнине тата паян кун ытти кунсенчи пӗтӗмӗшле йӗркерен нимпех те уйрӑлса тӑма пултарайманнине пӗлтернӗ.

Хӗвел мӗншӗн тухӑҫран хӑпарать тесе ыйтакан ҫук пекех, ҫак арӑмсен хушшинчи харкашу сӑлтавне пӗлес текенсем те пулман. Паллах ӗнтӗ, ҫак шавлӑ харкашусем пускилсенчен ытларах хӑйсен упӑшкисене тивет, анчах вӗсем те унпа интересленсех кайман. Пиччӗшӗпе шӑллӗ пурнӑҫӑн вӑрӑм ҫулӗпе пӗр урапа ҫине ларса пынӑ, ун ҫу сӗрмен кустӑрмисем пӗр канӑҫсӑр чӗриклетнине вӗсем пурнӑҫ урапипе ҫӳренӗ чух пулакан кулленхи хӑнӑхнӑ япала тесе шутланӑ. Пачах урӑхла, енчен те ку ҫуртра хӑр-хар туни илтӗнмест, урам шӑплӑхне хускатни сисӗнмест пулсан, вара пурте халиччен курман харкашу пуҫланасса кӗтме тытӑнӗччӗҫ, вӑл мӗнпе вӗҫленессе никам та малтанах каласа хума хӑяйман пулӗччӗ.

Хамӑр сӑмаха каласа пама тытӑнас кун, шалт ыванса ҫитнӗ пиччӗшӗпе шӑллӗ чылай каҫа юлса ӗҫрен таврӑннӑ вӑхӑтра, вӗсен ҫурчӗ шӑп-шӑпӑртахчӗ. Тулашӗнче те нихҫан пулман шӑплӑхчӗ. Ултӑ сехет татти-сыпписӗр ҫуса тӑнӑ ҫумӑр юлашкинчен чарӑннӑ, ҫапах та тавракурӑм хӗррине хура пӗлӗтсем ҫаплипех хупӑрласа тӑраҫҫӗ-ха. Ҫанталӑк лӑп, нимле ҫил варкӑшӗ те сисӗнмест. Ҫумӑр вӑхӑтӗнче ял тавраш ӗнчи йывӑҫ-курӑк кӑшӑлах сарӑлса кайнӑ. Шыв сыпса ларакан симӗс ҫулҫӑсен тутлӑ шӑрши ҫурта хӳме пек хупӑрласа илнӗ. Ҫурт-йӗр ҫумӗнчи хуралтӑсенченех пуҫланса каякан шурлӑхлӑ вырӑнта шапасем кӑвӑлтатни илтӗнет. Хускалми тӑп сывлӑшра цикадӑсем[1] чӗриклетни янласа тӑрать.

Инҫех мар юхса иртекен Падма[2] ҫумӑрпа шӳсе кӳпченӗ те ҫӑралсах пыракан хура пӗлӗтсен тӗксӗмӗнче уйрӑмах хаяррӑн кӑрӑнать. Сухаласа пӑрахнӑ анан чылай пайне шыв илтерсе хӑварнӑ та вӑл пурӑнмалли ҫурт-йӗрсем патнелле йӑпшӑна пуҫланӑ. Ҫӗр куҫса аннӑ вырӑнта мангпа ҫӑкӑр йывӑҫҫисен ҫаралса юлнӑ тымарӗсем кӑнтарса тӑраҫҫӗ. Вӗсем шанӑҫне ҫухатнӑ ҫын пӳрнисене тармакланӑ евӗр, епле те пулин тӗрек тупас ӗмӗтпе пушлӑха ҫакланма хӑтланаҫҫӗ.

Ҫав кун Дукхирампа Чхидам заминдар кантурӗнче ӗҫлерӗҫ.

Ӑшӑрах вырӑнсенче тырпул пиҫсе ҫитнӗ ӗнтӗ. Ял чухӑнӗсем харпӑр хӑй ани ҫинче е джут[1] плантацийӗнче тӑрмашнӑ. Кантуртан пӑхса ҫӳрекенсем килсен, кунта пиччӗшӗпе шӑллӗ кӑна ӗҫлемине курчӗҫ.

Кантур ҫийӗ шатӑк-шатӑк, темиҫе ҫӗртен шыв анать. Пиччӗшӗпе шӑллӗ кунӗпех ҫавсене сапласа айкашрӗҫ. Киле кайма вӑхӑт ҫук, ҫырткаласса та унтах, кантуртах, ҫырткаласа илчӗҫ. Кунӗпех ҫумӑр ҫинче исленме лекрӗ, тивӗҫлӗ хакне пурпӗрех илеймерӗҫ, ӳпкевӗпе ятлаҫавӗ вара ытлашшипех тиврӗ.

Вараланса пӗтнӗ, лачкам йӗпеннӗскерсем каҫ пулттипе тин киле таврӑнчӗҫ. Чондора, шӑллӗн арӑмӗ, тумтир пекки пӑрахнӑ та урайӗнче чӗмсӗрленсе выртать. Вӑл, паянхи ҫанталӑк пекех, тӗксӗм, ҫумӑрлӑ каҫ евӗр, кичем. Пиччӗшӗн арӑмӗ, Радха, терраса ҫинче тӗршӗнсе ларать — ҫулталӑк ҫурӑри ывӑлӗ ӗсӗклесе макӑрать. Пӳлӗмри пӗр кӗтесре ҫара-пакка ача месерле выртнӑ та ҫывӑра парать.

— Ҫимелли пар! — терӗ выҫӑхса ҫитнӗ Дукхирам арӑмне.

Радха, вут тивретнӗ тар пички пек, тилӗрсе кайрӗ.

— Ӑҫтан тупас ман? — шариех сухӑрса ячӗ вӑл.— Шӳт тӑвас тетӗн-им? Ман хамӑн каймалла мар-и тата укҫа ӗҫлесе тупма?

Кӑмӑла хуҫа-хуҫа, яра куна ӗҫлесе ӗшеннӗ хыҫҫӑн тӗттӗм те салху пӳртре выҫӑпа аптраса ҫитнӗ арӑм нӑйкӑшнине, уйрӑмах ун юлашки сӑмахӗсенче сисӗнекен хаяррӑн тӗксе каланине тӳсме ҫуках ӗнтӗ.

— Мӗн терӗн эс?—ыйтрӗ Дукхирам урса кайнӑ тигр мӗкӗрнине аса илтерекен пусӑрӑнчӑк сасӑпа, ҫав самантрах хӗрарӑма пуҫӗнчен хусӑкпа шаплаттарчӗ. Радха кинӗн ури умне кӗпсӗрт персе анчӗ те вилсе кайрӗ.

— Тур ҫырлахах! Мӗн ку капла? — ҫухӑрса ячӗ Чондора. Кӗпитумтирӗ чӗп-чӗр юн пулнӑ хӑйӗн. Чхидам ун ҫӑварне хупласа лартрӗ. Дукхирамӗ хусӑкне ывӑтса ячӗ те, шалт сухалса кайса. урайне тӗшӗрӗлсе анчӗ, питне-куҫне аллипе хупларӗ. Ача шартах сиксе вӑранчӗ те макӑрса ячӗ.

Ҫав вӑхӑтра ял хушши яланхиллех лӑп тӑнӑ. Кӗтӳҫӗ тин кӑна кӗтӗвне хуса кӗнӗ. Яра куна рис пухса ырнӑ хресченсем ҫӑмӑл кимӗсемпе килелле таврӑнаҫҫӗ, пуҫӗсем ҫине хӑйсем кун каҫа ӗҫлесе илнӗ тупӑшне — темиҫешер ҫыхӑ рис тытнӑ.

Рамлочон Чокроборти мучи, пиччӗшӗпе шӑллӗн пускилӗ, ҫыру ярса килчӗ те хӑй еккипе пӳрт умӗнче чӗлӗм паккаса ларчӗ. Сасартӑк вӑл пысӑк кивҫене кӗнӗ Дукхи шӑпах паян кивҫенӗн пӗр пайне тӳлеме пулнине аса илчӗ. Дукхи киле таврӑнчӗ пулӗ тесе, Рамлочон чадор[2] уртса ячӗ те, сунчӑк илсе, килтен тухрӗ.

Кӳршисен кил хушшине пӑхрӗ те вӑл тӗлӗннипе картах сикрӗ. Кил-ҫурчӗпе те сутӑ ҫук. Тӗксӗм терраса ҫинче темисе ҫын кӗлетки курӑннӑ пек туйӑнать. Вӑхӑт-вӑхӑтпа ӗсӗклени илтӗнет — амӑшне чӗнсе ачи макӑра пуҫланӑ иккен те, Чхидам ун ҫӑварне аллипе хупласа хунӑ.

— Килтех-и эс, Дукхи? — ыйтрӗ ӑшӗ вӑрка пуҫланӑ Рамлочон.

Дукхи чултан касса тунӑ кӗлетке пек хытса ларать. Хӑйне ятран чӗннине илтсен, вӑл пӗчӗк ача пек уласа макӑрса ячӗ.

Чхидам васкаса кил хушшине анчӗ те Рамлочон патне пычӗ.

— Хӗрарӑмсем каллех харкашаҫҫӗ курӑнать? — терӗ Рамлочон мучи.— Паян кунӗпех ҫуйхашрӗҫ те вӗсем...

Чхидам хӑйӗн мӗн тумаллине ниепле те шухӑшласа тупаймарӗ. Пӗринчен тепри юрӑхсӑр темиҫе тӗрлӗ шухӑш та пырса кӗчӗ ун пуҫне, юлашкинчен вӑл вилнӗ инкӗшне тӗттӗмленсе ситсен ӑҫта та пулин кайса пытарма, ҫапла майпа инкекрен хӑтӑлма шутларӗ. Унччен хӑйсем патне кам та пулин пырса кӗрессе аса та илмен вӗт вӑл. Кӗтмен ҫӗртен ҫын килсе кӗнипе Чхидам ним тупса калама та аптрарӗ.

— Ҫапла, паян хытӑ харкашнӑ вӗсем,— тесе ячӗ вара юлашкинчен.

— Ҫапах та Дукхи ма макӑрать тата? — ыйтрӗ Рамлочон, терраса патнелле утма пикенсе.

Пытарса хӑварма суккине туйса, Чхидам:

— Харкашу вӑхӑтӗнче ман арӑм Радхана хусӑкпа ҫапса ӳкернӗ,— тесе хучӗ.

Кунашкал самантсенче халь пуҫ ҫине персе аннӑ инкекрен хӑрушӑраххи урӑх пуласси та туйӑнмасть. Чхидам ҫак киревсӗр тӗрӗслӗхӗн ҫивчӗ чӗрнинчен епле ҫӑлӑнасси ҫинчен кӑна шухӑшлать. Суйни тӗрӗссине каланинчен те хӑрушӑрах пулса тухасса епле пӗлме пултарӗ-ха вӑл малтанах? Ҫавӑнпа Рамлочон ыйтнӑ-ыйтманах вӑл пуҫне мӗн пырса кӗнӗ савна персе ячӗ.

— Пӗтрӗ пуҫах! — шартах сиксе ӳкрӗ Рамлочон.— Мӗн каласа тӑн эсӗ! Ну, вилсех кайман пулӗ те вӑл?

— Вилнӗ сав,— терӗ те Чхидам Рамлочон ури умне ӳкрӗ.

Лешӗ уйрӑлса каяймарӗ.

— Рам, Рам!—терӗ вӑл хӑйне.— Ҫакнашкал хӑрушлӑха лекме тиврӗ-ҫке сана ҫак ҫӗр! Халь ӗнтӗ вӗҫӗмсӗр суд тӑрӑх сӗтӗрӗнме лекет.

Чхидам ҫаплипех ун урине ыталаса выртать.

— Эй, ӑслӑ мучей,— йӑлӑна пуҫларӗ Чхидам (Рамлочон ялта суд ӗҫне чухлакан ҫын шутланнӑ).— Кала-ха, арӑма ҫӑлас тесен мӗн тумалла ӗнтӗ ман?

— Итле эппин,— терӗ Рамлочон кӑшт шухӑшласа тӑнӑ хыҫҫӑн.— Пӗр май пур: халех полицине вӗҫтер те каласа пар, Дукхи

[1] Цикада — вӑрӑм сӑмсаллӑ, сиксе ҫӳрекен хурт-кӑпшанкӑ.

[2] Падма — Ганга шывӗн Бенгали заливне юхса кӗнӗ тӗлти чи пысӑк юпписенчен пӗри.

[1] Джут — мих-хутаҫ тавраш валли тачка пир тӗртме е кантра явма акса тӑвакан кантӑр евӗрлӗ ӳсентӑран.

[2] Чадор — пӗр вӗҫрен ҫӗленӗ арҫын тумтирӗ.

пиччӳ çĕрле ĕçрен выçăхса таврăнчĕ те апат хатĕр маррине пĕлсен, арăмне пуçран хусакпа яра пачĕ, те. Çапла тусан — арăму хатăлать, шантарсах калатăп.

Чхидам пырĕ типсе ларчĕ.

— Çук, тхакур[1],— тере вăл, ура çине тăрса,— арăм вилсен, эп урăххине качча илме пултаратăп, пиччене çакса велерсен вара урах пичче тек тупаймăп.

Анчах çак ирсер ĕçшĕн хăй арăмне айăпласа тăнă вăхăтра Чхидам ун çинчен пĕртте шутламан. Айăпа арăмĕ çине илесси уншăн хăйшĕн те ăнсăртран пулчĕ, халь ĕнтĕ çав шухăшламасăр персе яна самаха турре каларманли майсем шырама тытанчĕ.

Вăл хирĕçлесе калани Рамлочона питех те витемлĕ пек туйăнчĕ.

— Апла тесен нимех те тăваймăн,— терĕ вара вăл,— мĕнле пулнине тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пар, ку усал ĕçе пурпĕрех пытарма çук!

Çапла каларĕ те Рамлочон тухса кайрĕ. Çав вăхăтра ял хушшине пиччешĕне шăлле пуранакан килте харкашу вăхатенче Чондора Дукхи арăмне хусакпа çапса вĕлерне текен хыпар саралчĕ.

Пĕвене татса кайна шыв керлесе юхма тытанна евер, полицейскисем капланса килчĕç, ял халăхĕ айăпли-айăпсарри менĕпех пăшăрханса ўкнĕ.

II

Чхидам хăйĕн пĕр тытнă çулпах пыма кирлине ăнланать. Рамлочон уменче вăл айăпа арăмĕ çине илни ялĕпех вĕçсе саланма ĕлкĕрнĕ ентĕ, ку ăçта илсе çитерессе пĕлменнипе вăл урах салтав шыраса пахма та шутламан. Арăмне çалса хăвармалли пĕртен-пĕр çула Чхидам малтан каланине хирĕçлемесĕрех еçе ытти катартусемпе паграштарма тăрăшнинче курчĕ.

Арăмне вăл менпур айăпа хăй çине илме сĕнчĕ. Ку сĕнў Чондорăна, таса тупери аçа-çиçĕм пекех, минретсе пăрахрĕ.

— Эп мĕн каланинчен пĕртте ан хăра,— ĕнентерме тăрăшрĕ ăна Чхидам.— Эпир сана пурпĕрех хăтаратпăр.

Вăл арăмне лăплантарма хăтланать, хăйĕн вара сывлăшĕ пўлĕне-пўлĕне килет, пичĕ-куçĕ вилнĕ çыннăнни пек шурса кайнă.

Чондора вунсаккăра пуснă хĕрарăм. Пичĕ-куçĕ ун вăр-çаврака та хĕп-херлĕ, пў-сийĕ йăрăс, стайла. Утать-и çак çамрăк херарăм, çаврăнкалать-и е пĕшкĕнет-и—вăл яланах пĕрешкел чипер те илĕртуллĕ. Çурессе те вăл ăста тунă çĕнĕ кимĕ пек çамăллан çурет, ун кĕпи-тумтирĕ çинче нихăçан та ытлашши хутланчăк курăймăн. Пур ĕçе те Чондора темле ăрасна хĕрўлĕхпе, интереспе тăвать, урама тухса халаплашса ларма юратать. Кăкшăмпа шыв хĕррине ансан, пĕркенчĕке кăшт сирсе, çунса тăракан хуп-хура куçсемпе çул çинчи ĕçсене сăнаса тăни те килĕшет ăна.

Пиччĕшĕн арăмĕ, Радха, пачах та Чондора пек мар вара: çаврăнăçусăр, тирпейсĕр, наян хĕрарам. Вăл пуçĕ çинчи пĕркенчекне юсакалама та, ачине пахма, кил-тĕрĕш ĕçне тума та пултараймăн. Еçпе питех чăрманмасть пулин те, вăл хайне ахаль ларман пек кăтартма ăстаиланса çитнĕ. Ниммаршăнах кăшкарашма, ятлаçма хатер вара. Чондора унпа сăмах ваклама юратсах каймăн.

Çак хĕрарăмсен шухăш-кăмалĕ упăшкисенни пекех пулни те куçа тўрех курăнать. Радха упăшки, Дукхирам, сарлака шамшаклă, лапчăк самсаллă тăрнашка арçын. Ун пичĕ куçĕсем çут тенче çине, ăна питех ăнланаймасть пулин те ыйтса пелме шутламан пек, иккĕленсе пăхаççĕ. Шăпах ун йышшине урăх шыраса та тупас çук: хăравçă та сехре хăпартакан, вайлă пулин те халсăр этем вăл.

Чхидам вара йăлкăшса тăракан хура чултан ăста алăпа касса тунă келетке евĕрех. Стан телĕшĕнчен сайра кăна тĕл пулакан майлашуллă этем вăл, ўт-пў пайĕсем пĕр-пĕринпе тĕлĕнмелле килĕшсе тăраççĕ. Çупа сĕрнĕ хура та çăра çуçне вăл хулпуççийĕсем çине чиперлетсе çавăрса хурать, тумланасса вара таса та капăр тумланма тăрăшать. Çулĕ çыртан шыва сикес е кимме шалçапа тĕксе ярас енепе никам та ăна çитеймен, никам та çамрăк хунавсенчен тытса бамбук тăрне ун пек çамаллăн хăпараиман. Пĕр сăмахпа каласан, вăл тăвакан пур ĕçре те ăсталăх, кирлĕ тавçăрулăх пурри сисĕннĕ.

Чхидам ялти чиперккесем çине ăшă куçпах пăхмасть тесе айăплакансем çукрах пулин те,— вĕсен умĕнче шукăлленсе çўреме хирĕçех те мар вăл,— хăйĕн çамрăк арăмне — Чондорăна хытă юратать.

Тепĕр чух вĕсен хушшинче те харкашу-ятлаçусем пулкаланă, çапах та пĕр-пĕрне тем каласа хăртса пĕтермен. Çавăнпа пĕрлех вĕсен çыхăнăвне çирĕплетме тепĕр сăлтав пулашна: упăшки Чондора пек вылянчăк ăслă, хитре те çамрăк хĕрарăма шансах пĕтерес çук тесе шутланă; Чондора вара упăшкам айккинелле пăхкалама юратать, çавăнпа ăна кĕвĕçўпе алла çатăрласа тытмасан, пĕрпĕр ыра кун пăрахĕ те тухса кайĕ вăл мана, тесе шутланă.

Çакăнта çырса кăтартнă ĕç сиксе тухиччен кăшт маларах вĕсен хушшинче пĕр пысăк харкашăвăх пулса иртнĕ. Чондора упăшки, ĕçре пултăм тесе, таçта çĕткелесе çўренине сисе пуçланă. Çапла, юлашки хутĕнче, икĕ кун çухалса пурăннă хыççăн, вăл киле пĕр пус укçасăр таврăннă. Ĕç ыра марра сиссе, Чондора та хăйне ирĕкрех тыткалама тытăннă. Пристань çине кайкаласа çуре пуçланă, урамран кĕрсен, Каши Моджумдарăн кĕçĕн ывăлĕ çинчен хĕрсех калаçма пикеннĕ.

Чхидама тахăшĕ çĕрĕн-кунĕн наркăмăш хутăштарса парать тейĕн. Еç вăхăтĕнче те вăл самантлăха манăçма пултараймăн. Пĕррехинче, Радха умĕнче, вăл арăмне ятлама тытăннă. Хĕрарăм аллисене сарса пăрахнă та, вилнĕ ашшĕне чĕрчĕлĕхе чĕнсе, çухăрса янă:

— Кăшт тăхта-ха ак, инкек килсе çапиччен лăплантарăп-ха эп вăл хĕре! Сисетĕп, темле хăрушла ĕç туса хурас кун та инçех мар ĕнтĕ ун!

— Мĕнрен çав териех хăратăн вара эс, диди? — ыйтнă унран Чондора, юнашар пўлĕмрен тухса. Икĕ хĕрарăм хушшинче вара йĕркесĕр харкашу тапраннă.

[1] Т х а к у р — аслăраххисене хисеплесе чĕнни.

— Эпĕ пристань çине пĕр-пĕччен кайнине тепре илтем тулĕк,— сасартăк кăшкарса парахнă Чхидам, юн тулнă куçĕсемпе арăмĕ çине пăхса,— шамму-шаккуна хăвармăп!

— Ав епле! — çухăрса янă Чондора.— Ан юлтăрах эппин ман шăмшаккам! — Çак самахсемпе вăл алăк патнелле утнă.

Анчах та Чхидам пĕрре сиксех ун умне çитсе тăнă. Çўçĕнчен çавăрса тытнă та вăл ăна каялла тĕксе кĕртсе янă, алакне тул енчен питĕрсе хунă.

Каçпа, ĕçрен таврăнсан, вăл алăк уçăлса тăнине курнă — пўлĕм пуш-пушах-мĕн. Çав вăхăтра Чондора, виçĕ ял витĕр тухса, куккăшĕсен ялĕ патнелле çывхарса пынă.

Тем тери тилмĕрсен-тилмĕрсен тин каялла илсе таврăнма пултарнă Чхидам арăмне, анчах ку хутĕнче ун хăй паранниие йышăнмах лекнĕ.

Чхидам анланнă вара, чĕркĕмĕле ывăçа илме çук пекех, çак пĕчĕк херарама та алăра тытса чарма çук имеш. Текех арăмне унăшкал ирĕксĕрлемен, çапах та хăй ку ĕç хыççăн ăш вĕçнĕ çын пек канлĕхне çухатнă. Çак хăй еккиллĕ çамрăк арăма канăçсăр юратупа юратса пурăнасси асаплантарса тĕпчеиипе танах пулнă уншăн. Тепĕр чух вăл Чондора вилсе выртас пулсан çамалрах пулмалла та, тесе шутланă — Ямăна[1] çĕр çинчи вилĕмлĕ çын пек кĕвĕçеймĕн ĕнтĕ.

Çак вăхăтра çурта инкек килсе кĕчĕ.

Упăшки ăна айăпа хăй çине илме ўкĕтле пуçласан, Чондора шалтах тĕлĕнсе кайрĕ, куçĕсем вара, икĕ вĕри кавар пек, Чхидам чĕрине сăмахсăр çунтарчĕç. Çак пăлхаварта вăл умри тискер чĕрчун аллинчен — упăшкинчен хăтăлмалли май шыранăн туйанать. Чондора мĕнпур пурнăçĕпе унран яланлăхах пăрăнчĕ.

Чхидам арăмне ним хăрамалли те çук тесе ĕнентернĕ, полиципе тўресене мĕнле хуравламаллине те вĕрентме пăхнă. Анчах та ун тем таршшĕ калаçăвенчен Чондора пер самахне те илтсе юлайман, вăл шăках хытса хускалмасăр ларнă.

Дукхирам пур ĕçпе те шăллĕ çине тайăнма хăнăхнă, арăмне вĕлернĕшĕн Чондорăна айăплама сĕнсен те вăл:

— Мĕн тăвĕç вара сан арăмна? — тесе кăна ыйтнă.

— Эп ăна хăтарăп,— хуравланă Чхидам. Тăсланкă Дукхирам çакăнпа лăпланнă.

III

— Сан çапла каламалла,— вĕрентнĕ арăмне Чхидам,— Радха мана çĕçĕпе чикме тăчĕ, темелле, хўтĕленнĕ чух ăнсăртран ăна хусăкпа лектертĕм, темелле.

Кăтартса памалли çак сăмахсене Рамлочон мучи шухăшласа тупнă. Ку кăтартава çирĕплетме мĕнле ĕнентерусем тупса памалли çинчен те пайтах ăнлантарнă вăл Чхидама.

Çак самантра килсе çитнĕ полицейскисем хăйсен ĕçне тытăннă. Радхана, чăн та, Чондора вĕлернĕ текен шухăш ял халăхĕ хушшинче çирĕпленме ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Чĕрчĕлĕхсем те çакнах катартса параççĕ.

Хăйне тĕпчеме тытăнсан, Чондора:

— Çапла, эп вĕлернĕ ăна,— терĕ.

— Мĕншĕн вĕлертĕн?

— Эп ăна тўсме пултараймăн.

— Ятлаçрăр-им эсир?

— Çук.

— Малтан вăл тапăннă пулĕ сана вĕлерме?

— Çук.

— Тен, вăл сана усал тунă пулĕ?

— Çук.

Кунашкал хуравлани пурне те тĕлĕнтерсе пăрахрĕ. Чхидам ухмаха ерсех кайрĕ.

— Вăл тĕрĕс каламасть! — кăшкăрса ячĕ Чхидам.— Малтан Радха...

Полицейски ăна хăр-харах кăшкăрса шăплантарса лартрĕ.

Чондорăна тем тĕрлĕ те тĕпчесе пĕтерчĕç, пурпĕр усси пулмарĕ: вăл çаплипех пĕрешкел хуравларĕ. Радха хăй çине тапăннă тенине Чондора ним тусан та йышăнмарĕ. Ку хĕрарăм халиччен çын курманне кутăнлашса кăтартрĕ. Çакмалли такан патне вăл пĕр пăркаланмасăр утать, ăна тытса чарма нимле вăй та çук. Епле инкеклĕ мăнаçлăх ĕнтĕ ку!

«Сана хăварса, эп хам çамрăклăха такан аллине паратăп, ан тив, вăл ман çак çуралури юлашки тĕрев пултăр»,— терĕ хăй ăшĕнче Чондора упăшкине.

Ак ĕнтĕ судпа айăпланнă Чондора, никама ним усал туман, хуйхăрма пĕлмен хавшак та тăпăл-тăпăл хĕрарăм, ачаран пĕлнĕ урам тăрăх, урапасем хушшипе, пристань çывăхĕнчи пасар площадки урлă, Моджумдар çурчĕ умĕпе иртрĕ, шкулпа почта патĕнчен те иртрĕ, пур халăх умĕнче намăс тўссе, ĕмĕрлĕхе ялпа сывпуллашрĕ. Ун хыççăн ача-пăча кĕпĕртетсе пычĕ, çамрăк хĕрарăмсем, Чондора тантăшĕсем,— хăшсем пĕркенчĕк витĕр, хăшсем алăк хыçĕпе теприсем йывăç хўттине пытанса,— полицейскисем илсе каякан Чондора çине пăхрĕç, чун-чĕререн тарăхса, намăсланса сехрисене хăпартрĕç.

Тўре ыйтса тĕпченĕ чух та Чондора хăйне айăплă тесе йышăннă. Ун сăмахĕсем тăрăх, вĕлерес умĕн пиччĕшĕн арăмĕ ăна нимле сив сăмах каласа та кўрентермен иккен.

Ак ĕнтĕ чĕрчĕлĕх выранне Чхидам тухса тăчĕ. Тархасланăн аллисене кăкăр умне тытса, вăл тўре енне çаврăнчĕ.

— Тупа тăватăп, господин,— терĕ çав çамрăк çын,— ман арăм ним те айăплă мар унта!

Тўре, хăр-хар кăшкăрса тăкса, ăна чарăнма хушсан, вара тепĕр хут тĕпчеме тытăнсан, Чхидам суда пĕр сăмах суймасăр пĕтĕм тĕрĕсне каласа пачĕ.

Тўре ăна ĕненмерĕ, ма тесессĕн, пуринчен ытларах шанчăк кĕт-

[1] Я м а — Инди мифологийĕнчи вилĕм турри.

мелли тĕп чĕрчĕлĕх, Рамлочон, хăй сăмахĕнче çакна кăтартса панă:

— Ăна вĕлернĕ-вĕлерменех эп çак инкеклĕ ĕç выранне пырса çитрĕм. Чхидам чĕрчĕлĕх ман умра пĕтĕм айăпа арăмĕ çине илчĕ. «Шухăшла-ха, мĕнле çăлас-ши арăма»,— тесе йăлăнчĕ вăл, ман уран уртăнса. Анчах эп ăна ним хуравлама та аптрарăм. «Енчен те çимелли тупса парайманшăнах вĕлерчĕ вĕт пичче хăй арăмне тесен, тивмĕç-ши Чондорăна?» — ыйтрĕ вăл манран каллех. «Хăвна хăв упра, айван, суд умĕнче пĕр сăмах суйма ан хăйнă пултăр, çут тĕнчере унтан пысăк çылăх çук...» — терĕм вара эп ăна.

Чондорăна инкекрен çăлас шутпа Рамлочон тем те пĕр шухăшласа тупрĕ, анчах хĕрарăм тӳрре тухма тăрăшманнине курсан, вăл хăраса ӳкрĕ. «Йăнăш кăтартусем панăшан юлашкинчен хама ан айăпласа хуччăр тата! — шухăша кайрĕ вăл. — Луччă хам мĕн пĕлнине тĕпĕ-йĕрĕпе каласа парам». Çапла шут тытса, вăл суда хăй мĕн пĕлнине веçех каласа пачĕ, çавăнпа пĕрлех хăшпĕр вак-тĕвексене те манса хăвармарĕ.

Ку ĕçе сӳтсе явма тӳре сесси уçма йышăнчĕ. Çав вăхăтра сутуилӳпе ытти ĕç-пуç, хуйхăпа савăнăç — çут тĕнчере пурте хăй майĕпе пулса пына. Ытти çулсенчи срабон [1] уйăхĕнчи пекех, пиçсе çите пуçланă тырпул ани çине чарăна пĕлми çумăр тăкнă.

Айăпланакансемпе чĕрчĕлĕхсене полици тепĕр хут суда чĕнсе пухать.

Çурчĕ умĕнче, кил хушшинче, халăх кĕпĕрленсе тăрать, суд мĕн йышăнасса кĕтет.

Пысăках мар шурлăхлă лаптăка пайлас ĕçе татса пама Калькуттаран ваккат килнĕ те вăтăр тăхăр чĕрчĕлехе чĕнтернĕ. Тавлашулла ыйту тупсамне шыраса миçе çĕр çын пымасть пулĕ суда! Çитменне пурте харпăр хăй ĕçĕнчен кирлĕрехххи урăх çук тесе шутлаççĕ вет!

Чхидам çак хĕвĕшекен халăх çине кантăк витĕр хускалми тинкерет, халь мĕн пулса иртекенни пĕтĕмĕшпех тĕлĕк пек туйăнать ана. Лапсăркка баньян йывăçĕ çинче куккук аватать — кайăккĕшĕкшĕн суд та, саккун та çук çав...

— Эх, сахиб,— ахлатрĕ Чондора,— пĕр япала çинчен миçе хут ыйтатар-ха ĕнтĕ!

— Эс хăвна айăплă тесе йышăнатăн-и? — ыйтрĕ унран тӳре.— Хăвна мĕнле наказани кĕтнине пелетĕн-и тата?

— Çук,— хуравларĕ хĕрарăм.

— Сана çакăççĕ.

— Сахиб, сан уру умне ӳкетĕп: хăвăртрах çакчăрччĕç пĕрех-хут! — тесе хучĕ Чондора.— Мĕн тавас тетер çавна тавар та, эп ку машкала тек туссе пуранас çук!

Суд залне Чхидама чĕнсе кĕртсен, Чондора вартах çаврăнса тăчĕ.

— Чĕрчĕлĕх çине пăх, кала-ха, кам пулать вăл сан? — ыйтрĕ унран туре.

— Ку ман упăшка,— хуравларĕ Чондора, пит-куçне аллипе хупласа.

— Юратать-и вăл сана?

— Питĕ хытă юратать!

— Эс хăв ăна юрататăн-и?

— Питĕ юрататăп!

Хăйне ыйтса тĕпчеме тытăнсан, Чхидам:

— Эп вĕлернĕ ăна! — терĕ.

— Ма вĕлертĕн?

— Çиес килетчĕ те, Радха çимелли памарĕ.

Хăй мĕн пелнине каласа пама тухсан, дукхирам ăсран кайрĕ. Тăна кĕрсен:

— Ăна эп вĕлертĕм, сахиб,— терĕ вăл.

— Мĕн шутпа вĕлертĕн?

— Çиме рис ыйтрăм та, вăл памарĕ.

Тĕпĕ-йĕрĕпе тĕпчесе пăхнă хыççăн тӳре çак çирĕп шухăш патне çитрĕ: хĕрарăма такан çине çакмалли ирсĕр вилемрен çăлса хăварасшăн кăна айăпа хăйсем çине илеççĕ имĕш пиччĕшĕпе шăллĕ те.

Анчах Чондора хăй вара — полици участкинче те, судра та — пĕр шухăшах çирĕплетрĕ, ун хуравĕнче пĕр иккĕленӳ те сисĕнмерĕ. Икĕ ваккат хăйсен ирĕкĕпе ăна çакса вĕлермелле тăвасран хутелеме хатланчĕç, анчах юлашкинчен вĕсен те каялла чакма тиврĕ.

Тахçан, çамрăк ĕмĕр пуçламăшĕнче, вăр-çавракă пит-куçлă, хурарах, тăпăл-тăпăл хĕрача, пуканесене хаварса, ашшĕ килĕпе сыпуллашнă, хунеме кил-çуртне пырса кĕнĕ. Паян мĕн пуласса кам шутлама пултарнă-ха çав туй хыççанхи пĕрремĕш каçра! Епле пулсан та хĕрачана лайăх пăхса ӳстертĕм тесе, ун ашшĕ канлĕ чунпа çĕре кĕнĕ вĕт.

Çакас умĕн Чондора патне пĕр çемçе чĕреллĕ врачĕ пынă та:

— Юлашкинчен кама та пулин курас килмест-и сан? — тесе ыйтнă.

— Ман аннепе курнăçас килет те...

— Тен, упăшкупа тĕл пулас килет пулĕ, апла-тăк чĕнсе килем ăна,— сĕннĕ тухтăр.

— Вилем луччă! — тенĕ вара Чондора.

1893

[1] С р а б о н — Инди календарĕнчи июль-августпа тĕл килекен тăваттăмĕш уйăх.

ФЕНИТА

К а л а в

Петр ЛЬВОВ

ПĔР-ПĔР учреждени канашлу-мĕн ирттернĕ кунсенче çеç çак пĕчĕк ресторанра шавлă. Ытти чухне кичемрех: район центрĕнче ĕçлекенсем кунта çӳресех каймаççĕ.

Яланхи клиентсем — Шупашкартан е урăх çĕртен ĕçпе килнĕ çынсем.

— Хĕрача,— чĕнеççĕ вĕсем Фенитăна,— хăвăртрах!

Васкатма вара кирлех те мар: Фенитăпа тепĕр официантка, мăкăрти мăнтăр Марье, апатланма килнисем мĕн ыйтнине çийĕнчех пырса параççĕ.

Марье пер турилккене те алăран сăмахсăр ямасть. «Хăйсем виççĕн-тăваттăн пур та — хыпалантараççĕ, ресторан тулли халăх пек»,— мăкăртатать вăл. Фенита шарламасть.

Калаçма хапăл мар Фенита. Пит кирлех-тĕк, вăл сехечĕ-сехечĕпе ним чĕнмесĕр ларма пултарать. Ыттисем сисмеççĕ, ялан кама та пулин сăнаса е тахçан малтан сăнанă çынна аса илсе йăпанма юрататъ хĕр. Çыннăн пĕр хăйне çеç тивĕç енне, хăтланкалăшне курать те вара кашни-пĕри уншăн кулăшла пек туйăнать, кашни-пĕринчен тăрăхласа кулать — сасăпа, сăмахпа мар, хăй тĕллĕн, хăй ăссĕн.

Уйрăмах Фенита, чĕлхине салтса ярас-тăк, яра куна куç умĕнчен кайма пĕлмен Марьене хăшкăлтарса çитерне пулĕччĕ. Марье — кăпăшка ӳтлĕ, самăр ватă хĕр. Ăна пур тĕлтен те пиçиххи-тынас касса-пăвса тăрать. Чĕрçитти кантри ун сĕлĕ миххи пек пӳне тахçанах икке пайланă, тулли ура тунисене йĕкрĕлĕ тынас, сулахай алă сыппине сехет çыххи касса кĕнĕ; мăйĕнчи шăрçа ярăмне, виççĕмĕш янах айĕнче путланнăскере, никам нихçан курман. Марье çын каланине тăнламасть, çаврака мăнтăр пичĕ варрине путнă пĕчĕк сăмсине карăнтарса, мăшлатса, мăкăртатса çӳрет.

Кĕтесре — нумай кĕленчеллĕ буфетра тăракан Христина та кăмăла каймалласкер мар. Вăрăм майлă та пуклак пуçлăскер, вăл хăй те пĕр-пĕр кĕленче савăт евĕр туйăнать. Чи ирсĕрри: вăл пурне те пĕлесшĕн хыпса çуннипе тарăхтарать. Кам мĕн тăвать, ăçта каять, мĕнле пурăнать — унăн пĕлмеллех. Унсăрăн — юрамасть, унсăран ун ĕçĕ те ăнмасть. Çӳçĕ буфетчицăн кăтра. Кăтрисем вара хăлха шăтăкнех авкаланса, явкаланса кĕреççĕ, унта вĕçĕмсĕр кăтăкласа, нумай илтме хистенĕн чĕтренсе тăраççĕ. Буфета ресторан пуçлăхĕ кухня умĕнчи коридора, чаршав хыçне, куçарасшăн. Христина чанкăшса тавлашать: ăçтиçукăн, ун, ку çуртра чайнăй пулнă чухнехилле, ĕлĕкхи вырăнтах юлас килет.

Апатланма çӳрекен ĕçлĕ çынсем те — аптрамалласкерсем. Паян Фенита çурхи шыв-шур вăхăтĕнче килсе кайнă пĕчĕк старике аса илчĕ. Старикки вăл ревизорччĕ, укça-тенкĕ тĕлĕшпе нумай пĕлекенскер, ялан чей ĕçетчĕ, купăста яшки çиетчĕ, ĕçнĕ-çинĕшĕн пĕр пус юлмиччен тĕрĕс шутласа тӳлетчĕ. Каярахпа иккĕн килчĕç. Пĕри вăрăм, тепри лутра; пĕри тек çыратчĕ, тепри фотоаппаратне урайне ӳкерчĕ... Пырса панă апата вара кашни расрах сивĕтсе яратчĕç; сăра тесен, çут тĕнчере мĕн пуррине те манса каятчĕç. Икĕ

В и ç ĕ с ă в ă

Маяксем

КАÇ пулать-и,
Е хуплать тĕтре
Тинĕсре иркӳлĕм таврана,—
Мĕлтлетет пĕр çутă инçетре:
— Эп кунта, тет,
Ан çухат çулна...

Çут маяк!
Çак сăмаха паян
Тепĕр хут, ялав çĕкленĕ пек,
Паттăр халăхăм çĕклерĕ ман:
Пĕлĕт çиçтĕр унăн çутипе!

Çăпаталлă, нишлĕ ялсене
Тракторсем килсе тухсассăн,
Харампыр-кулакăн ĕнсине
Çĕнĕ вăй пăрса хуçсассăн,
Пуласси çинчен ун-кун нумай
Шухăшланă,—
Мĕн каламалли!—
Çул кăтартрĕ малалла пĕрмай
Вилĕмсĕр Ильичăмăр алли.
Акă хĕрĕх виçĕ çул ытла
Çав çулпа утатпăр малалла,
Чăнлипех те çутă маякла
Çутатать вăл вĕрентни çула.

Хĕрĕх виçĕ çул!...
Тантăшăмсем! Сире
Мухтамасăр чунăм ман тӳсмест:
Сирĕн ятăр юлĕ ĕмĕре —
Паттăрлăх нихçан та вăл вилмест!
Çуралса ӳснĕ çĕртен куçса
Кайрăр та,
пурнăç пулман çĕрте
Çилпеле ларать халь калаçса
Тулăх тулă чикĕсĕр хирте.
Çут малашлăх чаршавне эсир
Уçса паттăр тейĕччĕ поэт:
Океан пек вĕç-хĕррисĕр хир
Сĕршыва хисепсĕр мул кӳрет!
Пуласси —
тата та çутă ир:
Пуш хиртех ӳсеççĕ хуласем.
Вĕсене тăвакансем — эсир,
Пирĕн çутă, чаплă маяксем...

эрне хушши пĕр кервен çын апатланса пурăнчĕ. Куçлăхлăскер, яка пальтопа, шлепкепе, симĕс галстукпа çӳрекенскер, вăл Культура çуртĕнче драмкружока выляма вĕрентсе хăварчĕ. Çынни хăй питĕ кăмăллăччĕ, çапах Фенита ăна курсан темрен шикленетчĕ, темшĕн именетчĕ... Пурпĕрех унран та аса илсе кулмалли юлнă: апăрша, сĕт яшки çине ăнсăртран кĕрсе ӳкнĕ симĕс пăрçана хура пăрăç тесе кăларса пăрахрĕ.

Районĕçтăвкома, райкома килнисем пек васкатакансем урăх никам та çук. Анчах хăйсем кăçхи апата пĕрмай кая юлса, ресторан хупăнаспа тин, килеççĕ. Кухня ĕçлемест, официанткăсен мĕнпур пархатарĕ те вĕсем умне сивĕннĕ порцисем пырса лартнинче кăна. Лешсем тиркемеççĕ, чарăна пĕлмесĕр сĕт-çупа аш-какай çинчен калаçаканскерсем, мĕн парсан та çиеççĕ...

...Ирхи апата килнисем тухса кайса пĕтнĕ ĕнтĕ. Кăнтăрлаччен никама та ан кĕт. Ресторанра чи кичем вăхăт халь. Пасăртанпах тĕлерсе ларнă Фенита, сĕтел хушшинчен тухса, çавра аркăллă чĕрçиттине кăрт-кăрт туртса юсарĕ те чӳрече умне пырса тăчĕ. Яштака вăл, сăнĕ шурмак. Тем çухатнипе килĕшнĕ пек, лăпкăн, шухăшлăн пăхакан пысăк сенкер куçĕсем хĕрĕн пĕрре те камран та пулин тăрăхласа кулас çыннăнни евĕр мар, вĕсенче чăрсăрлăх хĕлхемĕн тĕсĕ те çук. Таçта пăчăрт пуçтарса тытнă çӳхе тути хусканăвĕнче пулсан анчах вăл — çав чăрсăрлăх?...

Тулта, урамра, пылчăк та лапра, унта иртенпех сивĕ çумăр çăвать: хура кĕр... Ресторанра ăшă, шăпăртах. «Ĕмĕр çапла тăма килĕшмеллĕ», шухăшлать Фенита, чӳречерен тĕлсĕррĕн пăхса. Никам килсе кĕрессе те сунманччĕ вăл халь — çенĕкре, вешалка патĕнче, ура сасси илтĕнчĕ. Тĕлĕнсе, каялла çаврăнса пăхрĕ те хĕр алăк анинче темле палламан çын тăнине курчĕ. Лачкам шыв хăй. Çийĕнчи симĕс плащĕ, çумăрпа пирченсе, кăп-кăпăртик пулнă, сăран картусĕ сывлăмлă ир хуçса илнĕ купăста çулçи пек йăлтăркка.

— Хă, — терĕ Фенита. Урăх ним шухăшлама та пĕлмерĕ.

Эхе, этем чунĕ пур иккен-ха кунта тенĕ пек, пĕр чĕнмесĕр пуç ухса илчĕ те хайхи çын, хăвăрт хывăнса, юсанкаласа, шала кĕчĕ. Çамрăк кăна йĕкĕт иккен... Христина — иртенпе çĕнĕ хыпар-элек илтме май килменрен тунсăхласа çитнĕ Христина ăна курсанах хăйĕн йышлă кĕленчисенчен пĕрин патне кармашрĕ.

— Э-э, çук, çук, — хирĕçлерĕ çын, сăнран йăлт улшăнса. — Çук, кирлĕ мар. «Çуттисĕрех» шутсăр лайăх.

Вара вăл пылчăкланнă шăлаварĕ çине ӳпкевлĕн пăхса илчĕ те кăмака çумĕнчи сĕтел хушшине утса иртрĕ. Çемçен, асăрханса, анчах хăюллăн утать...

Фенита, чӳрече умĕнчен хăпса, ун патне пычĕ.

— Ларăр-ха, — илтрĕ хĕр.

— Ларăр, ларăр, — терĕ татах клиент, тахçантанпа паллакан çын пек, официанткăна шалт тĕлĕнтерсе.

Хăй урамалла пăхать. Çул çӳрекенсем пулас: типшĕмрех питкуçĕ, шăрăхра-сивĕре пиçĕхсе, кушăрхамалла мар кĕренленсе ларнă. Ăçта курнă-ши ку çынна Фенита? Çук, курман, анчах темшĕн ун хăмăр куçĕсем чуна çывăх, вĕсем ăслăн, пĕр пытарăнчăксăр тӳррĕн пăхаççĕ...

— Ма лармастăр-ха эсир?..

— Авă, — каларĕ йĕкĕт, Фенита ларсан, — РТС. Унта Терентьев хушаматлă слесарь ĕçлет, çамрăкскер. Палламастăр-и ăна?

Фенита пушшех тĕлĕнчĕ. Вăл хăйпе кунашкал калаçнине пуçласа илтрĕ — кӳренме те, савăнма та пĕлмерĕ; ним чĕнме аптрарĕ. Вăл нимĕнле Теретьева та палламасть.

— А-а, — калаçрĕ малалла тĕлĕнтермĕш клиент (официантка халлĕхе ăна çапла ят пачĕ-ха), — каçсерен-мĕнсерен çамрăксем кунта ĕçме çӳремеççĕ-и? Эрехĕ вара сирĕн çемçе алăра, — пуçне кăшт пăрса, Христина еннелле кăтартрĕ вăл.

Фенита ирĕксĕрех кулса илчĕ, таçта тути хĕррипче ун сайрапĕрре палăракан чăрсăрлăх хĕлхемĕ çиçсе мĕлтлетрĕ: палламан çын буфетчица пирки пĕрремĕш сăмахрах çапла калани савăнтарчĕ ăна. Çамрăксем ĕçсе çӳренине вара хĕр курсах кайман.

— Юрать, юрать, ĕçмеççĕ пулсан, шутсăр лайăх, — тавăрчĕ клиент.

Вăл мĕнлерех каланинчен çамрăксем Фенита тивĕçне кура супса çӳремен пек пулса тухрĕ.

— Çапах та, — тăсарах каларĕ йĕкĕт унтан. — Çапах та хăшĕпĕри иртĕнме пăхать-ха. Терентьев, ав, ӳсĕрпе кӳршине йăлт хĕнесе пĕтернĕ. Шутсăр япăх. Çитсе курăпăр-ха...

«Ăçта ĕçлекенскер, ăçта килнĕскер-ши ку?» — куçне мăч та хупмасăр пăхса ларчĕ Фенита. Çын çаплах пуплерĕ. Юлашкинчен, хăй ăстине асилнĕн, çурма сăмахрах шăпланчĕ те кăлтăрах кулса ячĕ.

— Аптрашки сирĕнпе, — терĕ. Те Фенита пулчĕ ĕнтĕ çав «апт-

Николай ЕВСТАФЬЕВ

Йĕр

(В. ПОЛТОРАЦКИЙ ÇЫРНИСЕНЧЕН)

Тăр, юлташăм, кĕреке умне:
Мĕн çитмест халь!
Çитменни пурах.
Лайăх пурăнатпăр кучухне,
Пурăнасчĕ, тетпĕр, лайăхрах.

Сĕчĕ-çăвĕ пултăр куç тулли,
Аш-пăшĕ ан татăлтăр килтен.
Ун чухне уснă çерем тулли
Хальхинчен те тутлă пулĕ, тен.

Çакăншăн ырма-канма пĕлми,
Таварса чавса таран çанна,
Тинĕсри маяк евĕр сӳнми
Вăй-халпа тăрăшакан çынна,

Вĕрентӳçĕ-Парти хушнине
Чĕрере тытса та астуса,
Сĕт суса та
Кукурус акса
Тулăх пурнăç тăвакансене
Халăх пачĕ маяксен ятне.
Чыс, мухтав —
ĕçри маяксене!

«Ак вĕсем —
ĕçри мухтавлă гварди,
Вĕсемпе тан утăр пĕрмаях»,—
Вĕрентет çапла пире халь Парти,
Вăл хăех —
ĕмĕр сӳнми маяк!

ÇЫН ПАТНЕ эс
Кĕтмен хăна евĕр пырсан,
Кирлĕ-кирлĕмартан
Харкашу пуçласан,
Сан чĕрӳ çулăмпа
Хĕмленсе çунмасан,
Кӳренсе-кĕвĕçсе
Сĕрĕм çеç кăларсан,
Никама юратмасăр
Иртсен ĕмĕрӳ,—
Ыр сăмах илтеймесĕр
Кĕлленĕ чĕрӳ.
Асăнсан та, сана
Асăнĕç йĕрĕнсе:
— «Варласа-йĕрлесе çеç
Хăварчĕ»,— тесе...
Çĕн çерем уçса, эсĕ
Пĕрремĕш иртсен,
Хăмăш евĕр сан хыççăн
Тырпул çĕкленсен,
Ыттисем çĕнтерсе
Малалла утмалли
Çул çине эс
Лартса хăварсан çул палли,
Йывăр чух, тэрт килсен
Пурнăçра ăнсăртран,
Эс таса чĕререн
Юлташна пулăшсан,—
Сана асăнĕç
Ыр сăмахпа ĕмĕрне,
Калĕç: — «Тивĕçлипе
Ку хăварчĕ йĕрне!»

* * *

МĔН ТĂВАС, пурах-ха черетсем...
«Телефон касси» тенĕ çĕрте,
Хамăн вăхăт çитессе кĕтсе,
Эпĕ те тăрсаттăм черете.
Те кĕсйемĕн тĕпĕнчен пӳрнем
Вак укçа кăларайман пирки
Черетрен кăшт пăрăнтăм та тем,
Тепĕр хут пырса тăтăм.

Йĕрки

Çавăн пек пуль пирĕн:
Ман хыçа
Тăнă та иккен тата пĕр çын.
Кăтăрт-кăтăрт тăнлавне хыçса,
Кулса илчĕ:
— Эп — черет хуçи.
Тем, Сире курмарăм эп кунта!...
— Кур эппин — тăратăп юнашар.
Эп Сиртен малтан шăп çакăнта
Йышăнтăм черет.
Хирĕçер мар...
— Юрĕ,— терĕ сивĕреххĕн çак.
Урăхран пулмарĕ пуплесси...
Акă Мускавпа эп калаçап —
Лайăх илтĕнет Мускав сасси!
Калаçса пĕтертĕм вăш та ваш —
Вăхăта тăсман юмахласа!
Манăн хыçăмра тăнă юлташ
Тепĕр пӳлĕме уксахласа
Кĕрсе кайрĕ калаçма. Ури
Сас парать пусмассерен: чĕрик...
Протезпа-çке...
Эп черет пирки
Тавлашам пек турăм унпала.
Асăмра ман —
Сталинград мĕлки...
Ялкăшать рейхстаг çулăмпала...
Тен, унта çухатнă урине
Çак шинел-пакунсăр офицер!
Черетре мĕнле-ха ун умне
Эп тăмашкăн хăйрăм сĕмсĕрскер!
Май килмерĕ каçару ыйтма,
Чунăм çавăншăн халь те çунать.
Паттăрпа ман юнашар утма
Тивĕçĕм çитмест пек туйăнать.

1961 ç., март.
Шупашкар.

рашки», те хӑй е такам урӑххи? — Илсе килӗр-ха мӗн те пулин, кӑшт ҫырткалас.

...Тепер кунне «тӗлӗнтермӗш клиент» апатланма кафе-ну хине тин пычӗ. Районта таҫта кайса ҫуренӗ пулас: пит ӗшеннӗ теслӗ. Ҫын тепре килнӗ ҫӗре унран тарахламалли тупма елкерекен Фенита ку хутӗнче хӗпертесе кӑна укрӗ. Тем тесен те, таҫта тахҫан курнах пуль хӗр ку йӗкӗте...

Пӗрремӗшне — пӑсланса тӑракан ҫӑра борща ҫисе ярсан, клиент Фенита ятне ыйтрӗ. Хӑйӗнне те пелтерчӗ: Алексей ятлӑ-мӗн вӑл, Леша тесе чӗнме те юрать.

Унтан вӑл кулса илчӗ те:

— Фенита — аван ят, хитре,— терӗ.— Пирӗн вӑт йӗкӗрешсем пур, пӗчӗкскерсем, селӗпскерсем. Пӗри Клара, тепри — Лара. Кулашла вӗт: Клара — Лара! Савӑ ҫырма пулать.

— Сирӗн вара ачасем те пур-и? — чӗлхе ҫине килнине ним шухӑшласа тӑмасӑр персе ячӗ те Фенита пӗҫерсе кайнӑ питне чӗрҫитти аркипе хупларӗ.

Алексей тенӗ ҫамрӑк пуҫне ваштах ҫӗклерӗ.

— Ҫу-ук! — куллине аран тытса чарчӗ вӑл.— Ачасем пулма мар, юратса та курман-ха. Кукка ачисем. Шупашкарта эпӗ вӗсем патӗнче пурӑнатӑп...

Юрать-ха сӗтел ҫинче пушаннӑ турилкке ларать. Именнӗ Фенита, ӑна пуҫтарса илсе, кухньӑна васкарӗ.

Каялла таврӑнсан, Алексей унран хӑй кунта паллашма ӗлкӗрнӗ хӗрсемпе каччасем ҫинчен лайӑхрах ыйтса пӗлме шутларӗ пулас: пӗрин ятне асӑнать те теприн ятне асӑнать. Анчах Фенита никамах та паллаймасть. Вӑл кунтисем мар. Вӑл кунта ӗҫлеме пуҫлани ҫултаӑк та ҫитмест-ха.

— Аҫтан эсир?

— Пелейместӗр пулӗ, Тӑрӑнран. Кунтан ҫирӗм пилӗк ҫухрӑм пулать.

Ҫук, Алексей Тӑрӑна пӗлет-мӗн. Паян ҫеҫ-ха вӑл унпа кӳршӗллӗ Марки ялне ҫитсе килнӗ: аван ял, аван ҫынсем.

Ентӗ ак официанткӑна темле пит сӑнаса-сӑнаса пӑхрӗ те пачах урӑххине каларӗ:

— Нихаҫан та пӗрре куҫ ывӑтсах витӗр курасса ан шан ҫав: кашни ҫын — хӑйне евӗр крепӑҫ...

«Мӗнле ҫын эсир?» — ыйтас килчӗ Фенитӑн унран.

Анчах:

— Аҫта ӗҫлетӗр эсир? — тесе ыйтрӗ.

— Таҫта та,— шӳтлерӗ каччӑ,— хулара та, ялта та...

Комсомол облаҫ комитечӗн инструкторӗ-мӗн Алексей. Ӗҫӗ ун, чӑннипе илсен, нумай та нумай енлӗ. Ӑнӑҫлӑх пӗр хӑйӗнчен ҫеҫ килмест, ҫавӑнпа вӑл пӗчӗкҫӗн чух час-часах: «Кашни ҫын — хӑйне евӗр крепаҫ, кашнин урӑх ҫӑра, кашнине урӑх ҫӑраҫҫи кирлӗ», тесе шухӑшлать иккен. Ҫапах хӑй ун ҫинчен яланах манса каять: татӑшах пӗр-пӗр ӗҫпе хавхаланса, вӑл пуринче те пулӑшу кӳме тивӗҫ юлташа курасшӑн, пӗрре пӑхсах килӗшмен ҫынсемпе кӑна урӑхла сӑмах ун... Фенитӑсен районне-и? Фенитӑсен районне Алексей икӗ пысӑк ӗҫпе килнӗ: хут ҫинчи пек каласан, ҫамрӑк кукурус ӑстисен ӗҫне пӗтӗмлетмелле тата хулиганла хӑтланакансемпе епле кӗрешнине тӗрӗслемелле-мӗн.

— Апла эппин,— терӗ Фенита, Алексей шӑпланскан, урӑх сӑмах тупаймасӑр.

— Э, ҫу-ук,— чеен куҫ хӗсрӗ леш,— эпӗ аплапах ҫырлахасшӑн мар ӗнтӗ. Хам ҫинчен каласа кӑтартрӑм, халӗ сирӗн черет.

Мӗн пулсан та, хӗр кӑна кӗтменччӗ. Вӑл, вӑтанса, пуҫне пӗкрӗ.

— Нимӗн те ҫук ман каласа кӑтартмалли... Интереслӗ те мар...

— Суятӑр. Маркипе Тӑрӑн таврашӗнчен ҫакӑнта ҫити тарса килнӗ ҫынна питӗ итлесчӗ-ха.

Фенита кӑртах туртӑнса илчӗ. Ҫак чӑнах та «тӗлӗнтермӗш» — тем амакӗшӗн чуна ҫывӑххӑн курӑннӑ хӑмӑр куҫлӑ клиент ҫине вӑл ӗнертенпе пӗрремӗш хут тӳррӗн тинкерсе пӑхрӗ. «Тарса... Мӗн пӗлетӗр-ши эсир!» — сиксе тӑрса, кӑшкӑрса ярас килчӗ ун. Анчах вырӑнтан та хускалмарӗ: сасартӑк капланса хӑпарнӑ суккӑр тарӑхава иртнӗ кун хури ҫӗнтерчӗ те, ыратан чӗре ҫемҫелчӗ. Ҫук марҫке Фенитӑн каласа кӑтартмалли. Эх, ҫук мар!..

Тӗлӗнмелле, малтан яланах телейлӗ, хӑваслӑ кунсем аса килеҫҫӗ...

Хаваслӑ? Вунҫичӗ ҫула ҫитиччен хаваслӑ ӳснӗ Фенита. Кашни кӑсӑк, кулӑшла сӑлтавшӑн чунтан хӗпӗртенӗ. Хитрине, илемлине юратнӑ. Ун чухне уншӑн пурте илемлӗ пулнӑ, хӑй те илемлӗ пулма тӑрӑшнӑ.

Анчах ҫав пӗлӗтсӗр кунсем, юмах хӑех, юпа тӑрринче юлчӗҫ Фенитӑшӑн...

Йӑлӑмра теҫетникре ӗҫлекен ашшӗ, унччен тӑтӑшах киле килсе ҫӳренӗскер, таҫта ҫӗтсе ҫӳре пуҫларӗ. Амӑшӗ чирлесе ӳкрӗ. Фенита темӗнскер апла марскере туйса илчӗ те ҫитӗнсе ҫитен хӗр пуҫӑн пӗрремӗш хут татӑлса макӑрчӗ. Никама кӑтартмасӑр, шӑппӑн, вӑртӑн макӑрчӗ.

Унтан-и? Унтан амӑшӗ вырӑнпа вытма пуҫларӗ. Вӑл, пӗчӗкскер, кӑмӑллӑскер, пӗрехмай ахлататчӗ, анчах мӗн ыратнине хӑй те уҫӑмлӑн пӗлместчӗ. Сывлӑшӗ вӗриленчӗ ун, сӑмси ҫунаттисемпе тути хӗррисем кушӑрхаса ларчӗҫ, пысӑк аллисем ырханланса пычӗҫ — ӗҫчен те ӗҫпе писнӗ кӗренленсе ларнӑ. Кӳршӗ-аршӑра Фенита ашшӗ пирки, пӗтерчӗ Сахрун ҫемйине, терӗҫ.

Вӑл ӗнтӗ, чӑн та, эрни-эрнипе килте курӑнмастчӗ. Фенита пӗлсе ҫитрӗ: ун йӑлӑмра темле Плаки ятлӑ хӗрарӑм пур иккен. Ҫынсем калаҫҫӗ: «Ӗҫет», теҫҫӗ, хӗп-хӗрлӗ питлӗ имӗш, арҫын пек хулӑн саслӑ... Ҫав, пӗр ҫавах туртса илме пултарчӗ-ши Фенитӑпа амӑшӗн телейне? Хӗр малашне мӗнле пулас пирки шухӑшлама тӑрӑшрӗ — нимӗн те шухӑшласа кӑлараймарӗ. Вара вӑл, ашшӗ пӗррехинче киле пырсан, унпа куҫа-куҫӑн ларса калаҫма шутларӗ. Тӑван ачи мӗн каласан та, лешӗ хирӗҫ шӑл шурри те кӑтартмарӗ. Куҫ хӳрисем ун пӳрленсе, хырман сухалӗ шӑртланса тӑратчӗҫ. Хӑйӗнчен патне пыма ҫук чӗлӗм тӗпӗпе шарак тӑварланӑ хӑяр шӑрши перетчӗ.

Ҫав кун Фенита ӑна, хыҫҫӑн анкарти вӗҫне тухса, мӗн курӑнми пуличчен пӑхса тӑрса ӑсатрӗ. Вӑл калла пӳрте таврӑннӑ ҫӗре амӑшӗн пуҫ вӗҫӗнче кассипех Марине аки тесе чӗнекен кӑрчӑк ларатчӗ. «Япах чух ялтан тухса кайрӗ те мантаран Сахрунӗ — ыррине шырарӗ, кӑҫал ҫулсенче эппей, ачам, хӑй япахсан, ял ыррине курми суккарланчӗ: аслашшӗ тӑпринех те манчӗ пуль кам...» — терӗ ҫав кӑрчӑк. Кӳтсе ҫитнӗ Фенита ана ӑнланмарӗ.

Кайран-и? Пычӗ пурнӑҫ ҫавнашкал... Унтан, кӑҫал хӗлле, амӑшӗ вилсе выртрӗ. Фенита, ӑнсӑр пулса, урайне ӳкрӗ. Ура ҫине висҫӗмӗш кунне тин тӑнӑ вара. Пуртре салара пуранакан манаккӑшӗ ларатчӗ. Вӑл йӑмӑкне пуҫтаранма хушрӗ.

— Мӑнакка патӗнче пуранатӑп халь,— терӗ Фенита, сасси ҫӗтсе ларнипе ӳсӗрсе илсе.— Ӗҫе вырнаҫтарчӗ, малтан чайнӑйччӗ кунта...

Пер сӗтел хушшинче те ҫын сук ӗнтӗ, йӑлтах тухса кайса пӗтнӗ. Буфет хупӑ: ялан чи ҫӗрлене юлакан Христина таҫта васканӑ ахӑр. Марье кухньӑра пулас. Ресторанра Фенитӑпа Алексей иккӗшех лараҫҫӗ-мӗн.

— Эсир тем ан шутлӑр, эпӗ халиччен кунашкал никампа та калаҫманччӗ,— шӑппӑн каларӗ хӗр. Пысӑк сенкер куҫӗсем кӑшт херелне, ҫуталса тараҫҫӗ халь ун, вӗсенче иртнӗ кун иере хускатна кӑмал та, каччапа ҫапла иккӗнех юлнишӗн лайахмарланса именни те паларать.— Тем ан шутлӑр...

Алексей ӑна тӑнламарӗ.

— Аҫар аҫта халь? — ыйтрӗ вӑл.

— Пелместеп, Йалӑмра пуль. Эпӗ ӑна кураймастӑп,— хӑвӑрт таврӑнчӗ Фенита.

Унтан шухаша кайса ларчӗ.

— Мана ака мӗн тӗлӗнтерет,— терӗ хӗр кӑштахран.— Анне ӑна пӗрре усалпа асӑнмарӗ. Тен, пит хурламах та кирлӗ мар пуль ман... аттене. Йӗркеллӗ, хисеплӗ ҫынахчӗ, тет манакка. Вӑрҫӑччен Мускава та кайса килнӗ вӑл, выставкӑна... Ахальшенех яман ӗнтӗ. Вӑрҫа хыҫҫӑн та пӗр виҫӗ ҫул фермӑра ӗҫлерӗ. Эпӗ ун чухне пилӗкулта ҫулхи хӗрачаччӗ; ҫапах кӑшт аставатӑп. Анчах тем ӑнмарӗ аттен, ятлӑ-шывлӑ ҫынсемпе чӗрре кӗчӗ, тавлашса, ятлаҫсах ялтан тухса кайрӗ. Пурпӗрех... кураймастӑп ӑна.

Алексей часах чӗнмерӗ.

— Шел,— пуҫне сулкаларӗ вӑл, пӗр авӑк шӑпӑртах ларнӑ хыҫҫӑн, хӑй тӗллӗн калаҫнӑ пек.— Шел, аллӑ виҫҫӗмӗш ҫула кӗтсе илеймен ҫын. Кайран... кӑмӑл вӑйне ҫухатнӑ... Ну вӑт,— сасартӑк хӑйне ҫурма сӑмахрах пӳлчӗ каччӑ.— Ну вӑт, Фенита, эсир каласа кӑтартасшӑн марччӗ... Кашни ҫын... мӗн ҫав...

Ӗнтӗ Алексей сехете пӑхса илчӗ те ура ҫине тӑчӗ.

— Тепӗр тесен,— Фенитӑна тинкерчӗ вӑл,— сирӗн татах нумай лармалла-и кунта? Тен, эп сире ҫула май?..

Хер куҫне тартрӗ. Каччӑ асатма кӑмӑл туни мар ӑна, ҫав «лармалла-и?» тени именерчӗ. Мӗнпур ӗҫ те ун, ай-хай-кам, сӗтел хушшинче ҫапла сехечӗ-сехечӗпе ларнинче ҫеҫ мар-и-ха?..

— Ҫук ара, эпӗ халь тесен халь киле кайма пултаратӑп. Ресторана кӗҫех хупаҫҫӗ, унччен... Марье пур кунта.

...Урамра Алексей ҫул тӑршшӗпех паян хӑй ҫитсе курнӑ Марки ҫамрӑкӗсем ҫинчен калаҫса пычӗ. Темле Тамарӑна мухтарӗ. Тамара вӑл Фенитӑпа пӗр тантӑшах-мӗн. Пӗлтӗр ватам шкултан вӗренсе тухнӑ та ӗҫлеме колхоза юлнӑ. Хӗлле ӑна кукурус устерекенсен звеньевойне суйланӑ. Звено лайӑх ӗҫленӗ, темпе чухлӗ кукурус туса илнӗ. Халӗ Алексей Тамарӑсен колхозӗнче республикӑри ҫамрӑк кукурузоводсен канашлӑвне ирттересси пирки шухашлать. Ҫаванпа ыран аслӑраххисемпе калаҫса пахма Шупашкара кайса килесшӗн.

Фенита пирки пӗр сӑмах та шарламарӗ каччӑ. Тен, ҫавӑншӑнах-и? — кӑмӑлласах итлерӗ хӗр ӑна.

Килне кӗрсен вара вӑл, турех хӑй пӳлӗмне утса иртме шутланӑскер, тӑпах чарӑнса тӑчӗ. Хӑмӑр куҫсем!.. Чуна ҫывӑххӑн курӑннӑ куҫсем... Фенита амӑшӗ ҫапла аслӑн, пер пытаранчаксар тӳррӗн пахатчӗ вӗт-ха! Хӗр амӑшне, амӑшӗн аллисене аса илчӗ — ӗҫчен те ӗҫпе писнӗ, кӗренленсе ларнӑ, анчах тӗлӗнмелле ачаш аласем, Фенитӑна тяпписем ҫине тӑрса утма, пӗрремӗш пысӑк та йывар саспалли ҫырма, унтан кӗпе ҫума, ҫакӑр пеҫерме верентекен, вунҫиччӗри хӗрӗн ӗмӗт-шухӑшне ырласа, ҫурӑмран лӑпкакан ҫирӗп те тӑван алӑсем!.. Юратнӑ, чунтан юратнӑ алӑсем...

Мӑнаккӑшӗ ыйхӑрланмарӗ — хӗр хӑй пӳлӗмӗнче ӗнтӗ. Пӗччен. Кӑкӑрта тем хускалнӑ, чӗре картлатса тапать. Фенита тек нимӗн шухӑшлама та пӗлмерӗ,— сасартӑк ырӑ, питӗ ырӑ пулса кайрӗ ӑна. Вара, вырӑн умӗнче тӑраканскер, кӑпӑк пек ҫемҫе шурӑ минтере хӑрӑсах хӑй ҫумне тытса пӑчӑртарӗ...

Тӗлӗкре такама та курнӑ. Мӑнаккӑшӗ те пур пек. Вӑл Фенитӑна: «Ялта сан тӗтӗм сӳннӗ ӗнтӗ», терӗ. «Аслаҫусен тӑпринех те мантӑр пуль», илтӗнчӗ тата Марине аки сасси. Унтан Алексей килсе тухрӗ. «Хастар Тамарӑсем таҫта та пур», тет пек каччӑ.

...Ирхине Фенита ӗҫе чи юратнӑ симӗс платьине тӑхӑнса пычӗ. Тӗлӗнмелле, халӗ уншӑн мӑнтӑр Марье касӑк-кӗсӗкӗн курӑнмарӗ. Вӑл тӗреклӗ те чӗмсӗртерех хӗр кӑна иккен. Ҫук, вӑл кирлӗ-кирлӗ маршӑнах мӑкӑртатмасть. Ҫурхи шыв-шура пӑхмасӑр ҫӳрекен пӗчӗк старике те Фенита ырӑпа аса илчӗ, хӑй сисмесӗрех унӑн тӳрӗ чунӗпе мухтанчӗ. Симӗс пӑрҫана пӑрӑҫ тенӗ шлепкеллӗ кервен ҫынна куҫ-пуҫӗ витӗрех маршӑн шеллес килчӗ. Ялан ӗҫпе ҫӳрекен васкавлӑ клиентсене куҫ умне кӑларсан, официантка именсе кайрӗ. Пӗр кӑтра буфетчица ҫеҫ Фенитӑшӑн — ӗлӗкхи пекех. Вӑл ыран-паян ревизипе килессе кӗтет-мӗн, питӗ шикленет. Ҫав кирлӗ. Тата Алексей каланӑ палламан Терентьева вӑрҫас килчӗ: унран, курман-илтменскерӗнчен, тахҫан Фенитӑна макӑртнӑ чӗлӗм тӗпӗпе тӑварланӑ хӑяр шӑрши кӗрессӗн туйӑнать.

Фенита Алексее кӗтрӗ. Анчах каччӑ алӑкра курӑнсанах хӑй, вӑтанса, аяккалла пӑрӑнчӗ. Мӑнтӑр Марье апатлантарчӗ вара ҫынна, чиперех, мӑкӑртатмасӑрах, винегрет, унтан котлет ҫитерчӗ, чей ӗҫтерчӗ. Фенита кухня умӗнче пӑхса тӑчӗ. Юлашкинчен, Алексей ӑна асӑрхарӗ те, кӑчӑк туртса, хӑй патне чӗнчӗ.

Çĕршывăмăрта

Пирĕн Тăван çĕршывра кашни кун, кашни сехет хĕрӳ ĕçпе, вĕрене çыхăннă. Паттăр та мухтавлă ĕçсем тăвассишĕн совет çыннисем пĕтĕм чун хавалĕпе хавхаланса тăрăшаççĕ, çичĕçуллăхăн виççĕмĕш çулĕнче пархатарлă ĕçсем туса, Коммунистсен партийĕн XXII съездне чаплă парне кӳме ĕмĕтленеççĕ.

Ырă ĕмĕт. Мĕн пур-ха çĕр çинче унран пахи! Нумай пулмасть ВЛКСМ Тĕп Комитечĕ çамрăк строительсене Целина крайĕнчи çĕнĕ стройкăсене кайма чĕнсе каларĕ.

Коммунистсен партийĕпе совет правительстви Целина крайĕн пысăк майĕсемпе малалла тата лайăхрах усă курма, çĕнĕ çĕрсем çинче ĕççыннисене пурăнма, культурăпа кăмăл тунă. Эсир пĕрремĕш ӳкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла) Саратоври медицина институтĕнчен вĕренсе тухакан Валя Исаева, Валя Кухто, Роза Купцова, Ира Калинина, Лиля Баранова, Виктор Свистельник, Лев Козленко студентсене куратăр. Вĕсем часах Целина крайне çитĕç, унти ĕçченсемпе вĕсен ачисен сывлăхĕшĕн чуна парса ĕçлеме тытăнĕç.

Пирĕн çамрăксен ĕçченлĕхĕпе хастарлăхĕ тата нумай енлĕ пултарулăхĕ мĕн ачаран аталанса пыраççĕ. Ку тĕлĕшпе Совет шкулĕ калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ачасем шкулта вĕреннĕ чухне тĕрлĕ ĕç тума, ăсталама, тĕрлĕрен машинсене ĕçлеттерме хăнăхаççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, пурнăçпа

турăпа йăла условийĕсене туллинрех тивĕçтерме йышăнчĕç. Акă мĕншĕн ĕнтĕ çамрăк строительсене çав тери кĕтет Целина крайĕ. Анчах та çак тивĕçе пурнăçлама çурт-йĕр тăвакансем кăна мар, инженерсемпе агрономсем те, учительсемпе врачсем те кирлĕ. Сăмахран, çĕнĕ çĕрсем çинче 5 миллиона яхăн пурăнмалли çурт, 140 пин вырăнлăх шкулсем тата ача сачĕсемпе яслисем, клубсемпе больницăсем нумай тумалла. Вĕсем пултаруллă та хăюллă специалистсене кĕтеççĕ. Çакна пирĕн совет çамрăкĕсем чунпа туйса тăраççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ халĕ Целина крайне яма ыйтса ВЛКСМ райкомĕсене çĕршер заявлени килет. Парти чĕннипе, Саратоври медицина институтĕнчен вĕренсе тухакан çамрăк патриотсем те Целина крайне, хальхи вăхăтра специалситсем ытларах кирлĕ çĕре, кайса ĕçлеме тачă çыхăнса вĕренеççĕ. Çакă вара вĕсене ачаранах хăйсем юратнă профессие суйласа илме, ăста специалистсем пулма май парать. Саратов хулинчи вунпĕр çул вĕренмелли 37-мĕш номерлĕ шкулти аслă классенче вĕренекенсем хăйсем юратнă профессие лайăххах алла илме тăрăшаççĕ. Вĕрнекенсен пĕр ушкăнĕ «Серп и молот» заводра ĕçлет. Унта шут машинин операторĕ пулма вĕренеççĕ. Иккĕмĕш ушкăн «Гипронингаз» наукăпа тĕпчев институтне чертежник-инструктор специальноçне вĕренме çӳрет.

Çак шкулти кашни ачах ĕçе юратать. Шкул мастерскойĕ «Серп и молот» завод филиалĕ пулса тăнă. Унта вĕренекенсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене кирлĕ инструментсем хатĕрлеççĕ, завод валли тĕрлĕ детальсем туса пыраççĕ.

Шкул ачисене ĕçе юратма шефсем нумай пулăшаççĕ. «Гипронингаз» наукăпа тĕпчев институтĕнче проектсем тăвакан Ольга Николаева вунпăмĕш тата тăххăрмĕш классенчи ачасене чретежник-конструктор ĕçне вĕрентет. Варринчи сылтăмри ӳкерчĕкре: О. Н. Павленко Люда Генкини, Маргарита Иваничева тата Валя Воронина вĕренекенсемпе пĕрле.

Халăх пурнăçĕ кунран-кун лайăхланса пынă май, культура та хăвăрт ӳсет. Совет çыннисем ĕç хыççăн савăнăçлă канаççĕ, вăхăта кирек хăçан та усăллă та интереслĕ ирттереççĕ. Акă, сăмахран, Узбек ССР столицинчи аслă шкулсем çумĕнче хĕрсен клубĕсем тунă. Кунта хĕрсем усăллă канашсемпе ырă сĕнӳсем илме пултараççĕ, интереслĕ лекцисем итлеççĕ, тĕрлĕ темăсемпе ирттерекен занятисене хутшăнаççĕ.

Аялти ӳкерчĕкре: Ташкентри пир-авăр комбиначĕн çитсă сăрлакан фабрикăри хĕрсен клубĕ. Килтерĕшĕнчи ĕçсене вĕренмелли занятире фабрикăри столовăй поварĕ Татьяна Богданова комсомолка сĕтел çине мĕнле пуçтармалли çинчен каласа парать.

...Ленинград композиторĕ Вадим Николаевич Салманов музыка енĕпе вăрçă хыççăнхи çулсенче ĕçлеме тытăннă. Малтанхи вăхăтра çырнă романсемпе квартетсем тата пьесăсем хыççăн вăл симфонилле произведенисем — «Лес» картина тата «Зоя» поэма çырнă.

Çакăн хыççăн композитор славян халăхĕсен пĕрлĕхĕпе туслăхĕ



çинчен пĕрремĕш симфони çырса хатĕрлет. А. Блок сăввисем тăрăх çырнă «Вуниккĕ» оратори те хăйĕн ăнăçлăхĕпе савăнтарать. Пĕлтĕр В. Н. Салманов хăйĕн иккĕмĕш симфонийĕпе паллаштарнă. Çак произведени пĕтĕм кăмăла çĕклентерсе ярать. «Вуниккĕмĕш» ораторипе иккĕмĕш симфоние Филармонин пысăк залĕнче пĕр хут мар выляна, вĕсене музыка юратакансем лайăх пĕлеççĕ.

Пултаруллă композитор Ленинградри консерваторире педагог пулса ĕçлет. Сулахайри ӳкерчĕкре: В. Н. Салманов (сылтăмри) В. Наговицин студентпа.

...Тăван çĕршывăн кашни кĕтессинче хĕрӳ ĕç вĕрет, çакă вăл совет çыннисен хастарлăхĕпе пултарулăхне, вĕсен пуласлăхшăн ялкăшса тăракан çутă ĕмĕтне яр уççăн кăтартса парать.

— Ăçта эсир паян?

— Кунтах-çке...

«Кунтах-çке...» Урăх ним калама пĕлмерĕ хĕр. Ана сасартăк хăй паян, мăнаккăшĕнчен иртерех тăрса, икĕ хутчен çăвăнса шăлăнни аса килчĕ... Вара çийĕнчи симĕс платьи те вырăнсăр пек, çĕркаç ресторанра Алексей умĕнче манăçса калаçса ларни те ытлашши пулнăн туйăнчĕ.

— Эсир ялта кĕтӳ кĕртнине сăнанă-и? — кĕтмен çĕртен ыйтрĕ каччă; хуравласса пăхмарĕ, малалла калаçрĕ.— Вăт, тĕрлĕ шăвшавра амăшĕнчен çухалса юлнă пĕр-пĕр çамрăк путек хурланса макăрнине илтетĕн те ун чух, кайран çав сасă чылайччен хăлхара янăраса çӳрет...

— ?

— Ара,— çуталчĕç хăмăр куççем,— çĕркаç эсир мана çав путеке аса илтертĕр. Тек ун пек ан пулăр: шутсăр япăх. Юрать-и?

Хĕрпе каччă харăсах кулса ячĕç.

— Ман паян темшĕн пĕр-пĕр шахир пек калаçас килет,— Фенита çинчен куç илмерĕ Алексей.— Çеçкене ларма пуçланă улмуççие тăм çапсан, вăл капăрлăхне ĕмĕрлĕхе çухатнăн туйăнать, анчах ун çурăлма ĕлкĕреймен тĕвĕсем те пур-ха, тата... тăм кашни чечекех амантса хăварманнине те манма юрамасть. Çапла-и?

— Тем те калăр эсир,— пуçне чикрĕ официантка, сĕтел çине тирпейлем пек пулса.

— Татах калăттăмччĕ те, Фенита, анчах каймалла ман: Шупашкара васкатăп-çке,— ура çине тăчĕ Алексей.— Ну, чипер юлăр-ха эппин. Тепре куриччен.

— Тепре куриччен...

...Кайран, кăнтăрла, Фенитăна Марье «ай-уй!» тесе тĕлĕнтерчĕ.

— Ай-уй! Пĕрремĕш хут куратăп! — Çавăтса кайрĕ вăл хĕре вешалка патĕнчи мăн тĕкĕр умне.— Пăх-ха, паллайратăн-и хăвна? Мăкăнь çеçки пек вĕт! Сăрланман-и эс паян? Çук. Кай, чăнах, Фенита мĕн пулнă сана?

Фенита чĕнмерĕ.



Чӳрече харашки (Патăръел районĕнчи Сăкăт ялĕ).

ЧĂВАШ АРХИТЕКТУРИ ÇИНЧЕН

Чăваш ялĕнчи халăхи архитектура.

Çĕршывăмăрти халăхсене ирĕклĕх кӳнĕ Октябрьти социализмла Аслă революци чăваш халăх пурнăçне те тĕпрен улăштарчĕ. Ун хăйĕн экономикипе культури ӳссе аталанчĕ. Ун литературипе музыки, скульптурипе живописĕ халиччен пулман пысăк ӳсĕмсем турĕç, халăха пысăк та чаплă произведенисем пачĕç.

Анчах, шел пулин те, пирĕн искусствăн пĕр облаçĕ — архитектура (чăвашла, çурт-йĕр тăвас ĕç, тейĕпĕр-и ăна?) халĕ те кая юлсарах пырать-ха. Мĕнрен килет-ха ку? Чи малтанах, ĕлĕк, патша саманинче, чăваш архитектурине тĕпчесе вĕренессине хисепе хуман, пачах урăхла, ăна манма тăрăшнă! Революци хыççăнах архитектурăра пирĕн наци кадрĕсем пулман; чăваш халăхĕн алă искусствине те лайăх тĕпчесе пăхман.

Çапах, май çитернĕ таран, чăваш культури çыннисем чăвашла майлă архитехтурăна пурнăçа кĕртме тăрăшса пăхнă. Вăтăрмĕш çулсенче Наркомпросăн ача комиссийĕ валли çурт лартнă чухне (Р. Люксембург урамĕ) М. Спиридонов художникпе Б. Лавров архитектор илемлĕхĕшĕн япалисем (пайсем) çине чăваш тĕррин орнаменчĕсене ӳкернĕ. Вĕсемпе çурт кĕтессисене, балкона илемлетнĕ (улттăмĕш ӳкерчĕк).



Анчах та çак пĕр пуçланă ĕçе малалла аталантарайман. 1956 çултан пуçласа çеç архитекторсем чăваш архитектури ыйтăвĕсене тепĕр хут хускатрĕç. Хăйсен ĕçĕнче вĕсем чăваш халăх творчествипе туллинрех усă курма тытăнчĕç. Шупашкар хулинчи чылай çуртсене халĕ чăваш орнаменчĕпе илемлетнĕ.

Ленин проспектне çитсе курар. Кунти темиçе çуртăн карниз айĕнчи фризĕсене масмак тĕрринчен илнĕ ӳкерчĕкпе эрешлентернĕ. Кăна хĕрлĕ тата шурă кирпĕчсенчен майлаштарса тунă. Проект авторĕ — Н. Ятманов. Кинотеатрсен реклама витринисемпе «Чăваш халăх творчестви» витринăна тунă чухне те Н. Ятманов архитектор чăваш тĕррипе анлăн усă курнă. Кĕскĕпе масмак çинчи ӳкерчĕксене вăл кăшт урăхлатса, çĕнетсе, çак пĕчĕк архитектура произведенийĕсем çине питĕ ăнăçлă куçарнă (пĕрремĕш ӳкерчĕк).

Халăх творчествипе çапла пĕлсе те ăнăçлă усă курасси — чăваш архитекторĕсемшĕн пархатарлă, хисеплĕ ĕç. Пурăнмалли çуртсемпе магазинсем, театрсем çинче халăх мĕн ĕмĕртен хайлана орнаментсем пысăккăн, илемлĕн, чĕррĕн курăнаççĕ, халăх пултарулăхĕн манăçа тухма пуçлана произведенийĕсене çĕнĕрен вăй параççĕ.

Çӳлерех асăннă çуртсемпе витринăсем — чăваш архитектурин малтанхи произведенийĕсем çеçха. Кунта уйрăмах Шупашкарти Филармони çуртне палăртмалла. Ун проекчĕн авторĕ — паллă чăваш архитекторĕ Ф. Сергеев. Хăй ĕçĕнче вăл халăхăн алă искусствипе питĕ ăнăçлă усă курнă. Чăваш орнаменчĕн ӳкерчĕкĕсене архитектурăн илемлĕхшĕн япалисем çине пĕлсе те вырăнлă куçарнă.

Кĕрсе курар-ха Филармони çуртне. Вестибюльри, иккĕмĕшпе виççĕмĕш хутри фойесенчи юпасене пăхса çаврăнар. Вĕсен тăррисене (капительсене) чăваш орнаменчĕ евĕр чечеклентернĕ-ха. Çапах вĕсем шăп та шай ĕлĕкхилле орнамента çеç аса илтермеççĕ, архитектор вĕсене урăх ӳкерчĕксемпе те пуянлатнă. Ак иккĕмĕш хутри юпа капителĕ (çиччĕмĕш ӳкерчĕк). Ун варринчи «çулçăсемпе» пĕчĕк ромбоэдрсем капитель ӳкерчĕкне икĕ пая пайлаççĕ. Çӳлтипе аялти ӳкерчĕксем вара масмакран илнĕ ӳкерчĕксене аса илтереççĕ. Пĕрре пăхсах курăнать, халăх тĕррин орнаменчĕсем архитектурăна хăйне евĕр илем кӳреççĕ.

Филармони залĕн маччине кĕскĕ пек ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ. Сцена порталĕпе балкон картине те чăваш орнаменчĕ капăрлăх кӳрет.

Филармони çурчĕн шалти архитектури — чăваш архитектурин пысăк çитĕнĕвĕ. Вăл халăх пултарулăхне, лайăхлатса, чăн-чăн искусство произведенийĕ туса, тепĕр хут халăха таварса парать. Çуртăн тулаш енчи архитектури вара чаплах мар. Уйрăммăн илсен — алăк тавраше, мозаикăлла орнаментсем, юпа капителĕсемпе юпасем хушшинчи баллюстрадăсем — кашни-пĕри аван, илемлĕ искусство произведенийĕ. Анчах, пĕтĕмĕшпе пĕрле илсе пăхсан, филармони фасачĕ хăйне евĕр пĕр пĕтĕм произведени мар. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, ку фасадăн пустару-йĕркелӳ майĕ (композици приемĕ) — классикăлла прием. Унпа авалхи грексемех усă курнă, унăн хăйĕн (пĕр хăйĕн!) орнаменчĕсемпе пропорцийĕсем пур. Чăваш орнаменчĕсемпе вырăнлă усă курас тесен, çав классикăлла композицие улăштарма тивет. Унсăрăн... хутăштарма, пĕтĕçтерме юраман япаласене хутăштарса пăтраштарса яни çеç ку. Паллах, çĕнĕ ĕçе пуçăннă çĕрте пĕр йăнăшсăр, кăлтăксăр пулмасть ĕнтĕ. Малтанах чăваш архитектурине тимлесе, çине тăрса аталантарса пынă пулсан, кунашкал йăнăшсене сахалтарах курма тиветчĕ пире.

Нумай çулсем хушши хăшпĕр архитекторсем, чăвашсен мĕн ĕлĕкренех хăйсен архитектури пулман, çавăнпа чăвашла архитектура çинчен шухăшлама та кирлĕ мар, тесе пурăннă. Вара вĕсем чăваш халăх алă искусствине те тĕпчесе вĕренмен, ялти архитектурăпа Чăваш республикинчи авалхи архитектура палăкĕсене те пачах шута илмен. Ку ĕç юлашки çулсенче кăна пуçланчĕ.

Мĕн курма, пĕлме пулать-ха авалхи архитектура палăкĕсемпе ял архитектурине тĕпчесе вĕренсе?

Республикăн хĕвелтухăç енчи районĕсенче авалхи палăксем нумай сыхланса юлнă. Вĕсем ытларах кивĕ масарсем çинче тĕл пулаççĕ. Кусем — Пăлхар патшалăхĕнчен XI—XVI ĕмĕрсенченех юлнă палăксем. Палăксем çинче араб чĕлхипе çырнă çырусем пур, чăваш сăмахĕсем те тĕл пулаççĕ. Кунсăр пуçне, вĕсем тĕрлĕрен орнаментсемпе, ӳкерчĕксемпе пуян. Хăшпĕр палăксене касса илемлетнĕ, хăшĕн-пĕрин тăррине шĕвĕртсе тунă е кукăрлатса хитрелетнĕ (тăваттăмĕш ӳкерчĕк). Апла пулсан, авалхи Пăлхар патшалăхĕнче чул касма ăста çынсем пулнă. Çавăн пек чул палăксем Пăлхар патшалăхĕн хулисем пулнă вырăнсенче те тупăнаççĕ, ун пек çĕрте авалхи пысăк чул çуртсем те сыхланса юлнă. Ку вăл пĕтĕмпех Пăлхар патшалăхĕнче архитектура искусстви çӳлĕ шайра пулни çинчен калать.



А. П. Смирнов, Н. И. Ашмарин профессорсен тата ыт. ĕçĕсенчен те эпир чăвашсем Пăлхар халăхĕнчен тухнине пĕлетпĕр. Пайтах вăхăт иртнĕ унтанпа... Пуçа çакăн пек шухăш килсе кĕрет: чăваш ял архитектуринче Пăлхар архитектури йĕрĕ пулнă-ши, тата халĕ пур-ши вăл, сыхланса, упранса юлнă-ши?

Илсе пăхар-ха чăвашсен ĕлĕкхи хапха юписене. Вĕсен ӳкерчĕкĕсем чул палăксем çинчи ӳкерчĕксемпе пĕр пекех. Чăваш ялĕсенче ĕлĕк хапха юписене тата кантра евĕр орнаментсемпе те эрешлентернĕ. Çавнашкал орнаментсемех Пăлхар хулисенчи çуртсен алăкĕсем таврашĕнче те пулнă. (А. П. Смирнов профессорăн «Волжские булгары» кĕнекине пăхăр). Çакăн пек орнаментлă ӳкерчĕксене эпир хапха юписем çинче çес мар, чӳрече харашкисемпе карниз хăмисем, килтерĕшри япаласем — пукан, сăра курки — çинче те куратпăр (пиллĕкмĕш ӳкерчĕк).

Çавăн пекех, чăваш тĕррин орнаменчĕсене авалхи палăксем çинчи орнаментсемпе танлаштарса пăхсан та пĕрешкелли тупăнать. Ку вăл архитектурăпа тĕрĕ орнаменчĕ пĕр-пĕрне сывăх тăнине кăтартса парать.

Мĕн каласшăн-ха эпир кунпа? Чăваш архитектури тин çеç çуралакан япала мар, вăл мĕн авалтан пыракан халăх пултарулăхĕ. Ун произведенийĕсем хăйне евĕр, илемлĕ, ун орнаменчĕсем — пысăк пултарулăх. Анчах паянхи куна та ăна питĕ сахал тĕпчесе вĕреннĕ-ха, çавăнтан килет те ĕнтĕ унпа ĕçре туллин усă курма пĕлменни. Çине тăрса тĕпчесе вĕренсе, малалла аталантармалла пирĕн чăваш архитектурине. Кунта ĕçĕ те, пĕлмелли те, савăнмалли те питĕ нумай. Чăваш архитектури — касса тунă чул палăксемпе эрешлĕ харашкасем, юпасем çеç мар. Кунта чăваш çынни çурт ăшчиккине мĕнле туса, епле тирпейленине те, çурт йĕри-таврашĕ, урампа ял планĕ мĕнлине те тишкерсе вĕренмеле.

Халлĕхе эпир паянхи чăваш архитектури произведенийĕсене тĕрĕ орнаменчĕсем кĕртние çеç куратпăр. Шанас килет, архитекторсем çитес вăхăтрах чăваш архитектурин ытти пуянлăхне те шута илме тытăнĕç. Чăваш архитекторĕсем, хăйсен ĕçĕнче халăх творчествипе усă курса, паха ĕç пуçарса ячĕç. Малашне çав ĕç ӳссех, анлăлансах пырĕ.

Г. ПАВЛОВ,

Горькири инженерно-строительнăй институтри архитектура кафедрин ассистенчĕ.

Пирĕн фотокорреспондентсем паллаштараççĕ



Пирĕн пурнăç мухтавлă ĕçсемпе, тĕлĕнмелле çынсемпе пуян. Кашни çĕнĕ кун совет çыннисене ырă ĕçсем парнелет, кашни кун пирĕн халăха ырлăх кӳрет, татах пысăк ӳсĕмсем тума чĕнет, хавхалантарать.

Шупашкарти чугун çул станцийĕ. Кунта ĕç кунĕ ирхине сакăр сехетре пуçланать. Саккăрта пуçланать тени тĕрĕсех мар пулĕ те, çапах та кунта ĕçлекенсем çак вăхăтра çĕнĕ сменăна тухаççĕ.

Пĕр кунхине пирĕн фотокорреспондент та чугун çул станцийĕнче ирхине сакăр сехетрех, ĕç кунĕ пуçланнă вăхăтра, пулчĕ.

Станци дежурнăйĕн пӳлĕмĕнчи телефонсем пĕрехмай шăнкăртатаççĕ, унччен те пулмасть, селектор чĕнет, дежурнăй журнал çине тин çеç тухса кайнă пуйăса паллă тăвать. Паянхи дежурствăна Егоров йышăнать. Кунтах Ной Иванович Шумков та, Мăштавăш чăвашĕ, пур. Вăл халь станцири маневр локомотивне тĕрĕслеме пуçлать (аялти, сулахайри ӳкерчĕк).

Хăватлă локомотив станци умĕнче вĕри пăспа сывласа тăрать. Ной Иванович локомотива тĕплĕн тĕрĕслесе тухрĕ те паравус будкине кĕчĕ, дежурнăй приказне кĕтме пуçларĕ.

— Тепĕр вунвиçĕ минутран тавар пуйăсĕ килет, хатĕрленĕр,— çав хушăрах смена командирĕн сасси илтĕнчĕ.

Сакăр сехет те вунвиçĕ минут. Инçе çултан килнĕ вăрăм состав виççĕмĕш лини çинче чарăнчĕ. Шупашкара паян утмăлсакăр вакун, пин тонна ытла тĕрлĕ тавар килчĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, Ной Иванович çак пуйăса салатма, вакунсене кирлĕ çĕре куçарма тытăнчĕ. Маневр пуйăсĕ пĕр çул çинчен теприн çине чашлатса тухрĕ. Çапла сехет те хĕрĕх çичĕ минут иртсен, утмăл сакăр вакуна кирлĕ çĕре вырнаçтарсан, Ной Иванович çĕнĕ состав пухма тытăнчĕ.

Ной Иванович Шумковпа пирĕн фотокорреспондент перерыв вăхăтĕнче тĕл пулса калаçрĕ. Вăл Шупашкарта пиллĕкмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ, анчах çак кĕске вăхăт хушшинчех вăл хăй ĕçне питĕ лайăх вĕренсе çитнĕ. Ун ĕçĕ ытлашшиех çын çинче палăрмасть темелле, çапах та вăл кашни минутпа усă курни пуйăссене срокчен пухма май парать, вăхăта перекетлени вара кирлĕ грузсене инçе çула ăсатма, çитес çĕре çитерме пулăшать.

Чугун çул çинче хаклă таварсене пушатнă вăхăтра Шупашкар районĕнчи «1-ое мая» колхозăн уй-хирĕнче хĕрӳ ĕçсем пыраççĕ. Колхозри механизаторсем кăçалхи çуракине тĕплĕн хатĕрленсе илчĕç. Колхоз çулталăк пуçламăшĕнчех çĕнĕрен пĕр трактор, комбайн, кукурус акмалли сеялка туянчĕ. Л. Иванов, А. Матвеев, В. Константинов, А. Степанов механизаторсем уй-хир ĕçĕнче пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ, вĕсем вăйлă тырпулшăн кĕрешсе тухрĕç те çуракине кĕске вăхăтра, пахалăхлă ирттерчĕç (варринчи ӳкерчĕк).

Галина Ивановна Иванова преподавателĕн те çак кунсенче ĕçсем пайтах пулчĕç ĕнтĕ. Вăл, РСФСР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ, ачасене экзаменсем тыттарма хатĕрленет (çӳлти ӳкерчĕк). Пăрачкаври вăтам шкулти хими преподавателĕ Галина Ивановна хăй пĕлӳлĕхне те куллен ӳстерсе пырать.

Совет çынни кашни ĕçре, кашни сехетре Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, коммунизм тăвакан халăхшăн вăй хурать. Шупашкарти макарон фабрикинчи цех мастăрĕ Н. Чекунова ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен бригади коммунизмла ĕçлекен коллектив ятне илессишĕн ăмăртăва хутшăнчĕ. Бригада вара хăйĕн ĕç тухăçлăхне кулленех ирттерсе тултарать. Май уявне вĕсем çĕнĕ ӳсĕмсемпе кĕтсе илчĕç. Уйрăммăнах Г. Ивановăпа Н. Андреева работницăсем ĕçре палăрчĕç. Вĕсене цех мастăрĕ Н Чекунова та яланах вĕрентсе пырать (аялти ӳкерчĕк).

Совет çыннисем пурте КПСС XXII-мĕш съездне ĕçри ӳсĕмсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Страницăри ӳкерчĕксене П. Ефремов, В. Исаев, И. Виталиев, А. Припалов туса хатĕрленĕ.

ЮМАНЛАХРА

Çапла пулнă...



Леонид АГАКОВ

Повесть

Вăхăт шурĕ, каллех хĕл ларчĕ, Илюксен çиччĕмĕш отделенинчи çапăçу та тахçанах манăç пулчĕ, ун çинчен никам та аса илмерĕ ĕнтĕ. Анчах хăшпĕрисем ăна манман иккен, вĕсем ун çинчен астуса, «активри» Илюка май килсессĕнех питĕ хытă тавăрма ĕмĕтленнĕ.

Илюк слесарь ĕçне чăннипех юратса пăрахрĕ. Пĕрре тытăннăскер, ăна тĕплĕрех пĕлекен пулас тесе, яланах хăйсене вĕрентекен ватă мастер Куприян Иванч çывăхнерех пулма тăрăшрĕ, пĕр-пĕр япала тунă чух мĕн те пулин ăнмасан ун патне пыра-пыра ыйтса пĕлчĕ, кашни япаланах епле пулсан та лайăхрах, хитререх тăвасшăн пулчĕ. Çакăншăн мастер ăна юрататчĕ, ыттисем хăйсене тума панисене пăсса пăрахсан е ĕç хатĕрĕсене юрăхсăра кăларсан, тÿрех Илюк çине тĕллесе кăтаратчĕ:

— Эсир Ивуковран пример илĕр! Пăхăр-ха, епле хитре ĕçлет — унăн нихçан та нимĕн те пăсăлмасть. Курăр акă, колонирен вăл чăн-чăн слесарех пулса тухса каять! Ĕмĕрлĕх специальность пулать унăн! А эсир мĕн! Ирĕке тухсан каллех нимле ĕç те пĕлмен шалтай-балтайсем пулас тетĕр-и!..

Илюка хăйне те час-часах калатчĕ вăл:

—Тăрăш, ывăлăм, лайăхрах тăрăш! Аçу вăрçăра вилнĕ, тетĕн, санăн никам çине те шанмалли çук эппин, çавăнпа та ĕçе тĕплĕрех вĕренес пулать. Асту эсĕ, лайăх ĕçлени укçа парать çеç мар, вăл этемĕн чунне тасатать, кăмăлне çĕклет, çынсем умĕнче те хисеплĕ тăвать...

Хăй тăлăххăн ÿснипе мĕн пĕчĕкренпех ĕçре писнĕ, тĕрлĕ хуçасем патĕнче тарçă вырăнче пулса хăшкăлнă, темĕн тĕрлĕ нуша курнă, икĕ вăрçă витĕр тухнăскер, Куприян Иванч колоние лекнĕ ачасене пурне те чунтанах ĕçе вĕрентсе çын тума тăрăшнă. Чи чăрсăррисем те итленĕ вара ăна, ачасемшĕн вăл тăван аслашшĕ пекех туйăннă, вĕсем ăна чĕнесֹсе те ятпа мар, пурте «асатте» тесе чĕннĕ. Пуринпе те кăмăллă калаçать вăл, тумалли ĕç çинчен пĕтĕмпех ăнлантарса çитериччен ним тусан та уйрăлса каймасть, кирлех пулсан хаярланса хăтăрса та илет, анчах вăл ятланăшăн никам та кÿренмест.

Çак Куприян Иванчăн пĕр питĕ хаклă япала — хулăн та вăрăм вăчăраллă кĕмĕл сехет пулнă. Ăна Куприян Иванча граждан вăрçи вăхăтĕнче Польша фронтĕнче паттăррăн çапăçнăшăн парнелесе панă иккен. Сехетне вăл кăкри умĕнче, жилетка кĕсйинче чиксе çÿретчĕ, вăчăри вара яланах курăнатчĕ. Куприян Иванч ăна хăй вĕрентекен ачасене пĕрре кăна мар уçа-уçа кăтартнă: сехет хуппин шал енне «Лихому разведчику Красной Армии К. И. Лаптеву» тесе çырнă-мĕн. Ачасем ыйтнипе, хăйне çак сехетне мĕншĕн пани çинчен вăл çирĕм-вăтăр хут та каласа кăтартнă пуль. Унăн калавне Илюк та илтнĕ. Тĕрĕссипе, Куприян Иванч сехечĕн «биографине» колонире пурте — воспитанниксем те, командирсем те питĕ лайăх пĕлнĕ. Анчах пĕррехинче сасртăк питĕ тĕлĕнмелле хыпар сарăлчĕ:

— Куприян Иванча çаратнă! ,

— Ватă мастерăн сехетне вăрланă!..

Чип-чипер уяр çанталăкра аслатисĕр-мĕнсĕр аса çапнă пекех пулчĕ ку хыпар. Пĕринчен теприне, пÿлĕмрен пÿлĕме, çуртран çурта çисĕм пек сарăлчĕ вăл. Нумайăшĕн ĕненес те килмерĕ: кам ун пекех кÿрентерме пултарнă-ха старике!.. Куприян Иванч хăй каланă тăрăх, кăнтăрлаччен унăн сехечĕ хăй çумĕнчех пулнă, апат çиме те вăл сехет çине пăхса тухса кайнă, анчах кайран...

Çук, хăй ăна ниста та çухатма пултарайман вăл, зонăран тухман, анчах ĕçрен кайнă чух, проходной будкăра, унти пысăк сехете курсан хăйĕнне тĕрĕслесе пăхма шут тытнă та, жилет кĕсйи пуш-пушах пулнине асăрханă... Пурне те лайăх астунă старик, анчах кăнтăрлахи апатран таврăнсан, питĕ ăшă пулнине, пĕр хушă жилетне хывса çакса ĕçленине пачах манса кайнă.

Ватă мастерĕн чаплă сехечĕ çухални пысăк «ЧП» пулнă, вăл хыпар çур сехетренех колони начальникĕ патне çитнĕ, лешĕ тÿрех: «Зонăри пĕтĕм çĕре кĕреçесемпе чавса тухмалла пулсан та, старик сехетне тупатпăрах!» тесе каланă пулать.

Чăнах та питĕ хытă шыранă вара, пĕтĕм колоние ура çине тăратнă çав кĕмĕл сехетшĕн. Тĕпчемен сын та, шыраман вырăн та хăвăрман. Юлашкинчен сехете тупнă-тупнах, анчах вăл питĕ тискерле пулса тухнă...

...Сехет çухалнă кун, шăпах иккĕмĕш сменăра, мастерскойĕнче Илюксен отделенийĕ ĕçленĕ, савăнпа та воспитательсемпе командирсем чăн малтан вĕсенчен ыйтса тĕпчерĕç. Анчах ответсем пурин те пĕр майлă пулчĕç: нимĕн те курман, асăрхаман, пĕлместĕп... Мишка Лобанран ыйтма тытăнсан, вăл кăшкăрмах тапратрĕ:

— Мĕн шуйттанĕ тума кирлĕ мана сехет! Ăна эпĕ колонире кама та пулин сутас пур-и! Ан та çулăхăр пирĕн çумма, старик ăна хăех ăçта та пулин тăкса хăварнă! Кам пĕлет, тен, ăна вăл уборная кайсан кăларса ÿкернĕ!..

Тĕпченинчен ним усси те пулмарĕ. Ачасем çывăракан пÿлĕмсенче ухтарсан та нимĕн те тупăнмарĕ. Тепĕр ирхине Куприян Иванч ĕçе те тухмарĕ — старик хăйĕн юратнă та хаклă япали çухалнăшăн хуйхăрса чирлесех ÿкнĕ.

Пĕр кун иртрĕ, иккĕ...

— Шырăр, тупăр! — хистерĕç воспитательсем.

— Шутласа пăхăр-ха, кама кÿрентертĕр эсир! Ватă салтакăн боевой наградине вăрларăр вĕт, уншăн сире пурсăра та ĕмĕрлĕх намăс пулать!

Сехет çав-çавах тупăнмарĕ. Куприян Иванч чирлесе выртрĕ.

— Вунçичĕ çул ĕçлерĕм çак колонире, темиçе çĕр ачана слесаре вĕрентсе кăлартăм, мана пурте яланах тав тунă уншăн. Ку тарана çитсе, манăнне никам пĕр пирус вăрламанччĕ, анчах юлашкинчен авă мĕн туса хучĕç...— ÿпкелешрĕ тет вăл, начальник ун патне больницăна пырсан. Кун çинчен ачасене воспитатель каласа пачĕ.

Çак пур кунсенче те Илюк калама çук салху, кĕрхи пĕлĕт тĕслĕ пулса çÿрерĕ. Куприян Иванчĕн çакнашкал хурлăх пулни ăна çав тери кÿрентерчĕ. Шкулта уроксенче ларнă чух та, мастерскойра ĕçленĕ вăхăтра та, каçхине çывăрма выртсан та ватă мастер унăн пуçĕнчен тухма пĕлмерĕ...

«Кам-ши, мĕнле йытă хăтланчĕ-ши куна! Хăшин ирсĕр алли çĕкленчĕ-ши çавăн пек хисеплĕ япалана вăрлама!.. Эх, пĕлесчĕ те... тытса çунтарасчĕ пĕрре, ĕмĕр асăнса пурăнмалла пултăр!..»

Сехет çухалнă хыççăн виççĕмĕш кунĕнче, ушкăнĕпех кинона кайса килнĕ хыççăн, каçхи поверка вăхăтĕнче Илюксем пурăнакан пÿлĕме виçĕ воспитатель пычĕç те, ачасене строя тăратса, вĕсем умĕнчех тепĕр хут ухтарма тытăнчĕç — тумбочкăсене уçса пăхрĕç, çитарсене, матрацсене ÿппĕн-питтĕн çавăрса хыпашларĕç, урай хăмисене унтан та кунтан тытатыта пăхрĕç — хăйпăнса тăмаççĕ-и! Хушăк-çурăксем çук-и!

Вăл кун дежурнăй пулнă Мишка Лобан çав воспитательсем таврашĕнчех явăнса çÿрерĕ, хăй те вĕсене пулăшанçи пулчĕ. Çав хушăрах хăй пĕрмай кăмăлсăр пулнă пек мăкăртатрĕ:

— Кăлăхах шыратăр! Нимĕн те çук пирĕн патра... Пулма та пултараймасть. Вăрланă япалана кам ухмахĕ хăй килĕнче тытса усратăр! Ун пек тăмсай вăрăсем тĕнчере те çук пулĕ!..

Воспитательсем пĕр койка патĕнчен тепĕр койка патне куçса пычĕç. Санчастьрен таврăннă хыççăн вăй илсех çитеймен Мустафа кинона та кайман, койка çинчех выртнă-мĕн те, ăна та тăратса вырăнне тĕрĕслерĕç. Унтан Мишка Лобан койки патне пычĕç.

— Лайăхрах шырăр, тавăрса силлĕр, тен, сирĕн телее, сасартăк ылтăн купи сиксе тухĕ! — тутине чалăштарса, йĕрĕнчĕклĕн кулса илчĕ Мишка.

— Шăлна йĕрсе ан тăр, сансăрах пĕлеççĕ мĕн тумаллине! — хыттăн каласа хучĕ ăна воспитательсенчен пĕри.

Юлашкинчен, вĕсем Илюк койки патне çитрĕç. Хăйĕн вырăнĕ çинчен утиялпа простыньсене сĕвсе илнине, çитарĕпе матрацне хыпашланине Илюк питĕ лăпкăн пăхса тăчĕ, ăна ку нимĕн чухлĕ те пăшăрхантармарĕ. Пурин вырăнĕсене те тĕрĕслеççĕ пулсан, унăнне те тĕрĕслемеллех ĕнтĕ. Анчах унран ним усси те çук вĕт-ха! Илюк Куприян Иванчăн сехетне тытман, тытас та çук. Кам вăрланине пĕлес пулсан, ăна вăл хăй тем туса тăкнă пулĕччĕ.

Пĕлмен çав Илюк нимĕн те!..

Воспитательсенчен пĕри унăн матрацне икĕ аллипе пĕр харăс пусапуса, çитар патĕнчен пуçласа тепĕр вĕçнеллех хыпашласа çитрĕ те сасартăк пат! чарăнса, ыттисем çине пăхрĕ.

— Камăн çĕçĕ пур!

— Мĕн те пулин сисĕнет-им!..— Пĕри çавăнтах кăранташ шĕвĕртмелли пĕчĕк çеç пекĕ кăларса пачĕ. Ку вара Илюк матрацĕн вĕçне çĕвĕ тăрăх чăрт, чăрт тутарчĕ те пĕр аллине шалалла чиксе ячĕ.

Стройри ачасем юпа пек хытса, куçĕсене пĕр мăчлаттармасăр пăхса тăчĕç. Неушлĕ хайхи сехет тупăнчĕ!! Ахальтен касмаççĕ пуль çав... Ку таранччен никам матрацне те сÿтсе пăхмарĕç вĕт-ха, эппин темскер пурах унта!..

Кĕçех виспитатель матрац ăшĕнчен кипке таткипе чĕркенĕ пĕчĕк чăмăркка туртса кăларчĕ те ăна вырăн çине хурса салтма тытăнчĕ. Ачасем, хăйсем стройра тăни çинчен манса кайсах кĕрр утрĕç ун патнелле, тепĕр воспитателĕн вĕсене аллисемпе тĕрте-тĕрте каялла чакарса тăратма тиврĕ.

— Сирĕн ĕç çук унта!..

Кипке таткине салтсан кăвак хут курăнчĕ, хут ăшĕнчен пĕтĕм колони палланă çап-çутă, хулăн та вăрăм вăчăраллă сехет тухрĕ — ватă мастер Куприян Иванч сехечĕ.

— Ну, пулчĕ те пирĕн ĕç, хамăр мĕн шыранине тупрăмăр,— терĕ сехетне туртса кăларнă воспитатель, хăй çывăхĕнчех тăракан Лобан çине пăхса.— А эсĕ «пирĕн патра нимĕн те çук, пулма та пултараймасть», тесе ĕнентерме тăрăшрăн пире...

— Винават,— салтак пекех йăрст! тăсăлса тăчĕ Мишка.— Пирĕн хушăра халĕ те çакнашкал намăса çухатнă вăрăсем пуррине пĕлмен эпĕ!

— Камăн койки пулчĕ-ха ĕнтĕ ку! — ачасем çине пăхса ыйтрĕ воспитатель.

— Манăн! — терĕ те çав самантрах Илюк, стройран икĕ утăм малалла тухса тăчĕ.— Койки манăн, анчах эпĕ ку сехете вăрламан, вăл ман матрац ăшне мĕнле майпа лекнине те пĕлместĕп. Хуть те çакăнтах персе пăрахăр мана! — Вăл хăйне сивчир тытнă пек пĕтĕм кĕлеткипе чĕтрерĕ, унăн шăлĕсем те шăкăртатрĕç, анчах хăй пĕртте хăранă пек курăнмарĕ.

— Кам вăрланă-ха эппин! — ун патнелле пат, пат утса пырса тăрук кăшкăрчĕ Лобан.— Тен, эп пырса чикнĕ вăл сехете сан патна! Э! Ан тун луччă, эпир пит лайăх пĕлетпĕр сана — эсĕ кунта та магазинран пĕр михĕ ылтăн сехет çĕклесе тухма тăнăшăн лекнĕ! Часовщик!— çатăртатма тытăнса кайрĕ вăл.— Хăвна ху актив пек кăтартма хăтланса пурăнатăн —

ударник, отличник, яту хĕрлĕ хăма ҫинче пулнипе сăмсуна каҫăртса ҫӳретĕн, ҫынсене тиркетĕн, анчах та ху чисти сволочь, халĕ акă пĕтĕм отделенине намăс курмалла туса хутăн!

— Эп нимĕн те туман,— терĕ Илюк, шăлĕсене ҫыртса.

— Епле туман! Акă ара, сехетне хăвăн тетрадь хуплашкипех чĕркенĕ-иҫ!— Вăл койка ҫинче выртакан кăвак хута ярса тытрĕ.— Санăн марим ҫак! Кунта «тетрадь по черчению И. Ивукова» тесе ҫырнă!

— Вăл тетрадь манăн тахҫанах ҫухалнă, эсир ăна вăрласа карт тунă, картне хам тупса пурин умĕнчех воспитателе патăм эпĕ.

— А-ав епле иккен! Эс яланах таса, ыттисем кăна айăплă! Ну, ничево,— чышкипе юнаса илчĕ Лобан,— тепĕр пилĕк ҫул ĕҫлесе тупрăн хăвна валли, питĕ лайăх!

— Чарăн, Лобан, ку вăл санăн ĕҫ мар!— хыттăн каласа пӳлчĕ ăна васпитатель.— Кама айăпламаллине сансăрах пĕлĕҫ!— Унтан вăл пурне те команда пачĕ:— Отбой! Халех пурте ҫывăрма выртăр! Виҫ минутран пĕр сасă та ан илтĕнтĕр! Астăвăр, килсе тĕрĕслетĕп...

Паллах, ҫав каҫхине Илюк ҫĕрĕпех ҫывăраймарĕ. Питĕ хытă пăлханчĕ, ниҫта кайса кĕреймерĕ вăл. Ытла та тарăхмалла, тӳсме ҫук кӳренмелле вĕт-ха!.. Пĕтĕм чунтанах йĕркеллĕ пулма, воспитательсене итлесе, чипер вĕренсе, ĕҫлесе пурăнма тăрăшнă тĕртех ҫакăн пек ирсĕр япала сиксе тухрĕ! Кăштах та пулин, пĕр чĕптĕм те пулин айăплă пулсан татахчĕ хуть, атту вĕт нихăш енчен те, нимĕн чухлĕ те айăплă мар-ске вăл! Тытăнасҫĕ ĕнтĕ халь сĕтĕрме. Каллех допрос, каллех следстви... Чунĕ кӳтсе ҫитнипе Илюк утиялпа пуҫĕ ҫинченех хупланчĕ те, ҫав тери хурланса макăрма тапратрĕ.

— Мĕншĕн эпĕ ҫакăн пекех телейсĕр-ха!— шухăшларĕ хăй.— Мĕншĕн пĕтĕм хурлăх ялан ман пуҫ ҫине тиенет! Малашне те кун пекех пулсан, эп нихҫан та ҫын пулса ҫитес ҫук, ĕмĕрне те ыттисем пек телейлĕ пурнăҫпа пурăнса кураймăп...

Ҫав вăхăтра тахăшĕ тула тухса кĕчĕ. Ҫывăхрах ҫын утнине сиссе, Илюк тутине ҫыртса макăрма чарăнчĕ, анчах лешĕ ун тĕлĕнчен мапалла иртсе каймарĕ, чĕрне вĕҫҫĕн пусса Илюк койки патне пычĕ те, йăпăрйăпăр ун утиял хĕррине ҫĕклесе, юнашар кĕрсе выртрĕ.

— Эпĕ ку, Мустафа...

— Мĕн кирлĕ сана!— тĕлĕнчĕ Илюк.

— Хуллен! Пуҫ ҫинчен лайăхрах витĕн,— пăшăлтатрĕ тутар ачи.— Эп сана калама килтĕм...

— Мĕн ҫинчен!

— Эс нимĕн те ан хăра, Илюк. Сана нимĕн те тумаҫҫĕ...

— Ăҫтан пĕлетĕн!

— Эп пĕтĕмпех каласа паратăп...

— Мĕн каласа паратăн, кама!— ăнланмарĕ Илюк.

— Сехете паян сан матрац ăшне Лобан чиксе хучĕ,— хăвăрт-хăвăрт пăшăлтатса калама тытăнчĕ Мустафа.— Мана вăл ним пĕлми ҫывăрать тесе шутларĕ пулмалла, малтан ман тĕлпе темиҫе хут та калле-малле иртсе ҫӳрерĕ, анчах эпĕ пĕтĕмпех курсэ выртăм. Вăл сан матрац вĕҫне ҫăтăр-ҫăтăр ҫурнине те, кĕсйинчен темскер кăларса шалалла чиксе хунине те, ҫĕлесе лартнине те... Унтан вăл сĕтел хушшине ларса темскер ҫырчĕ те пĕр вăхăт таҫта тухса ҫӳрерĕ. Ҫав хушăра эпĕ сан койка патне чупса килсе хыпашласа пăхрăм та пĕтĕмпех ăнлантăм. Унтан каллех хам вырăн ҫине выртса, ҫывăрнă пек турăм... Лобан ăна нимĕн те пĕлмест. Манăн ыран санчаҫа каймалла, ҫавăн чух хамăрăн воспитателе тĕл пулатăп та пĕтĕмпех каласа паратăп... Анчах эп каланине никама та ан шарла эсĕ. Лобан пĕлсен мана тем туса хума пултарать, хăратăп эп унран, ытла та усал вăл. Ăнлантăн-и!

— Ăнлантăм. Тавтапуҫ сана, Мустафа...

— Ну, халь эппин чипер лăпланса ҫывăр. Атту эс макăраттăнччĕ вĕт-ха, эп ҫавна сиссе килтĕм сан патна.

Тутар ачи епле кушакла шăппăн пынă, ҫавăн пекех ним сассăр тăрса кайрĕ. Ку таранччен Илюк ун ҫине питех те ҫаврăнса пăхманччĕ, хутшăнсах кайманччĕ унпа. Пĕвĕпе пĕчĕккĕ, имшеркерех пирки ăна пысăкраххисем час-часах кӳрентеретчĕҫ, пĕррехинче Лобан ăна вăйпах хăй вырăнне урай ҫутарчĕ, тепринче унăн килтен ярса панă посылкинчен пур тутлăрах ҫимĕҫсене те кăларса илсе, ахăра-ахăрах пурне те валеҫсе пачĕ, Мустафа ăна хирĕҫ пĕр сăмах та калама пултараймарĕ... Анчах ачи питĕ лайăхскер иккен. Малашне унпа туслă пулать ĕнтĕ Илюк, ăна кӳрентерме те памасть!

Мустафа пырса кайнă хыҫҫăн Илюк кăмăлĕ тӳрех улшăнчĕ, пăлхани иртрĕ, ăшчикки варкама чарăнчĕ, анчах вăл пурпĕрех ҫывăрса каяймарĕ. Ăна Лобанăн ирсĕрлĕхĕ, вăл ҫав тери намăссăр пулни калама ҫук тарăхтарчĕ.

— Ăҫтан пулма пĕлесҫĕ ҫавăн пек питсĕрсем!— шухăшларĕ вăл.— Кăшкăрать вĕт-ха тата, манах путарса лартасшăн. Анчах мĕн тунă-ха эп ăна! Неушлĕ сав ирсĕр карт колодине тупса воспитателе панăшăнах ҫав тери кураймасть!..

Ҫавăнтах вăл судра Маланипе Артист хăйне мĕнле варалама, темĕн тĕрлĕ суйса лаппа ăшне таптаса лартма тăрăшнине аса илчĕ.

— Вăрăсен йĕрки сапла иккен, кам хăйсенчен уйрăлса тӳрĕ ҫул ҫине тухма пикенет, ăна вĕсем пур майсемпе те пĕтерсе хума тăрăшаҫҫĕ. Анчах халь тин мана никам та тĕрĕс ҫул ҫинчен аяккалла пăрса яраймĕ!

34

Ватă мастер сехечĕшĕн Илюка айăпласси пулмарĕ. Сехете ун патĕнче тупни ҫинчен хыпар сарăлсан, ăна чăнах та Илюк вăрлама пултарнине никамăн та ĕненес килмерĕ. Куприян Иванч хăй те тӳрех каларĕ тет:

— Суя! Ивукова эпĕ питĕ лайăх пĕлсе ҫитрĕм ĕнтĕ — сăпайлă, ăслă ача, ĕҫе вĕренсе сын пулассисинчен ҫеҫ шухăшласа пурăнать. Ман япалана вăл ĕмĕрне те тĕкĕнес ҫук!

Шкулти вĕренӳ пайĕн заведующийĕ Ирина Никитична Илюка уроксем хыҫҫăн хăйĕн пӳлĕмне чĕнсе кĕртсен, ҫав тери хурлăхлă сасăпа ыйтрĕ:

— Чăнах-и вара ку, Илюша! Неушлĕ эсех ҫавăн пек ирсĕр ĕҫ тума пултартăн-ши! Каласа пар мана ним пытармасăр...

— Хуть те ҫакăнтах вырттса вилем, анчах манра ним айăп та ҫук. Сире чунтан хисеплесе, атте ячĕпе тупа туса калатăп,— терĕ Илюк, унăн куҫĕсенчен тӳррĕн пăхса.— Тăхтăр акă, хăвăрах пĕлетĕр...

— Эпĕ ĕненетĕп сана,— пуҫĕпе сулса илчĕ Ирина Никитична.

Мустафа хăйсен воспитательне ҫынсем ҫук ҫĕрте тĕл пулса Лобан дежурнăй пулнă кун мĕн хăтланни ҫинчен каласа парсан вара Илюкран кун пирки ыйтса та тăмарĕҫ. Пĕтĕм айăп Мишка Лобан ҫине тиенчĕ. Малтан вăл шарт та пат тунма хăтланчĕ, ҫухăрчĕ, макăранҫи турĕ, хăйне «ним сăлтавсăр, курайманнипе айăпланăшăн» ҫакăнса вилессипе хăратрĕ, анчах кайран ирĕксĕрех тĕрĕссине каласа памалла пулчĕ унăн,— ăна Мустафа та курнă, тата сехете Илюк матрацĕ ăшне пытарнă хыҫҫăн вăл хăех хут татки ҫине: «Ҫиччĕмĕш отделенине тепре пырса ухтарăр», тесе ҫырнă та почта ещĕкне кайса пăрахнă иккен. Ку хута вăл ҫырнине воспитательсем почерк тăрăх пĕлнĕ. Пĕр эрне пек иртсен, ăна урăх ҫĕре, хытăрах режимлă колоние ямалла турĕҫ. Вăл тухса кайнă чух отделенири ачасенчен нихăшĕ те ăна ырă сунакан пулмарĕ, ытла пурне те тарăхтарса, йăлăхтарса ҫитернĕ ҫав вăл!

Ҫакăн хыҫҫăн вара Илюк пурнăҫĕ йĕркеллех пулса пычĕ. Вăл ĕнтĕ халь тăххăрмĕш класра вĕренчĕ, ачасем ăна хăйсен стена хаҫачĕн редакторĕ турĕҫ, мастерскойĕнче Куприян Иванч ăна колоние ҫĕнĕрен пыракан ачасене ĕҫе вĕрентерме тытăнчĕ — Илюк унăн помощникĕ, хăйне майлă инструктор пулса тăчĕ.

...Колоние килнĕренпе икĕ хĕл иртрĕ, каллех ҫуркунне пулчĕ, пĕтĕм тавралăх ҫемҫе ешĕл тум тăхăнса капăрланчĕ, унтан шăрăх кунсем пуҫланчĕҫ, зонăри нумай клумбăсем ҫинче хĕрлĕ, сарă, кĕрен, кăвак чечексем ҫурăлчĕ — ытармалла мар хитре...

Илюк халь час-часах кил ҫинчен, амăшĕ ҫинчен шухăшларĕ, хушăран ăна темшĕн кӳршĕ хĕрачи, шкулта вĕреннĕ чух унăн ҫывăх тусĕ пулнă Натали аса килчĕ. Амăшĕ патне вăл кашни уйăхрах пĕрер-икшер ҫыру ярса тăчĕ, хăйĕн пурнăҫĕ ăнса пыни ҫинчен пĕлтерчĕ, лăплантарчĕ. Хăй вăл ҫак икĕ ҫул хушшинче чылай тăсăлчĕ, унăн хулпуҫҫийĕсем сарăлчĕҫ, хулĕсем тĕрекленчĕҫ, сăмси айĕнче хура мамăк пек усси палăрса тăракан пулчĕ, сасси те улшăнса хулăнланчĕ — ачана арҫын тĕсĕ кĕрсе пычĕ.

Пĕрмай кипе часрах тавранас ĕмĕтпе пурăнса, пĕчĕк табель-календарь тăрăх колонире пурăнса иртмермелли уйăхсене, кунсене шутласа пыма тытăнчĕ. Часах акă каллех кĕркунне ҫитет, кайран хĕл иртет те ҫулла пулать, унта вара... Шутласан, нумай та мар ĕнтĕ.

Юлашки вăхăтра вăл ирĕклĕ ҫын пекех пурăнчĕ, Куприян Иванч Илюкпа унăн хальхи чи ҫывăх тусне, Мустафана, хăйпе пĕрле темиҫе хутчен те хулана илсе кайрĕ,— унта вĕсем мастерской валли кирлĕ хатĕр-хĕтĕрсем илчĕҫ. Пĕррехинче, май уявĕ умĕн, стена хаҫачĕ валли тĕрлĕ сăрсем туянма хулана пĕчченех ячĕҫ, укҫа та шанса пачĕҫ. Ҫакă вара Илюка питĕ савăнтарчĕ — эппин ăна халь ҫын вырăнне хураҫҫĕ, тин ĕнтĕ вăрă тесе шутламаҫҫĕ!

Ҫапла кунсем, эрнесем шуса иртрĕҫ...

Пĕррехинче, вырсарникун каҫалапа, вуласа тухнă кĕнекесене улăштарма клубалла пынă чух, Илюка Ирина Никитична тĕл пулса чарса тăратрĕ.

— Мĕнле пурăнатăн, Илюша!— яланхи пекех йăвашшăн ыйтрĕ вăл.— Кăмăлсем мĕнле! Килтен ҫырусем илкелетĕн-и!

— Тавтапуҫ, Ирина Никитична, аванах пурăнатăп, кăмăлăм пирки те ӳпкелеместĕп, анчах аннерен ҫыру илменни чылай пулать. Хăратăп-ха, ăнсăртран чирлесе ӳкмен-ши...

— Ну, уншăнах ан хурлан, нимех те пулман пулĕ-ха, тата санăн хăвăн та киле каясси нумай юлмарĕ ĕнтĕ, часах аннӳне хăйне куратăн, вара иксĕр те телейлĕ пулатăр!— Темшĕн-ске, учительница ун ҫине пăхса йăл та йăл кулса илчĕ.

— Э-э,— ним шутламасăрах аллипе сулчĕ Илюк,— кĕтмелĕх пур-ха, тата вуникĕ уйăх та ҫурă пурăнмалла унччен!

— Хăш чух вăхăт питĕ хăвăрт иртет, Илюша... Сиссе те юлаймастăн вăл мĕнле иртсе кайнине. Султалăк та пĕр уйăх пек ҫеҫ туйăнать.

— Анчах тепĕр чухне пĕр эрне те ҫултапăкран вăрăм пулать, Ирина Никитична...

— Тĕрĕс, ун пек те пулать. Пурăнма пĕлмесен... Калăпăр, ҫыннăн ирĕке тухасси тепĕр эрне ҫеҫ юлнă, анчах та вăл ҫав вăхăтра мĕн те пулин туса хурать те...

— Сăмахран, мастерăнне сехет вăрлать-и! — кулса ячĕ Илюк.

— Сехет-и, мĕн-и унта — пурпĕр. Анчах пурăнма пĕлсен вара хăш чух ҫултапăк та эрнерен кĕскерех пулать. Сапла-и!

— Вăл тĕрĕс, ăна пĕлетпĕр эпир, Ирина Никитична...

...Ҫак калаҫăвăн пĕлтерĕшĕ пысăк пулнă, анчах Илюк ҫавна нимĕн чухлĕ те ăнланмарĕ, ку вăл уншăн ахаль калаҫу пек ҫеҫ пулчĕ. Мĕнех вара! Ирина

Никитична хӑйӗн вӗренекенӗсем мӗнлерех пурӑннипе яланах интересленет, вӗсене пур чухне те хавхалантарать, кӑмӑлӗсене ҫӗклет. Халӗ те вӑл тӗрӗс каларӗ — Илюкӑн срокӗ чӑнах та ытлашши нумаях юлман ӗнтӗ, виҫӗ пайран иккӗшне пурӑнса ирттернӗ, часах вӗҫӗ курӑнма пуҫлать, унтан вӑл амӑшӗ патне таврӑнать те, вӗсем тек нихҫан та уйрӑлмаҫҫӗ, яланлӑхах, ӗмӗрлӗхех пӗрле пулаҫҫӗ!

Анчах Ирина Никитична урӑххи ҫинчен систернӗ-мӗн...

Ик-виҫ кунтанах колонире пите вӑрттӑн хыпар сарӑлчӗ:

— Часах пирӗн пата облаҫри суд коллегийӗ килсе, хӑшпӗрисене срокчен ирӗке кӑлармалла, тет...

Ҫакна илтсен, Илюк тӳрех хӑй вырсарникун каҫхине Ирина Никитичнӑпа калаҫнине аса илчӗ. Ара,ҫавӑн пирки вӑлтса каларӗ пулӗ-ҫке вӑл! «Часах аннӳне хӑйне куратӑн...» Кунта килекен суд камӑн-камӑн ӗҫӗсене пӑхса тухассине пӗлетех ӗнтӗ вӑл, мӗншӗн тесен унӑн упӑшки — колони начальникӗ, хӑй — шкулти завуч... Вӗсем хӑйсем суйласа палӑртаҫҫӗ вӗт-ха колониренсрокчен кӑлармалли ачасене, хӑйсем ыйтаҫҫӗ вӗсене кӑларма! Кам пӗлет, тен вӗсем унӑн ӗҫне те пӑхса тухмалла тунӑ!.. Илюк колоние килнӗренпех тӑрӑшса вӗренет, иртӗнмест, мастерскойӗнче те аван ӗҫлесе пырать... Мӗншӗн пӑхса тухма пултараймаҫҫӗ-ха унӑн ӗҫне! Пур енчен илсен те пултараҫҫӗ!

Ҫак шухӑш Илюк пуҫне пӑта пек кӗрсе ларчӗ те пӗр канӑҫ та памарӗ вара, апат та анми пулчӗ унӑн, ҫывӑрма выртсан та ыйхи килмерӗ. Кӑшт тӗлӗрсе кайсанах, ӑна тӑван килӗ, амӑшӗ, кӳршӗ хӗрӗ Натали курӑнчӗ, унпа вӗсем е шкулта пӗр партта ҫинче лараҫҫӗ пек, е колхоз садӗнче хӑйсем лартнӑ ҫырла йывӑҫҫисене пӑхса ҫӳреҫҫӗ, е каҫхине урамра пулаҫҫӗ... Ҫакӑн пек телейлӗ тӗлӗксем курнӑ вӑхӑтра тӑрук вӑранса, хӑй пӗртте килте мар, колонирех пулнине тавҫӑрса илсен, тахҫанччене кӳренсе выртрӗ вӑл.

Ӑна пӗртен-пӗр ыйту асаплантарчӗ: унӑн ӗҫне ҫӗнӗрен пӑхса тухма параҫҫӗ-ши, ҫук-ши! Темиҫе хутчен те вӑл, ним ҫине пӑхмасӑрах, кун пирки Ирина Никитичнӑран ыйтса пӗлме шутларӗ. Пырас та, тӳрех калас:

— Эсир пӗтӗмпех пӗлетӗр! Тархасшӑн ан асаплантарӑр, каласа парӑр тӗрӗссипе, текех тӳссе пурӑнма вӑйӑм юлмарӗ манӑн...

Темшӗн-ҫке, ҫавӑн пек тума хӑюлӑх ҫитеймерӗ унӑн. Ирина Никитична хӑй ун ҫинчен урӑх пӗрре те сӑмах хускатмарӗ, ҫавӑнпа та Илюк иккӗленме те пуҫларӗ:

— Пустуй калаҫу пулчӗ пуль ку... Никам та килмест, нимӗнле ӗҫсене те пӑхса тухма шутламасть. Тӳсес пулать ӗнтӗ приговорти срок туличчен!

Анчах та вӑл йӑнӑшнӑ. Эрне те иртмерӗ — облаҫри судран пычӗҫ те, колонири пуҫлӑхсем хатӗрлесе хунӑ ӗҫсене пӑхса тухса, ултӑ воспитанникне срокӗсем ҫитиччен килӗсене яма йышӑнчӗҫ. Питӗ хӑвӑрт тата пӗртте малтанхи пек пулмарӗ ку суд. Ачасене халь айӑпламарӗҫ, вӗсем тунӑ преступленисем ҫинчен сӑмах майӗн калана пек ҫеҫ асӑнса илчӗҫ, унтан ырлама, мухтама тытӑнчӗҫ, малашне вӗсем тӗрӗс пурнӑҫпа пурӑнасса, тӳрӗ кӑмӑллӑ, таса чунлӑ совет гражданӗсем пуласса шанма май пурри ҫинчен калаҫрӗҫ. Колони начальникӗ каланӑ хыҫҫӑн воспитательсене сӑмах пачӗҫ, юлашкинчен завуч Ирина Никитична ку ачасем шкулта мӗнле тӑрӑшса вӗренни ҫинчен пӗлтерчӗ.

Ытти сен ӗҫӗсене пӑхса тухнӑ чух та Илюк питӗ хытӑ пӑлханчӗ, сӑмах хӑйӗн ҫинчен пуҫлансан вара ун айӗнчи пукан ҫине кӑвар хунӑ пекех ларчӗ. Урӑхла пулма та пултарайман ҫав! Облаҫри судран килнисем халь унӑн шӑпине татса панӑ вӗт-ха: паянтан пуҫласа Илюкӑн ирӗклӗ ҫын пулса киле таврӑнмалла-и е тата тепӗр ҫулталӑк — вуникӗ уйӑх, виҫҫӗр утмӑл пилӗк кун!— ҫакӑнтах тунсӑхласа пурӑнмалла!!

— Икӗ ҫул хушшинче колонири йӗркесене пӗртте пӑсманнине, шкулта лайӑх вӗреннине, хӑй тӑрӑшнипе квалификациллӗ рабочи пулса тӑнине шута илсе, колониренпӗр ҫулталӑк малтан кӑлармалла тӑвас...

Хӑйӗн пирки ҫапла ҫырнине вуласа парсан, Илюкӑн тӑрукках куҫҫулӗ тухса кайрӗ. Анчах та ку ӗнтӗ хурланнипе мар, нисӑта кайса кӗрейми савӑннипе пулнӑ.

Ирӗке кӑлармалла тунисене ҫав кунах пӗтӗм колонири воспитанниксен стройӗ умӗнче саламларӗҫ, малашне йӗркеллӗ пурӑнма, телейлӗ ҫынсем пулма сунчӗҫ, вӗсем хӑйсем те хавасланса туха-туха каларӗҫ, ирӗке кӑларнӑшӑн тав туса, ӳлӗмрен чи примерлӑ ҫынсем пулма сӑмах пачӗҫ, унтан вӗсене кирлӗ хутсем, укҫа пачӗҫ те, каҫалапа ҫывӑхри станцине машинӑпах леҫсе, билетсем илсе поезд ҫине лартсах ячӗҫ. Илюксӑр пуҫне, ҫав телейлӗ ачасем хушшинче Мустафа та пулнӑ, вӑл та килне, ватӑ кукамӑшӗ патне таврӑннӑ...

Ҫапла вӗҫленчӗ Илюкӑн колонири пурнӑҫӗ.

Поезд тапранса кайсан та вӑл, вагон чӳречи умӗнче тӑрса, чылайччен колони еннелле пӑхса пычӗ. Ӑна унти тирпейлӗ ҫурт-йӗрсем, шавлӑ пурнӑҫ, хӑйне нумай ырӑ тунӑ Ирина Никитична, Куприян Иванч аса килчӗҫ. Вӗсене вӑл тек нихҫан та курас ҫук ӗнтӗ, анчах манма та пултарас ҫук...

Ирхине Илюкпа пӗрле пыракан ачасем пӗрин хыҫҫӑн тепри ана-ана юлчӗҫ,— вӗсем ку енчисем пулнӑ. Чӑн юлашкинчен, пӗр пысӑках мар станцинче, Мустафа анчӗ. Илюкпа вӗсем питӗ ӑшшӑн тӑвансем пекех сывпуллашрӗҫ, ӳлӗмрен ҫырусем ҫырса тӑма пӗр-пӗрне килти адресӗсене пачӗҫ.

— Ан ман, Мустафа! Ҫы-ыр!..— кӑшкӑрчӗ Илюк, поезд тапраннӑ хыҫҫӑн картлашка ҫинчен аллипе сулса.

— Сывӑ пу-ул! Телейлӗ ҫи-ит!— ыр сунчӗ ӑна тутар ачи.

Унпа сывпуллашнипе вара Илюк колониренпӗтӗмпех уйрӑлса ситрӗ. Шел те пулчӗ пӗртак...

...Ҫав станцире Илюксен вагонӗ пушансах юлчӗ, пассажирсем пурте тенӗ пекех тухса пӗтрӗҫ. Анчах ларасса иккӗн ҫеҫ ларчӗҫ — вӑтӑр-вӑтӑрпилӗксене ҫитнӗ икӗ арсын: пӗри хура та лутрарах, шатра питлӗ, хӗсӗкрех куҫлӑскер; тепри вӑрӑм та сарӑ, ҫамкин сылтӑм енче пысӑк ҫӗвӗк палӑрса тӑрать. Иккӗшӗ те кивӗрех тумсемпе, хулпуҫҫисенчен кутамккасем ҫакса янӑ.

Вагон коридорӗ тӑрӑх унталла-кунталла пӑхса утса пынӑ май вӗсем Илюк ларакан купе пушах пулнине курчӗҫ те, тӳрех унталла пӑрӑнса кӗчӗҫ.

— Никам та ҫук-и кунта!— ыйтрӗ сӑрли.

— Эп анчах,— терӗ Илюк.

— Шикарно!— Шатра питли хутаҫне вӗҫертсе ҫӳлти сентре ҫинелле ывӑтрӗ те лак! ларчӗ.

— Кун пек экспреспа эпӗ тӗнче хӗррине ҫитиех кайма хатӗр,— терӗ ҫӗвӗк ҫамкалли. Унтан тӑрук Илюк еннелле ҫаврӑнса ыйтрӗ:— Инҫе каятӑн-и, пацан!

Илюк хӑйӗн мӗнле станцине ҫитмеллине каларӗ.

— О, пирӗн пекех эппин! Попутчик! Ху ӑҫтисем вара эс!

Илюк каллех тӗрӗссине каласа пачӗ.

— Ха, земляк иккен, хамӑр ял! Питӗ аван, кайма веҫҫолӑрах пулать пире. Анчах ӑҫтан килетӗн-ха эс кун пек! Эпир хамӑр, сӑмахран каласан, курортран таврӑнатпӑр...

Илюк кӑна хирӗҫ тӑруках ним калама аптрарӗ. Ҫыннисем ӑна тӳрех, пӗрре пӑхсанах кӑмӑла каймарӗҫ, хӑй ҫав тери курайман Матроспа Артиста аса илтерчӗҫ. Хӑйсене ытла та «ирӗклӗ» тыткалаҫҫӗ, калаҫнисем те килӗшӳсӗр, темле йӗрӗнмелле. Вырнаҫса ларнӑ-ларманах вӗсем ҫур литр ӗҫрӗҫ те, вара тата ытларах паллӑ пулчӗ — иккӗшӗ те ырӑ ҫынсем мар. Каярахпа шатра питли хӑех каласа пачӗ:

— Лагерьтен таврӑнатпӑр эпир, шӑллам. Халь ӗнтӗ хамӑра валли телейлӗ пурнӑҫ шырас тетпӗр. Моряксен юрринчи пек: паян кунта, ыран лере. Ирӗкри кайӑк нихҫан та пӗр вырӑнта лармасть, яланах вӗҫет вӑл...

Ҫак икӗ вӑйпитти арҫын мӗнлерех этемсем пулнине чухласа илсен, Илюкӑн вӗсемпе калаҫас та, хутшӑнас та килмерӗ. «Урӑх ҫӗре куҫса ларас пулать, кусемпе пӗрле татах тем курма пулӗ...»— шикленерех шухӑшларӗ вӑл. Ҫавӑн пиркиех Илюк хӑй ӑҫтан килни ҫинчен те каламарӗ, Свердловскран, пичче патӗнчен таврӑнатӑп, тесе суйрӗ, анчах тепӗр станцине ҫитсен вагона халӑх пит нумай кӗрсе тулчӗ те, унӑн ҫак куперех юлма тиврӗ. «Калаҫмастӑп вӗсемпе, ӗҫӗ те пӗтрӗ!»— терӗ вара хӑйне хӑй.

Ҫапах та Илюк хӑй ӑҫтан килнине пытарса ҫитереймерӗ. Вагон тӑрӑх ҫимеллисем сутса ҫӳрекен лоточницӑран илнӗ икӗ пӗчӗк кукӑльшӑн укҫа тӳлеме тӑрсан, Илюкӑн хӑй тунӑ блокночӗ хушшине хӗстернӗ пӗр хут урайне тухрӗ-ӳкрӗ. Илюкран малтан ҫав хута шатра питли пӗшкӗнсе илме ӗлкӗрчӗ те, тӳрех уҫса пӑхрӗ. Ку шӑпах Илюка колониренсрокчен кӑларни ҫинчен калакан хут пулнӑ...

— Ши-и!— шӑхӑрса илчӗ шатра питли.— А-ав мӗн иккен! Ав еплерех пиччу патӗнчен таврӑнатӑн эсӗ!..

Илюк ҫав хута часрах туртса илме аллине тӑсрӗ, анчах лешӗ памарӗ, ҫӗвӗк ҫамкаллӑ тусне тыттарчӗ:

— Кур-ха эсӗ, еплерех кайӑк вӑл! Улталаса пырать-ха тата! Ах, тусӑм, савнӑ тус... Камран пытанатӑн! Хамӑр ҫынсем вӗт эпир!— Вӑл Илюка хулпуҫҫинчен ҫапса илчӗ.

— Саккунлӑ!— терӗ ҫӗвӗкли, вуласа тухнӑ хута Илюка тавӑрса парса.— Кӑштах пурнӑҫ академинче пулса куртӑн эппин! Аван, питӗ аван ку... Чӑнах та, малтанхи хут йывӑртарах пек туйӑнать унта, анчах кайран хӑнӑхатӑн! Хуть тӗрме, хуть тӑван кил,— пӗр пекех туйӑнать.

— Эп унта тек нихҫан та пулмастӑп!— терӗ Илюк ҫирӗппӗн, хӑй выранне ларса.

— Ну, мӗнле калас вӗт! Халь эс ҫамрӑк-ха, унта кая-кая канмалӑх вӑхӑт пур санӑн. Пӗр вунӑ хут та кайса килме пултаратӑн!— Ҫӗвӗклӗ ҫын саралнӑ шултра шӑлӗсене йӗрсе тӑкӑскӑ сасӑпа кулса ячӗ.

— Пӗрре те каймастӑп!— куҫӗсене ҫутӑлтарса, тата ҫирӗпреххӗн татса хучӗ Илюк.

— Ан шӑрчӑклан, шӑллӑм!..

Илюк ҫакӑн хыҫҫӑн чӳрече еннелле ҫаврӑнса ларчӗ те, вӗсемпе нумайччен сӑмах хушмасӑр пычӗ. Ҫав тери ҫилӗ килсе кайрӗ унӑн. Ҫак пӳтсӗрсем ӑна чӑнах та преступник, пӗтнӗ ҫын тесе шутлаҫҫӗ иккен, тата тӗрмене лекессипе йӗкӗлтеҫҫӗ. «Ӑҫтан мурӗнчен сиксе тухаҫҫӗ ман тӗле ҫакнашкал ҫӗлен-калтасем! Куҫӑм ан куртӑрччӗ, хӑлхам ан илтӗрччӗ вӗсене!»— тарӑхса пычӗ вӑл.

Анчах ҫапах та хӑпма пулмарӗ вӗсенчен. Пӗр ҫӗрелле кайма тӳр килнипе, вӗсем поезд ҫинчен те Илюкпа пӗрлех анчӗҫ, чугун ҫул станцинчен Атӑл хӗррине ҫитиччен те пӗр ҫич-сакӑр километр пӗрле пычӗҫ. Ҫуран утнӑ чух, никам ҫук ҫӗрте, вӑрӑсем (кун пирки Илюк халӗ ним чухлӗ те иккӗленмерӗ) ун умӗнче ним пытармасӑр, намӑса пӗлмесӗр темӗн те пӗр лӑпӑртатса пынипе тӳсме ҫук йӗрӗнтерсе, кӑмӑла пӑтратса, хӑлхана йӳҫӗхтерсе ҫитерчӗҫ. Ҫавӑн чухнех Илюк вӗсенчен пӗрине «Шатри», теприне «Чалӑшши» тесе чӗннине пӗлчӗ. Пӑрахут ҫине ларсан вара вӗсем тӳрех ӗҫсе супса асар та писер шавлама, ҫынсемпе тавлашма тытӑнчӗҫ, капитан помощникӗ пырса хыттӑн асӑрхаттарсан тин кӑштах лӑпланнӑ пек пулчӗҫ те йывӑр ыйхӑпа ҫывӑрса кайрӗҫ. Вӗсене пӗртте курас килмен, вӗсемпе пӗрле пулас килменнипех Илюк палуба ҫине тухса тӑчӗ...

35

...Нумай тӑчӗ вӑл унта. Каҫхи нӳрӗрех сывлӑш, ту енчен вӗрекен варкӑш ҫил унӑн пӗтӗм чунне уҫса ячӗ, лӑплантарчӗ, ӑна халь сывлама та ҫӑмӑл пулчӗ, малтан ывӑннӑ пек туйӑнни те, ҫывӑрас килни те иртсе кайрӗ. Тикӗт тӗслӗ курӑнакан шыва хӑватлӑ кӑкрипе ҫурса, ӑна ик еннелле сирпӗнтерсе, пӑрахут пӗр майлӑн малалла шурӗ, аналла васкакан вӑйлӑ буксирсемпе вӑрӑм самоходкӑсем ӑна саламланӑ пек кӑшкӑртса иртрӗҫ, унта та кунта бакен ҫутисем куҫ хӗснӗ пек мӗлтлетрӗҫ... Ҫӗрле те илемлӗ ҫав пирӗн аслӑ Атӑл, тӗттӗмре те унӑн хӑватне пӗтӗм чун-чӗрепе туятӑн! Ахальтен мар ӑна пирӗн халӑх ҫӗршер юрӑ сӑвӑра мухтанӑ.

Илюка халь ӗнтӗ киле ситнӗ пекех туйӑнчӗ. Кашни минутрах, пӑрахут винчисем кашни ҫаврӑнмассеренех кил ҫывхарса пырать вӗт-ха. Кил, никамран хаклӑ амӑшӗ, тӑван ялӗ, ҫуралса ӳснӗ ҫӗршыв...

Ой, мӗн тери пысӑк савӑнӑҫ ку, мӗнешкел телей! Унӑн пӗтӗм пурнӑҫӗ ҫӗнӗрен пуҫланнӑ пек пулать. Ку таранччен мӗн пулни пӗтӗмпех иртсе кайнӑ, ӑна манмалла кӑна, пур ирсӗр ӗҫсемпе хурлӑха аса илни чӗрене ыраттарать кӑна вӑл! Илюк чунӗ таса, хӑй пурнӑҫӗнче текех вӑл йӑнӑшсем тӑвас ҫук ӗнтӗ.

— Пӗтӗмпех хӑвӑртан, сирӗн ӑсӑртан, лайӑхпа усала уйӑрса илме пӗлнинчен килет,— терӗ колони начальникӗ, Илюксем юлашки хут строй умӗнче тӑнӑ чух.

ПУЛТАРУЛЛĂ БРИГАДИР

Цехсенче хĕрӳ ĕç пырать. Канашри вакунсем юсакан заводри рабочисем коммунистсен партийĕн XXII-мĕш съездне хатĕрленеççĕ, вĕсем октябрĕн 17-мĕшĕ тĕлне вунă уйăхри плана ирттерсе тултарассишĕн тăрăшаççĕ. Çак пархатарлă ĕçре Василий Сергеевич Дементьев та пысăк вырăн йышăнать.

Василий Сергеевич заводри газосварщиксен бригадине ертсе пырать. Пĕлтĕр Дементьев ертсе пыракан бригада коммунизмла ĕç бригадин ятне илессишĕн ăмăртăва хутшăннăччĕ. Бригада членĕсем пурте икшер ĕçе вĕренме сăмах татнăччĕ.

Нумаях пулмасть газосварщиксен бригадине çак чыслă ята пачĕç ĕнтĕ. Василий Сергеевич чылай çамрăксене газосварщик ĕçне вĕрентнĕ. Ĕçре вăл яланах малта пырать, хай пĕлӳлĕхне те пĕрмай ӳстерсе пырать. Халĕ вăл партин XXII-мĕш съезчĕ тĕлне çулталăк планне тултарассишĕн ăмăртăва хутшăнчĕ.

П. ЕФРЕМОВ тунă сăнӳкерчĕк.

— Астăвăр, телейлĕ пурăнас текен çын нихçан та киревсĕр ĕçсем тумасть, хăй ĕçлемесĕр, урăххисен шучĕпе пурăнмасть, хăйĕн телейне вăл пĕтĕм халăхпа пĕр кăмăллă пулса, чун-чĕререн тăрăшса ĕçлесе тупать. Пирĕн пурнăçра çакăнтан тĕрĕс çул урăх çук, çавăнпа та эсир яланах çав çулпа пырăр...— Питĕ ĕнентерӳллĕ каларĕ начальник, ун сăмахĕсем халĕ те Илюк хăлхинче янраса тăраççĕ, вĕсене вăл ĕмĕрне те манмĕ... Нихçан та!

Пăрахут малаллах, малаллах шăвать, Илюк пĕрмай Атăл тăрăх тăвалла, хăйĕн килĕ еннелле пăхать. Акă ĕнтĕ Сĕнтĕрвăрри. Кунтан Шупашкара çитме инçе те мар. Илюк ку хулара пулман, анчах икĕ çул каялла, хăйсене колоние илсе кайнă чух, ăна аванах курса юлнăччĕ. Хитре хула. Анчах та... шăп çак хулара ĕнтĕ леш çăмăлттай «капăр каччӑсем»— суд вăхăтĕнче вилсе кайнă хĕрарăм-профессор ывăлĕ Жора, унăн вĕçкĕн тусĕсем Макспа Сержик хулиганла ĕçсем тунăшăн вунпилĕкшер талăк ларса тухнă. Ăçта-ши халь вĕсем! Ларасĕ-ши, е Илюк пекех срокчен тухма пултарнă! Çук пуль, вĕсем çынсем пек тăрăшса ĕçлемелли, тӳрленме тăрăшмаллискерсем мар. Тепĕр тесен, Илюка вĕсем мĕн тума кирлĕ!..

Сĕнтĕрвăрринче нумай пассажирсем пăрахут çинчен анса юлчĕç, ларакансем те сахал мар пулчĕç. Вĕсем хушшинче Илюк пĕр вунă-вунпилĕк арçын ача самолет моделĕсем çĕклесе кĕнине асăрхарĕ. Хăшĕсем хĕрлĕ, хăшĕсем сенкер, шурă, кăвак...

— Шупашкара каяççĕ пуль-ха кусем,— шухăшларĕ те Илюк, ялти шкулта вĕреннĕ чух хăй те çавнашкал модель туса районти ăмăртура пулнине аса илчĕ. Вара унăн халĕ те çак ачасемпе пĕрле пулас килсе кайрĕ...

Пăрахут каллех тапранса кайсан, хырăмĕ выçнине туйса, Илюк палуба çинчен шала кĕчĕ. «Туссенчен» пĕри, «Чалăшши» тени, вăраннă иккен те, пирус мăкăрлантарса ларать. Илюка курсан, вăл тӳрех:

— Ăçта çухалса çӳретĕн!— тесе ыйтрĕ хăйăлтатакан сасăпа.

— Кунта питĕ пăчă та, тулта уçăлса тăтăм,— терĕ Илюк.

— Асту, пацан, пĕли-пĕлми таçта кĕрсе ан кай тата кунта,— сассине пусарарах асăрхаттарчĕ лешĕ,— паçăр пирĕн документсене тĕрĕсленĕ хыççăн пире «çеклĕсем» сăнаса пыма пултараççĕ. Рас анчах лекме пулать, киле те çитсе кураймăн...

Илюк чĕри яштах турĕ. Çак этем ăна чăнахах та вăрă тесе шутлать иккен! Пăрахут çинче вăрлама кирлĕ марри çинчен асăрхаттарать!.. Илюк хăйĕн уçма тăнă чăматанне каллех сак пуçне лартрĕ те пыр патне тăрук капланса пынă чăмăрккана аран çăтса ячĕ, унăн çурăм тирĕ те çӳçенсе илчĕ.

— Йăнăшатăн эсĕ, пичче!— терĕ вăл унтан.— Мана ун пек ăс пани — пачах та усăсăр, мĕншĕн тесен эпĕ вăрă мар, никама та çаратма шутламастăп!

— Ну, ку юрра эсĕ кама та пулин урăххине юрласа пар, ачам, манах улталаймăн,— ал сулчĕ Чалăшши,— сана хăш статьяпа суд тунине вуларăм эпĕ.

— Вăл ниме те пĕлтермест-ха!

— Ан лăпăртат! Пирĕн пĕтĕм пурнăç уголовнăй кодекс статьинчен килет, çав пĕтерет те пирĕн пек ăмăрткайăксене! Эсĕ вăрă пулнă, анчах лерен епле те пулсан хăвăртрах чакаланса тухас тесе хытă тăрăшнă курăнать. Пур ун пеккисем, хам та пĕррехинче «актив» пулсах тухнăччĕ, анчах кайран...

— Мĕн — кайран!

— Суртăм.

— Анчах эпĕ сурма шутламастăп.

— Мĕн, «тĕвĕлесе лартас» терĕн-им!

— Манăн «тĕвĕлемелли» те нимĕн те çук. Эп таса çын. Халĕ эпĕ хам хуть те мĕнле вăрра та тытса пама пултаратăп, мĕншĕн тесен кураймастăп вĕсене, тӳсме пултараймастăп.

Чалăшши тăрук куçĕсене хĕсрĕ те Илюк çине тăй-й... пăхрĕ.

— О-о, питĕ меллĕ çаварса янă-çке вĕсем санăн пуçна! Каласма та питĕ хитре вĕрентнĕ. Анчах пĕлетĕн-и, шăрчăк чĕппи, кун пек сăмахсемшĕн çĕçĕ çине пырса тăрăнма та пулать, э! Çавăнтан шикленме шут çук-и санăн! Кала-ха!

— Çук. Хăрамастăп. Колоние те эпĕ пĕрисенчен хăраса пурăннипех лекрĕм. Анчах урăх пулмасть ун пекки.

— Маттур, маттур...— пуçне пăркаласа илчĕ Чалăшши.

— Маттур пулас тетĕп çав малашне!

— Э, пит лайăх юлатăн та, пацан, ăçта пырса ларăн-ши эсĕ!

— Ку вара сирĕн хуйхă мар. Хамăнне хам пĕлетĕп.— Илюк каллех чăматанне тытса уçрĕ те çиме пуçларĕ. Чалăшши тек нимĕн те каламарĕ, вырăнтан тăрса буфет еннелле утрĕ.

Шăп хĕвел тухнă вăхăтра «Комсомолец» Шупашкара çитрĕ. Çĕрĕпе чăлкăм куç хупман Илюк çӳлĕ сăрт çинче тăван хулан пысăк çурчĕсем, заводсен тĕтĕмпе сывлакан мăн трубисем курăнма пуçласанах чăматанне çĕклерĕ те малалла, пăрахут çинчен тухмалли уçă вырăн патнелле, иртрĕ. Унта вара хăма карлăк çумне ларчĕ те çыран çинчен пĕрре куç илмесĕр пăхса пычĕ. Шупашкар патне çитесле пăрахут çыран çуммипе пырать, çавăнпа та Илюка унта мĕн пурри пĕтĕмпех питĕ уççăн курăнать. Пăхса пынă май ăна сак вырăнсенче икĕ çул каялла мĕн-мĕн пулса иртнисем аса килсе, çĕнĕрен куç умне тухса тăчĕç.

Акă «Рыбацкая слобода» — сăрт çумне кăмпасем пек çыпăçса ларнă çуртсем, унта Илюксем артистка хватттерне çаратнă касçхине утрав çинчен тавăрăнсан икĕ талăк пытанса пурăннăччĕ; акă лапам вырăнта тутăхнă тимĕр тĕслĕ çинçешке чиркӳ курăнать — пĕр пӳтсĕр ача Ирина Никитична чăматанне вăрласа тарма тăнă ирхине Илюк çав ырă хĕрарăма çак чиркӳпе тĕлме-тĕл çурта ăсатнăччĕ. Авă, пристань патĕнче темле тавар куписем палăраççĕ, Илюк унта çывăрнăчĕ, çавăнтах леш ирсĕр Малание паллашнă. Çакăнтан пуçланса кайрĕ те ĕнтĕ пĕтĕм хурлăх...

Илюка темле аван мар пулса кайрĕ, унăн пырĕ типе пуçларĕ, чĕри йĕркесĕр тапма тытăнчĕ. Асилӳсем ăна тăрук пăлхатса ячĕç.

«Хулара нимĕн чухлĕ те тытăнса тăрас мар, тӳрех пĕр-пĕр машина тупас та — часрах килелле вĕçтерес...»

Пăрахут вăрăммăн кăшкăртса ячĕ, ирхи таса та уçĕ сывлăшра унăн вăйлă сасси таçта çитиех хутлăн-хутлăн янраса кайрĕ. Чупса пынă матрос уçă вырăна пухăннă çынсене каялла чактарчĕ, хăй пристань çине канат вĕçне ывăтса пама хатĕрленсе тăчĕ. Илюка ик енчен те хĕстерсе лартрĕç, питĕ кансĕр пулчĕ, анчах вăл çаплах пристань çинелле пăхрĕ. Кĕçех унăн куçĕсем умне пысăк кăвак сапаллисемпе: «Шупашкар — Чебоксары» тесе çырни тухса тăчĕ. Илюк хăй мĕн пĕчĕкренпех юратнă çав сăмаха сасăпах вуларĕ:

— Шу-паш-кар...

Вăл ĕнтĕ кĕçех çырана тухма ĕмĕтленсе, чăматан хăлăпне çирĕпрех тытрĕ, тепĕр аллипе кĕсйери билетне хыпашласа тупрĕ. Çав вăхăтра хыçалти çынсенчен тахăшĕ ăна сасартăк хулпуççинчен çăтăрр! тытса пăчăртарĕ. Илюк вăшт кăна çаврăнса пăхрĕ те леш «туссене», Шатрипе Чалăшшине курах кайрĕ. Иккĕшĕ те ун çине мухмăрпа шыçса тухнă куçĕсемпе çисе ярас пек пăхса тăраççĕ.

— Эсĕ мĕн вара, юлташсене ним систермесĕрех тухса таратăн!— ыйтрĕ Шатри.

— Никамран та тармастăп эпĕ, çитес çĕре çитрĕм те — анатăп,— терĕ Илюк.

— Уйрăлнă ятпа санăн пире пĕрер лампадка та пулин ĕçтерсе хăвармаллаччĕ хуть,— хăйăлтатса илчĕ Чалăшши.

— Манăн урăх укçа та çук, автобуспа кайма та çитмест пулĕ-ха,— терĕ те ăна хирĕç Илюк, пристань çинелле тухма пуçланă çынсем хыççăн пĕчĕккĕн утма тытăнчĕ. Анчах Шатрипе Чалăшши те унран юлмарĕç. Вĕсем билетсене Ильинкăна çити илнине пĕлсе, Илюк утнă çĕртех каялла çаврăнса, кăмăлсăр пулнă пек ыйтрĕ:

— Эсир те кунтах анатăр-и мĕн!

— Çук, саншăн çеç тухатпăр,— терĕ Шатри.— Çывăх тусăмăра еппе ăсатса ямастăн-ха! Пирĕн пекех хурлăх курнă çын, килессе те пĕрле килтĕмĕр...

«Ĕçесшĕн кусем манран. Ним тусан та пĕр пус та кăлармастăп! Тупăннă «туссем»!— çилĕпе шухăшларĕ Илюк.

Анчах лешсен çав ĕмĕт кăна пулман. Çырана тухсан вĕсем Илюка чарса тăратрĕç те малтан чăнах та хăйсене «асăнмалăх хăна туса хăварма» ыйтрĕç. Ыйтрĕç кăна та мар, хушрĕç, темелле. Илюк хăйĕн укçа çукки çине ярсан, Шатри ал сулчĕ, «ĕçес тесен пирĕн хамăрăн та пур», терĕ те, сасартăк кĕсйинчен хут таткипе кăранташ кăларса, унăн килти адресне ыйтрĕ.

— Мĕн тума кирлĕ вăл сире!— тĕлĕнчĕ Илюк.

— Так, ахалех,— куçхарши айĕн пăхрĕ Шатри.— Пĕлме çук, кирлĕ кунта кирлĕ те пулма пултарать. Вырăссем калашле, çĕр тенкĕ ан пултăр та — çĕр тус пултăр. Тепĕр чух, çула май, кĕрсе выртмалла та пулĕ тен...

— Праçниксенче пĕр-пĕрин патне саламлă çырусем яни те питĕ аван йăла,— куларах хушса хучĕ Чалăшши.

Кун пек çынсене адрессем пани мĕне пĕлтернине Илюк халĕ питĕ лайăх пĕлнĕ. Вĕсем ăна епле те пулсан «хăйсен çынни», кирлĕ чух вĕсене пулăшакан «тус» тăвасшăн, урăхла каласан — хăйсен танатине лектересшĕн, ирсĕрсем! Тĕрмерен хăтăлнă-хăтăлманах тем çинчен ĕмĕтленеççĕ. Паллах, ырри çинчен мар...

— Манăн нимĕнле адрес та çук сире валли! Килте те пулмастăп эпĕ, ан та шанăр ман çине! Ан та çыпăçăр!— терĕ Илюк хыттăн, çав тери çилĕ тулса килнипе.— Манран усси пулмасть сире!

Çавăнтах варт! çаврăнчĕ те тăвалла, хуланалла утрĕ. Анчах темиçе утăмранах ăна Шатри хуса çитрĕ те шăл витĕр чашкăрса илчĕ:

— Ну, асту, анчăк çури! Асăнăн-ха эсĕ паянхи юратуллă калаçăва, тĕл пулăпăр-ха эпир санпа!..— Вăл фуфайкин аркине уçрĕ те шалти кĕсйинчен çĕçĕ вĕçне кăларса кăтартрĕ.— Сан юнупа çăватăпах çакна... хăçан та пулин!

Илюк хашкама ерчĕ, унăн сăмса çунаттисем сиккелеме тытăнчĕç, шăлĕсем хăйсемех шăтăртатса илчĕç.

— Пăрăн ман çул çинчен, бандюга! Ав, милиционер анать, халех çавăттарса яратăп!..

Шатри нимĕн те калаймарĕ, Илюка юлашки хут куçĕсемпе çунтарса илчĕ те пристань еннелле утрĕ. Илюк ун çине çаврăнса та пăхмарĕ...

(Малалли пулать.)

Вĕсем Мускава çĕнетеççĕ

«Мускав! Мускав! яхравĕнче мĕн чухлĕ
Телей тенийĕ вырăс чĕринче...»

тесе çырнă Александр Сергеевич Пушкин. Çук, Мускав паян вырăс çыннишĕн çеç мар. Тăван çĕршыври вуншар тĕрлĕ халăхшăн хаклă, тăван. Мускав урамĕсемпе иртсе пыратăн-и е музейсемпе театрсене каятăн, ватă та мăнаçлă Кремле кĕретĕн-и е çутă метрора ярăнатăн — кирек ăçта та тĕрлĕ чĕлхепе калаçнине илтетĕн. Час-часах тăван чăваш чĕлхи те илтĕнсе каять...

Ӳсет, саралать, çĕнелет Тăван Мускавăмăр. Пĕр уйăх каялла кăна айвăç çуртсем ларнă вырăнта шлакпа бетон блокĕнчен тунă пилĕк-ултă хутлă çурт ӳссе ларнă. Пĕр уйăх хушшинче!

Çакăн пек чаплă çуртсем тăвакансем хушшинче чăваш хĕрĕсем çинчен тахçанах ырă ят çӳрет. Чăваш каччисемпе хĕрĕсем Ломоносов ячĕпе хисепленекен университета тума пуçласанах Мускава килнĕ. Унтан кĕçех вунă çул çитет. Мĕн чухлĕ çурт çĕклемен пулĕ вĕсен алли.

Илемлĕ çуркуннехи Мускав... Йывăçсем ешĕрсе илемленеççĕ, чӳрече умĕнче вара чечексем çуралаççĕ. Çакнашкал илемлĕ кунсенчен пĕринче эпир Пĕрремĕш Академически урама пырса тухрăмăр. Сасартăк чăваш юрри хăлхана пырса кĕчĕ:

Хула тăрăх çӳресе кунларăм,
Эп килентĕм ун илемĕпе.
Маншăн вăл телейлĕ ĕмĕт пек.
Куç тулли сăнарĕшĕн каларăм:
Ах, Мускавăм, савнă ман
Мускавăм...

— Илтрĕн-и, сăмахсене улăштарма та ĕлкĕрнĕ,— терĕ ман юлташ кулкаласа.

Тепĕр икĕ минутран эпир çурт подъездĕнче чарăнтăмăр. Ку строительсен общежитийĕ пулчĕ.

— Чăвашсем? — терĕ тĕллĕнтĕллĕн кăвак çӳçлĕ хĕрарăм комендант.— Кунта вĕсем çирĕмĕн ытла пурăнаççĕ. Тагачкăри общежитисенче те, Черĕмушкăра та пур. Атьăр, кĕрсе курăр, вĕсем сире хавас пулĕç.

Тăватă чӳречеллĕ, урам еннелле тухакан балконлă çутă пӳлĕмре таса та хăтлă. Стена çумĕнче хаклă кавирсем. Тăватă хĕр валли тăватă гардероб. Кунта чăвашсем пурăннине тĕрленĕ-чĕнтĕрленĕ алшăллисем, пĕчĕк кавирсем сăмахсăрах пĕлтереççĕ.

— Хывăнăр, хывăнăр... Иртсе ларăр, хăна пулăр,— тараватă кĕтсе илчĕç вĕсем пире.

Паллашрăмăр. Хура куçлă, пĕчĕкрех пит-куçлă Шура Ефимова Тăвай районĕнчи Йалтăрчă ялĕнчен иккен. Мускава вăл 1955 çулта килнĕ. Мĕнле специальность пултăр вунçичĕ çулхи хĕрачан? Кунта, Мускавра, вăл штукатурщица ĕçне вĕреннĕ. Хĕрачан пултарулăх аллисем Аспирантсен общежитийĕн, Гэохими институчĕн тата ытти нумай паллă та чаплă çуртсене штукатурласа якатнă.

— Шура, хăвăртрах хатĕрлен, ахаллĕн кая юлатпăр,—çав хушăрах сиксе тăчĕ çинçе пилĕклĕ, хуп-хура куçлă хĕрача. Вăл Рая Хураськина пулчĕ. Рая Элĕк районĕнчи Çулавăç ялĕнче çуралса ӳснĕ. Мускавра çиччĕмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ. Рая ăста каменщица.

— Хураçкина çинчен «Московский комсомолец» хаçатра та çырса кăларнăччĕ,— çаплах паллаштарчĕ пире Шура.

— Ан мухта-ха, куçăхтаран тата,— шӳтлемесĕр чĕтаймарĕ Рая.

Иртнĕ хĕлте Рая наукăсен Академийĕн больницине тунă çĕрте ĕçленĕ, халь вăл физикăпа химии институчĕн лабораторине тăвать.

— Чернушка, Белка, Стрелка йытăсем валли çурт тăватпăр... Гагарин пек тĕнче уçлăхне вĕçме пулаймĕ те, çапах та эпир те çак ĕçе хутшăнатпăр,— йăшшăн калаçать вăл.

— Халь тата ăçта васкатăр-ха? — пĕлесшĕн пултăмăр эпир.

— Пысăк театра.

— Паян мĕн унта?

— «Кармен» тахçанах итлесшĕнччĕ те çав, вăхăт çукки кансĕрлет.

— Кĕçех чăваш ансамблĕ килмелле теççĕ, чăнах-и?

Çав вăхăтра алăка шаккарĕç.

— Катя! Сана çыру пур, илĕр!

Екатерина Андреевна Вăрнар районĕнчи Чиркуллĕ Кăкшăмран. Вăл Мускавра саккăрмĕш çул пурăнать. Кунта киличчен вăл тăван колхозĕнче пăрусем пăхса пурăннă, кайрантарах дояркăра ĕçленĕ.

— Колхозĕ юлса пыратчĕ, ĕçкунĕ йӳнĕччĕ. Халь пирĕн янташсем те малалла талпăнаççĕ. Сталин ячĕпе хисепленекен колхоз çинчен илтнĕ-и? Ия. Александр Сергеевич Сергеев председатель ĕçне тытăннăранпа Кăкшăмсем ура çине тăчĕç,— савăнса пĕлтерет Катя. Вăл хăйĕн колхозне халь те манман иккен, унăн канши çитĕнĕвĕшĕн чунранах савăнать, унпа мăнаçланать.

Хĕрсем тăван республикăна манмаççĕ. «Ялав» журнала тата «Çамрăк коммунист» хаçата та çырăнса илеççĕ.

Катя Андреева — бетонщица. Унăн биографийĕ уйрăмах пуян. Вăл ИНИОС, физикăпа химии, кристаллографи тата геологи институчĕсене тунă çĕрте ĕçленĕ. Вĕсен бригадине коммунизмла ĕç бригади ятне пани çулталăк та иртрĕ.

Катя ĕçлекен бетонщиксен бригадирĕ Матвей Васильевич Квасов пире çапла пĕлтерчĕ:

— Хĕр мар вăл, вут-çулăм. Эпир Мускавĕпех чапа тухнă Барышев бетонщиксен бригадипе ăмăртатпăр. Январьпе февраль уйăхĕсенче пирĕн бригада мала тухрĕ.

Çак пӳлĕмрех бетономешалка çинче моторист пулса ĕçлекен Мария Борисовна пурăнать. Вăл Канаш районĕнчи Ушанар ялĕнчен килнĕ. Унăн биографийĕнче «Украина» гостиница. Кам курса савăнмасть пуль çав 32 хутлă чаплă кермене? Анчах кам шутлатăр-ха çавăнта чăваш хĕрачи ĕçленĕ тесе?

— Эсир пирĕн çинчен мар, чапа тухнă чăваш строительсем çинчен çырăр,— сĕнчĕç хĕрсем.— Валерий Блинов çинчен çырăр. Вăл выставка тунă çĕрте ĕçлет... чаплă экскаваторщик.

— Николай Фадеева та манса ан хăварăр. Вăл каменщиксен бригадирĕ. Коммунизмла ĕç бригадине ертсе пырать. Кăçал стройтехникумран заочно вĕренсе тухать.

— Вĕсен тата пĕрремĕш ача çуралнă...

Çук, пурин çинчен те каласа пĕтерейĕмĕн. Ахалех хĕрсем сăпайланаççĕ. Вĕсем чăннипех мухтава тивĕçлĕ. Пурте ĕçре маттур, пурте культура университетĕнче вĕренеççĕ. Пурте ташăпа хор кружокне çӳреççĕ. Шура Ефимова, Рая Хураськина, Катя Андреева ăста ташлаççĕ. ăста юрлаççĕ. Чăвашсенчен йĕркеленĕ хор кружокĕ фестиваль вăхăтĕнче хамăр çĕршыв çыннисем умĕнче çеç мар, ют çĕршывсенчен килнĕ хăнасем умĕнче те хăйĕн ятне ямарĕ.

Эпир хĕрсен ĕç укçи çинчен те (уйăхра 90—110 тенкĕрен кая мар ĕçлесе илеççĕ вĕсем), вĕсем республикăпа мĕнле çыхăну тытни çинчен те çырмăпăр. Вĕсемпе ĕçре телей, пурнăçра ырлăхпа сывлăх сунса сывпуллашрăмăр.

Мускавра татах çĕнĕрен те çĕнĕ çуртсем ӳссе ларĕç. Унта чăваш çыннин тӳпи те пур. Çак мар-и тата телей, чăваш ачи сассине парасса Çеçпĕл ĕмĕтленнĕ таса ĕмĕт!

Василий ВИКТОРОВ,
Анатолий ЕМЕЛЬЯНОВ.

Вулакансен шухăш-кăмăлĕ

«...Тĕрĕссипе каласан, миçе çын вулани палла мар, вĕсем питĕ нумайăн, вĕсене шутласа та каларас çук. «Ялав» журнал Çĕпĕрти чăвашсен чи çывăх тусĕ пулса тăчĕ, ана пурте саваççĕ»,— тесе çырать Кемерово облаçĕнчи А. С. Софронов шахтер «Ялав» журналпа унăн библиотекине вулакансен анкетинче. «Ялав» журнал редакцине анкетăсем нумай-нумай çĕртен килеççĕ. Журнала вулакансен шухăшĕ-кăмăлĕсем, пурин те тенĕ пекех А. С. Софронов шухăш-кăмăлĕпе пĕр пек килсе тухаççĕ. «Ялав» журнал халăх хушшине, уйрăмманах юлашки çулсенче, ытларах та ытларах саралнă, вулакансен хисепĕ ÿссех пынă журнал тиражĕ пысăкланса пынинчен те питĕ аван курăнса тăрать. Халĕ ĕнтĕ ăна хамăрăн тăван республикăра пурăнакан чăвашсем кăна мар, чăваш çĕршывĕ тулашĕнче пурăнакан чăвашсем те юратса вулаççĕ. Журнал кăмăла кайни çинчен Узбекистанри Самаркандра тир заводĕнче ĕçлекен А. Н. Наумов, Бухара облаçĕнчи Н. П. Мартынова, Красноярск крайĕнчи совхозра ĕçлекен рабочи М. Е. Антонов, Алтай крайĕнчи совхоз агрономĕ А. Н. Ятманов, Сахалин облаçĕнчи совхоз платникĕ Н. А. Петров, Магнитогорскри бетонщиксем М. М. Ивановăпа Е. С. Горшкова, Омск облаçĕнчи совхоз рабочийĕ А. П. Давыдов, Тюмень облаçĕнчи ялти библиотекарь Д. И. Сершов, Иркутск облаçĕнче ĕçлекен М. Ф. Мощков, Пермь облаçĕнчи почтальон В. М. Арсентьева, Чита облаçĕнче ĕçлекен Г. С. Волкова тата ытти çынсем те нумайăн çырса пĕлтереççĕ. Асăннă юлташсенчен нумайăшĕ çыравĕсене хăйсен ячĕпе çеç мар, «Ялав» журнала юратса вулакансен ячĕпе çыраççĕ. Тутар, Пушкарт республикисенче пурăнакан чăвашсем мĕн чухлĕ çыраççĕ тата. Хамăрăн тăван республикăри районсенчен килнĕ анкетăсем мĕн чухлĕ!

Ку, паллах, журнала вулакансен хисепĕ ÿснĕçем ÿссе пынине çеç мар, «Ялав» журнал пĕтĕм Совет çĕршывĕпе саралнине кăна та мар, пирĕн çĕршыври халăхан культури тата çÿлĕрех пусăма çĕкленнине те, чăваш литературин идейăпа художествăллă содержанийĕ пуянлансах пынине те калама çук уççăн кăтартса парать.

Мĕн-мĕн çинчен çыраççĕха пирĕн вулакансем «Ялав» журнал редакцине ярса панă анкетăсенче? «Паянхи пурнăç çинчен çырнă произведенисем кăмăла каяççĕ». «Паянхи хастар ĕçченсем çинчен, маяксем çинчен ытларах çырма ыйтас килет». Малта пыракан колхозсем çинчен ытларах çырăр»; «Ĕç геройĕсем çинчен нумайрах çырасчĕ». «Паллă çынсем çинчен çырăр». «Пирĕн вăхăтри геройсене кăтартса пама ыйтатпăр». «Романсемпе повĕçсем ытларах пичетлĕр». «Пьесăсем ытларах вулас-чĕ». «Çĕнĕ юрăсем çырăр». Çакăн пек ыйтса çырнисене кашни анкетăра тенĕ пекех курма пулать. Асăннă сенÿсене эпир И. И. Кайгузин (Казах ССР-ĕ), А. Н. Ятманов (Алтай крайĕнчи совхоз агрономĕ), А. И. Белов (Сентервăрри р-нĕ), Н. А. Петров (Сахалин облаçĕ), Г. П. Петров (Совет çаре), Г. Ф. Федоров (Çĕмĕрле районĕнчи «Красный Октябрь» колхоз), Д. И. Сершов (Тюмень облаçĕ), С. П. Осипова (Пушкарт республики), Н. А. Сымова (Патăрьел районĕнчи «Россия» колхоз) ярса пана анкетăсенчен илсе кăтартрамăр. Нимĕн те калаймăн, ыра сĕнÿсем. Коммунизм тăвакан халăх пирĕн произведенисенче паянхи ĕç паттăрĕсен санарĕсене курасшăн. Коммунизмшăн пыракан кĕрешÿре ырăпа хăюлăхсене паттăрăн çĕнтерме вĕрентекен, ĕçре хавхалантаракан произведенисем кĕтет вăл. Паянхи пурнăçа, паянхи геройсене пысăк ăсталăхпа санласа кăтартакан произведенисем вулакансене ытларах интереслентереççĕ — çакна пит аван курăнса тăрать эпир пахса тухнă анкетăсенче. Вулакан пиренпен паянхи пурнăç çинчен çырнă романсемпе повĕçсем, калавсемпе очерксем, пьесăсем, сăвăсемпе юрăсем ытларах ыйтать. «Ялав» журнал редакцийĕ, паллах ĕнтĕ, малашне те, яланхи пекех, вулакансен ĕметне тивĕçтерес пирки ĕçлесе пырĕ. Çак пархатарлă ĕçе вал чăваш писателĕсемпе поэчĕсене, драматургĕсене, композиторсене халиччен хинчен те хастарлăнрах хутшăнма чĕнет. Паянхи пурнăç теми чăваш литературинче пуç пулса тăрасса шанать вăл. Çавăнпа та писательсемпе поэтсенчен, драматургсенчен чи малтан паянхи пурнăç çинчен, паянхи геройсем çинчен çырнă произведенисем ытларах кĕтет. «Ялав» журнал страницисем çинче паянхи пурнăç таппи уççăн сиссе тăтар, тăван республикăри коммунизм тăвакан паттăрсен санарĕсем илемлĕтĕр унăн страницисене.

Вулакансем хăйсем ярса пана анкетăсенче «Ялав» журналта 1960 çулта пичетленсе тухнă произведенисенчен хăшĕ ытларах кăмăла кайни çинчен те, хăшĕ килĕшсех кайманни çинчен те çырса пĕлтереççĕ. Пуринчен ытла Леонид Агаковăн халĕ те пичетленсе пĕтеймен «Юманлăхра çапла пулнă» повĕçĕ кăмăла кайни çинчен çыракансем нумай. Ку повĕçе ырăпа аса илмен анкета çукпа пĕрех темелле. Ку ĕнтĕ пирĕн вулакансем приключенилле жанрпа çырнă произведенисене кăмăлланине пĕлтерет пулмалла. Çапах та ку повесть пирки анкетăсенче ырласа çырнине вулакансен пăт татса калани шухăшĕ тесе калама иртерех пулĕ-ха, мĕншĕн тесен произведение пĕтĕмĕшпе вуласа тухмасăр унăн идейăпа художествăллă пахалăхĕ çинчен татăклă сăмах калама йывăртарах, калама майĕ те çук. Кунта тата çакна та шута илмелле тÿр килет пулĕ, ырласа çыраканнисем хушшинче ку повĕçе килĕштерсех кайманни çинчен те пĕлтерекенсем те тĕл пулкалаççĕ. Сăмахран, Пушкăрт республикинчи Пишпулек районĕнчен ярса панă анкетăра М. М. Саватнеев юлташ повесть кăмăла кайни çинчен çырнă хушăрах хăй кăштах иккĕленни çинчен те пĕлтерет. «Хăшпĕр тĕлсенче вăрăсене вĕрентсе çырать», тет вăл. Хамăр республикăри Патăрьел районĕнче вырăс чĕлхине вĕрентекен учитель Г. П. Васильевăн шухăшĕ çапларах тата: «Унăн Артистпа Матросĕ писателĕн тĕлĕнмелле пултаруллă сăрĕпе сăрланса çуралнă. Çавăнпа та вĕсен хăрушла ĕçĕсем чылай çĕрте паттăрлăхпа пĕркенеççĕ. Çав элхăтрах милици органĕсенче ĕçлекенсен пĕр чĕрĕ, аса юлакан сăнĕ те вулакан чĕринче юлаймасть. Агаков хăйĕн повĕçне ачасем валли çырма тăрăшнă пулас, анчах вĕсене тĕрĕс воспитани пама кирлине маннă пулмалла. Ачасем хăранисĕр пуçне хăй тĕллĕн нимĕнле решени те тупма пултараймăн Илюк пек мар. Матроспа Артист пек пулма килĕшесси суккăр çынна та курăнмалла пек туйăнать...» тет вăл. Тавлашма иртерех. «Юманлăхра çапла пулнă» повесть пĕтĕмĕшпех пичетленсе пĕтсен ку ыйтăва пирĕн илемлĕ литература критики татса парасса шанăпăр.

Анкетăсенче ырăпа асăннă произведенисен хисепĕнче Мĕтри Кипекĕн «Кайăк тусĕ» романĕ, В. Алагерăн «Çул юппинче» повĕçĕ, Ю. Скворцовăн «Талпас Ваççа», К. Пайрашăн «Хĕрарăм чĕри», А. Алган «Лира» калавĕсем, Н. Терентьевăн «Куккук çаплах авăтать» трагедийĕ, А. Аслутăн «Çĕнелнĕ çĕр, çĕнĕ çынсем» очеркĕ, А. Лазаревăн «Улини», Прохор Трофимовăн «Панфиловец» повĕçне ырăпа асăннисем те час-час тĕл пулаççĕ.

«П. Львов калавĕсемпе А. Клементьев произведенийĕсене вулас килет», тесе çырать Етĕрнере ĕçлекен В. Н. Сидоров слесарь.

Г. Харлампьевăн «Илемлĕ ир» повесть сыпăкĕ кăмăла кайни çинчен çырса пĕлтерекеннисем чылай. Стихвăн Шавлы поэтпа В. Давыдов-Анатри поэт пĕр-пĕрин патне уçă çыру ярса «çапăçни» вулакансен кăмăлне каймăн.

Ырлаканнисен сăмахне те, тиркесе çыраканнисен сăмахне те шута илмелле ĕнтĕ журнал редакцийĕн. Çапла тăвăпăр та, çав хушăрах «Ялав» журнал редакцийĕ вулакансен анкетисенче ырăпа асăннă произведенисем пирки илемлĕ литература критикин татăклă сăмахне кĕтет, литературăри тавлашуллă ыйтусене татса парасси, литературăн аила хирĕнче вулакана тĕрĕс çул кăтартса пырасси сирĕн ĕç вăл, хисеплĕ критиксем, çавăнпа та сăмах сире паратпăр.

ЮРИЙ ГЕРАСИМЕНКО САВВИСЕМ

(Украина сăваçĕ)

***

ИР СĔМĔ чатăрне карать-и —
Пире куç хĕснĕн инçетрен
Çĕршывăн уçлăхри карапĕ
Çут çăлтăр пек вĕçсе иртсен,
Çĕклетĕп пуç,
Пĕрле хам кайнăн.
Эп çеç хĕртеп-и чĕрене? —
Пĕрин асне килет Украйнă,
Чăваш çĕршывĕ — теприне.
Нумай юлман, кĕçех...
Илсе çĕр
Пĕрле пĕр ывăç хамăрпа,
Планетăсем патне, туссемĕр,
Тытатпăр хамăр карапа.
Таçти тем айлăмсен кĕл сийлĕ
Уçсассăн тĕксĕм чаршавне
Пĕри Украйнăна асилĕ,
Тепри Чăваш çĕрне-шывне.
Асилĕве пĕрле илмесĕр
Çул тытнă çын — телей
курмасть.
Çав çын ялан тăван кĕтессĕр,
Вăл чĕрĕ чух та пурăнмасть!

Чăваш турри хаяр вăл,
киремет.
Çук çын тесен —
Питех çак турă шелсĕр,
Пуян çынна кăна сăвап кÿрет.
Аш тулнă пек
Мишша ларать сыламăш,
Вăл юратмасть
Пуç устаран юрра.
Итле, хайлать ак урăх кĕвĕ
амăш:
Çут ир,
Хир анĕ
Çиçĕнет унра.
Тулта Çĕн Кун акийĕн йăлтăр
ирĕ.
Революцин хĕм ялавĕ пек
Çунса тăрать вăл.
Пурнăç çулĕ ирĕк,
Чăваш çĕршывĕ хурлăх курмĕ
тек.
Поэт чĕри
Хĕрÿллĕн хăватланчĕ.
Пуçлать вăл юрă,
Çĕнĕрен çĕнни.
Хĕрет вутра çуралнă хурçă
шанчăк —
Телейлĕ эс,
Ĕçчен чăваш çынни.
Иртет кун-çул...
Каллех пÿртре ир-ирĕн
Кĕрет-çке тĕтĕм, хăпарту
шăрши.
Тула пăхан — Чернигов
çеçенхирĕ,
Куçпа виçми ун анлăшĕ-
тăршши.
Илтет-çке Çеçпĕл.
Украина хĕрĕ
Юрлать, хурланнăн, çутă
ирхине...

УКРАЙНĂРА ВĂЛ ПУРĂННĂ

Çеçпĕл Мишшине асăнса

УКРАЙНĂРА вăл пурăннă.
Вăл савнă
Хĕвел пек
Пирĕн халăх юррине.
Юрăççене итле-итле хумханнă.
Унтан вара
Пуçланă хайĕнне.
...Хирте,
Инçе мăн Аталтан
Ун килĕ.
Çĕрле тип курăк шăршипе
килен
Ирпе тăрсан —
Йÿç тĕтĕм чунна илĕ...
Юрлать хурланнă амăшĕ
Хуллен.
Юрлать вăл шăппăн,
Хурлăхĕ виçесĕр —

...Украйнăра вăл пурăннă,
Вăл савнă
Хĕвел пек
Пирĕн халăх юррине.

Алексей ВОРОБЬЕВ
куçарнă.

БИЧУРИН

Аслă ученăй-востоковед Никита Яковлевич Бичурин çинчен çырнă историлле-биографилле киносценари

Виктор РОМАНОВ

Ир. Бичурин çывăрть-ха. Ытлашши сас-чӳ тăвасран шикленсе, хуллен кăштăртатса çӳрекен Иван алла карçин илчĕ те картишне тухрĕ. Çĕр айĕнчен шăтса тухнă пекех, ун умне Василий пырса тăчĕ.

— Иакинф атте çывăрать-и-ха?

— Çывăрать. Çĕрле автансем авăтиччченех çырса ларать те-ха... Патшалăх служби çăмăлах мар пулас çав.

— Ан суй! Иртнĕ çĕр вăл хăнара пулнă.

— Эп пĕлместĕп.

— Эпĕ пĕлетĕп.

Власий Ивана кĕтесселле çавăтса кайрĕ.

— Эсĕ ухмаха персе ан тăр. Эпĕ пĕтĕмпех пĕлетĕп. Иакинф атте каллех путсĕрсен танатине çакланать ак. Эпĕ сана хушса калатăп: ăçта, кампа пулать вăл, кам килсе çӳрет ун патне, мĕн калаçассĕ-юмахлассĕ, йăлтах сăна, пĕл, илт. Вара мана кала-кала парăн. Ăнланатăн-и?

— Мĕн ăнланмалла марри пултăр унта... Ăнлантăм ара...

— Суйма ан шутла: каçару пулмĕ. Лайăх ĕçлесен, парне илĕн— пысăк парне.

— Камран?

— Çӳлти аттемĕр турăран! Ак сататăк.

Власий Ивана укçа парать.

Бичурин урайне Китай карттине сарса пăрахнă та ун çине темле паллăсем ӳкерет. Хĕрсе ĕçлекенскер, вăл Иван кĕрсе тăнине те сисмерĕ. Лешĕ те, Никитăна асăрхамăш пулса, карттă урлах чӳрече патнелле утса кайрĕ.

— Ăçта эс? Курмастăн-им, кунта карттă.

— Мĕншĕн ун, карттă пулсан, урайĕнче выртмалла? Вырăнĕ ун шкапра.

— Мĕн эс? Ытлашши персе лартрăн-им?

Бичурина тек итлемесĕр Иван чӳрече янаххи çине пырса чавсаланать те картишнелле тинкерсе пăхать.

— Тăрать...

— Мĕн анăрашатăн? Кам тăрать?

— Власий...

— Тьфу! Хăратса пăрахрĕ. Шуйттан патне ăна, тăтăр-иç. Пирĕн нимĕн ĕç те çук унта.

— Пирĕн çук-ха, унăн вăт, унăн пур. Асăрхаттартăм вĕт эп сире... Асăрхаттартăм.

Сасартăк Иван чĕркуçленсе ларать те, ун аллинчен Власий панă укçа тухса ӳкет.

— Айăплă мар эпĕ сан умăнта... Нимĕн чухлĕ те айăплă мар... Явăла сутăнтарасшăн мана Власий. Ман чунăма ак çак укçапа туянасшăн...

Бичурин тăрать те пӳлĕм тавра утса çаврăнать.

— Çитĕ. Эс ăна, Власие, мĕн калас килет, çавна кала. Хăрамастăп эпĕ унран... Хăрамастăп!

Каç. Лаврăна Пушкин пынă. Тĕп хапхаран кĕнĕ чух вăл Власипе куçа-куçăнах тĕл пулать. Лешĕ поэта çийĕнчех палласа илет те, пуç тайса ирттерсе ярса, ун хыççăн йăпшăнса утать. Малти пӳлĕмре кăмака умĕнче Иван кăштăртататчĕ. Александр Сергеевича курсан вăл кăмăлсăррăн ӳсĕрсе илчĕ.

— Иакинф килтех-и?

— Ăçта пултăр тата вăл çак вăхăтра... Паллах, килте, ĕçлет.

— Кĕрсе пĕлтер.

Пушкин кĕрĕк хывнă хушăра Иван Бичурин ĕçлесе ларакан пӳлĕме кĕрет.

— Сирĕн пата, Иакинф атте, хăна килчĕ.

— Кам?

— Леш поэт ара, чикан тĕслĕскер.

— Пушкин?

— Шăпах çавă.

Бичурин сĕтел хушшинчен вăр-вар пуçтарăнса тухать те малти пӳлĕме ыткăнать.

— Тавах турра! Савăнтартăр старике, эпĕ сире курмасăр тунсăхлама пуçланăччĕ. Иртĕр кунталла. Иван, сĕтел çине пуçтар-ха, ром пама ан манса кай тата.

Александр Сергеевич, Бичуринăн ĕç пӳлĕмне кĕнĕ май, шӳтлет:

— Тӳсĕмлĕх пысăк сирĕн. Паянхи пек паллă кун та ĕçлесе ларатăр. Эпĕ вăй çитерейрес çук. Тĕрĕс, сиртен вĕренмелли сахалах мар, Никита Яковлевич. Сире капла чĕннĕшĕн çиленместĕр пулĕ те?

— Хм... Манах манран пурпĕрех пулаймарĕ.

— Вăрттăн япала мар пулсан, калăр-ха: мĕншĕн манаха тухнă эсир?

— Ырă чунлă Александр Сергеевич государь, манах тумĕпе çеç эпĕ, ахаль чăваш çынни, ученăй пулма пултартăм.

— Ах, çапла,.. çапла... Намăс ĕнтĕ, пирĕн Раççей империйĕнче вак халăх çынни хисепре мар...

Сĕтел çине ĕçме-çиме пырса лартнă Иван урама тухать. Чӳрече çумне йăпшăнса тăнă Власие асăрхать те вăл, хăй те пытанса, ăна сăнама тытăнать. Бичурин — Пушкинпа вĕсем пĕрер черкке ром пушатнă ĕнтĕ— шкаф патне пырса, унти кĕнекесенчен пĕрне илет.

— Ку сире.

Пушкин кĕнеке хуплашки çине çырнине вулать:

«Ырă чунлă ман Александр Сергеевич Пушкин государе, чун-чĕререн хисеплесе, автортан. 1826 çулхи апрелĕн 16-мĕшĕ. Куçаракан Иакинф Бичурин».

— Ирĕк парсамăр сире ыталама хаклă парнешĕн. Эпĕ те парăмра юлмăп. Кĕçех Пугачев пăлхавĕн Историне парăп, хак парăр вара ăна.

— Кăвакарчăнăм! Çине тăрсах ĕçлĕр-ха эсир ку тĕлĕшпе. Емелька тĕлĕнмелле çын пулнă. Тĕпĕ-йĕрĕпе çырса кăтартăр, пулас ăрусем манмĕç сире. Раççей яланах пăлхавçăсемпе пуян пулнă, анчах вĕсенчен чи пултарулли — Пугачев. Хăйшĕн мар вăл вилĕме хирĕç пĕр шиксĕр утнă.

— Ырă Кюхля, Рылеев, Пестель е Николай Бестужев хăйсем çинчен шухăшланă-и вара? Вĕсемпе пĕрле пулайманшăн эпĕ питĕ ӳкĕнетĕп. Пулăшаймарăм эп вĕсене.

Сехет ултă хутчен çапать. Пушкин пукан çинчен сиксе тăрать те хыпалансах пуçтарăнма тытăнтаь.

— Паян Эрмитражра Тальони ташлать. О! Эсир курасчĕ çав балеринăна! Пĕрре курсах юратса пăрахмалласкер...

— Юратса пăрахма ватă ĕнтĕ эп. Пырса курма тесен... пырса курма юрать.

— Апла атьăр.

— Юрамасть манаха.

— Э-э! Сурăр манахсем çине. Ложăра хамăр çынсем кăна пулаççĕ. Эх, балерини мĕнешкел!

— Илĕртме ăста эсир, Александр Сергеевич.

— Пĕлетĕп-çке-ха, эсир нимĕнле чиркӳ йĕркине те пăхăнмастăр... Килте кĕтетĕп, пĕрле кайăпăр.

Пушкин сывпуллашмасăрах хăвăрт тухса каять. Шăнса кӳтнĕ Власий ĕнтĕ хăй патневаскать. Иван кельăна таврăнать. Бичурин тем шухăша путнă.

— Мĕншĕн тĕксĕм эсир, пачăшкă?

— Ăнланатăн-и, Ваня, Китайран таврăннăранпа эпĕ пĕрре те театрта пулман.

— Тупнă калаçмалли — киятăр... Мĕн тума кирлĕ вăл сире?

— Ан пакăлтат-ха кирлĕ мара. Паян кайса курас мар-ши тесе шухăшлатăп эпĕ.

— Ай-яй-яй, турăран хăрăр. Чиркӳ мĕн калĕ.

— Чиркӳрисем сиссе те юлаймĕç. Эс луччăк кай-ха, пĕр-пĕр ахаль тум тупса кил ман валли.

— Ăçтан тупăп-ха эпĕ ăна?

— Ăна ху пĕл. Туян хăть. Асту, сюртукĕ аванскер пултăр, купца сюртукĕ пек. Хапха умĕнче карета тăтăр. Кĕтсе ларма вăхăт çук ман.

Театрта. Зал тулли куракан Тальони ташăçа тăвăллăн алă çупса саламлать. Ложăра Крылов хыçĕнче Бичурин ларать. Манах тумне улăштарнăскере, ăна палласа илме те хĕн. Хăй балерина çинчен куç илмесĕр Тимковскипе пăшăлтатса калаçать:

— Тĕрĕс вĕт, китаянка пекех чипер ку Тальони.

Иван кельăра, пӳлĕмсенчи çутта сӳнтерсе, çывăрма выртма хатĕрленнĕччĕ ĕнтĕ, сасартăк ун патне алăка шаккамасăрах Власий кĕрсе тăрать. Иван ним тума пĕлмест. Ун аллинчи çунакан çурта урайне ӳкет— сӳнмест. Власий çуртана Ивана илсе парать.

— Хм! Хăраса ӳкрĕн апла? Çапла-а, манран пурте хăраççĕ. Иакинф ăçта?

— Кам пĕлет ăна. Департаментран темле писарь килчĕ. Хăвăртрах хатĕрлен, терĕ... Ыран валли государь умĕнче вулама темле хутсем васкасах хатĕрлемелле-мĕн.

— Суймастăн-и? Ак ман хĕресе чуптуса турра асăн.

— Эпĕ, Власий атте, кĕлтунă ĕнтĕ, халех çывăрма выртатăп.

Власий Никитăн диван çине пăрахнă манах тумне асăрхать. Иван çакна сиссе илет те тума хыпалансах шкапа пуçтарса хурать.

— Эпир Иакинф атте валли çĕнĕ тум туянтăмăр, çавна тăхăнса кайрĕ-ха вăл.

— Турра асăнса ĕнентер.

— Светуй атте, эпир суйма пĕлместпĕр.

Иван, хăюллăн пуççапса илсе, хĕресе чуптăвать. Ĕнтĕ чунне лăплантарнă Власий кельăран тухать. Иван, турăш умне чĕркуçленсе ларса, каллех хĕрес хывать:

— Атте турă, эсĕ йăлтах куратăн, çылăха кĕме ан пар. Çывăх çынна сыхласа суйнишĕн каçар мана. Хĕрес чуптунă чух эпĕ «чур!» терĕм. Тасал, шуйттан, тасал!

Пушкин килĕнче. Ĕç пӳлĕмĕ. Диван çинче Бичурин Пушкина тăнласа ларать.

Куда б не вздумали, готов за вами я
Повсюду следовать, надменной убегая
К подножию ль стены недвижного Китая.

Бичурин:

— Аван мар!

— Мĕн?

— «Хусканусăр Китай стени». Мĕнле хусканусăр Китай пултăр-ха? Аван мар! Китай вăл китай стени çеç мар, халăх — пирĕн пекех ĕçлесе пурăнакан халăх... Кӳренмелле капла — хусканусăр Китай...

— Ан тарăхăр-ха аплах. Урăхларах та çырма пулать... Калăпăр, инçетри Китай стени, теме пулать.

— Ку аванрах. Ак эсир, Александр Сергеевич, Европăна çитсе курасшăн çунатăр. Эсир Азие кайăр. Тĕрĕсне калатăп, нумайрах курса пĕлĕр.

— Эсир Авие юратнине эпӗ аван пӗлетӗп-ха, ҫапах та Европӑна ҫав тӗрлех ан хурлӑр. (Шӳтлесе). Тепӗр тесен, Христос та унта ҫуралнӑ.

— Ӑҫта ҫуралнӑ вӑл, никам та йӗркеллӗн пӗлеймест. Анчах эпир тӗ-тӗрӗс пӗлсе тӑратпӑр, Китайра Конфуций ҫуралнӑ. Ун ӗҫӗ-хӗлӗ пӗрре те Христосӑннинчен кая мар. Эй, турӑҫӑм! Каллех тем те пӗр калаҫтаратӑр эсир мана...

Кӗркунне. Каҫ. Нева хӗррипе Бичуринпа Пушкин утса пыраҫҫӗ. Йӗри-тавра никам та ҫук. Нева леш енчи Петропавловски крепӑҫ тӗтре витӗр аран курӑнать. Крепӑҫран тӑрӑхласа кулнӑ пекех, Зимний дворец чӳречисем ҫап-ҫутах. Паян унта бал. Пушкинпа Бичурин парапет умне ҫитсе чарӑнчӗҫ. Ҫак вӑхӑтра дворец подъезчӗ патне карета ҫӗмӗрттерсе пырать. Каретӑран кая юлса ҫитнӗ хӑна тухать. Лакейсем ун умӗнче, алӑк уҫнӑ май, чӗркуҫҫи таран пӗшкӗнсе пуҫ таяҫҫӗ. Хӑна — Александр Христофорович Бенкендорф — пальтоне хывса пӑрахать те пусма тӑрӑх васкамасӑр хӑпарма тытӑнать.

Пушкин ура айне пулнӑ хӑрӑк турата алла илет те аякалла ывӑтать.

— Ӑмсанатӑп сире, Никита Яковлевич... Кӗҫех эсир ҫак крепӑҫран, ҫак дворецран... ҫак мӗнпур пусмӑрҫӑсенчен те ирӗксӗрлӗхрен аякра-аякра пулатӑр...

— Ӑмсанатӑр? Кӑлӑхах... Килӗшӗр, пӗрле кайӑпӑр. Эпӗ — Кяхтӑна, китай чӗлхин шкулне уҫма, эсир — Пугачев ҫӳренӗ вырӑнсене. Каятпӑр-и?

Зал. Мазурка ташлаҫҫӗ. Бенкендорф кӗрет. Хӑйпе пӗрле ҫӳрекен офицерсенчен пӗрне хӑлхаран пӑшӑлтатса тем калать те вӑл салона утса иртет. Офицер кӗҫех ун патне таврӑнать.

— Ун сиятельстви Несельроде граф!

— Кӗтӗр. Урӑх ман пата никама та ан кӗртӗр.

Ташласа тарланӑ, хӗремесленсе кайнӑ Несельроде кӗрсе тӑрать.

— Мӗн пулнӑ, Александр Христофорович?

— Халлӗхе нимӗнех те ҫук-ха. Анчах пулма пултарать. Сирӗн департаментра темле Иакинф манах ӗҫлет...

— О! Нумай вӗреннӗ, нумай пӗлекен ҫын! Китайларан пайтах куҫарнӑ вӑл. Пичетленсе тухнӑ ӗҫӗсемшӗн Демидов премине илме тивӗҫлӗ пулчӗ... Нумаях пулмасть вара ҫав манаха Раҫҫейри наукӑсен академийӗн член-корреспондентне суйланӑ. Англи ученӑйӗ ҫапла каланӑ: «Иакинф атте пӗччӗнех ученӑйсен ушкӑнӗ кӑна тума пултарнине тунӑ», тенӗ вӑл.

— Тӳрре тухма тӑрӑшатӑр-и, граф?

— Пачах урӑхла. Эпӗ хамӑн чиновниксемпе мухтанатӑп.

— Кӑлӑхах...

— Мӗншӗн?

— Мӗншӗн тесен, хӑвӑр ҫыннӑрсене япӑх пӗлетӗр.

— Ӑнланмастӑп сире, Александр Христофорович...

— Сирӗн «вӗреннӗ» манах политика тӗлӗшӗнчен шанӑҫлӑ мар. Вӑл Пушкинпа, ун ирӗк шухӑшлӑ тусӗсемпе ҫыхланса кайнӑ. Эпӗ, синодпа килӗшсе, ҫав манаха хытӑ сӑнаса пурӑнма хушнӑ.

— Пулма пултараймасть ун пек...

— Мӗнлерех те ӑшшӑ, Карл Васильевич. Ан манӑр, тӑванӑм, эпир йывӑр вӑхӑтра пурӑнатпӑр: пӑхӑнма юратманнисем йышлӑланчӗҫ... Манаха Пушкинран уйӑрмалла.

— Ара... ара... Эп хӑшпӗр ӗҫе тунӑ та ӗнтӗ. Ун кӗҫех Кяхтӑна тухса каймалла. Кӗҫех...

Пушкинпа Бичурин Александро-Невски лаврӑри масар ҫинче. Пушкин хӗрсе кайсах хӑй Наталья Гончаровӑпа сӑмах татни ҫинчен каласа кӑтартать.

— Пӗлесчӗ сирӗн, Никита Яковлевич, мӗн тери телейлӗ эпӗ, мӗн тери!

Державин палакӗ умне ҫитсен вӑл чарӑнса тӑрать те, пуҫ тайса илсе, сӑвӑ вулать:

Державин пиллесе хӑварчӗ
Ҫӗре кӗрес чухне пире.

Унтан:

— Ун умӗнче парӑмра юлас марччӗ тесех эпӗ халь «Онегина» ҫырса пӗтеретӗп. Итлесе пӑхас кӑмӑлӑр пур-и?

Хирӗҫ таварса каласса кӗтмесӗрех вулама тытӑнать:

Лицей таври садра тӳлеккӗн
Эп ҫитӗннӗ кунсенче
Каҫса каяттӑм Апулейшӗн,
Цицерона пӑхмастӑмччӗ;
Ҫурхи хуракӑш сас парсассӑн,
Уллах тӳремлӗхе ансассӑн,
Шыв хӗрринче ман куҫӑма
Пуҫларӗ Муза курӑнма.
Тавралӑх янк ҫутӑлса кайрӗ:
Студент пӳлӗмӗнче куллен
Янрарӗ Музӑм; ачасен
Хаваслӑхне савса юрларӗ,
Тӑван аваллӑх мухтавне,
Кӑвар чӗремӗн тунсӑхне.

— Ҫук, паян эпӗ куна вулама пултараймастӑп. Пултараймастӑп.

— Эпӗ эсир телейлишӗн савӑнатӑп, Александр Сергеевич. Ҫапла пулма кирлӗ те. Тем тери ҫӳлӗ ту пулсан та, вӑл хӗвеле хуплаймӗ... Ан тив, йывӑр пултӑр пурнӑҫ, ҫав тӗрлӗ йывӑр пултӑр, ҫапах вӑл илемлӗ.

Масар ҫинчи ҫулпалан сулахаялла утса иртеҫҫӗ.

— Февральте венчете тӑмалла... Эсир ман туйра чи хисеплӗ хӑна пулӑр. Натали сире килӗшессе шанса тӑратӑп. Хм... Эсир хӑвӑр кама та пулин юратса курнӑ-и?

— Юратса? Паллах. Кашни ҫынах кама та пулин юратать.

— Ҫӗркаҫ Одоевскисем патӗнче эпӗ сире, шӳтлесе, ряса тӑхӑннӑ ирӗк шухӑшлӑ ҫын, терӗм. Паян ак чӑнласах куратӑп: ҫук, эсир манах мар, эсир вырӑс Вольтерӗ, анчах шел, рясӑпа...

Лаврӑран тухрӗҫ те площадь урлӑ каҫрӗҫ. Хула варринелле илсе тухакан урам кӗтессинче чарӑнса тӑчӗҫ.

— Питӗ шел, пулаймастӑп эпӗ сирӗн туйра. Китай чӗлхин шкулне йӗркелес пирки эпӗ туса хатӗрленӗ проекта правительство ырланӑ. Ыран-виҫминех тухса каятӑп.

— Апла Читара та пулатӑр?

— Паллах.

— Николай Бестужева кӗрсе курас теместӗр-и унта?

— Ҫине тӑрсах курса калаҫма тӑрӑшӑп.

— Эпӗ сиртен ун валли ҫӗнӗ кӗнекесем парса ярӑп. Шанатӑп, Николая пӗрре курсах юратса пӑрахӑр: тӗлӗнмелле аван ҫын вӑл. Тӗлӗнмелле аван!

Кельӑра. Бичурин инҫе ҫула тухма хатӗрленет. Иван савӑнсах карҫин тултарать. Никита прихутпа расхут кӗнекипе аппаланать.

Иван:

— Пуштӑпа мӗн чухлӗ укҫа ӑсатнине ҫырса хума ан манӑр, пачӑшкӑ. Чи малтан, хӑвӑрӑн йӑмӑкӑра — Татьяна Яковлевӑна 100 тенкӗ те 20 пус, страх укҫи 1 тенкӗ те 3 пус тӳленӗ... кӗмӗлпе... Малалла, тусӑра, Серафима, пытарма Иркутска 152 тенкӗ те 50 пус куҫарнӑ. Унтан, хӑвӑр хушнипе, ыйткалакана 2 тенкӗ панӑ; аглицки словарь текенни — 20 тенкӗ, икӗ кӗленче херец — 7 тенкӗ те 70 пус, пӗр кӗленче ром — 5 тенкӗ, ҫӗр сигаретка — 12 тенкӗ; 2 тенкӗлӗх кӑмрӑк туяннӑ, кӑмпапа ҫӑкӑр — 70 пуслӑх.

— Пӗтӗмпе виҫҫӗр тӑватӑ тенкӗ те вунсакӑр пус. Ха эс! Пирӗн иксӗмӗрӗн иртнӗ уйӑх укҫинчен вӑтӑр тенкӗ юлать. Татах кама та пулин пулӑшма пултаратпӑр. Пӗр тесен, ялти ачасем валли кучченеҫ туянса кайӑпӑр. Вӑт савӑнӗҫ вӗсем!

Питӗ ир. Бичуринпа Иван ҫуна ҫине вырнаҫса лараҫҫӗ. Вӗсене ӑсатма хапха умне Власий тухнӑ.

— Нимӗн те ан пӑшӑрханӑр! Кельӑра чип-чипер тытса пурӑнӑпӑр. Эсӗ, Иван, Иакинф аттене лайӑх пӑх, шӑнса ан пӑсӑлтӑр вӑл...

Бичурин алӑ сулать те, ҫуна хускалать.

Никита (Власие):

— Ан шикленӗр! Сиртен пӗртте кая пӑхмӗ!..

Ҫуна хыҫҫӑн юр сирпӗнсе пырать. Хӗлӗпе те кунашкалли пулман тейӗн, — куҫа шартаракан хӗвел ҫути...

Чиркӳллӗ, лавккаллӑ, шавлӑ Мускав юмахри пек, тӗлӗкри пек вӗлтлетсе иртсе юлать. Унтан — Владимир хули, ун капӑр Успенски соборӗ... Кӗҫех Чулхула Кремлӗ курӑнса каять, Атӑл, вара — сулахайра та, сылтӑмра та... пӗчӗкҫеҫ чӑваш ялӗсем, тайлӑк-тейлӗк хура пӳртсем... Ҫиле ҫӗтӗк-ҫурӑк уртса янӑ мӗскӗн хресченсем, юр ҫийӗн ҫара уран тенӗ пекех чупса ҫӳрен ачасем...

Ҫӗрпӳре Бичуринпа Иван кучченеҫ туянаҫҫӗ, пуринчен ытларах — шушка.

Ял. Акӑ, тахҫан ача чухне Никита уксах ашшӗпе Хусана тухса кайнӑ кил. Унтанпа кунта нимӗнех те улшӑнман тейӗн, хӳме ҫеҫ ҫӗрсе ишӗлсе аннӑ тата картишӗнчи йӑмрасем ӳссе кайнӑ. Никитӑсен ҫурчӗ умне ӗнтӗ чӑваш каччисемпе хӗрӗсем, стариксемпе карчӑксем пухӑнса тӑнӑ. Ача-пӑча, хӗвӗшсе, тӗрткелешсе, пӗчӗк чӳречерен пӳртелле пӑхма тӑрӑшать. Шалта лӑк тулли ҫын, пӑчӑ. Хырса ҫунӑ ҫӑка сӗтел ҫинче — ӗҫме-ҫиме: ҫӑмарта, аш, шӑрттан, тӑварланӑ панулми... лавкка эрехӗпе кӑпӑк пек ҫемҫе чӑваш сӑри. Кӗтесре, турӑшсем айӗнче, Никита ларать, унпа юнашар стариксем питӗ чинлӑн курӑнаҫҫӗ, турӑш кӗтесӗнчен аякарах вырнаҫнисем чӗлӗм паклаттарса ӗмеҫҫӗ. Кӑмака ҫумне хӗрсем пуҫтарӑнса тӑнӑ. Бичурин аппӑшӗ, ырханкка хӗрарӑм, шӑллӗ ҫинчен куҫ илме пӗлмест, савӑнӑҫ та, чун ыратӑвӗпе ӑмсану та пур ҫав куҫсенче...

Хӗрсем хурлӑхлӑ юрӑ юрлаҫҫӗ.

Бичурин:

— Акӑ эпӗ каллех килте... Ҫак юрӑсӑр пуҫне пурнӑҫӑмра урӑх нимӗн те пулман тейӗн ҫав...

Юрӑ шӑпланчӗ. Никита тулли сӑра куркине шалтти ӗҫсе ячӗ те хӑй юратнӑ юрра — китай юррине юрлама пуҫларӗ. Ку юрӑра ҫурхи юрату пек илемлӗ хӗр тӗттӗм каҫ пӗр-пӗччен тинӗсре ишни ҫинчен каланӑ. Йӑрӑс пӳ-силлӗ те писӗ хул-ҫурӑмлӑ ҫак хӗр кӗсменӗпе кашни авӑсмассерен ҫынсене юрату кӳнӗн туйӑнать.

Кӳршӗре Ивана хӑналаҫҫӗ. Вырӑс чӗлхине япӑх чухлать пулин те, кил хуҫи унпа хӑюллӑнах калаҫать.

— Чӑнах вара Мӗкете ҫав териех пысӑк пупа тухнӑ-и?

Усӗр Иван ӑна алӑ сулса пӳлет:

— Анрав ҫарӑк эс... Ӑслӑ кӗнекесем ҫыркансккер, мӗнле пуп пултӑр-ха вӑл!.. Питӗрте пирӗн, пӗлетӗн-и, ак мӗн чухлӗ ҫав мӗнсем... кӗнекесем! Мӗн ҫинчен калаканскерсем вӗсем, эпӗ хам та йӗркеллӗн пӗлейместӗп. Анчах вӗсене пӗтӗм тӗнчипе вулаҫҫӗ. Иакинф аттене патша та пӗлет.

Ҫурҫӗр иртни тахҫанах. Никитӑпа аппӑшӗ урама тухнӑ. Ура айӗнче юр кӑчӑртатать. Тӳпере, ҫӳлте-ҫӳлте, ҫӑлтӑрсем куҫа-пуҫа чарса пӑрахнӑ.

— Пӑх-ха, Наталья, тӳпе мӗнлерех, Китайри пекех...

Аппӑшӗ ун хыҫӗнче утса пырать, шӑпӑртах вӑл, именчӗк.

Акӑ вӗсем ял хӗррине ҫитрӗҫ. Кунта пӗчӗк хура пӳрт ларать. Никитӑпа Наталья лутра алӑкран пӗшкӗнсе кӗреҫҫӗ. Пӳрт стенисем тӗтӗмпе хуп-хура хуралса ларнӑ. Ҫӑпата хуҫса ларакан Элкер мучи сӑпка сиктерет. Кӗтесре хӑйӑ йӑсӑрланса ҫунать, ҫути ун вӑйсӑр.

— Кам унта?

— Эпир-ха ку — пиччепе иккӗн.

— Натали?

— Ҫавӑ.

— Мӗнле «пичче»? Курмастӑп.

— Мӗкете.

— Кӗҫӗнни-и? Манаха тухни-и?

— Ҫавӑ. Курма килчӗ...

— Мӗн кирлӗ ӑна манран? Чиркӗве ҫӳреместӗп эп, ун туррине ӗненместӗп. Ман чун хуҫи пӗрре — киремет.

Хӑйӑ сухӑрлӑ пулас, хушӑран вӑл ҫатӑртатса ҫуттӑн ҫунса илет. Никита курчӗ, старикӗн тахҫанхи трахомах иккен. Урлӑ сак ҫинче ҫамрӑк мӑшӑр ыталанса ҫывӑрать. Сӑпкари ача вӗсен ӗнтӗ.

— Эпĕ санран акă мĕн ыйтса пĕлесшĕнччĕ, мучи: Пугачев çинчев каласа параттăн ĕлĕк, халĕ манман-и ун çинчен?

Старик ĕçлеме чарăнать, сасси чĕрĕ ĕнтĕ ун:

— Емельян Иванович çинчен-и? Епле манăн-ха ăна — ырă патшана?!

— Вăт аван... Вăт юрать. Кĕçех сан пата пĕр çын кĕрсе тухĕ. Вырăс сăвăçи — Пушкин. Пугачев çинчен кĕнеке çырать вăл. Эсĕ вара ăна мĕн астунине каласа пама тăрăшсам.

— Вилмесен, ма каласа кăтартам мар...

Хăйă лапах сÿнсе ларать. Пÿртре пăч тĕттĕм. Таçта тулта, инçетре, автан шарлаттарса авăтса ярать, унтан тепри, татах тепри...

Каллех çул. Хусан. Екатеринбург. Омск. Палланă, пĕлнĕ Иркутск. Байкал, акă ĕнтĕ Чита. Каретăра Бичуринпа пĕрле Фон-Конштадт барон ларса пырать. Часах вĕсем политика тĕлĕшĕнчен шанчăксăр çынсене хупса усракан тĕрме коменданчĕ С. Р. Леопардский çурчĕ умне çитсе чарăнаççĕ.

Кил хуçи хăна таврашĕ кĕтмен пулас — крыльца çинче ним тума пĕлмесĕр тапăртатса тăрать. Сăмаха барон пуçарать.

— Эпĕ Байкал ку енне правительство ирĕк панипе килтĕм. Кунта ман тибет, монгол кĕнекисене тата бурхансен коллекцийĕсемпе ламемат кульчĕн ытти япалисене пухмалла. Манпа пĕрле Хĕвелтухăçпа Азин ученăй ориенталисчĕ Иакинф атте.

— Эпĕ хавас... Хм... Господа... Анчах, айăп ан тăвăр та, мĕнпе пулăшма пултарăп-ха сире? Тепĕр тесен, мĕн эп çаплах сире крыльца çинче тытса тăратăп-ха, кĕрĕр, кĕрĕр.

Леопардскисен пысăках мар, анчах тирпейлĕ столовăйне кĕрсе вырнаçаççĕ инçетрен килнĕ хăнасем. Бичурин хуçапа калаçать:

— Эпĕ сирĕн тĕрмере ларакансем тахçанах ĕнтĕ кунти çĕршыва тĕпчесе вĕренме тытăннă тенине илтсеттĕм. Фон-Конштадт барон вĕсен ĕçĕпе паллашасшăн.

— Иакинф атте мана Иркутскра тĕл пулчĕ те сирĕн патăра кĕрсе пăхма сĕнчĕ...

— Тĕрмере ларакансенчен хăшĕ-пĕри чăнах та тĕпчев ĕçне туса пырать. Уйрăмах Бестужев пĕр тăвансем тăрăшаççĕ.

Барон:

— Хм! Çав тÿрленми декабристсем-и?

— Шăпах çавсем.

— Тепĕр тесен, ĕçшĕн пурпĕрех-ха ку. Эпир вĕсене курма пултаратпăр-и?

— Мĕншĕн пултармалла мар тет. Эсир — ученăйсем, политика сире кăсăклантармасть. Унтан та ытларах, сиртен пĕри — чиркÿ çынни.

— Ара çав,— кулса илсе каласа хурать Бичурин.

Леопардскин кăмăлĕ паçăрхи мар ĕнтĕ: хăй патне çакнашкал нумай вĕреннĕ хăнасем килнине вăл пысăк чыс вырăнне хуни пĕрре пăхсах сисĕнет. Ак, хыпаланса ÿкрĕ, хăнасене столовăйрах хăварса, крыльца çине чупса тухрĕ, хуралта тăракан салтака чĕнсе илчĕ те пăшăлтатса калаçма тытăнчĕ:

— Халех ман несĕле чĕнсе кил, тата, асту, килнисен лашисене апат паччăр, каретăри çынсене те çитерччĕр. Хăвăртрах!

— Итлетĕп, вашблагородие!

Столовăя хуçа йăлкăшса кулса таврăнчĕ.

— Кĕçех ман несĕл килсе çитет — майор, вара эпир сирĕнпе тĕрмере ларакансем патне кайăпăр.

Тĕрме хапхи умĕнче.

Леопардский:

— Ыйтатăп, господа, вĕсен сăнне-питне курса, шикленсе тĕлĕнсе ан тăрăр: пĕлетĕр, политика тĕлĕшĕнчен... мĕнлисем вĕсем...

Тĕрме картишĕ пуш-пушах. Бичурин хÿме çумĕнче, пысăках мар панча патĕнче, пĕр çын, тăлă сăнчăрĕсене чăнкăртаттарса, тем ĕçленине асăрхарĕ. Пĕччен мар вăл, унпа пĕрле тата темле хĕрарăм пур.

— Мĕн тăваççĕ вĕсем унта?

— Ку вăл пирĕн пахчаçă. Сергей Волконский... арăмĕпе. Паян вĕсене тĕл пулма ирĕк панă, яланхи пекех, ав пахча çимĕçпе тăрмашаççĕ.

— Калаçса пăхма юрать-и вĕсемпе?

Çул çинче ĕшеннĕ барон часрах тĕрмене кĕрсе тухасшăн та — канмаваскать.

— Иакинф атте, чăрмантарар мар вĕсене. Тепĕр чух калаçăпăр.

Камерăна пырса кĕчĕç. Сĕтел çинче тĕрлĕрен сăрсем, хут выртать, чÿрече умĕнче мольберт ларать. Çунакан вучах умĕнче, вĕркĕчĕ вĕртерсе, Николай Бестужев ĕçлесе тăрать. Кансĕрлесрен хăрах аллипе тăлă сăнчăрне пуçтарса тытнă. Бичурин аран çăвар уçать:

— Николай Александрович?

— Эпĕ.

Шăпăртах. Шăплăха хăнасем умĕнче ыррăн курăнма тăрăшакан Леопардский татать:

— Хаклă господинсем Питĕртен килнĕ, пирĕн патри çĕршыва тĕпчесе вĕренесшĕн... Пулăшасчĕ вĕсене çав ĕçре...

Ыйхăран вăранчĕ тейĕн, Бестужев сасартăк ĕçлеме чарăнать те кĕнĕ çынсем еннелле вартах çаврăнса тăрать.

— Питĕртен?

— Çавăнтан! Тĕллевĕмĕр... ак, комендант господин каларĕ ĕнтĕ.

— Ăнланатăп... Вăй çитнĕ таран хаваслансах пулăшăп.

Тепĕр темиçе кунтан. Бичуринпа Бестужева иккĕнех юлма май килнĕ. Николай Бестужев мольберт умĕнче ларать, вăл Бичурин портретне çырать. Никита хавхаланса калаçать:

— Тавах турра! Юлашкинчен, ак, эпир сирĕнпе пĕчченех! Ман, Николай Александрович, пĕр çын хушса янине пурнăçламалла вĕт... Пушкин хушса янине...

Ку пачах кĕтмен çĕртен пулнăран, Бестужев хăй сисмесĕрех ура çине сиксе тăрать.

— Эсир Александăра пĕлетĕр-и?

— Пĕлетĕп.

— Турăçăм! Мĕншĕн ку таранччен те каламарăр?

— Май пулмарĕ.

— Мĕнле пурăнать вăл? Мĕнле ĕçлет? Мĕн çырать? Эпир тахçантанпах унран хут илмен...

— Февральте Александр Сергеевич авланчĕ.

— Кама илчĕ?

— Наталья Гончаровăна.

— Хм... пĕлместĕп.

— Эпĕ те пĕлместĕп. Икĕ çула яхăн Пушкин Кавказра пурăнчĕ, тăрăшсах «Евгений Онегин» роман çырать.

— Эх! Мĕн тери курас килет ман ăна!

— Вăл манран сире валли çырусем, кĕнекесем парса ячĕ. Тăванăрсем сирĕн пата тата юлташăрсем патне çырнă çырусем те пур манра. Анчах мĕнле памалла вĕсене сире, пĕлместĕп.

— Сергей Волконский арăмне калăр, вăл шанчăклă çын, йăлтах йĕркелĕ.

Бичурин кулса ярать те, Бестужев умне пĕшкĕнсе, хыттăн пăшăлтатса калать:

— Лайăх çавăртăм эп барона. Сисетĕп, пĕччен сирĕн пата лекме мана çăмăлах мар, хайхи тапăнтăм барона, илĕртрĕм, парăнчĕ. Халь унпа пĕрле хама чул хÿме хÿттинчи пекех туятăп.

Камерăна Леопардский пырса кĕрет. Мольберт патне пырса тăрать те кăмăллăн ÿсĕрсе илет.

— Аван пулать. Пĕрре пăхсах палласа илмелле. Ĕçлĕр, ĕçлĕр, чăрмантармăп.

Кăшт ларкаласан вăл килсе кĕнĕ чухнехи пекех лăпкăн тухса каять. Бестужев портрета малалла çырма тытăнать, унтан Никитăран ыйтать:

— Мĕн тума кирлĕ сире манах пулни? Кулăшла ку, каçарăр та, эсир турра та чăнласах ĕненместĕр пек туйăнать мана.

Бичурин ирĕксĕртен тенĕ пек тавăрать:

— Пĕр пулнă япала...

— Енчен те ку йăнăшпа пулнă пулсан, тÿрлетмелле ăна — йăнăша.

— Ĕнтĕ ку хăнăху...

— Ухмахла хăнăхура ырри çук. Манмалла ăна.

— Вăл мана кансĕрлемест.

— Суятăр! Хăвăра хăвăр суятăр!

Пĕр хушă нихăшĕ те нимĕн те чĕнмест.

Бестужев:

— Ĕçĕре пăхсан, эсир чиновник, çавăнпа манах тумне çăп-çăмăллăнах хывма пултаратăр.

— Мĕнле?

— Синода хут çырăр. Департаментра ĕçлени, çĕршыв тăрăх нумайлăха тухса çÿрени çÿç илтернĕ чух панă сăмаха çирĕп тытса пыма кансĕрлет, тейĕр.

— Пулăшмĕ. Тытĕç те вара... кельăна хупса лартĕç.

— Вăт ку пулас çук япала. Император тăр ухмахах мар. Усăссăр манах е вĕреннĕ чиновник кирлĕрех-и? Ан кала, кăнах ăнланать вăл. Эхер те хăй ăнлима ăс çитермесен, ыттисем пулăшĕç. Раççейре ăслă çынсем пĕтмен-ха. Хăюлăхăра пухăр та çырăр синода. Курăр вара, сире ытларах хисеплеме пуçлĕç.

— Ăрăмçă, эсир, Николай Александрович! Ак, турăшăн та, тытатăп та çыратăп.

Бичурин Леопардский ученăйсене пурăнма уйăрса панă пÿрте пырса кĕнĕ-кĕменех Ивана кăшкăрса чĕнчĕ:

— Иван! Хутпа перо пар!

Тутлăн çывăрнă Иван пуçне çивитти айĕнчен кăларса пăхать, хăрах куçне çеç уçнă хăй.

— Хучĕ те, пери те сĕтел çинче. Алă айĕнчи япалашăнах ма ăшă вырăн çинчен тăрас ман...

Çапах вăл тăчĕ, çутă çутрĕ те тутлăн каранса илчĕ.

— Аван тĕлĕк курнă... Авланнă пек эп. Пурте «йÿçĕ!» тесе кăшкăраççĕ, эпĕ чуптума та ĕлкĕреймерĕм. Яланах эсир çапла чи пылак самантра килсе кĕретĕр.

Татах тем мăкăртатать те каллех вырăн çине тÿнет. Бичурин пуç çĕклемесĕр çырать.

«Департаментра службăра тăни, государь хушнипе те тăван çĕршыва усă кÿрес тесе çĕршыв тăрăх час-часах нумайлăха тухса çÿрени мана çÿç илтернĕ чух панă сăмаха çирĕп пурнăçласа пыма чăрмантарать. Çавăнпа таса синодран мана манахран кăларма ыйтатăп...»

Тин тул çутăлать-ха. Чÿречерен Бичурин тĕрме çыннисене таса тÿпе айне илсе тухнине пăхса тăрать. Чи малти ретре, тимĕр тăлăсене алăпа çĕклесе, Бестужев пĕр тăвансем — Николайпа Михаил утаççĕ. Вĕсен хыçĕнче — Волконский, Вульф, Муравьев, Анненков, Паджио... Колонна пуçĕ чÿречепе танлашрĕ, вĕçĕ вара тĕрме картишĕнче çухалать. Пылчăк, утма йывăр, çапах та колоннăри çынсем пĕр хăнăхнă йăлапа лăпкăн пыраççĕ, çук-çук та, хăшĕ-пĕри шÿтлесе-кулса та илет. Никита крыльца çине чупса тухать.

— Николай Александрович! Çыртăм вĕт эп. Туршăн та, çыртăм, паянах Питĕре ăсататăп.

Çав кун каçхине Читара политзаключенăйсене кĕçех Петровски завода куçараççĕ тенĕ хыпар сарăлать. Волконская княгиня пурăнакан çурта декабристсен арăмĕсем пухăннă. Хытă пăшăрханаççĕ вĕсем: каçарас вырăнне ак... çĕнĕ каторга... Волконская пурне те çыру валеçсе тухать — Бичурин илсе килнĕ çырусене. Пĕрисем йăл-йăл кулса вулаççĕ, теприсем, вуланă май, макăраççĕ.

Бичурин, Леопардский, Конштадт Бестужев камерине пырса кĕреççĕ. Лешĕ, яланхи пекех, мольберт умĕнче ĕçлесе ларать. Кĕнĕ çынсене вăл тăрса пуç таять.

— Хавас сире курма, господа.

Никита ун аллине пырса чăмăртать.

— Ыран эп кунтан тухса кятăп, Николай Алексaндрович. Кяхтăна. Пуриншĕн те пысăк тав сире. Полковник мана сире хамăн кĕнекесене парнелеме ирĕк пачĕ.

Бестужев парнене кăкăр çумне тытса пăчăртать.

— Тавтапуç.

Унтан вăл вырăнĕ çинчи минтер айĕнчен Бичурина пĕчĕк хĕреслĕ чугун четкăсем илсе парать.

— Ак ку — сире. Ман тăлă сăнчăрĕн икĕ сыпăкĕнчен тунă вĕсене. Портрета та илĕр. Курайрăпăр-ши тепре?

— Хуть те мĕн пулсан та, тĕл пулатпăр. Эсир вара мана тепĕр портрет ўкерсе парăр... Пĕлетĕр-и, мĕнле костюмпа? Ĕмĕрне тавçăрса илеймĕр! Китай костюмĕпе!

Питĕрте. Нессельроде графăн ĕç пўлĕмĕ. Креслора Бенкендорф ларать, Нессельроде, айăпа кĕнĕ шкул ачи пек, сĕтел кĕтессинче тăрать. Бенкендорф аллинче — темĕнле хут татки.

— Сирĕн манах синода хут çитернӗ, манахран тухасшăн. Ухмахсем тупăнассĕ вĕт, унта ун ыйтăвне тивĕстернĕ. Пĕртен-пĕр государь çеç ăслă пулнă. Акă ун резолюцийĕ. Вулăр!

Çухалса кайнă Нессельроде хута илсе вулать. Унта государь Бичурина Александро-Невски лаврăрах хăварма хушса çырнă.

Бенкендорф:

— Эпĕ асăрхаттартăм вĕт сире, Карл Васильевич. Сирĕн манах Çĕпĕрте тăван çĕршыв сутăнчăкĕсемпе тĕл пулнă. Николай Бестужевпа туслашма ĕлкĕрнĕ.

— Ĕмĕрне шухăшлас çук.

— Кăлăхах. Хăшпĕр чух шухăшлас та пулать... Унăн величестви Пушкин господина Оренбурга кайма ирĕк панă. Пĕлтерме пултаратăр, кайса килтĕр. Арăмĕсĕр кайсан аванрах...

Бичурин каллех, нумай çул каялла пекех, Кяхтăна çул тытнă. Иванпа иккĕшĕ вĕсем килен-каянсен çуртĕнче чарăннă. Иван япаласем майлаштарать, Никита хула тăрăх курса çўреме тухса кайрĕ. Пурте кунта ĕлĕкхи пекех, çынсем çеç урăх. Акă Бичурин лар тытса, тахçан Татьяна Леопольдовна пурăннă имение тухса кайрĕ. Именире ĕнтĕ — çĕнĕ хуçа. Бичурин шала кĕмерĕ, картишĕнче çўрекен пĕр хресчене чĕнсе илчĕ.

— Итле-ха, тăванăм! Калаймăн-ши, ăçта халь сак имени ĕлĕкхи хуçи?

— Мĕншĕн калас мар... Çўлти патшалăха юрăхлă пултăр, вилчĕ вăл. Вилтăпри ав сав вăрманта.

Бичурин ăна тав тăвать те вăрманалла утать. Пысăках мар, сăпă палăк тавра тахшин ĕçчен алли чечек лартса ўстернĕ. Нумайччен тăчĕ кунта Никита, унтан пĕшкĕнсе пуç тайрĕ те аяккалла утса кайрĕ.

Каллех... çул хыççăн çул. Бичурин Монголие, Манчжурие, Китая кая-кая килет.

Пушкин дуэльре вилнĕ тенĕ хыпар, ахрав пек сарăлса, Кяхтăна та çитнĕ. Пушă вăхăт тупса, Бичурин двоянсем пухăнакан çурта кĕрет. Хавасла вăл: хăрушă хыпар илтмен. Интереслентсех икĕ двоян тавлашнине тăнласа тăрать. Таçта, юнашар залра, оркестр калать. Никита эрех ĕçме тăнăччĕ ĕнтĕ,— зала темле кайăпашка чиновник хашкаса чупса кĕрет те никам сине çавăнса пăхмасăр кăшкăрса ярать:

— Господа! Питĕрте Пушкин поэта дуэльре вĕлернĕ.

Ку Бичуриншăн пуçран чукмарпа çапнă пекех пулчĕ. Чеокке çĕкленĕ алли тăр-тăр чĕтрерĕ те ун, сĕтел çиттине, рясăна эрех пăт-пăт хĕрлĕ пăнчăн сăрларĕ.

Никита ларнă çĕртен тăчĕ те, тайкаланса, алăк патнелле утса кайрĕ. Таçта, шалта, паçăрхи пекех, оркестр калать...

Китай чĕлхи шкулне уçаççĕ. Пысăках мар класа пĕтĕм хула пуçлăхĕ пухăннă. Хăнасем хушшинче çамрăк китай учителĕсем те пур. Бичурин шкулта вĕренес ачасем умĕнче сăмах калать:

— Раççейре паян пуçласа китай грамотине вĕренмелли шкул уçăлчĕ. Нумай çул тăршшăпа пулчĕ ман китай грамматикине çырса хатĕрлеме, акă халĕ шкулти кашни вĕренекене çав кĕнекене парнелетĕп. Пирĕн хаклă китай учителĕсем сире хăйсен чĕлхине тăрăшса вĕрентĕс. Ан ўркенĕр анчах. Ан манăр, эсир пулас тăлмачăсем, икĕ пысăк халăхăн туслăхне çирĕплетсе пыракансем.

Каллех Питĕр. Департаментра Бичурина сиввĕн кĕтсе илеççĕ. Ази пайĕн пуçлăхĕ Бичурин отчетне илет те пăхмасăр сĕтелĕн аялти сунтăхне пăрахать.

Çак вăхăтра Власий Ивана пăвăртса çитернĕ.

— Суятăн! Иакинф атте сутăнчăксемпе тĕл пулса калаçнă.

— Суймастăп, турăшăн та... Ак, турă пур...

Иванран нимĕн те тĕпчесе пĕлме çуккине Власий аван ăнланса илет. Вара ăна вăйпах темĕнле шĕвек ĕçтерет.

Бичурин кельăна таврăннă çĕре ĕнтĕ Иван урайĕнче сарăлса выртать — сăнĕ-пичĕ пĕр хусканусăр: вилнĕ.

Раççейри наукăсен академийĕн канашлусем ирттермелли зал. Бичурин кафедра умĕнчен анать, ăна тăвăллăн алă çупса саламлаççĕ. Вăл халĕ çеç-ха хăйĕн «Китай империйĕ çинчен статистикăлла çырса кăтартни» ĕçне вуласа панă.

Председатель тăхтав тăвасси çинчен пĕлтерет. Фойере Никита В. Ф. Одоевские тĕл пулать.

— Аван! Тĕлĕнмелле аван! Саламлатăп!!!

— Тавтапуç. Паян сирĕн журнал валли Китай тата унпа кўршĕллĕ çĕршывсем çинчен статьясем çырма пуçларăм. Шăматкун вĕсенчен çуррине илсе пырăп.

Ирхине. Бичурин департаментра. Пай пуçлăхĕ патне кĕрет. Лешĕ ун çине çавăнса та пăхмасть.

— Мĕн кирлĕ сире?

Никита сĕтел çине хут татки хурать.

— Отставкăна тухас тетĕп. Сывлăх япăхланчĕ. Канма вăхăт. Хирĕçлеместĕр пулĕ?

— Хирĕçлеместĕп!

Çак кунтан вара Никита Бичурин хăй кельинчен пĕр тухмасăр тенĕ пек пурăнать. Кĕнеке хыççăн кĕнеке çырать: «Китай тата унта пурăнакансем, вĕсен йăли-йĕрки, пĕлўлĕхĕ», «Ученăйсен тĕнĕ çинчен сырса кăтартни», «Китай империйĕ çинчен статистикăлла çырса кăтартни», «Китайри çĕрĕç», «Вăтам Азире пурăнакан халăхсем çинчен çырнисен пуххи» тата ытти те...

Никита ĕçлет. Власий вĕчĕхĕ ўссех пырать. Кĕвĕçет вăл, ăмсанать, тарăхать. Синоçĕ пур... ăна хĕтĕртсех тăрать.

Пĕррехинче Бичурин хĕрсех ĕçлесе ларнă çĕре Власий сăн-питрен тăрлавсăр та курпун манаха илсе кĕрет.

— Акă сире валли, Иакинф атте, çĕнĕ çын. Карачăм ятлă.

Ĕçне пăрахмасăр Никита хирĕçлесе калать:

— Хамах аван пурăнатăп, нимĕнле çын та, нимĕнле пулăшакан та кирлĕ мар.

— Игумен атте хушнă. Вăл хушнинчен иртеймĕн.

Власий тухса каять. Карачăм алăк патĕнче хуралçă пек тăрса юлать; нимĕн те чĕнмест, çĕнĕ хуçана шăтарасла тинкерсе пăхать.

Каçхине. Власий кельипе темиçе манах пуçтараннă. Пурте тĕреклĕ, вăйпитти. Ваталнă Власий вĕсен хушшинче ытла та хăйпашкан, пĕчĕкçĕн курăнать. Эрех тултарнă май вăл каварçăсемпе пăшăлтатса калаçать.

— Пире, тăванăмсем, пĕр ырă ĕç тума хушнă. Христосшăн, Христоса кўрентернĕшĕн тавăрмалла пирĕн Иакинфа... Тепре çавăрса хурар-ха, ĕçĕмĕр хаваслăрах пулса пытăр.

Нумай пулнă ĕнтĕ. Тулта сĕм тĕттĕм. Бичурин кельи чўречинче сапаках çутă курăнать. Никита сĕтел хушшинче ларать, чугун четкăсене çавăркаласа, хут çине çырас шухăша йĕркелет. Сасартăк тулта виле çинче юрлакан юрă илтĕнсе каять. Ăна, Никитăна, юлашки çула ăсатса юрлаççĕ иккен!..

Бичурин йăлт пăчăртанса ларать. Унтан тăрать те чўрече умне асăрханса утса пырать. Тулта тĕттĕм, нимĕн те курăнмасть.

— Карачăм!

Алăкра Карачăм курăнса каять. Çывăрма выртман та пулас вăл.

— Мĕн?

— Мĕн те пулин илтетĕн-и?

Карачăм пĕр хушă тăнласа тăрать те, анасласа илсе, калать:

— Мĕн илтĕнтĕр халь? Каç вĕт. Пурте сывăрассĕ...

Тулта саплах юрлаççĕ. Ун тĕрлĕрен «сылăхне» асăнса, турăран ăна касарма ыйтассĕ... «Çылăхсем» хушшинче Никитăн Александр ывăлне асăнни те илтĕнет.

Хăй ывăлĕн ятне илтсен, Бичурин йăлт шуралса каять, чĕтреве ўкет. Унтан Карачăм патне чупса пырать те ун çумне пĕчĕк ача пек лăпчăнса пăчăртанать.

— Карачăм! Тăванăм! Чăнах та нимĕн те илтĕнмест-и сана? Ай, тур хăтарах!..

Çав самантра кельăна пасăрхи манахсем кĕпĕрленсе кĕреççĕ те Бичурина урайне туртса антараççĕ. Никита сывлăш савăрса ярайман асапланса выртать. Лешсем пур, мăнтăрланса кайнăскерсем, шухăшлама пĕлменскерсем, ун тавра ĕрлешсе çаврăнаççĕ. Никита куçне кăшт уçать те Власие асăрхать. Кăмăллă вăл, кулли ирсĕр. Кунта мĕн пулса иртнине тавçăрса илет те Бичурин — тăрать.

— Намăс мар-и сана, Власий? Ват çынсем вĕт эпир иксĕмĕр.

Власий аптраса ўкмест. Пичĕ-куçĕ чул пек хусканусăр, чĕри чуллăннă ун.

— Власий мар эп, пĕлĕт синчи судья. Сана суд тума килтĕм!

Манахсем тискеррĕн шăхăрса, кăшкăрса яраççĕ. Бичуринăн куçум хуралса килчĕ пулас, тайăлса-тайăлса кайрĕ вăл... Куç умĕнче ĕнтĕ — çамрăк Власий сăнĕ.

— Эпĕ суд тăватăп...

Бичурин, ĕмĕрхи юмана тĕпрен касса янă пекех, урайне тăсăлса ўкет. Пурте шăпланса тăраççĕ. Çак хăрушă шăплăха курпун Карачăм татать: антăхса каясла ахăлтатса кулса ярать вăл. Манахсем ăна кельăран тĕртсе кăлараççĕ те, Бичурина кравать çине илсе хурса, пўлĕме тустарма пуçлаççĕ.

Ирхине. Власий игумен умĕнче тăрать.

— Иккек пирĕн.. Иакинф аттен послужникĕ, ăнран тухса, хуçине йăлт хĕнесе пĕтернĕ... Кельăра халь ним йĕрки те çук. Иакинф атте ăнсăр выртать, вилсе ан кайтăрччĕ...

Игумен кăмăллăн кулать.

Темиçе кун лўшкесе çумăр çунă. Бичурин кельине çумăр аннă. Бичурин кельине çав хăрушă каçранпа никам та кĕрсе курман. Ăна тултан çăрапах питĕрсе илнĕ. Тусанлă, тĕксĕм, хăтсăр кельăра. Кравать çинче вилес патне çитнĕ Никита выртать. Ун сылтăм аллипе урипе шалкăм çапнă. Сасартăк çăрана шăкăртаттарса уçни илтĕнет. Никита, йынăшса илсе, куçне усать.

— Чей... Пурте манчĕç мана... Никама та кирлĕ мар пулас... Старикĕн ĕмри пĕтрĕ теççĕ пулĕ çав...

Малти пўлĕме Власипе пĕрле çамрăк китаец кĕрсе тăрать.

— Пирĕн Иакинф атте виççĕмĕш эрне ĕнтĕ тăраймасăр выртать. Çылăх касарттарнă ĕнтĕ...

— Эпĕ ăна хам куçпа курасшăн.

Шала кĕреççĕ. Сяо Пан ним калама аптраса тăрать...

— Каларăм вĕт сире. Каяр...

Сяо Пан Власие хăй умĕнчен сирет те кравать патне пырать.

— Мяодзила, учитель. Ку эп — Сяо Пан. Кяхтăран сирĕн ученикĕрсенчен çыру илсе килтĕм.

Çак сăмахсене илтсен, Никита Яковлевича чун кĕнĕ пек пулчĕ. Вăл татах куçне уçрĕ те кулса илчĕ.

— Эпĕ сана палласа илтĕм, Сяо... Кўр çырăвне... кайран хам вуласа тухăп.

Бичурин тăрса ларма тăрăшрĕ — тăраймарĕ.

— Ватăлатăп,— каçару ыйтнăн, вăйсăррăн йăлкăшса илчĕ старик.— Каласа парăр, мĕнле пурăнатăр эсир унта, Кяхтăра?

— Пуçласа шкула пынисем вĕренсе тухрĕç. Сирĕн ĕмĕтĕр пурнăçа кĕчĕ. Раççейĕн хăйĕн ĕнтĕ китайларан куçаракан тăлмачăсем пур.

— Вăт аван, вăт юрать...

Бичурин пуçне кăшт пăрать те Власие асăрхать.

— А-а... Эсĕ кунтах-мĕн... Аван. Илтрĕн-и? Ман ĕç сахран вăйлăрах пулчĕ, Власий. Ахалех эс мĕн ĕмĕрў тăршшĕпе мана ура хурасшăн тăрăштăн... Ак ку çырăвне кайран вулатăп...

Сăвăсем

Георгий ЕФИМОВ

ЯТ ХУНИ

ХАВАС шавлаççĕ репродукторсем:
«Совет çынни çĕкленнĕ космоса!»
Апрель хĕвелĕ хытă тĕлĕнсе
Тăрать, ав, çÿлĕ тÿперен пăхса,
Тăван çĕршывăма саламласа:
«Пин-пин çулсем хушши эп сутататăп,
Анчах та сирĕн пек маттурсене
Пĕрремĕш хут эп, пуçласа куратăп,—
Кÿр, чăмăртам ĕçчен аллăрсене!»

Çуралнă çĕнĕ çын çак самантра,
Пĕрремĕш хут сас панă тĕнчере.
Çав сас янранă кăшкăрнăн «УРА!»—
Пурте илемлĕн курăннă пÿртре.
Ун амăшĕ йăл кулнă савăнса,
Каланă хăй тĕпренчĕкне пăхса:
— Вăл тивĕç пултăр космос ĕмĕрне,
Çампа пĕрремĕш космонавт ятне —
Гагаринăн ятне — ăна хуратăп.
Ачам тĕреклĕ ÿсессе шанатăп...

Апрель юрланă, савăннă тĕнче,
Вăл пуçне тайнă паттăр умĕнче.

16. IV. 1961 çул.

ÇУМĂР

ХĔВЕЛ паян ытла хĕртсе пăхать,
Пĕр çил те çуккă.
Сывлама та пăчă.
Шур хурăн та пуçне усса тăрать,
Çамка çине тар тухнă пăчăр-пăчăр.

Тавралăх çитнĕ ĕнтĕ тăвăнса,
Пĕр вăркăш уçă çил кăначчĕ халĕ.
Вара уй-хир, вăрман каш-кашласа
Пăчча кунтан таçта çити хăвалĕ.

Анчах нимскер те хускалмасть,
Шăпах,
Такам килсе куç пăвнăн туйăнать.
Шыв хĕрринче кăна чее шапа
Лĕпĕш тытма çăвар карса ларать.

Хĕвел юри пекех-çке пĕçертет.
Шапа та тÿсеймест,
Шыва чăмать.
...Ак çĕрпе пĕлĕт пĕрлешен çĕрте
Сасартăках
Пуçлать кăвакарма.

Çывхарнăçем пырать вăл хуралсах,
Кун çутине ярать сарăхтарса.
Хĕвел енне хăюллăн талпăнать,
Ăна вăл хупламашкăн тăрăшать.

Пит парăнас килмест иккен хĕвелĕн,
Тухать вăл шăтарса, ураланса.
Анчах çиллес пĕлĕт ăна пит меллĕн
Хăйĕн айне чикет час çавăрса.

Таçтан сиксе тухать те çавраçилĕ
Çавăрттарать, йывăççене авать.
Пÿрт тăррине те хăвăрт сÿсе илĕ,—
Унра халь, чăн та, иксĕлми хăват.
Тÿпенелле вĕçет сăрă тусан,
Пĕлĕтпеле васкать-тăр пĕрлешме.
Кĕç тумламсем пăт-пат! сасă туса
Çул тусанне пуçлаççĕ йĕрлеме.

Хура-кăвак тÿпе çуркаланать,
Çитмĕл те çич пая вăл пайланать:
Куçа шартса,
Чуна шиклентерсе
Вут-çиçĕм ялтăрать-мĕн çиçкĕнсе.

Кĕр-рĕс! çеç аслати кĕрĕслетет,
Тăр-тăр чĕтреççĕ çурт кантăкĕсем.
Тÿпе шăтать,
Çумăр ташша илет,
Çĕре ÿкет те çÿлелле сикет.
Чаш-чашлама пуçлаççĕ йывăççем.

Ача-пăча чупать кăшкăрашса,
Йĕм пĕççине васкавлăн хăпартса.
Çерçи кĕтĕвĕ хурчкаран çапла
Çапă айне чăмать,— хăтăлмалла!
Кусем те ак хÿтте çитсе тăраççĕ,
Пÿлĕннипе чĕнмеççĕ, тек пашкаççĕ!

Çумăр тăкать,
Тăкать витрелетсе.
Тÿпепеле çĕр хушшине пин хĕлĕх
Кам хунă-ши çаплах чипер тирсе?
Кĕç-вĕç янрассăн туйăнать.
Кам пĕлĕ,
Кам туйĕ унăн ырă кĕввине?..
Каллех таткаланать те хура пĕлĕт,
Шарлаттарать çеç çумăр юррине.

Душ айĕнчи пек, канлĕн киленсе,
Лараççĕ лăпкăн йăрăс хурăнсем.
Хăмăр тĕс çапнă, тĕннĕ çулçисем
Халь кайнă ĕнтĕ йăлт ешĕлленсе.

Тамалнăçем тамалчĕ вăйлă çумăр,
Хĕвел куç хÿрипе пăхма пуçларĕ.
«Çумăр иртет, пĕвелемешкĕн тухăр!» —
Ача-пăча сасси каллех янрарĕ.

Йĕпеннĕ çереме лачлаттарса
Вĕçем сикеççĕ тÿпене пăхса:
«Тухсам, хĕвел,
Тухсам, хĕвел!
Пылпа кулач халех паратпăр.
Çутат, хĕвел,
Çутат, хĕвел!
Сана ак ташласа паратпăр!»

Шăпăрлансем йăлăннине итленĕн
Хĕвел тухать чеен çеç хирĕнсе.
Сĕрен кĕперĕ симĕсĕн-кĕренĕн
Выртать куç умĕнчех пĕкĕленсе.

Пылпа кулач чăнах çиесшĕн пулнăн
Пĕлĕтсене хĕвел тĕртсе ярать.
Кашни тумлам çинче куллийĕ унăн
Тавралăха илем кĕртсе тăрать.

Вĕлле умне хуллен тухать пылхурчĕ:
Ун-кунăн пăхкалать тĕрĕслесе.
Часах,
Те пыллă чечеке вăл курчĕ,
Çунатне сарчĕ,
Кайрĕ вĕл! вĕççе.

Мĕнле те çумăр хыççăн пурнăç ырă!
Тÿсме май çук,
Утам-ха уялла.
Хум хыççăн хум ярать хăмăш пек тырă...
Туссем,
Пылпа кулач
Çиме пулать!

ШĂПЧĂКСЕМ

ЕШĔЛ çулçисем те палăрмаççĕ,
Шап-шурах лараççĕ çĕмĕртсем.
Каçăхса кайсах ĕнтĕ юрлаççĕ
Кĕмĕл пырлă юрăç-шăпчăксем.
Савнипе çаран тăрăх çÿретпĕр,
Тухăç хĕрелет хĕрелнĕçем.
Уйрăлма пит йывăр-çке, сисетпĕр,
«Чимĕр, тăхтăр»,— теççĕ шăпчăксем.
Хĕр сăнне ĕмĕр асра тытмалăх
Тинкеретĕп эпĕ тимлесе.
Аллăмра чăн ĕçре пиçнĕ алă,
«Çирĕп тытăр»,— теççĕ шăпчăксем.
Чунра вут çунать-и, çунтăр ĕнтĕ!
Канăçа çухаттăр-и чĕрем.
Юрату пурнăç тытмашкăн чĕнтĕр,
Ĕмĕрех юрлаччăр шăпчăксем.
Шур пĕркенчĕк пĕркенсе лараççĕ
Лăс туратлă çамрăк çĕмĕртсем.
Юратушăн савăнса юрлаççĕ
Кĕмĕл пырлă ырă шăпчăксем.

* * *

ХĂШ ЧУХ сăнасарах пăхсан
Çавракарах питÿ çине,
Илетĕп эп асăрхаса
Куç айĕсем йĕрленнине.
Эп тимлĕн пăхнине туйсан,
Сисместĕн,— хĕрелсе каян.
Кĕтмен çĕртен темле ачалăх,
Хальччен курман, айван ачашлăх
Пекех вăл туйăнать мана.
Тен, ху сисместĕн эс çавна.
Вара шутлатăп шеллесе:
Иртет-шим çамрăклăх, тесе.
Анчах самантлăха кăна
Çав шухăш амантать чуна.
Виçетĕп иртнĕ кун-çула,
Пăхатăп эпĕ каялла:
Пит çăмăлах пулман сав пурнăç,
Ачапчаллах тем те пĕр курнă:
Çамка синчен шăпăртатса
Юхатчĕ тар тăпра çине.
Кĕпе ларатчĕ çыпçăнса,
Тек хăпмасла, çурăм çумне.
Вăрси те, пурте пулчĕ çав,—
Ўпкелешмен пурăнăса.
Сĕршывшăн! — чĕннĕ те ĕçленĕ,
Ырра ĕненнĕ те сĕнтернĕ.
Курас чухне курман ачалăх,
Темле кĕтмен айван ачашлăх
Санра халь пултăрах, юрать.
Вăл чĕрене савăнтарать.
Сикки сиксе вăй выляма
Эпир пĕрре те ватăлман.
Кусу айне йĕрсем выртнишĕн,
Хĕрÿлĕ çамрăклăх иртнишĕн
Ларас-и ĕнтĕ кулянса?
Сук,—
Вĕстерер çунат сарса!
Пурнăç курман этем кăна
Сăн-пит пирки пăшăрханать.
Пурнăç хуранĕнче пиçсен,
Илемленет çын кунсерен.
Йĕрсем пулсассăн та питре,
Эс, ан кулян, çавах хитре.

Вăл çырăва чĕри тĕлне тытса пăчăртать, кăмăл тулнăн, савăнăçлăн сывласа илет те сассăр кулать...

1853 çулхи майăн вуниккĕмĕшĕ. Çĕрле. Манахсем кельăран çивиттипе чĕркенĕ Никита Бичурина çĕклесе тухаççĕ. Виле шăтăкне ăна çаплипех антараççĕ.

Шăтăка тăпра таптаса тултараççĕ. Акă пĕчĕк тĕмеске ÿссе те ларать, ун çинче — эрешсĕр-мĕнсĕр йывăр хĕрес...

Унтанпа икĕ уйăх иртнĕ. Талккишпех йывăç курăк ешерет. Ватăлса çитнĕ, чирлĕ Власий масар çинчи аллея тăрăх аран утса пырать. Ун вĕçне çитсен, кивĕ сарай умĕнче, вăл чарăнса тăрать. Кунта Бичурина пытарнăччĕ... Лайăххах пăхать те Власий, шак хытса тăрать, куçне аллипе хуплать, каллех уçать. Çук, чăнах иккен! Учепăй вилтăприне такам питех те шăратса тирпейленĕ. Ун тавра тимĕр ракатка тытса çаврăннă та шала мрамортан касса тунă хĕрес лартнă. Ун çине китай иероглифĕпе китайла çапла каласа çырни пур:

«Хăйĕн мухтавне ĕмĕр-ĕмĕре хăварнă историлле кĕнекесем тăрăшса çырнă».

Вĕçĕ

Пирĕн календарь

Никифор Мранькка

ПĔР КĔРХИ кун Атăл çинче урса кайсах хумсем алхаснă, сивĕ çумăр чашлаттарса тăнă, вичкĕн çил каснă. Вăхăт каç енне сулăнса çĕрле пулма тытăнсан, çанталăк пушшех урса кайнă. Çак хăрушă самантра çыран хĕрринче пĕчченех ларакан будкăран икĕ çын тухнă та кимĕ çине ларнă, пĕр хумсем çине хăпарса, пĕр пачах курăнми пулса, бакен патнелле шăвăннă, унта çитсе, çутă çутнă. Çутине çутаканĕ старик, кĕсменçи — вуникĕ çулхи шуранка ача пулнă. Тепĕр çул, 1914 çулта, çак чăрсăр та ларса-тăма пĕлмен канăçсăр ачана Хусанти Филиппов хуçа столовăйĕнче курма пулнă. Кунта вăл вутă каснă, çурнă, кăмака хутнă, апатланма е юриех иртĕнме пыракан услапсене пăхма та ĕлкĕрнĕ. Çапла, çак вĕри чĕреллĕ шухă ача хăй вунултă тултарнă çĕре бакенщик патĕнче, Хусанти Слобожанинов лавккинче, Любимов хуçан баржи çинче, «Кавказ тата Меркурий» пăрахут обществин пристанĕнче, Ярославль купци Вахрамеев пăрахучĕ çинче, Максимов хуçа патĕнче те ĕçлеме ĕлкĕрет, 1917 çул тĕлне пурнăçăн тути-масине çителĕклех астивсе пăхать. Ку вăл чăвашсен паянхи паллă писателĕ Никифор Федорович Мранькка пулнă.

Никифор Федорович Мораньков (Мранькка) 1901 çулхи май уйăхĕн 17-мĕшĕнче Чăваш республикинчи Куславкка районне кĕрекен Пилешкасси ялĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. 1913 çулта ялти прихут шкулĕнчен вĕренсе тухнă, анчах, килте шутсăр япăх пурăннă пирки, малалла вĕренме каяйман: хăй хырăмне хăйĕннех тăрантмалла пулнă.

Октябрьти Социализмла Аслă революцине вунултă çулхи Микихвер Пермь хулинче, «Кавказ тата Меркурий» пристанĕнче кĕтсе илнĕ, Вара халиччен тĕрлĕрен хуçасем патĕнче асапланса-тертленсе пурăннă чăваш ачи тӳрех килне таврăнать те Государствăн юханшыв флотĕнчи баржа çинче ĕçлеме пикенет. 1918 çулхи октябрь уйăхĕнче вунçиччĕ тултарса вунсаккăра пуснă Никифор Федорович çав баржа çинченех хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар ретне каять, çамрăк Совет республикине хӳтĕлесе, хăйĕн паттăр юлташĕсемпе пĕрле Колчак çарĕсене хирĕç хăюллă кĕрешет. 1919 çулхи июль уйăхĕнче, Челябинск хулишĕн пынă вăйлă çапăçу вăхăтĕнче, суранланать, вара мĕн 1923 çулхи январь уйăхĕччченех запасри тĕрлĕрен полксенче службăра тăрать.

1925 çулхи март уйăхĕччен Никифор Федорович Вăтам Атăл вăрман организацинче тĕрлĕрен ĕçсене тăвакан рабочи пулать. Анчах çак вăхăтра Мораньков юлташăн пурнăçĕнче яланлăхах пысăк улшăну пулса иртет: ăна хăйсен ялĕнчи ял Совет председательне суйлаççĕ те, вара вăл пĕтĕм вăйне, пĕлӳне, вăхăтне халăх интересĕшĕн парса ĕçлеме пикенет. 1926 çулта ăна Чăваш республикинчи Наркомздрав коллегин членне суйлаççĕ, тепĕр çул, инструктор туса, ЧАССР ЦИК аппаратне илеççĕ, унтан çĕрĕç Тĕп Комиссин председателĕ туса хураççĕ. Çак ĕçренех вăл Мускаври кинематографи институчĕ çумĕнчи сценаристсен курсне вĕренме каять.

Çамрăкранах литературăна, искусствăна юратнă, ку вăхăта хăшпĕр япаласем çырма ĕлкĕрнĕ Никифор Федорович çине тăрсах сценарисемпе ĕçлеме тытăнать. Курсран таврăннă хыççăн И. С. Максимов-Кошкинскипе пĕрле «Асту» ятлă сценари çыраççĕ, ăна кино ӳкерсе кăлараççĕ. Кун хыççăн Н. Мранькка «Атăл тăрăхĕнче» ятлă киносценари çырать. 1933 çулхи февраль уйăхĕнче ăна «Союзкинохроникăн» Чăваш студийĕн директорĕ туса хураççĕ. Кунта вăл 1938 çулччченех ĕçлет.

Каярахпа Н. Ф. Мранькка «Чăваш Коммуни» (хальхи «Коммунизм ялавĕ») хаçат корреспонденчĕ, хăйсен районĕнчи «Ленин ялавĕпе» хаçат редакторĕ пулать. 1942 çулхи март уйăхĕнче ăна Хĕрлĕ Çар ретне илеççĕ. Кунта вăл — мĕн вăрçă пĕтиччченех политработник.

Çар хыççăн Никифор Федорович Куславккари парти райкомĕнче, райисполкомра ĕçлет, халĕ — пенсионер, писатель-профессионал.

Çапла, вуникĕ çултах хăй тĕллĕн пурăнма пуçланă ăста, талантлă писатель пурнăçăн пысăк та вăрăм, йывăр та кăткăс, йӳçĕ те хаваслă вăрăм çулне утса тухнă, çав çулпа халĕ те çирĕп те сулмаклă утăмсемпе, пысăк ăсталăхпа кĕнеке хыççăн кĕнеке çырса, ватăлнине-мĕнне туймасăр, иксĕлми шанчăкпа малалла утать.

Никифор Федорович Мраньккан малтанхи паллăрах произведенийĕсенчен, чи малтан, «Элнет» пьесине палăртса хăварма тивĕç. Ăна вăл 1928 çулта çырнă та, 1929 çулта Чăвашсен Государство Академи театрĕнче лартса панă. Çавăнтан вара писателĕн чăваш драматургинче анлă çул уçăлать. Вăл кашни çул тенĕ пекех театра çĕнĕрен-çĕнĕ пьесăсем парса пырать. Унăн драмăлла произведенийĕсем «Сунтал» журналта, «Трактор» альманахра, ытти пичет органĕсенче курăнма пуçлаççĕ. Вăл çырнă пĕр пайлă пьесăсене ялсенчи драмкружоксем юратсах ларта-ларта параççĕ.

Пьесăсемпе, киносценарисемпе ĕçленĕ хушăрах, Мранькка калавсемпе очерксем, критикăлла статьясем те чылай çырать, яланах пурнăçпа тан пыма тăрăшать. Унăн произведенийĕсенчи тĕп сăнарсем — таса чунлă, пысăк ĕмĕтлĕ, хастар чĕреллĕ çынсем. Вĕсем ăста кăна пулин те, мĕнле кăна йывăрлăха лексен те, аллисене усмаççĕ, пуçĕсене пĕкмеççĕ, çирĕп, хăюллă тăраççĕ, тĕрĕслĕхе тупаççĕ-тупаççех. Писатель пирĕн тĕлĕнмелле хăвăртлăхпа шав малалла аталанса пыракан пурнăçа чăрмантарма пăхакан ăстиçук этемсене те манмасть. Вĕсене хытă питлет, тĕрĕс çул çине тухма вĕрентет.

Юлашки вунă-вуникĕ çул хушшинче Никифор Федорович çине тăрсах «Ĕмĕр сакки сарлака» ятлă историлле трилогипе ĕçлерĕ. Унта автор Атăл тăрăхĕнчи чăвашсен революциченхи пурнăçне, вĕсен ĕçне-хĕлне, чăваш ялĕсенче класс кĕрешĕвĕ мĕнле аталанса пынине тарăн та сарлакан çырса кăтартнă. Ку трилогин малтанхи кĕнекине пирĕн вулакансем лайăх пĕлеççĕ ĕнтĕ. Ăна пур çĕрте те хапăл туса йышăнчĕç. Халĕ, часах, унăн виççĕмĕш кĕнеки пичетленсе тухмалла. Автор ăна çырса пĕтерне.

Никифор Федорович Мранькка хăй утмăл çул тултарнине илемлĕ литературăри пултаруллăхĕ ӳссе, чечекленсе пынипе кĕтсе илет. Ĕмĕрĕн сакки чăн та сарлака. Эпир, унăн ĕçри юлташĕсем, унăн кĕнекисене юратса вулакансем, юбиляра вăрăм та сарлака ĕмĕр, çирĕп сывлăх, пур тĕлĕшпе те ăнăçлăх сунатпăр.

Çĕнĕ кĕнекесем

Поэтпа тĕл пулни

Вăрçă умĕнхи çулсенче Арсен Орлов ячĕ чăваш халăх хушшинче самаях сарăлма пуçланăччĕ: ун чух унăн сăввисем хаçатсемпе журналсенче час-часах пичетленетчĕç. Унтан, 1941 çултан вара, сăвăç ячĕ пачах çухалчĕ. Çавăнтанпа вулакансем пултаруллă çамрăк поэт çинчен ним пĕлмесĕрех пурăнчĕç темелле.

Акă халь, çирĕм çул иртсен, эпир каллех Арсен Орловпа тĕл пултăмăр. Хăйĕнпе мар... унăн сăввисемпе, сăнӳкерчĕкĕпе. Чăвашсен государство издательстви çамрăк поэтăн тĕрлĕ вăхăтра çырнă сăввисене пухса, уйрăм кĕнекепе пичетлесе кăларчĕ. Унта автор пурнăçĕ çинчен каласа паракан умсăмах та, поэт сăнӳкерчĕкне те пичетленĕ. Лайăх, кирлĕ, паха ĕç тунă издательство.

Пĕчĕк кĕнекере пурĕ те вунсакăр сăвă çеç. Анчах çавсене вуласа эпир вăхăтсăр ĕмĕрĕ татăлнă поэтăн ăшне-чиккине те, вăл мĕнле пысăк та çунатлă ĕмĕтсемпе пурăннине те, хамăрăн Тăван çĕршыва, халăха мĕн тери хытă юратнине те, авторăн çырас ăсталăхĕ еплерех пулнине те уççăнах куратпăр, çавсене чунпа та, чĕрепе те сисетпĕр, туятпăр.

1939—41 çулсем — тискер, хăрушă çулсем пулнă: Европăри нумай çĕршывсенче вăрçă пынă, çын юнĕ юхнă, хуласемпе ялсем çуннă. Çав хăрушлăх сарăлсах, анлăлансах, çивĕчленсех пынă. Çак канăçсăр лару-тăрăва Арсен Орлов лайăх пĕлнĕ, ăна пĕтĕм чун-чĕрипе туйса тăнă:

Каллех анăçра
Тар шăрши саланать,
Вут-хĕмлĕ çил-тăвăл
Кĕрлет арăш-пирĕш.
Пушар Берлинра,
Вит хыпать Лондона,
Тӳпе тăхлан çумăр
Тăкать каçăн-ирĕн.
Кĕрен хĕвеланăç
Пачах лăпкă мар —
Унтан çул тытаççĕ
Çилсем тĕнче тăрăх...

тесе çырнă вăл хăйĕн «Хĕвеланăç çилĕсем» ятлă сăввинче 1940 çулта.

Парти панă тивлете пула аслă пĕлӳ илнĕ, хăйне тăван çĕршыв пăхса ӳстернĕ поэта чи малтан çĕршыв умĕнче, пĕтĕм совет халăхĕ умĕнче тăракан пысăк ыйтусем интереслентернĕ. Çавăнпах ĕнтĕ кĕнекере Тăван çĕршыв çинчен çырнă сăвăсем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Поэт хăй çуралса ӳснĕ вырăнсене, анлă Атăл тăрăхне, вăрмансемпе хирсене, улăх-çарансене, пĕтĕм аслă Совет çĕршывне чĕререн юратать. Çавăнпа та ăна нимĕнле тăшмана та таптаттармĕ, уншăн юлашки юн тумламĕ юлмичченех паттăр кĕрешĕ.

Савнă маршал — нарком
пĕр сăмах каласассăн,
Ман Тăван çĕршыва
тапăнсассăн тăшман,
Хатĕрех эп —
тухатăп пĕр шиксĕр,
хавассăн
Тăшманпа юлашки
сывлăшчен çапăçма.
Тăшмана пĕтĕмпех,
тĕппипех эп аркатăп
Шеллемесĕр хам
пурнăçăмпа юнăма.
Сывлăшра, тинĕсре, çĕр çинче—
хăть ăçта та
Эп пултарăп
çĕршыв ирĕкне сыхлама!

Çапла çырнă поэт-патриот «Аслă тупа» ятлă сăввинче. Вăл çĕршыв умĕнче панă тупана чыслă пурнăçланă.

Арсен Орловăн сыхланса юлнă сăввисем нумаях мар. Тен, кам пĕлет, пирĕн тĕпчевçĕсем хăçан та пулин унăн çĕнĕ произведенийĕсене те шыраса тупĕç, тен, вĕсем чăнах та йышлах пулман пулĕ. Анчах эпир халлĕхе çак пĕчĕк кĕнекене вуланипех унăн авторĕ поэзи обществăра пысăк вырăн йышăнса тăнине тĕплĕ ăнланса ĕçлени, Арсен Орлов ăста лирик пулни çинчен те пĕтĕм сасăпах калама пултаратпăр. Кĕнекене кĕртнĕ «Аннене». «Çумăр хыççăн», «Çăл», «Самант», уйрăмах «Асату» сăвăсем поэт чуна çĕклентерекен çепĕç те ăшă кăмăллă нумай-нумай произведенисем çырма пултарни çинчен калаççĕ.

Çамрăклах тăван çĕршывшăн пуçне хунă поэтăн сăввисене вуласа тухнă хыççăн пĕтĕм чĕререн: «Çăмăл пултăр йывăр тăпру, тăванăм, канлĕ пултăр выртан вырăну»,— тесе калас килет.

Г. ПЛАСКИН.

„Садри лагерь“

Пирĕн ачасем этемлĕх тĕлĕнмелле пысăк шухăш-ĕмĕтсене пурнăçа кĕртсе пынă вăхăтра, совет çынни тĕнче уçлăхĕнче вĕçсе çӳренĕ чухне ӳссе çитĕнеççĕ. Вĕсемшĕн çĕр чăмăрĕ тавра çаврăнакан спутник те, Венера патне вĕçтерсе янă е Уйăхăн тӳнтер енне ӳкерсе илнĕ аппаратсем те фантазилле япаласем мар ĕнтĕ. Çапла, паянхи ачасем тĕлĕнмелле пысăк шухăшĕмĕтсемпе паттăртан та паттăрла ĕçсем тума ĕмĕтленсе ӳсеççĕ. Вĕсен чун-чĕри, шухăш-ĕмĕчĕ паянхи тĕлĕнмелле ĕçсемпе, ӳлĕмрен тумалли тата та пысăк, чаплă, мухтавлă малашлăхпа çирĕпленсе пыраççĕ. Апла пулсан, пирĕн паянхи ачасен çав кăмăлĕсене çырлахтармалли произведенисем çырса пама тăрăшмалла. Çапла калани, паллах, ачасене хăйсен кулленхи пурнăçĕнчен аякра тăракан фантазилле япаласем çинчен çеç çырса кăтартмалла тенине пĕлтермест. Повĕçри е калаври геройсем кашни класра, кашни шкулта вĕренекен ачасем пекех пулччăр, вĕсем тăвакан ĕçсенех туччăр, анчах та вĕсем вулакан кăмăлне кай-

ччăр, пионерсемпе вĕренекенсем çав геройсем пек лайăх çынсем пулма, усăллă ĕçсем тума тăрăшчăр. Çакăн пек кĕнекесенчен пĕрне, Павел Семеновăн нумай пулмасть Чăвашгосиздатра пичетленсе тухнă «Садри лагерь» повĕçне, палăртса хăвармалла. Кунта ача-пăчасен кăмăлĕсене, шухăшĕсене аван пĕлекен автор пĕр шкулти ачасен çуллахи каникул вăхăтĕнчи ĕçне-хĕлне çырса кăтартать. Малтанласа ĕççĕр, ним тума аптраса çӳренĕ ачасем — Юрий, Аркаш тата Тарас — каярахпа колхозшăн кирлĕ ĕçсем сахал мар тăваççĕ. Хăйсем те уссăр сулланса çӳреместĕ, çынсемшĕн те лайăх ĕçсем тăваççĕ: колхоз садĕнчи йывăçсен айĕсене кăпкалатаççĕ, вĕсене апатлантараççĕ, пушă вăхăта йĕркеллĕ, чăн-чăн пионерла ирттереççĕ. Ачасене ертсе, хавхалантарса пыракан шкул директорĕ, аслă пионервожатăй, колхоз председателĕ самрăксене ĕçе, йĕркене хăнăхтараççĕ. Çакна вĕсем питĕ пĕлсе, ăста, сăпайлă туса пыни сисĕнет. Вĕсем ытлашши сăмахсем калаçсах каймаççĕ, ача-пăчасен ĕмĕчĕсене татмаççĕ, çутçанталăкăн илемне туйса, сиссе илме майсем туса параççĕ.

Колхоз садĕнчи чи илемлĕ, савăнăçлă вырăнта лагерь уçăлать: хавхаланса кайнă ачасем лагерь ялавне пĕлĕтелле çĕклеççĕ, çак чуна çĕклентерекен саманта тивĕçлĕн кĕтсе илес тесе, вĕсем çилсене якатаççĕ, хăйăрпа сапса тикĕслеççĕ, иртен пуçласа каçченех ĕç вĕресе тăрать. Ретĕн-ретĕн лартса тухнă йывăçсен вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть. Ирсерен кайăксем чĕвĕлтетеççĕ, хăйсен çепĕç юррисене шăрантараççĕ. Тарăн çырмари шыва ыраштăрисем, уланкăсем пырăнаççĕ. Ан йĕркен çеç — пилĕ шĕпри те касса кайсах çийĕн! Садри лагерьте ачасем чăн-чăн савăнăç, хаваслăх тупаççĕ. Кашни йывăç, кашни çырла тĕмĕ вĕсемшĕн хаклă пулса тăраççĕ. Хи алисемпе кăпкалатнă йывăç айне пĕрре мар пырса тихатăн, ирисем хăйсемех сана унта илсе çитереççĕ. Каникул вăхăтĕнчи кунсем юмахри пек иртсе пыраççĕ: ачасем ĕçлеççĕ, савăк ĕç вĕсен сывлăхне те çирĕплетет.

Ял пирнăçне пĕлни, хирти ĕçсен хăйне майлă хавхаланиллă илемне ӳкерсе пама пултарни — «Садри лагерь» кĕнекен паха енĕ. П. Семенов ача-пăчасене ăшă кăмăлпа сăнласа парать. Автор сюжет тилхепине (хăшпĕр чухне лăнчăрах тыткаласан та) алăран вĕçертмест, вулаканăн кăмăлне, вулас хаваслăхне пăсса хумасть. Аркаш, Тарас, Юрий хушшинчи хутшăнусем аталансах пыраççĕ. Малалла та çак ачасен ĕçĕсем çинчен пĕлес килет. Вĕсен сăн-питне ӳйрăмлатса, пĕр хăйсене çеç тивĕçлĕ паллисене ӳкерсе парайман пулин те, повĕçри ачасене пăтраштарса ямастăн. Юрий вăл Юрий, унăн чăн паллă енĕ — хăйне ыттисенчен аслăрах тытасси.

Енчен те автор унăн пит-куçне, сăнне-пуçне, мĕнле çӳренине те сăнласа панă пулсан, кĕнекен паха енĕсем татах та нумайланнă пулĕччĕç.

«Садри лагерь» кĕнекере темле кăткăс, пăтранса каякан психологие, йывăр ыйтусене татса парас ыйтăва лартман. Ансат тема суйласа илсе, П. Семенов çак темăна аванах уçса панă. Çавăнпа кĕнекене кăмăлласах вулатăн.

Г. АЛЕКСАНДРОВ.

Тухăçлă çул

(Пĕлтĕрхи кĕнекесене вуланă май пуçа килнĕ шухăшсем)

МАЛТАН АСĂРХАТТАРНИ

Ку статья критикăлла канонсене асра тытса çырнă тĕпчев те, «ĕç» те мар, кĕнеке вулама юрататакан çыннăн шухăшĕсем кăна. Унта вăл çук та ку çук, ун çинчен асăнман, цитатăсем сахал, тесе чакаланни — вăхăта сая яни кăна.

ПОЭТСЕН ПРОЗИ

Иртнĕ çул пире, прозăпа çыракансене, поэтсем те самай пулăшрĕç. Уйăп Мишши Инçетри Хĕвелтухăçне кайса çӳренин дневникне пичетлесе кăларчĕ. Александр Алка «Лира» ятлă пысăк калав, «Хурама та хурăн» повесть çырчĕ. Василий Алендей татăклăнах проза енне кусрĕ пулас. Вăл хамăр таврари кулленхи пурнăçран илсе, калав хыççăн калав, кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларать. Алли те ун хĕрнĕçем хĕрсе пырать. В. Алендей сăнама та, курма та пĕлет. Вăл эпир нимĕнле «калав» курман çĕртех сивĕч япаласем асăрхаса илме пултарать. Ахальтен мар пуль ĕнтĕ Мускаври хăшпĕр издательствăсем унăн творчествипе интересленe пуçларĕç.

Аркадий Ĕсхĕле эпир тахçанах хамăр енне куçарнă ĕнтĕ. Ĕсхĕл поэтсенчен уйрăлчĕ, анчах поэзирен уйрăлмарĕ.

Уйăп Мишшин «Инсе çулсем тăрăх» кĕнекине пуринчен ытла пирĕн çамрăксем юратса вуласса шанас килет. Вăл кĕнекен юлашки сыпăкĕ ниста çитме те ӳркенмен ĕсчен чăваша мухтаса юрланă гимн пек янăрать. Уйăп Мишши поэт унта эпир пурте шухăшланă, пирĕн чĕлхемĕрсем вĕçĕнчех çӳренĕ, анчах ун пек хитрен çавăрса калама ăс çитереймен шухăшсене пĕтĕçтерсе каласа пама пултарнă. Пирĕн шухăшсене хамăра каласа парса тĕлĕнтерчĕ поэт. Çапла пулмалла та вăл художник тени. Белинский Н. В. Гоголь çинчен каланă сăмахсемпе, писатель ӳкерсе панă кашни сăнлăх вулаканшăн «палламан пĕлĕш» («знакомый незнакомец») пулмалла.

Ик-виçĕ уйăх инçетри çулсем тăрăх çӳресе таврăнса, Уйăп Мишши кĕнеке мар, пĕр çак «Чăвашсем пур-и? Пур!» тенĕ сыпăка çеç çырнă пулсан та, эпир ăна уншăн чĕрренех тав тума тивĕçчĕ.

А. Алка повеçĕнчи ĕçсем паянхи чăваш ялĕнче пулса иртеççĕ. Геройсем те эпир пĕлекен çынсемех: учительсем, шофер, ĕне сăвакансем...

«Хурама та хурăн»— лирикăлла повесть. Унта автор ялти çамрăксен кулленхи ĕçне-хĕлне, вĕсен савăнăçĕпе юратăвне, вĕсен ĕмĕтне, кĕскен каласан,— хальхи çамрăксен чунне уçса парас тĕллев лартнă. Чылай енчен вăл хăйĕн шухăшне пурнăçа кĕртнĕ.

Тĕрлĕ тĕслĕ, тĕрлĕ шухăшлă çынсем — тӳрĕ кăмăллă çамрăк учительница Ирина Игнатьевна, хавшак «Виçиван» (Иван Иванчă Иванов), чăрсăр та ăслă Белов учитель, хăйшĕн, пуянлăхшăн, пĕтĕм килйышне хăйĕн аллинче тытса тăрасшăн çунакан «Виçиван» амăшĕ тата ыттисем те,— çаксем пурте автор кăмăлĕпе пĕр повĕçе пуçтарăннă та, экран çинчи пек, пирĕн куç умĕнчен шуса иртеççĕ. Пурне те вĕсене пĕр çыхха çыхнă. Эпир хăшне-пĕрне вĕсенчен юрататпăр, теприсене курайми пулатпăр, виççĕмĕшĕсене пирĕн пулăшас килет. Эппин композици, сюжет тенисене автор аван йĕркелеме пĕлнĕ.

Илемлĕ литература произведенийĕ çырнă чухнехи йывăрри, ман шухăшпа, унти геройсен пурнăçĕнчи улшăнусене ĕненмелле кăтартса парасси. Ку повĕçре мана Иванов шоферпа Белов учитель «çитĕнни» савăнтарчĕ. «Виçивана» эпир малтан ĕçре куратпăр. Вăл уçă кăмăллă йĕкĕт. купăççă. ĕçлеме юратать, савăнма та пĕлет. Савнă хĕрĕ те пур унăн — Марине. Унтан вăл Иринăна курать те ăна юратса пăрахать, уншăн çунма тытăнать. Ирина та килĕштеретмĕн ăна. Вĕсем пĕрлешеççĕ. Анчах нумай та иртмест — уйрăлса каяççĕ. Писатель унăн сăлтавне те кăтартса парать. Пĕр енчен вăл —«Виçиван» амăшĕ, çăткăн хĕрарăм, тепĕр енчен —«Виçиван» хăй мемме пулни. Автор ăна хурамапа танлаштарать.

«Çăмăл авăнать пулмалла çав йывăç. Çавăн пек час авăнакан çынсем те пур-мĕн пурнăçра. Хамăн çавăн пек пулас марччĕ»,— тесе шухăшлать Ирина та.

Повесть вĕçĕнче Иванов каллех Иринăна шыраса тупать. Вĕсем пĕр сăмах та калаçмаççĕ, çапах вулакан сисет — вĕсен пурнăç çулĕ пĕрле. Иванов çинчен автор кăшт тăрăхласарах çапла каласа хурать: «...йăваш, калаççах каймасть, амăшне итлет. Начар упăшка пулас çук», тет. Хушаматне те ăна тивĕçлине тупса панă: Иванов (Иванов, Петров, Сидоров сăмахран.)

Ытти «геройсенчен» пурăнма «пĕлекен» чăрсăр Белов учитель сăнарĕ ăнăçлăрах тенĕччĕ. Асра

ХАСТАР КУНТИ ÇЫНСЕМ

Шупашкарти Калинин урамĕн варринче темиçе хутлă пысăк çурт ӳссе ларчĕ. Вăл пир-авăр комбинатĕнчен аякра мар, хальхи хăю тĕртекен фабрикăн кивĕ çурчĕпе юнашарах. Çакăнта ĕнтĕ хăю тĕртекен çĕнĕ фабрика ĕçлеме пуçларĕ. Халь кунта пирвайхи цехсем ĕçлеççĕ, монтажниксем çĕнĕ станоксемпе машинсене вырнаçтараççĕ.

Кивĕ фабрикăн çуртне тултан пăхма та, шала кĕрсен те ытла та кичеммĕ, тĕксĕммĕ. Фабрикăра питех те тăвăр, çутă та çителĕксĕр, сывлăшĕ те пăчă. Çак çуртра авал хулари тимĕрç лаççи пулнă, вăрçă вăхăтĕнче пирвайхи станоксене вăхăтлăх вырнаçтарнă пулнă.

Çапах та рабочисем хăйсен фабрики чысне çӳлте тытса тăраççĕ. Хăю тĕртекен фабрика коллективĕ республикăри малта пыракан предприятисенчен пĕри шутланнă. Кăçалхи пĕрремĕш квартал планне те рабочисем ирттерсе тултарчĕç. Халĕ кунта виççĕр рабочие яхăн ĕçлет, çĕнĕ çурта хута ярсан пин те икçĕр ытла çып пулмалла. Партин XXII-мĕш съезчĕ тĕлне рабочисем çĕнĕ фабрикăна пĕтĕмпех куçаççĕ.

Çĕнĕ çуртра строительсемпе пĕрлех халĕ монтажниксем те ĕçе тытăнчĕç. Ку анчах мар, пирвайхи цехсем те продукци пама тытăнчĕç. Фабрикăри инженерсемпе техниксем, монтажниксем малтанхи цехсене хăю тĕртекен пысăк станоксем вырнаçтарса лартаççĕ (пĕрремĕш ӳкерчĕк). Уйрăммăнах Алексей Александров бригади сак ĕçсенче палăрса тăрать. Вăл ăста монтажник, хăй ĕмĕрĕнче пайтах çамрăксене ĕçе вĕрентнĕ. Халь та акă, ĕç умĕн Александров бригадир монтажниксене карета картопне епле вырнаçтармаллине тĕплĕн ăнлантарать (иккĕмĕш ӳкерчĕк).



Монтажниксем станоксемпе машинсене вырнаçтарса лартсан вĕсене маçтăрсемпе маçтăр помощникĕсем ĕçлеттерсе тĕрĕслеççĕ. Фабрикăри нумай çулсем хушши ĕçлекен маçтăр помощникĕ Владимир Шарпенюк вара станоксен кашни пайне, вĕсем епле ĕçленине тĕплĕн тĕрĕслесе йышăнать. Паллах, ăста рабочи кашни кăлтăка

юлакан сăнсем татах та пур: урок сахаллишĕн мăртăхса çӳрекен, çынсем çинчен элек сарма та ӳркенсе тăман Юлия Ивановна учительница, ĕне сăвакан вĕри чĕреллĕ Танç, Ирина ашшĕ Игнатий Михайлович. Игнатий Михайлович çинчен вуланă чухне темле чăн пулнă япала çинчен вуланă пек астуса тăратăн...

Чĕлхе лайăх Алкан. Повеçри ĕçсем çинчен вăл ытлашши кăшкăрашмасăр, чĕре патне пымалла лăпкăн та ăшшăн каласа парать. «Геройсене» те вăл хăйсем пек калаçтарма хăтланать. Метафорăсем, эпитетсем хитрисем тĕл пулаççĕ. Хăшпĕр танлаштарусем ытарма çук. «...Кăнтăрла пӳрт çиййĕнчен, йĕке пек çакăнса тăракан пăрсенчен тумла тумлать», тесе хресчен килĕнче ӳснĕ çын çех çырма пултарнă.

Повеçе уйрăм кĕнекен кăларичен ĕçлемеллисем те пур-ха авторăн. Чылай сăнарсене вăл аран палăрмалла йĕрсемпе çеç ӳкерсе хунă. Ăнăçлă пулса тухнă тенисене те тарăнлатсан пăсмĕччĕ. Герой тени вăл алăпа тытса пăхмалăх пултăрччĕ!

Колхозри парторганизаци секретарьне Анастасия Михайловнăна чĕррĕн кăтартас тесе автор темле те тăрăшнă-мĕн те, пурпĕрех вăл шупка пулса тухнă. Чĕрĕ çын пек курăнас тесе, вăл хăй ге тем те тăвать повеçре, ыттисем те мухтаççĕ ăна, çук, пурпĕрех шупка вăл. Те ăна автор ытлашши юратни пăсать (хамăрăн юратнă геройсене эпир тĕрлĕ усал ĕçсенчен хӳтĕлесе сыхласа пыратпăр-пыратпăр та, вĕсем, вĕретнĕ шывпа шăварса пуранна чечек пек, пирĕн куç умĕнех имшерленме тытăнаççĕ), те ăна художниксем ĕçлекен мелкепе таçтан юлашки хут сĕрсе кăна илмелле. Кирек мĕнле пулсан та, автора чĕрĕ шыв туптарасах килет...

Повеçри хирĕçӳсене А. Алка час-часах çăмăллатса пырать. Институт пĕтернĕ хĕр шофера качча тухасси çинчен сăмах тапрагсан, Ирина амăшĕ тем пекех тилĕрсе каять.

«— Каймастăн!— шухăша кайнă çĕртен сасартăк вăранчĕ тейĕн амăшĕ.— Ăна каяс пулсан... ăна каяс пулсан... ман урлă, гăван аннӳ урлă каçса каях! Хапха умне тухса выртăп! Ан тив, пĕтĕм ял куртăр! Куртăр! Култăр!

Вăл тармаклансах кайрĕ. («Кай» сăмах кунта ытлашшипех пулнăран, эпир ăна аялтан паллă тусах хăвартăмăр.)

Вулакан «геройсем» хăйсене çĕнĕ енчен кăтартса парасса кĕтме кăна тытăннăччĕ,— хирĕçӳ сĕврĕлсе те каять. «Амăшĕ ăна (хĕрне ĕнтĕ. Хв. У.) çурăмĕнчен çупăрларĕ. Хĕрĕн пурнăçĕнче вара чи малтанхи хут икĕ куçĕнчен икшер тумлам куççулĕ пăчăртанса тухрĕ, пичĕ çине йĕр хăварса урайне тумларĕ».

Геройсене «ирĕке яма» хăрани ватă учительница Юлия Ивановнăпа Ирина хушшинчи хирĕçĕве те йăвашлатать.

Пурнăçра çынсем «тарăнрах», чĕрĕрех пек туйăнать. Хăйсем пĕлме пек пурăнма тытăнсан, кĕнекери геройсем те «кĕтмен» япаласем турта-турта кăлараççĕ. Эпир вĕсене çирĕп алăра тытса тăни, хамăр малтанах шухăшласа хунă пек çеç кăтартни, вĕсене «пăсасран» хăрани пирĕн геройсене хавшатса хăварать. «Хурама та хурăн» повеçри Иринăпа та çаплах пулса тухман-ши, тетĕп эпĕ. Вăл сахал ӳсет, унăн ăс-тăн интересĕсем анлă мар...

Хамăрпа юнашар пурăнакан çынсене, пирĕн вăхăтри паттăрсене эпир ытла та сӳрĕккĕн кăтартатпăр. Вĕсен тĕнче курман ĕçĕнчен пулас ăрусем тĕлĕнĕç, анчах чылай кĕнекесенче çирĕммĕш ĕмĕрĕн утмăлмĕш çулĕсенче пурăннă этемсене çителĕксĕр сăрлани кӳрентерĕ вĕсене.

«Изображение нашего человека так, как того он заслуживает, должно быть повышено в тоне и красках»,— тенĕ Алексей Максимович Горький. Ку сăмахсем паян кун та хăйсен хакне çухатман...

ӲСĔМ ÇУЛĔ

Кашни пухурах пĕрне-пĕри çитменлĕхсемшĕн ятлатпăр пулсан та, пирĕн çитĕнӳсем те çук мар. Юлашки çулсенче уйрăммăнах чăваш прози хăвалтлăн аталанса кайрĕ. Халиччен хисеп тĕлĕшĕнчен сарăлса çирĕпленни, вăрттăн вăй илсе тĕрекленни ик-виçĕ çул хушшинче пахалăха куçрĕ. Халь ĕнтĕ пирĕн ăста çырнă калавсемпе повеçсем кăна мар, чип-чипер романсем те пур. Хамăр та юратса вулатпăр, ытти чĕлхесене те куçараççĕ. Ют çĕршывсенче те илтĕнеççĕ пирĕн ятсем...

Тĕлĕнмелле пулсан та, тĕп-тĕрĕсех ĕнтĕ: хĕрĕх — аллă çул каялла çеç-ха пирĕн нимĕн те пулман. Халь хĕрсех ĕçлекен писательсен ашшĕ-амăшĕсем ун чухне суха тунă, кĕтӳ кĕтнĕ. Совет влаçĕ пулман пулсан, вĕсен ачисем те (хальхи писательсем) çав çулпах каятчĕç — кĕтӳ кĕтĕтчĕç, тарçа кĕрĕшсе ĕçлĕтчĕç.

Ĕлĕкхине эпир ытла та час манса каятпăр. Ăна вăхăтран вăхăта аса илсе тăни пире ĕçлеме кăна пулăшать: усаллине асăнмасан, ырри пулмасть, тенĕ.

Вăтăр çулсем-мĕнсем каялла та пирĕн прозăра примитивлă калавсемпе очерксем çеçчĕ-ха. Çапах эпир вĕсене кăсса кайсах вулаттăмăр. Çыраканнисем те хавхаланса çыратчĕç пулмалла. Хут пĕлмесĕр иттернĕ ăрусен шухăш-кăмăлне каласа пама васканă пекех, ун чухне пурте çырнă. «Нăр-пăр», тенĕ евĕрлĕ сăмахсене ылмашăнтарса рифмăласа çырнине — поэзи, тенĕ. Мĕн ге пулин çинчен мĕнле те пулин çыхăнтарса каласа пани калав пулнă. Анчах çеç йывăр ĕçрен уйăрлнă çынсен аллинчи ручкăсем те чĕтреннĕ-ха.

Унтан пирĕн «повесть сыпăкĕ», «çырма палăртса хунă роман татăкĕ» тенисем курăнкала пуçларĕç. Эпир, пĕчĕк вулакансем, савăнаттăмăр: малтанхи çеçпĕлсем пире розăран чаплă пек курăнатчĕç.

Вăтăрмĕш — вăтăр пиллĕкмĕш çулсенче ансатрах формăпа çырнă повесть-асаилӳсем пичетленсе тухрĕç (Хумма Çеменĕн «Ача чухне», В . Краснов-Аслин «Шуррисемпе çапăçни»— каярахпа автор ун ятне «Вутра» тесе улăштарнăччĕ; И. Тукташăн «Вăкăр çырми». Трубина Мархвин «Мучар» повеçĕсем те пĕр йĕрпе аталанса пыракан произведенисемех).

Вара романсем тухма тытăнчĕç. Малтан кунта та роман-хроника, роман-асаилӳ çул хыврĕ. Унтан вĕсен формисем кăгкăслана пуçларĕç. Пĕр çын пурнăçĕ çинчен каласа паракан кĕнеке вырăнне темиçе йĕрпе юпленсе каякан романсем тухрĕç. Халь ĕнтĕ пирĕн дилогисем, трилогисем те пур...

Çак тĕлĕнмелле çитĕнӳ вăл хăй ăссĕн пулман — ăна кашни самантрах парти çул кăтартса ертсе пынă, совет влаçĕ пулăшса тăнă.

Иртнĕ 1960 çулта эпир М. Кипек, К. Турхан, Н. Мăранькка, Л. Агаков, В. Алендей, М. Илпек, А. Лазарева, В. Алакер тухăçлă ĕçленине курса савăннăччĕ. М. Кипек пĕрремĕш романне çырса пĕтерсе журналта пичетлесе кăларчĕ те... ăна çĕнĕрен юсаса çырма ларчĕ. Ĕç ăнăçлă пулнă: халь «Кайăк тусĕ» романа (вырăсла ячĕ ун «Сунарçăсем» пулать) Мускаври «Советский писатель» издательство вырăсла ку-

тӳрех асăрхать, вăл станок юсакансене те вĕрентме ӳркенсе тăмасть, вĕсене пулăшма яланах вăхăт тупать (иккĕмĕш ӳкерчĕк).

Çĕнĕ цехсенче çĕнĕ машинсемпе автоматсем май уявĕ умĕн ĕçлеме тытăнчĕç. Кунта çутă, таса, ăшă, сывлăш та усă. Цеха кĕрсен каялла тухас килмест. Пур çĕрте те типтерлĕх палăрать. Работницăсем хăйсем те станоксене таса тытаççĕ. Акă çип çăмхалакан çĕнĕ машинсенчен пĕринпе Мария Макеева шпульница ĕçлет. Вăл çĕнĕ машина малтанхи кунсенчех лайăх вĕренсе çитрĕ те кулленхи задание ирттерсе тултарма пуçларĕ (тăваттăмĕш ӳкерчĕк).

Фабрикăри пултаруллă ткачихăсенчен пĕри Елизавета Петровăна чи малтан çĕнĕ цеха ĕçлеме куçарчĕç. Хăю тĕртесси çăмăл мар, анчах пултаруллă ткачиха хăй ĕçне лайăх пĕлет, çĕнĕ машинсене те хăвăрт хăнăхрĕ, май уявне те ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕ (виççĕмĕш ӳкерчĕк).

Çĕнĕ фабрика хута каять. Кăçалхи çур çул хушшинче кунта ТЛ-80 маркăллă сакăрвунпилĕк станок вырнаçтарса хута яма палăртнă. Монтаж ĕçĕсене те фабрика хăй вăйĕпех туса пырать, ку вара ĕçе чылаях хăвăртлатма май парать.

Çĕнĕ фабрика çĕнĕ продукци кăларма тытăнать. Капрон çиппинчен хăю тĕртсе кăларма çамрăксене вĕрентеççĕ, çавна майпа çĕнĕ фабрика çумĕнче ФЗУ шкулне йĕркеленĕ. ФЗУ инструкторĕсем — çамрăк маçтăрсем. Галкина, Груздева, Малыгина, Буницова, Никитина инструкторсем кунта пир-авăр техникумĕнчен вĕренсе тухсан килнĕ. Нумаях пулмасть вĕсене маçтăра куçарнă.

Фабрика ӳснĕ май ун çыннисем те ӳссех пыраççĕ. Хăю тĕртекен фабрика коллективĕ мухтавлă Коммунистсен партийĕн съездне тивĕçлипе кĕтсе илме, фабрикăна йăлтах хута яма пĕтĕм вăя хурса тăрăшаççĕ.

А. ПАВЛОВ.

Сăнӳкерчĕкĕсене А. Припалов тунă.

çарса пичетлесе кăларать. Кăçалах вăл чăвашла та уйрăм кĕнекен тухмалла.

(«Юсаса çĕнетнĕ», «произведение тепĕр хут пăхса тухса тӳрлетнĕ», тенисене илтсен, пиртен хăшпĕрисем шăлйĕрме пăхаççĕ. Вĕсен шухăшĕпе, вулакансем сĕннине шута илсе, е авторăн хăйĕн кăмăлĕ тулманнипе, пĕрре пичетленсе тухнă произведение çĕнĕрен тӳрлетни, юсани, хушни писатель япăх ĕçленине пĕлтерет иккен.

Темешĕн тем шут та, Çамашăн çав шутах, теççĕ-и-ха? Урăхла калани те пурччĕ пулас. «Ирĕклине ирĕк, ӳсĕррине рай, Мисаил атте», тет «Борис Годуноври» Варлаам.

Пĕр енчен, пирĕн самани çавнашкал. Эпир яланах хамăра тӳрлетсе каланине шута илетпĕр. Пухусенче ăна — критикăна йышăнни, теççĕ. Тепĕр енчен тата ĕнерхи ĕçĕмĕр паян пирĕн кăмăла çырлахтарманни эпир ӳснине пĕлтерет-çке вăл. Писатель ĕçĕ вăрăма тăсăлакан ĕç, кирлĕ мар çĕртенех вăл çĕнĕрен тумалли ĕçне пăрахса киввине тытса лармĕччĕ.

Писатель тени кирек хăçан та хăйĕн ĕçĕпе кăмăлсăр пулмалла, яланах усăмлăрах, илемлĕрех калама тăрăшмалла. Классиксем мĕнле ĕçлени пирĕншĕн тĕслĕх те, шкул та. Французсен аслă çыруçи Гюстав Флобер пирки такам: вăл хăйĕн ĕмĕрне предложенипе кĕрмешсе иртттерчĕ, тенĕччĕ. Флобер пиркиех унăн чаплă вĕренекенĕ Мопассан çапла аса илет.

Пĕррехинче Флобер патне тусĕсем (писательсем) пуçтарăнчĕç, тет. Кил хуçи вĕсене нумаях пулмасть çырса пĕтернĕ «Простое сердце» ятлă калавне вуласа панă. Итлекенсенчен тахăшне пĕр пĕчĕк абзац килĕшмен-мĕн. «Çырăва пĕлмен служанкăшăн ку шухăш ытла кăткăсрах мар-ши?» тенĕ вăл. Пит те йывăррăн çыракан Флобер унпа килĕшнĕ, анчах хăраса ӳкнĕ: «Капла манăн пĕтĕм предложенинех тӳрлетме тивет-çке!» тенĕ вăл.

Хăй çапах, тусĕсене сывăрма вырнаçтарса пĕтерсенех, ĕçлеме ларнă. Унăн пĕр вунă-вуник сăмах тӳрлетсе çырмалла пулнă. Флобер çĕрĕпе ĕçленĕ. Çыра-çыра хуратса, çирĕм страница хут пĕтернĕ, анчах хăй шухăшланă пек çавăрса калама пултарайман та, малтан мĕнле çырнă — çаплипех хăварнă.

Пире халĕ те автомат-ручкăсем пулăшаççĕ (Флоберсем хур тĕкĕпе çырнă), те эпир спутниксемпе ракетăсен саманинчен юлас мар тетпĕр — пĕр каçра çирĕм-вăтăршар страница кăчăртаттарса тухатпăр.

Пирĕн çакăн пек «ăстаçăсем» те пур-ха: куккук çăмарта туса пăрахнă пек, вĕсем калав е повесть çыркаласа пăрахаççĕ те урăх ун еннелле çаврăнса та пăхмаççĕ. Калавĕ-повесĕсене редакцисенче кам мĕнле пĕлет — çавăн пек тӳрлетеççĕ, кĕскетеççĕ, хушаççĕ,— авторшăн пулсан, нимĕн те мар. Вăл хăйĕн «произведенине» корректурăра та пулин вуласа пăхмасть. Ăна икĕ япала çеç интереслентерет: чап тата укçа).

Александра Лазарева 1960 çулта пичетленĕ калавсенчен мана «Таркăнсем» килĕшерех панăччĕ. Унта вăл çын психологине темле кĕтмен енчен кăтартнăччĕ. Писательница тĕрĕс тăвать: тепĕр чухне асаплансарах пулсан та, темăсене хăв пĕлнĕ пек татса пама тăрăшмалла. Çын кусĕпе пăхса çырни художникшĕн тупни мар, пуррине сухатни. Халиччен никам каламан сăмаха тупма та кансĕр, çапах шырани паха.

Яланхи пекех Леонид Агаков пĕлтĕр те хĕрсех ĕçлерĕ. Вăл хăйĕн кулăшла калавĕсене вырăсла куçарттарса кăларчĕ («Всерьез и в шутку» кĕнеке), икĕ повесть çырса пĕтерчĕ. Çав вăхăтрах критика хĕçпăшалне те аллинчен вĕçертмерĕ вăл, журналист ĕçне те тиркесе тăмарĕ.

Кашни паха япаланах тӳнтер енĕ пур-мĕн. Пурне те тума хăтланнипе кашни ĕçех кирлĕ пек туса çитерме çук. «Ытам çитменнине ыталаса илеймĕн», тет Козьма Прутков. Васканă вырăнсенче Л. Агаковăн чĕлхи чăвашлах мар, сăнарĕсем шупка. Халлĕхе вăл мана аслă стройкăри тĕрлĕ ĕç тăвакан рабочие аса илтерет. Тăрăшсан, вăл бригадир та, мастăр та пулма пултарать.

В. Алакерĕн «Çул юппинче» повеçне уйрăм статьяра пăхса тухас килет, çавăнпа ун пирки кунта чарăнса тăмасан та юрĕ.

Илпек Микулайĕ пĕлтĕр «Тăван Атăл» альманахра «Хура çăкăр» романăн иккĕмĕш кĕнекин пайĕсене пичетлеттерчĕ. Тӳррипех калăпăр: «Хура çăкăр» чĕре патне пымалли апат пулчĕ. Çăпăхне алласа çитерейменнипе тĕллĕн-тĕллĕн унта сăсăлĕ те кайкаланă, тен, кăмакинчен те васкарах кăларнă пуль. Çапах вăл таса ыраш çăкри те, ăна киленсех çиетĕн.

Ытарлă сăмахăн шухăшĕ пытарлă, тет. Унсăрах калăпăр эппин. Иккĕмĕш кĕнекин сыпăкĕсене Илпек васкаса çырни сисĕнет. Те ăна капланса килсе тулнă сăнлăхсен канăç памаççĕ, васкатаççĕ те, вăл, сăнчăр ункисем тирнĕ пек, çинеçине, çине-çине чĕрĕ сăнарсем ӳкерет, сăрлать... купалать. Тепĕр чух ăна пĕр-пĕр илемлĕ ĕлке йăлтăр çиççе илсе тĕлĕнтерсе пăрахать те, тĕп йĕр çинчен мантарса ярса, хăй хыççăн таçта аяккалла ертсе каять. Малтанхи йĕр çине таврăнасса таврăнать Илпек, анчах вăхăчĕ иртет-çке. Тата тĕп йĕрне те сĕврĕлтерет. Хама хам хирĕçлетĕп пулсан та, кунта та тĕрĕссине калам: произведенин сюжетне мантарса аяккалла кĕрсе кайнă чухне те эсĕ писатель хыççăн интересленсех утатăн, мĕншĕн тесен вăл тултармăш пек çакаçака хăварнă эпизодсене те чĕререн çырать, çынсене художник куçĕпе курать.

Хĕр хăй хитрине сиссен, ейкеленме, хăйĕн хитрелĕхĕсене тата ытларах кăтартма тытăнать. Илпек Микулайĕ те хăйĕн чĕлхи пуяннине пĕлет пулас, пире, вулакансене, шалтах тĕлĕнтерсе пăрахас тесе, темле кукăр-макăрсем те çавăрттарса хурать те, эпир вара вырăнăн-вырăнăн нимĕн те ăнланми пулса ларатпăр. Ытла нумаях мар ун пеккисем, çапах та пур çав.

Хăвна ху тытма пĕлни чĕлхере те кирлĕ-мĕн. Тепĕр чухне унта та чаракĕ пултăр. Ху калас тенĕ шухăша çавăрса калайман вăхăтсенче кăна ирĕксĕрех таçти эмпирейсене улăхса кайма тивет. Ытти чухне усăмлă шухăша пурте ăнланмалла усăмлă сăмахсемпех каласа парасчĕ.

Çапах та Илпек — пысăк художник. Пире килĕшмен тĕлсенче те вăл художникех. Романăн иккĕмĕш кĕнекинче асран кайми Шерккей чĕрĕрен те чĕрĕ. Кирек мĕнле пуçтахлансан та, совесть тени те кăштах юлнă иккен-ха унăн. Вăл шухăша автор пуç тĕлĕнче кăшкăрса явăнакан текерлĕк сăнарĕпе кăтартса панă. Шерккейĕн йăлтах хăйĕн: сăн-сăпачĕ, çипуçĕ, хăтланкаланисем... чĕлхи. Скульптор пулсан, тыт та ӳкерсе ларт.

Тата Элентей мĕне тăрать. Вăл пĕтемпе те пĕр-ик страницăра çеç куранса иртет, вулакан ăна нихçан та манмасла астуса юлать.

Алапа Белюшне вара никам та çитеймест пулĕ. Кĕнекене вуласа тухсан, вăл санар пирен асра аслă писательсем укернĕ ĕмĕр манми сăнарсемпе юнашар тăрса юлать. Путсер те вăл, лайăх та, шеллетĕн те ăна, тарахса та илетĕн. Вăл — çын, пĕр самахпа каласан.

Романра темĕн те чухлĕ çын, анчах пурте весем хайсене евер, кашнин хайен пурнăç çулĕ. Вĕсем çинчен писатель темĕн те пĕлет...

Ман сăмах суя ан пултăр тесен, кĕнекене эсир те вуласа тухăр. Шантарсах калама пултаратап — укĕнмĕр.

1960 çулта нумай произведени пичетленнĕччĕ. Вĕсем çинчен пурин çинчен те калама выран та çитес çук. Кунта эпĕ чăваш прозин иртнĕ çулхи чи пысăк çитĕнĕвĕсем пирки çеç асăнасшăн. Вăл шута эпĕ Микихвер Мăранькан уйрăм кĕнекен пичетленсе тухнă «Ĕмĕр сакки сарлака» романĕпе Куçма Турханăн «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романне кĕртесшĕн. Ман шухăшпа, вăл кĕнекесенче эпир ăсталăх тĕлĕшĕнчен халиччен хăпарман чăнкă тӳпесене хăпартăмăр. Малашнехи çулăмăрăн вĕçĕ те çук, ку çапла. Анчах паянхи куна вĕсем,— çук, кармашса çитми тесшĕн мар эпĕ, çапах — çӳлте тăраççĕ-ха.

«ĔМĔР САККИ САРЛАКА»

Пĕлтĕр — виçĕмçулччен Н. Мăранькка пьесăсем çыркалатчĕ. Сайра-пĕрре калавсем те курăнкалатчĕç унăн. Пьесисене чăвашсен академи театрĕ те, ялти драмкружоксем те лартатчĕç. Çапах пурăна-киле вĕсем темшĕн асран тухса пыратчĕç. Калавсен ячĕсене те халь сахал çын çех астăвать пулĕ...

Çапла вунă çул, çирĕм çул иртсе кайрĕ... Юлашкинчен Н. Мăранькка тытрĕ те пире шалт тĕлĕнтерсе пăрахрĕ. Малтан романăн пĕрремĕш кĕнеки тухрĕ, унтан — иккĕмĕшĕ. Халĕ виççĕмĕш томне пичете пама хатĕрлеççĕ-мĕн.

Пирĕн хушăри хăшпĕр юлташсем, Н. Мăранькка-драматурга асра тытса, çаплах унăн романне вуламасăр лараканнисем,— пысăк йăнăш тăваççĕ...

Кĕнекене вулана чухнехи пĕрремĕш туйăм вăл — автор пурнăçа тĕплĕ пĕлнинчен тĕлĕнни. Писатель хăй хура-шурра курман, хресчен ĕçне туса çитĕнмен пулсан, ун чухлĕ пĕлĕве вăл нимĕнле командировкăра тупаяс çукчĕ.

Темĕн те кăтартнă автор ку кĕнекере. Халăх ĕненĕвĕ, ĕмĕчĕ, йăлисем, уявĕсем, ĕçĕ-хĕлĕ; ĕçниçини, савăнни, хурланни... Кил-çурт таврашĕ, çи-пуç. Ĕç хатĕрĕсем. Çулталăкăн пур вăхăчĕ те пур унта... Çав вăхăтрах кĕнекен тĕп шăнăрне те, унтан папкаланса тухнă туратсене те манмасть автор. Романри ĕçсем куç умĕнче чаплă кинори пек сарăлса пыраççĕ. Çыннисем пĕринчен пĕри паттăр, пĕринчен пĕри чĕрĕ...

Чăваш халăхĕн революцичченхи пурнăçĕн тĕкĕрĕ, тесе калас килет ман ун çинчен.

Çавăн пек кĕнекесем те пулаççĕ тĕнчере: вĕсенче — пурте тĕрĕс, пурте хăй вырăнĕнче, пурте — шăп кăна кирлĕ чухлĕ. Йăлтах «вăтам». Пичетлесе кăларма та çăмăл вĕсене, мĕншĕн тесен редакторсене хăратаканни нимĕн те çук. Вулама та «çăмăл»: пуçа нимĕн юлмасть. Критиксем те вăрçмаççĕ, мĕншĕн тесен пурте «тĕрĕс».

«Ĕмĕр сакки сарлака» романра начар тĕлсенче — тӳсме çук начар, лайăххи пуçлансан — ытарма çук лайăх. Стилисттишкерӳçĕ мар, ахаль критик та чĕлхери çитменлĕхсемшĕн автора ятласа тинкине кăлармалла. Вырăсларан куçарнă пек вуланакан вырăнсем, пăтранчăк предложенисем, пĕрпек каланисем, çине-çинех пĕр сăмаха пере-пере лартни — хăлхана йӳçĕтет, тарăхтарса ярать. Нумай çĕрте автор шыраса аппаланмасть, ал айне лекнĕ пĕр-пĕр сăмаха тытать те ну сĕтĕрет вара ăна, ну сĕтĕрет, йăлăхтарса çитермесĕр те аларан вĕçертмест.

«— Тур папай пулăштăр сана, Михха, халĕ те пуç тайса тайăм çитмелле мар ырлăх турăн эсĕ пире. Эсĕ килсе çитмен пулсан, тем курас пурччĕ...

— Вăй çитнĕ таран, Татьяна аппа... Вăй çитнĕ таран... Ну, чипер çитĕр!— юлашкинчен сывпуллашса уйрăлса кайрĕ Михха.

Михха килне çитсе пӳртне кĕрсенех...» т. ыт. те (I-мĕш том, 125—126 страницăсем).

Тепĕр çĕрте Н. Мăранькка «тытăнчĕ» сăмаха ярса илет те ăна пĕр пĕчĕк абзаца вунă хут каламасăр та чарăнмасть; «утса тухас аслă улăх тухса тăчĕ» тенĕ çĕртен те вăл пĕр çакланмасăрах иртсе каять пулас. Вулакансем пулсан, вĕсем унта тăллансах лараççĕ.

Çук, чĕлхе илемĕшĕн, хăйĕн шухăшне хитререх çавăрса каласишĕн пĕртте тăрăшмасть автор, урлă-пирлĕ хуркаласа пĕтерет, унтан-кунтан тăм сĕрсе лартать те — сывлăшне çавăрса илмесĕрех малалла ыткăнать. Çапах та ку вăл — Н. Мăранькка алçырăвне ик-виçĕ редактор темиçе уйăх тӳрлетсе асап курнă хыççăн-ха. Чи малтанах пулнă пулсан, унта нумай çĕрте ашса тухма çук пăтăччĕ, сирсе сирĕлми çатракаччĕ.

Илем мĕн иккенне те туймасть мар ĕнтĕ авторĕ, çурт ĕмĕрĕ вăрăм пуласси кирпĕч пахалăхĕнчен килнине те пĕлме тивĕç.

Те çав териех васкать вăл, те музыка туйăмĕ çук унăн...

Çапла, ятламалли çĕрте Мăраньккана тӳсме çук хытă ятламалла, ан тив, пирĕн сăмах унăн варне-васакне виттĕр. В. И. Ленин «сахал пултăр та лайăх пултăр» тенине яланах асра тыттăр...

Ытти килĕшмен вырăнсем. Пĕрремĕш кĕнекере утравшăн çапăçни — саплăк пек туйăнать. Унччен романри ĕçсем пĕринчен пĕри тухса пыратчĕç, çав тĕле çитрĕ те пĕрремĕш кĕнеке вĕçленчĕ.

Тиркемелли татах нумай та пирĕн, атя, ыттисене калама юлтăр пуль ĕнтĕ. Атту автора мухтама тытăнчĕ те хурланипех çырлахрĕ, тейĕç.

Чылай пухусенче эпир чăваш литературин хăйне евĕрлĕхĕ темелле-и,— çавăн çинчен калаçатпăр. Вырăссем ăна национальная специфика, теççĕ. Совет çĕршывĕнчи литературăсене пĕр йыша мĕн пĕрлештернине пĕлетпĕр эпир: пурте эпир пĕр ĕçшĕн кĕрешетпĕр, пĕр тĕллеве туртăнатпăр, пĕр шухăш-кăмăлпа пурăнатпăр. Художествăлла меслет те пирĕн пĕр — социализмла реализм. Çак хушăрах кашни халăхăн, çавăнпа вара кашни литературăн та хăйне евĕр сăн, пĕр çав халăха çеç, çав литературăна кăна тивĕçлĕ «сывлăш» та пур. Чăваш литератури бурят е лак литератури пек мар. Калмăк халăхĕн литератури те

осетинсен литературинчен уйрăм. Халăхсене пĕр-пĕрин пурнăçĕпе паллаштарас, вĕсене пĕр-пĕринпе çывăх тăвас, туслаштарас тесе, пĕр халăх ытти халăхсен кĕнекисене, пурте пĕр-пĕрине куçаракуçара кăлараççĕ. Пурин те пĕр-пек пулнă пулсан, куçарма та кирлĕ марччĕ. (Малашне пирĕн халăхсене уйăрса тăраканнисем мар, пĕрлештерекеннисем, çывăхартаканнисем ытларах та ытларах пулĕç, тетпĕр эпир.) Пирĕн произведенисене вырăсла куçарма тытăнсан та, тӳрех çав сăмах хускалать: кăтартăр-ха, вырăссен çукки мĕн пур сирĕн, эсир пире мĕнпе савăнтарасшăн та мĕнпе тĕлĕнтересшĕн, теççĕ. Ăçта-ха, чăваш çыннин чунне уçса парайнă-и эсĕ?— теççĕ. Çавна йăнăш ăнланнисем хăйсен «геройĕсене» тахçан Иван Ĕмринчех манăçа тухнă сăмахсемпе калаçтарма хăтланаççĕ, ытти чĕлхесене куçмалли пропуск пек, чăх тукмакки те хуплу тыттарса лартаççĕ.

Çапла вара — мĕнре пирĕн хамăра евĕрлĕххи? Мĕнле вăл — чăваш чунĕ? Кам курнă ăна? Мĕн тумалла —«чăваш произведенийĕ» пултăр тесен?

Ман шухăшпа, нимĕн те тумалла мар, халăх пурнăçĕпе кăна пурăнмалла. Вара ăсу çивĕч пултăр та куçу курма пĕлтĕр — пурне те хăвах туйса илетĕн.

Çиелти палăрăмсем: çăпатапа хуплу, мăн ура сыртарса «хăнча» тесе калаçтарнисем-мĕнсем — ниме те пĕлтермеççĕ. Вăл паллăсене ни вырăсла мар, ни чăвашла мар произведенисенче те пайтах тупма пулать.

«Ĕмĕр сакки сарлака» романа çырнă чухне автор вăл-кусем çинчен асне те илмен, унти çынсем те çăпатана атă-пушмак çуккипе çех сыраççĕ, хуплуне вара çисе те курайманççĕ, çапах «Ĕмĕр сакки сарлака» роман пур енчен те чăваш произведенийĕ. Вăл кĕнеке урăх ниçта та мар, пĕр пирĕн Атăл тăрăхĕнчи сывлăшра, пирĕн халăх хушшинче кăна çуралса тухма пултарнă. Вăл хăйĕн чунĕпе те, юнĕпе те чăн чăвашла. Анчах кам ăна вăл произведени ытти халăхсене хисеплеме вĕрентмест теме хăйтăр? «Ĕмĕр сакки сарлака» роман чăвашсемпе вырăссем, çармăссемпе тутарсем яланах туслă пурăннине çав тери ĕненмелле кăтартса парать.

Пирĕн халăх чунĕн тĕрлĕ енĕ кĕнекери пур персонажра та пур, çав шутрах куштан Михха сăнарне те айккине тăратса хăварма юрамасть. Халăх чунĕ чӳрече умне лартса ӳстернĕ чечек мар. Лайăх енсем çинчен калаçас пулсан, пуринчен малтан Çтаппана аса илмелле. Вăл ăслă, улăп пек вăйлă, ача пек таса чунлă, тӳрĕ те йăваш кăмăллă. Хăйне тарăхтарса çитерсен çех Çтаппан тилĕрсе каять. Вăл кĕнеке тăршшĕпех ӳсет, улшăнса, çитĕнсе пырать: турăран пиллĕх е каçару ыйтмасăр пĕр утăм тума хăранăскер, турă пирки иккĕленме тытăнать, пуянсем çынсене çаратса пуйнине ăнланса илет, вырăссенчен хăраса пурăннăскер, вĕсемпе туслашса каять. Лайăх енĕсем çех унăн пĕр улшăнми юлаççĕ. Çтаппан çынсене шанать, арăмне сума сăвать, ачине юратать. Çав туйăмсем унăн пĕр сăмах каламасăрах палăраççĕ. Çутçанталăка çывăх тăракан Çтаппанăн ăс-тăнĕ, шухăшкăмăлĕ хирĕçӳллĕ мар. Пурнăç çине те уççăн пăхать-ха вăл.

Çемçешке чунлă çынсене çеç пурнăç тăвалĕ е хуçса антарма е вĕсен психикине арпаштарса, пăтратса хăварма пултарать...

Çтаппан арăмĕ Татьяна та чăваш прозишĕн çĕнĕ сăнар. Турăран, тӳре-шарасенчен хăраса пурăнса, йĕркеллĕ калаçма та манса кайнă вăл («Ай-турух, мĕн айăпшăн çак териех инкек куратпăр-ши эпир?»—тенисемсĕр пуçне Татьяна урăх нимех те калаймасть), çапах тĕлĕнмелле пурнăç çынни вăл. Пирĕн вăхăтра ун пек хĕрарăмсем çинчен кĕнекесем çыраççĕ. Вĕсем ĕçре те, халăх çинче те, çемьере те илем кӳреççĕ.

Çтаппанпа Татьяна ывăлĕ Микулай, вĕсен кӳрши Максăм, Микулай арăмĕ Анук; Кĕтерукпа Лукарье... Пурнăçри пекех, кĕнекери персонажсем те кашни хăйне евĕр, кашнин хăйĕн сăн, хăйĕн «пит». Кĕрешеççĕ пулсан, вĕсем вилмелле тытăçса ӳкеççĕ. Пĕтĕм роман чĕркĕмĕл пек улшăнса, юхса тăрать. Кунта нимĕн те юримари пулса иртмест—йăлтах чăнчăн те ĕмĕрлĕхе...

«Ĕмĕр сакки сарлака» романа çырса, Н. Мăранькка чăваш прозинче халиччен никам каламан сăмаха коларĕ. Вырăсла чипер тирпейлесе куçарсан, ăна совет çĕршывĕнчи ытти халăхсем те юратса вулĕç.

Кĕскен те пулин пирĕн кĕнекесенчи тăшман сăнарĕсем пирки асăнса хăварас килет. Ку ĕçре те эпир пĕр утăм малалла ярса пусрăмăр. Халиччен вĕсем этем евĕрлĕ те марччĕ темелле. Тăшман иккен, вăл кирек ăçта, кирек хăçан — армак-чармак уралла, хĕсĕк куçлă, чее, хаяр, кутăн (вăтăрмĕш çулсенчи калавсенче тата — мăнхырăмлăччĕ) т. ыт. те, т. урăххи те. Пĕр этемле ен те çук вĕсен. Ку штампран Мария Ухсай çырнă «Кăра çилсем» романри Варлам та иртеймен. Трубина Мархвин «Ача чухнехи» повеçĕнчи Шĕшлĕпе Касак Ваççи те çавах.

Тăшмансене е отрицательнăй текен типсене мĕнле те пулин усалтарах, «хăрушăрах» сăрласси критикăран та килнĕ. Пĕр-пĕр тăшман кăшт этем сăнлăрах курăнсанах, пире «политикăлла йăнăш тунă», тесе хăртатчĕç.

Н. Мăранькка романĕнчи Лукарье пĕр вăхăтрах чее те, икĕпитлĕ те, хаяр та; вăл юратма е кĕвĕçме те пĕлет, чĕри ыратсан— макăрать. Лукарье тăшман, çав вăхăтрах вăл этем. Çавăнпа вăл вулакансен куçĕ умĕнче чĕп-чĕррĕн курăнса тăрать.

Юлашкинчен Мăранькка хушамачĕ пирки пĕр-ик сăмах. Мĕнле çырмалла-ши ăна? Темиçе çул каялла МĂРАНЬККА тесе çыратчĕç. Пĕлтĕр тухнă кĕнеки çине Мранька, тесе лартнă. «Советская Чувашия» хаçатра Мранькка, тенĕ. Хăшĕ тĕрĕс-ши?

«СĔВЕ АТАЛА ЮХСА КĔРЕТ»

Куçма Турхан романне вуласа тухрăм та эпĕ савăнсах кĕнеке çӳлĕкĕ çине вырнаçтарса лартрăм. Кăмăл тулчĕ. Чăваш литературине тата тепĕр лайăх кĕнеке хутшăнчĕ, терĕм эпĕ. Вара ирĕксĕрех хамăр хуçалăх çине çаврăнса пăхрăм. Чăвашсем çеç мар, аслă çĕрĕмĕр-шывăмăрти ытти халăхсем те килĕштерсе вуламалли кĕнекесем пирĕн ытла нумаях та мар-ха. Çыракансен йышĕ вара самаях пысăк. Кашни писатель вăрăм ĕмĕрлĕ кĕнеке пĕрер çеç çырсан та, вулакансен çӳлĕкĕ çине утмăлçитмĕл лайăх кĕнеке хутшăнĕччĕ. Икшер çырсан, лайăх кĕнекесен хисепĕ çĕртен иртсе кайĕччĕ.

Пĕрер-икшер кĕнеке... Ытла йывăр та пуласăн туйăнмасть ĕнтĕ ку ĕç. Çапах пиртен сайра пĕри çеç хăйĕн «тĕп кĕнекине» çырма ĕлкĕрнĕ-ха. Ыттисем çаплах çыратпăр-ха, тапаçланатпăр... ĕмĕтпе йăпанатпăр.

Мускав та сасартăк çитĕнсе ларман тет те ара.

Ку кĕнекене çырнă вăхăтра К. Турхан ячĕ пĕр вунă çулсем хушши ниçта та курăнманччĕ. Çав вăхăтра вăл архивсенче чакаланнă, çĕр те пĕр документпа паллашнă, историллĕ романсем нумай вуланă. Тăрăшнă сын, ĕçленĕ. XVI ĕмĕр пуçламăшне кайса тухма хăюлăх та, пĕлӳ те кирлĕ. Хăшпĕр çĕрте вара К. Турхан хăй сисмесĕрех вырăс авторĕсен интонацийĕ çине кĕрсе каять. Акă Евгений Федоровăн историллĕ романĕсене вуланин йĕрĕ:

«Çывăха пырса тăнă мăрсасем çакна лайăх асăрхарĕç: патша чăнах та сывă мар. Пичĕ шуранка, куçĕсем хĕрелсе кайнă. Сăнран хăй ырă кăмăллă çын пек, анчах хусканăвĕсенчен пăхсан — çиллес, вĕри çын пулма тивĕç». (465 страница).

Тăватçĕр çул ытла ĕлĕкрех пулса иртнĕ ĕçсем çинчен çырса, Турхан пире паянхи кун та интереслентерекен ыйтусенчен пĕртте аяккалла пăрăнса кайман пек туйăнчĕ мана. Эпир хăй мĕнле йăхтĕпрен çуралнине манса кайнă Ивансем мар. «Спиридон Михайлов тени кам вара вăл сирĕн?!— тесе тутана пăрса ларни никама та чыс кӳмест. Пирĕн халăхăмăр Хусанти тутар ханĕсен пусмăрĕнчен хăтăлса аслă вырăс халăхĕпе пĕрлешни пурнăçпа вилĕмрен пурнăça суйласа илнипе пĕрех пулнă.

Хăшпĕр вулакансем К. Турхана XVI ĕмĕр пуçламăшĕнче пурăннă чăвашсене хальхи чĕлхепе калаçтарнăшăн ӳпкелеççĕ. (Сăмах майĕпе каласан, романри вырăсла пĕлмен чăвашсемех вырăсла шухăшласа калаçнисем те пур. Пысăк ĕçри ун пек пĕчĕк çитменлĕхсем çинчен статья вĕçнелле асăнăпăр.) Хальхи чĕлхе тесен, Лион Фейхтвангер икĕ пин çул ĕлĕк пурăннă Иосиф Флавие те хальхи пек калаçтарать. Чи пахи, ман шухăшпа, персонажсене писатель илнĕ саманари пек калаçтарма тăрăшни мар (пăсасса вăл та пăсмасть те-ха), вĕсене хăйсен вăхăтĕнчи пек шухăшлаттарма, çут тĕнчене çав вăхăтри куçпа кăтартма пĕлни. Авторĕ çеç паянхи куна ан мантăр...

Ĕçе Турхан çав тери хăюллă тытăннă, кĕнеке материалне, пуян хĕр пир шуратма сарнă пек, таçтатаçта çити сапаласа тăкнă. Анчах кĕнеки сапаланса кайман. «Ура йĕрĕсем» пĕрмаях «киле», Юмансар ялне, иле-иле пыраççĕ. Романри ĕçсем пĕрре чăваш ялĕнче, унтан Хусанти хан керменĕнче, Чалăм крепоçĕнче, Кăрмăш хулинче, Чулхулара, Мускавра патша палатинче пулса иртеççĕ. Çынсен çулĕсем пĕрлешеççĕ, уйрăлса каяççĕ... Теприсем пĕрне-пĕри те курмаççĕ, пурпĕрех вĕсене пĕр ĕç çыхса тăрать.

Çĕнни ку романра маншăн кашни страницăрах. Халиччен сĕм çĕр пек туйăннă вăхăт Турхан романне вуласа тухнă хыççăн вăйлă прожекторпа çутатнă пек уçăлса кайрĕ, куç умне çĕнĕ материк тухса тăчĕ тейĕн. Истори чĕрĕлчĕ, тусанлă документсене чун кĕчĕ. Хальĕнтĕ эпир вăл вăхăтра пирĕн тăрăхри çынсем мĕнле пурăннине кăна мар, вĕсем мĕн ĕмĕтленнине

Ашшĕпе хĕрĕ

Ĕлĕкхи саманара, патша пусмăрĕ вăхăтĕнче, кĕтӳç тенине ялта çын вырăнне хуман. Ялти «ятлă» çынсем, куштан пуянсемпе кулаксем, ял старостисемпе тӳре-шара кĕтӳçе йытă вырăнне çеç шутланă, кĕтӳç чи мĕскĕн те çурт-йĕрсĕр, хисепсĕр çын пулнă.

Анчах совет влаçĕ кашни çынна пысăка хурса хаклать, кашни çын ĕçне чыслать. Совет Союзĕнчи ĕç мухтавлăхпа чыс, паттăрлăх ĕçĕ пулса тăчĕ.

Николай Петрович Кульчихин кĕтӳç те ялта ятлă çын. Вăл Пăрачкав районĕнчи Ленин ячĕпе хисепленекен колхозра вăтăр çул ытла ĕнтĕ кĕтӳç пулса ĕçлет, кашни çулах, çура тухсан мĕн кĕркуннеччченех, колхоз выльăхчĕрлĕхне пăхать. Ял халăхĕ ăна яланах ырăпа асăнса хисеплет, колхоз правленийĕ ăна темиçе хутчен те хаклă парнесем панă. Кăçал Николай Петровича колхоз курорта кайма путевка пачĕ.

Каллех çур ситрĕ, каллех Николай Петрович колхоз выльăх-чĕрлĕхне улăх-çарансемпе хирсене хуса тухать, лайăх пăхать. Унăн хĕрĕ Люба та, мĕн пĕчĕкрен выльăх-чĕрлĕхе юратаканскер, колхоз ферминче ĕçлет, ĕне пăхать, тăван колхоза, çĕршывăмăра сĕт-çу ытларах туса пама вăй хурать.

Ӳ к е р ч ĕ к р е: Николай Петрович Кульчихинпа унăн хĕрĕ Люба каçхине ĕçрен таврăнсан çĕнĕ хаçатсем вулаççĕ.

П. ЕФРЕМОВ тунă сăнӳкерчĕк.

те, мĕншĕн кĕрешнине те пĕлетпĕр.

Асра юлмалли сăнарсем нумай кĕнекере. Ахтупайпа Эрнепи, Тукайпа Урасмет, Нухратпа Чурапа, Гирей ханпа Булат Ширин... Çавăн чул çынна чертсе тăратма художник çеç пултарнă. Усал ĕç тăвакан çынсене те, патшана та Турхан малтан этемсем пек кăтартать. Каярахпа тин вĕсен киревсĕр ĕçĕсем палăрма тытăнаççĕ. Ку тĕрĕс пек туйăнчĕ мана.

Романăн чĕлхи çăмăл, илемлĕ, халĕ манăçа тухнă сăмахсем чылай. Вĕсем кĕнекене тивĕçлĕ тĕс параççĕ. Турханăн алли çăмăл пулсан, вăл сăмахсенчен хăшпĕрисем халăх хушшине çĕнĕрен саланма пултараççĕ.

Лайăх чĕлхе вăл нихăш енчен те сисĕнмен чĕлхе, теççĕ. Вулакана вăл ни ытлашши çакса тултарнă эрешĕпе ан тĕлĕнтертĕр, ни кашни утăмра тураттисемпе çаклатса ан тарăхтартăр. Турхан вăтам çул суйласа илнĕ. Усă сывлăша тухнă чухнехи пек, ун кĕнекине вуланăçем вулас килет.

Аста автора асăрхаттармалли те пур. Ман шухăшпа, вăл «тата» тенĕ союзпа ытлашширех усă курать. Хаçат чĕлхинче апла хăтланни юрах та пырать пулĕ, илемлĕ литературăра вăл килĕшмен пек туйăнать.

«...ухă йĕпписем илсе тухманшăн тата яланхи пек кĕсъене çĕçĕ чикменшĕн ӳкĕнчĕ».

«...вăрăм тата çăп-çăмăл урисемпе...»

«Хăвăра хăвăр такам вырăннех кайса хуратăр тата ытлашши шанатăр хăвра!»

«...мăшлатса тата пурин çине не куç айĕн пăхса».

«...Атăл чарланĕсем тата чĕкеçсем...»

Хăйĕн персонажĕсене Турхан кирек ăçта, кирек хăçан тĕп-тĕрĕс калаçтарма тăрăшать. Калаçу чĕлхинче яланах ун пек пулакан марччĕ-çке вăл. Çын кашнинчех тулли предложенисем туса, подлежащисемпе сказуемăйсем хăйсен вырăнĕнче пулчĕç-ши тесе тăмасть.. Тепĕр чухне çур сăмахне каласан чарăнса ларать е сасартăк кăшкăрса ярать...

Тата: мĕншĕн эпир «тулăна», «каччăна», «пулăна» теме тытăнтăмăр? «Тулла кайса авăртрăмха», «качча кайрĕ», «пуртта хăйраттартăм», текенччĕ-çке. «Каччăна кайрăм», тени пĕртте килĕшӳллĕ мар...

Тукай мăрсана Хĕвеланăç Европăри феодалсем пек кăтартни те тавлă пек туйăнать. Ун пӳрчĕн урайне упа тирĕсем сарса тултарнă, хăй те вăл йăлтăр-ялтăр кăна çиççе çӳрет... Упа тирĕсене тасатса тăманнипе пӳртне пăрса ерсе тулнă пулсан е, калăпăр, Тукайăн пуçĕ кĕсенлĕ, тенĕ пулсан, эп ăна, вăхăтне кура, ытларах ĕненĕттĕм.

Мăраньккапа Турхан романенчи ĕçсем Атăл тăрăхĕнче те Атăл çинче пулса иртеççĕ, анчах Атăл сăнарне пĕри те кăтартайман.

«Шăпчăк юрри», «Палецкий князь», «Вырăс тупписем», «Чалăм çинчен хунă легенда» сыпăксене Турхан кăтартса мар, сӳрĕккĕн каласа кайнипех çырлахнă. Вăл сыпăксене каларса пăрахни кĕнекене лайăхлатнă пулĕччĕ кăна.

Эрнепи вăрмана Ахтупай патне пынине те Турхан ĕненмелле çырса парайман. Унти ĕçсем темле ача вăййилле пулса иртеççĕ.

Тутар ханĕсен пусмаре çителĕксĕртерех курăнать. Вăл пусмăрăн сиенне хаклана чухне Карл Маркс монгол-тутарсен тытăмĕ пирки каланине аса илни те вырăнлă мар-и тетĕп эпĕ. Çав пусмăр, тенĕ К. Маркс, «хăй тытса илнĕ халăхĕн чунне пуснă çеç мар, хăртса тăнă», мĕншĕн тесен «монголла тутарсен йĕрки куллен кун террорла йĕрке, нумай-нумай çын пуçне çисе, çаратса пĕтерекен йĕрке пулнă. (И. Кузнецовăн «Карл Маркс Атăлçи халăхсем çинчен çырса хăварнисем» статьинчен).

К. Турхан та, Н. Мăраньккa та çынсен чунĕн хусканăвĕсене кăтартма ăста.

Проза çитĕнни литература çитĕнсе çитнине пĕлтерет, теççĕ. Пирĕн проза халь шухăшлама та, çын чунĕн диалектикине кăтартма та пĕлет, терĕмĕр. Чĕлхе те хитре пирĕн. Ĕçлес кăмăл та пысăк. Парăм вара — унтан та пысăкрах. Çав ăсталăхпа, çав хавхаланупа, çав илемлĕрен те илемлĕ чĕлхепе хамăр вăхăтри паттăрсем çинчен, коммунизм строительствинче ĕçлекенсем çинчен каласа парасси — писательсен пĕртен-пĕр ĕçĕ пулмалла.

Халь пур ĕçре те ăсталăх, пахалăх çинчен калаçаççĕ. Пирĕн те «Ĕмĕр сакки сарлака», «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романсем хыççăн начар çырма юрамасть. Атьăр эппин тата лайăхрах, сулмаклăрах, витĕмлĕрех çырар!

Хальхи вăхăт — литература чунĕ, тетпĕр. Пирĕн куç умĕнчех пурнăç улшăнса пырать; кивви вырăнне çĕнни, унтан тата çĕнĕреххи йышăнать. Пĕр çын ĕмĕрĕ тăршшĕнче мар, пĕр çул хушшинче те çут тĕнчере темĕн те пулса иртет. Совет Союзĕпе социализмла ытти çĕршывсем çĕнни çĕнтерттĕрччĕ тесе кĕрешеççĕ. Пурнăç çав тери васкать, васкать. Таçта айккине пăрăнса тăрса тахçан курнă тĕлĕксемпе аппаланни халь никама та килĕшмест. Çынсен пурнăçĕпе кĕрешĕвĕ темрен те аслă, темрен те хăватлă. Пирĕн саманара, пирĕн кĕрешӳре çеç пултарулăх çăлкуçĕ.

Хветĕр УЯР.

КРОССВОРД



ВЕРТИКАЛЬ МАЙЛĂ:

1. Вырăссен паллă архитекторĕ.. 2. Совет ученăйĕ тата физикĕ. 3. «Кортик» кĕнекери сăнар. 5. Америкăри паллă писатель. 6. Совет Союзĕн Геройĕ — летчик. 11. Вырăс писателĕ. 12. Вырăс халăхĕн талантлă писателĕ. 13. Болгари халăхĕн публицисчĕ. 14. Совет авиаконструкторĕ. 15. Франци писателĕ тата философĕ. 16. Якут халăх писателĕ. 22. Акăлчансен паллă поэчĕ. 24. Вырăссеч аслă ученăйĕ инженерĕ. 25. «Ленин çинчен çырнă калавсем» кĕнеке авторĕ. 26. Чăвашсен тава тивĕçлĕ артисчĕ. 27. «Вăрăм алă» сатирăлла кĕнекен авторĕ.

ГОРИЗОНТАЛЬ МАЙЛĂ:

4. «Капкăн» журналта пичетленекен художник. 7. Тутар халăх писателĕ. 8. Нимĕç композиторĕ. 9. Итали художникĕ, архитекторĕ тата историкĕ. 10. Вырăссен паллă композиторĕ, ученăйĕ-химикĕ. 17. «Наука тата тĕн чĕрчун тĕнчи пуçланса кайни çинчен» кĕнеке авторĕ. 18. Совет Союзĕн геройĕ. 19. Акăлчансен XVI—XVII ĕмĕрти аслă драматургĕ. 20. Вырăс халăхĕн талантлă поэчĕ. 21. Чăваш художникĕ-карикатурщикĕ. 23. «Çамрăк гварди» кĕнекери персонаж. 28. Герой-пионер. 29. Паллă совет ученăйĕ, металлургĕ тата обществăлла деятелĕ. 30. Араб писателĕ. 31. Вырăссен аслă писателĕ. 32. Вырăс художникĕ.

ÇЕÇЕНХИРТИ, АЙ, ШУР ХУРĂН...



ВĔРЕНӲРЕ...

ТӲРЛЕТНИ: 19-мĕш страницăри «Пултарулăх бригадир» корреспонденцире журнал тиражĕн пĕр пайĕнче Петр Васильевич Осипов тесе тĕрĕс мар пичетленнĕ. Ăна Василий Сергеевич Дементьев тесе вуламалла.

ЯЛАВ № 5 (379)
М А Й—1961

Ежемесячный литературно-художественный и общественно-политический журнал Союза писателей Чувашии. Издатель: Чувашское Государственное издательство.

Редактор Г. А. Ефимов. Редколлегия: В. О. Алагер, А. Д. Калган, В. Я. Канюков, П. К. Львов (отв. секретарь), М. Д. Ухсай, М. Д. Шумилов.

НТ 01893 Подписано к печати 13. V. 1961 г. Тираж 17.500 экз. Заказ № 611. Формат бумаги 70×108 1/8. Объем 5,82. Цена 20 коп.
Рукописи не возвращаются
Адрес редакции: Чувашская АССР, г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 1. Телефон № 8—36.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

Кантăкна уçсамчче

Н. Михайлов кěвви. М. Волкова сăмахěсем



Тухчě, кěçěр тухчě, çамрăк
сар пике,
Куракла çул тăрăх кӳлě
хěррине.
Санпала ěç хыççăн лăпкăн,
кăмăлтан
Виç сăмах çеç ăшшăн калаçасчě
ман.
Ах, уçсамччě, чунăм, уçчě
кантăкна,
Йăпăрт çеç курасчě чечек пек
сăнна!
Анлансем пěр саншăн канлěх
çěтнине,
Хěрхенсемччě каччăн вут пек
чěрине.

ИКĚ ХУРĂН

Т. Иванов кěвви.
В. Димитриев сăмахěсем.

Çуммăн ӳснě икě йăрăс хурăн
Айěнче юман ураллă сак.
Сар хěрсем епле юралатчěç
юрă
Эпир калаçаттăмăр ларса.

Çуммăн ӳснě икě йăрăс хурăн
Эс тухсассăн çул çине кайма,
«Аякра тусан манса ан пурăн».
Тенě пек пуç тайрěç çилě май.

Çуммăн ӳснě икě йăрăс хурăн
Халь епле кичем уничере.
Тусăмçăм, килсен хăвах
эс курăн,—
Хурăнсем чунтан кěтеç пире.



АТĂЛ ХУМĚСЕМ

Г. Ефимов сăмахěсем.
И. Ярунгин кěвви.



Шупашкартан инçе-инçе
кайсан,
Çап-çут хěвелěн шевлипе çиççе,

Чун-чěрене вăй-хал парса ялан
Выляççě ирěк Атăл хумěсем.
Хěвел анса ларсан, çыр хěррине
Тухаççě капăр тумлă пикесем.

Кунта куратăп хамăн
савнине,—
Савма хушаççě Атăл хумěсем.

Мухтатăп эпě аслă Атăла,
Ун çийěнче ӳсеççě халь
ГЭС-сем.
Çěршывăма патвар хăватпала
Сутатěç тăван Атăл хумěсем.

УРАМПА ИРТСЕ ПЫРУÇĂН

М. Бельцов кěвви
Г. Ефимов сăмахěсем.

Шыв та шыв пек туйăнмарě —
Хăват пачě вăл мана.
Куçусен хěрӳ кăварě
Чуна илчě тыткăна.

Пěр сăмах та чěнеймесěр
Эпě кайрăм урампа.
Пăхса юлтăн хыçран эсě
Ырă, ăшă кăмăлпа.

Урампа иртсе пыруçăн
Кантăкра шырап сăнна.
Шыв парас пек, çырă куçăм,
Туйăнатăн халь мана.



КӲРШĚ ЯЛ ХĚРНЕ

Мих. Ильин кěвви Ю. Петров сăмахěсем.

Мěншěн çамрăк туйăмсем
çапла-ши,
Çунтарса тăраççě кăкăра.
Ман çинчен самант асилен-ши
Кăшт хăть тунсăхлан-ши
хуйăран?

Кăмăлна уçмашкăн, сар
пикеçěм,
Май килмест-ши ешěл
çуркунне?
Тантăшсем те чунтанах
кěтеççě
Иксěмěр пěрле пуласшне.